А23
-38542

Л. АГАКОВ



# КУЛАС КИЛЕТ



ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1955

Национальная библиотека ЧР
4-038542

2346

Л. Агаков

# КУЛАС КИЛЕТ



Калавсемпе фельетонсем

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 2346

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1955

ПРОВЕРЕНО
2010 03 НОЯ 2017
Ч-38542
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# СОЛНЫШКИН

## 1

Евтихи Петровичпа эпир пӗр ҫирӗм ҫул ӗлӗкрех Кӑсӑякассинчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта пӗрле вӗреннӗччӗ. Вӑл ҫав ялсемехчӗ, эпӗ унта икӗ километрта ларакан урӑх ялтан ҫӳреттӗм.

Пӗтӗмӗшпе илсен, начар ачах марччӗ вӑл. Хӑй тӗреклӗ, кӳпшек сӑн-питлӗччӗ, ҫӳҫӗ-пуҫӗ хӗп-хӗрлӗ, пысӑк кӑвак куҫӗсем сиксе тухас пек, ҫынна ҫиеҫҫӗ кӑна. Унӑн ашшӗ йытӑ-кушак тирӗсем пухакан кантур агенчӗ пулса шалу илнӗ май, вӑл пирӗн пек мар, ялан яка тумланса ҫӳретчӗ,—ҫитсӑ кӗпепе, хура «швецки» шӑлаварпа, пушмакпа. Вӗренессе хӑй самаях кахаллӑн вӗренетчӗ пулин те, класран класа куҫкаласа пыратчӗ. Анчах та хамӑр класри ачасем ӑна шутсӑр юратмастчӗҫ, мӗншӗн тесен вӑл пӗр вӗҫӗм суятчӗ, тата, ҫитменнине, элеклеме питӗ ӑстаччӗ. Тем мурӗшӗн ҫапла пулнӑ вӑл, ӑна пӗлместӗп, анчах кӗтмен-туман ҫӗртенех ҫав тери тарӑхмалли «номерсем» туса хунине питӗ лайӑх астӑватӑп.

Калăпăр, урампа пынă чух вăл пĕр-пĕр ачан амăшне тĕл пулать те, ăна пат! чарса тăратса:

— Сирĕн Петюка шкултан кăларса яраççĕ пулмалла, питĕ начар вĕренме пуçларĕ юлашки вăхăтра,— тесе хурать.

Ача амăшĕ хăраса ӳкет, тĕплĕрех ыйтса пĕлме пикенет, анчах та Евтихи урăх нимĕн те каламасть, хулăм тутисене тăсать те, тем шăхăркаласа, малалла уттара парать. Ну, паллах ĕнтĕ, леш ачине килте лайăх кăна пăсăркки лекет, тепĕр кунне ашшĕ е амăшĕ учитель патне чупать... Нимĕн те çук иккен, ачи чип-чиперех вĕренет!

Тĕрĕснех калас пулать: çавăн пек шӳтсемшĕн пирĕн ачасем ăна нумай хутчен тытса лайăх кăна тӳнккеме тăнă, анчах пĕрре те лектерейменн, ма тесессĕн Евтишка манерсĕр хытă чупатчĕ — рысакпа та хăваласа çитейменн! Пĕррех тапса сикет те, ура тупанĕсем çеç курăнса юлаççĕ...

Тарăхса çитнĕ ачасем вара ăна хăйне те хытă тарăхтаратчĕç. Çӳçĕ хĕрлĕ пулнă пирки ăна ялан «вутпуççи» тетчĕç. Пуринчен ытларах унăн хушамачĕ пирки тăрăхлатчĕç. Вĕсен раттин хушамачĕ пит киревсĕрччĕ: Вшивцев. Евтихисен аслашшĕ, хăй пуян пулнă пулин те, ĕмĕрне те мунча кĕмен, ялан хыçкаланса çӳренĕ, тет. Евтихисен хушамачĕ çавăнтан пуçланса кайнă та вара.

— Евтишка, санăн хушамату чăвашла мĕнле пулать çав? Куçарса пар-ха!

— Евтишка! Сирĕн пек чаплă хушамат çĕр чăмăрĕ çинче тата пуррине пĕлместĕн-и?—тетчĕç ачасем.

И-их, вĕресе каятчĕ вара ку! Пурне те çавăнтах тытса çурма хатĕрччĕ ĕнтĕ, анчах яланах пĕр-пĕччен-

ччĕ те вăл—нимĕн те тăваймастчĕ. Хăй айăплă! Юлташусенчен ан мăшкăлла, йышпа пĕрле пул!

Ачасем кăна мар, учительсем те юратми пулчĕç ăна, мĕншĕн тесен вăл ӳснĕçемĕн ытларах та ытларах аванмарланса, хăйне темле мăнна хуракан пулса пычĕ. Шкул директорĕ ун пирки ашшĕпе те темиçе хут калаçнă — усси пулман, лешĕ аллипе сулнă кăна, теççĕ.

— Мĕн пăшăрханмалли пур уншăн, ача вĕт-ха вăл! Çитĕнсен, ури çине ĕне пуссан, хăех йĕркене кĕрет акă. Хам шутпа, ман Евтихи пурнăçра инçе каять-ха вăл, пысăк çын пулать!—тенĕ имĕш.

Эпир çиччĕмĕш класа куçсан, çак «инçе каймалли ача» пĕр уйăх та çӳремерĕ шкула — пăрахрĕ. Ашшĕ те вĕренме хистемен курăнать ăна. Çырма-вулама вĕреннĕ—çитет! (Ун чухне тата хальхи пек пурне те çичĕ çул вĕрентмелли саккун та пулман-çке-ха...).

Пĕррехинче, шкултан таврăннă чух, Евтихи Вшивцева эпир урамра тĕл пултăмăр. Вăл ялпо умĕнче хăйĕн юккăшĕпе — лавкка пуçлăхĕпе — пирус мăкăрлантарса тăратчĕ.

— Шкула çӳреме ма пăрахрăн эсĕ, Евтихи?— тесе ыйтатпăр çакăнтан.

— А мĕн тумалла ман унта?—терĕ вăл пире хирĕç, куçĕсене темле илемсĕр хĕссе лартса.

— Мĕнле мĕн тумалла? Вĕренмелле...

— Э-э, çав геометрисемпе глаголсем питех тем тума кирлĕ пулы! Унсăрах...

— Мĕн унсăрах?

— Çын пулма пулать. Ман атте, ав, икĕ çул кăна вĕреннĕ те, çапах шалу илет. Учительсем те ун чухлĕ илеймеççĕ. Укçа çапма пуç кăна кирлĕ, тет вăл.

Çапла каларĕ те шăл витĕр чăртлаттарса сурса пăрахрĕ.

Пĕтĕм калаçу та çав кăна пулчĕ пирĕн.

Часах эпир Евтишкăна ашшĕ икĕ ретлĕ хут купăс илсе пани çинчен пĕлтĕмĕр. Улахсенче çĕмĕрттерет кăна иккен. Унтан туйсенче çĕр кисретсе çÿрени çинчен те илтрĕмĕр. Çуркуннепе, эпир çиччĕмĕш класшăн экзаменсем парса пĕтернĕ чух, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕмĕр вара: пирĕн Евтихи Вшивцев лавккара «продавщик» пулнă тăнă! Унăн куккăшне районри магазина куçарнă, тет те, хăй вырăнне вăл кунта Евтишкăна вырнаçтарса хăварнă. Хайхи вара чăнах та шалу илме тытăннă...

Кĕркелесе кураттăмăр эпир ăна: пыракан çынсене тикĕт те, краççын та тултарса парать, эрех те тыттарса ярать. Шут çинче шăкăрт-шакăрт! тутарса илет, унтан хăйне панă укçана çутталла тытса витĕр пăхать те ещĕке хурать. Çăварĕнче хăйĕн ялан пирус мăкăрланать... Пăх та кур эс ăна!

— Маттур ача, ним те калаймăн... Ашшĕнех хывнă, кунран чăнах та çын пулать, — текелетчĕç хăшĕсем.

2

Кĕркунне эпĕ пĕр район хулине кайса ветеринари техникумне вĕренме кĕтĕм, тăватă уйăхран киле каникула таврăнтăм. Каçхине аннерен ялти хыпарсем, паллană çынсем çинчен ыйтса ларнă чух, Вшивцева та аса илтĕм.

— Ну, çамрăк продавщик мĕнле ĕçлекелет унта?

Анне ман çине чăр-р... пăхрĕ:

— Кам çинчен ыйтатăн çак эсĕ?

— Кам ҫинчен пултăр? Хамăрпа пĕрле вĕреннĕ Евтишка ҫинчен...

— Ара, вăл ялта тахҫанах ҫук вĕт!

— Ăҫта кайнă?

— Ахтĕрта ҫӳрет, тияттăрта. Купăс калать, ташлаттарать, тет.

— Ан тĕлĕнтер! Театра мĕнле кайса кĕнĕ вăл?

— Унта кайса кĕнинчен тĕлĕнмеллиех ҫук-ха,— терĕ анне,— тияттăрти кармунщĕк вĕренме кайнă пирки, никам ҫуккипе илнĕ, тет, ăна, анчах кунтан мĕнле хăтăлкаласа тухса кайни тĕлĕнтерет. Самаях тĕлĕнтерет!

— Мĕн пулнă вара?

— Укҫа нумай тухман унăн лавккара. Икĕ пин ытла, терĕҫ. Ҫĕнĕ купăс илчĕ-ҫке-ха вăл,—ак ҫак мăн пукантан та пысăкрах. Ах, ахăртатчĕ ҫав! Лавккара ҫынсем пулмасанах ҫухăртма тытăнать те — пĕтĕм хăлхана йӳҫĕхтерсе ҫитеретчĕ, теҫҫĕ хăйсен ялĕсем. Унтан ревизи пулнă та — тытнă ачана! Юрать, ашшĕ пултаракан ҫын та — ҫăлса хăварнă: унтан-кунтан укҫа пухса (тен, хăйĕннех те пулнă-и? вăл ĕмĕрне суту-илӳ таврашĕнче вĕт!..) сапласа янă. Тĕрĕслекенĕсем те хĕрхеннĕ курăнать — ҫамрăк, таварсем сутнă чух шутлама пĕлменнипе пулнă ку, тенĕ пуль...

Эпĕ Евтихие хăшпĕр ҫынсем мухтанине астурăм та ăшăмра кулса илтĕм:

— Тĕрĕс, маттур ача... Ҫын пулать-мĕн — ҫирĕппрех алла лекнĕ пулсан!..

Темиҫе кунтан ăна хăйне те курма тӳр килчĕ. Колхоз театрĕ пырса тухрĕ пирĕн яла. Юриех, Евтишкăна курас кăмăлпах кайрăм эпĕ клуба. Малтан пĕчĕк пьеса выляса пачĕҫ, унтан концерт пулчĕ.

Артистсемпе пӗрле сцена ҫине пирӗн Евтишка та баян йӑтса тухрӗ... Паллама та ҫук ачана! Хӑмач кӗпепе, сарлака сенкер шӑлаварпа, куҫхаршисене сӑрланӑ, тутисене пӗветнӗ... Пырса ан ҫулӑх ӗнтӗ, чӑнах та! Ак сана Евтишка Вшивцев!

Анчах та чӑн-чӑн тӗлӗнмелли кӑшт тӑхтасан пулчӗ-ха. Пӗр артисчӗ, маларах тухса тӑрса, хӑйсен хорӗ мӗн юрласси ҫинчен пӗлтерчӗ, унтан:

— Купӑс калаканни — Евтихи Солнышкин!—терӗ.

Эпӗ хам тӗрӗсех илтеймерӗм пулӗ тесе шутларӑм та юнашар ларакан колхоз счетоводне чавсапа айӑкӗнчен тӗксе ыйтрӑм:

— Купӑсҫӑн хушаматне мӗнле терӗ ҫав вӑл?

— Солнышкин, терӗ.

— Епле апла? Ара, эп астӑвасса вӑл—Вшивцевччӗ-ҫке?

— Вшивцев пулнӑ та — халь, куран, Солнышкин пулса тӑнӑ,—кулса илчӗ ман кӳршӗ.—Расналӑхӗ пысӑкрах конешнӑ, анчах та сцена ҫинчен унӑн чӑн хушаматне мӗнле калатӑн-ха? Пӗтӗм халӑх кулӗ...

— Ку тӗрӗс те пулӗ ҫав,— килӗшрӗм эпӗ.

— Артистсемпе писательсем хушшинче ҫавӑн пек йӑла пур тенине илтнӗ эпӗ,—терӗ малалла счетовод,—вӗсем нихӑшӗ те ашшӗ-амӑшӗн хушамачӗсемпе ҫӳресшӗн мар, хӑйсене валли хальччен ҫӗр ҫинче пулман ятсем тупса кӑлараҫҫӗ, тет. Ахаль ҫынсенчен расна пулмалла-ҫке вӗсен... Эпир, ав, фермӑри пӑрусене итту этем ячӗсене паратпӑр: Машка, Дашка, Парашка,— а вӗсен ячӗсене эпӗ пӗрине те тӗрӗс калама пӗлместӗп, таҫтан хӑяматӗнчен тупса тултарнӑ: Алсай, Малсай, Мурташ, Мӑшмаш, Сайман, Шалман... Пӗри тата «Сӑхман Ҫанни» ятпа ҫӳрет, тет. Чӑнах.



Ку ачи ытла ун пекех хӑтланман-ха, янравлӑ хушамат шыраса хӗвел патнелле кармашнӑ. Молодецӑ! Эп чӗнмерӗм.

Концерт чиперех пычӗ. Юрӑ хыççӑн юрӑ итлерӗмӗр. Вшивцев-Солнышкин пӗччен «соло» калама тытӑнни кӑна чутах пӗтӗм ӗçе пӑсса хуратчӗ. Вӑл темле вальс пуçларӗ, анчах çуррине те çитеймерӗ — пӑтрашса кайрӗ. Çӗнӗрен пуçларӗ — каллех ӗç тухмарӗ, кӗввине аса илеймерӗ курӑнать.

«Ай, пулмарӗ кунӑн, ай, пулмарӗ, пӗтрӗ...» терӗ тахӑшӗ. Эпӗ хам та çавӑн пекех шутласаттӑм, анчах... Евтишка аптраса ӳкмерӗ! Вӑл купӑсне ик-виçӗ хутчен нӑрт-нарт! нӑрт-нарт! тутарчӗ те — яра пачӗ «барыня!» Тутине çыртса лартса, хулпуççисене вылятса, урисемпе тӑпӑртатса ахӑртма тытӑнчӗ. Сахалтан та пӗр вунӑ минут хушши, çамки çине çут шӑрçа пек тар тапса тухиччен çухӑртрӗ купӑсне. Татах калатчӗ пулмалла та, конферансье тени пырса чарчӗ. Вара вӑл пукан çинчен тӑчӗ те, хӑрах аллипе купӑсне йӑтса, теприне кӑкри умне тытса, улт-çичӗ хутчен пуç тайса илчӗ. Сцена хыçне кайсан тата тепӗр хут чупса тухса пуç тайрӗ.

Халӑх ахӑлтатса, тӑвӑллӑн алӑ çупса ӑсатрӗ ӑна.

— Пултара-ать! Кун пекки пурнӑçра аптрас çук...

— Хушаматне те вайлӑ тупнӑ...

— Хӑйӗн çӳçне кура йышӑннӑ пуль вӑл ӑна!

## 3

...Çакӑн хыççӑн нумай-нумай çулсем иртрӗç. Пурнӑç кустӑрми çаврӑннӑ май таçта пулма та, тем курма та тиврӗ, темелле. Çуралса ӳснӗ çӗршыва эпӗ вӑрçӑ хыççӑн икӗ çултан тин таврӑнтӑм.

Шупашкар пристанě тěлěнчи чăнкă пусма тарах хăпарнă чух эпě сасартăк сарлака та тăваткал хулпуççиллě кăвак пальто, симěс «велюр» шлепке тăхăннă, яп-яка янахлă, сарăрах сăнлă, пысăк кăвак куçлă çынна куртăм. Вăл хăйěнчен пěр-икě хут самăртарах хěрарăма, хулěнчен тытса, хаклă япала йăтнă пек асăрханса çавăтса анатчě. Вěсем кулкаласа, тем çинчен çав тери ăшă кăмăлпа калаçса пыратчěç...

Йывăр чемодансем йăтнă пассажирсем пусма варринчи площадка çинче сывлăш çавăрма чарăннипе, кунта вăхăтлăха «пробка» пулса тăчě. Шăп çак вăхăтра манăн куçсем çав кăвак пальтоллă, «велюр» шлепкеллě, самăр арăмлă çыннăн куçěсемпе тěл пулчěç.

Ну, çын çине пěрре пăхса илнě те — малалла иртсе каймалла пек ěнтě, анчах та пирěн ун пек пулмарě, эпир темшěн пěр-пěрин çинчен куç илмесěр шăтарасла пăхса тăтăмăр... Паллама пуçларăмăр курăнать пěрне-пěри...

Малтан «велюр» шлепке сăмах хушрě:

— Юлташ военнăй...—терě вăл, çаплах мана куçран пăхса, — мěнле сирěн хушаматăр? Каçарăр, анчах эпě сире тахçан таçта курнă пек туйăнать. Йăнăшмастăп пулсан...

— Йăнăшмастăр пулас,— терěм эпě, алăри чемодана сак çине лартса,— эпě те сире палланă пек туйăнать. Манăн хушаматăм — Пастухов... А сирěн хушаматăр, йăнăшмастăп пулсан, Вшш...

— Солнышкин, Солнышкин!—сасартăк, пěр самантрах пěçерне рак пек хěрелсе кайса, часрах аллине тăсса пачě вăл мана:—Солнышкин! Эпир вěт

сирӗнпе пӗрле вӗреннӗччӗ, астӑватӑр пулӗ, пирӗн ялта...

Эп чӗлхене ҫыртсах лартрӑм. Евтихи Петровичӑн (ку чӑн та ҫавӑ пулнӑ!) авалхи хушаматне персе ярса, ӑна пӗтерсех хураттӑм вӗт, ҫӑва пуҫӗ! Ҫакӑн пек гранд-дама умӗнче ҫынна... Вшивцев тесе чӗн-ха эсӗ!..

— Тӗрӗс, тӗрӗс, Солнышкин, аса илтӗм!—Евтихи Петрович пекех васкаса тӳрлетрӗм хамӑн йӑнӑша.— Каҫарӑр, унтанпа ҫав тери нумай вӑхӑт иртрӗ, пурнӑҫра пиншер ҫын тӗл пулнӑ та, ӑҫтан...

— Ҫапла, ҫапла! Питӗ, питӗ хавас ача чухнехи тусӑмпа тӗл пулнӑшӑн... Чи телейлӗ вӑхӑтсене пӗрле ирттернӗ вӗт эпир! Астӑватӑр-и, пӗррехинче арман улӑхӗнче Хура Упрамсен пӑрӑвӗ ҫине утланса чуп-рӑмӑр та, кӗтӳҫре ҫӳрекен аслӑ ывӑлӗ вӑрӑм пушӑ-пах ҫунтарчӗ пире, мошельник... Хе-хе-хе...

Чӑн та, эпӗ нихҫан та пӑрусем ҫине утланса чуп-ман, хама вӑрӑм пушӑпа хӗненине те астумастӑп, анчах та хаваслӑн калаҫма тытӑннӑ Солнышкинӑн кӑ-мӑлне хуҫас мар, тесе, унпа тӳрех килӗшрӗм:

— Тем те пулнӑ ҫав ача чухне... Пулнӑ!

— Мӗн тери нумай вӑхӑт иртрӗ унтанпа! Ватӑ-латпӑр ӗнтӗ...

— Паллах, ҫамрӑкланса пымастпӑр.

— Н-да... Эсир те улшӑннӑ, эпӗ те ӗлӗкхи мар...

— Нимӗн те тӑваймӑн!

Эпӗ ӗнтӗ малалла кайма хатӗрччӗ, мӗншӗн тесен эпир ҫакнашкал ниме пӗлтермен сӑмахсем калаҫса тӑни Евтихи Петровичӑн хаклӑ мӑшӑрне кӑмӑлсӑр-лантарма пуҫланине асӑрхарӑм. Ӑна Вшивцев-Солнышкин хӑй те сисрӗ пулас. Вӑл пуҫне вӑшт кӑна

арăмĕ еннелле ҫавăрчĕ те, ҫав тери артистла кулса илсе, аллипе ман ҫине кăтартрĕ:

— Паллаш, Лара... манăн земляк, ача чухнехи тусăм, Пастухов... м-м...—вăл тăрук чарăнса ларчĕ те мана куҫран пăхрĕ. Эпĕ вара, вăл манăн ятăма астуманнине курса, малаллине хам каларăм:

— Максим Николаевич.

— Лариса Филаретовна Солнышкина...

Хĕрарăм ман ҫине куҫĕсене хĕсерех, ҫӳлтен аялалла пăхса, аллине чуптума сĕннĕ пек тăсса пачĕ.

«Ахăртнех, ку — эстрада артистки-тăр», шухăшларăм эпĕ.

Эпир хăйĕн арăмĕпе пĕр-пĕрне алă парса паллашнине (тĕрĕссипе, унăн пире паҫăрах паллаштармаллаччĕ ĕнтĕ...) Евтихи Петрович шултра та тикĕс шурă шăлĕсене кăтартса, чунтан хĕпĕртенĕ пек пулса, хур аҫи манерлĕрех каҫăрăлса пăхса тăчĕ. Унтан сасартăк ун пуҫне темле шухăш пырса кĕчĕ пулас та, вăл, кулма чарăнса, манран:

— Эсĕ халь ăҫта каятăн?—тесе ыйтрĕ. (Халĕ ĕнтĕ вăл мана малтанхи пек «эсир» тесе мар, «эсĕ» тесе чĕнме пуҫларĕ. Туссем-ҫке!)

— Шупашкара килтĕм. Ҫартан таврăнатăп. Демобилизаципе,— ответ патăм эпĕ.— Анне патне яла кайса килес те, унтан ĕҫе вырнаҫасси ҫинчен шухăшлас пулать...

— Ҫук, эпĕ ун ҫинчен мар-ха,—аллипе сулчĕ Евтихи Петрович.— Халĕ, паян ăҫта каятăн? Палланă ҫынсем пур-и санăн кунта? Тен — тăвансем пур?

— Никам та ҫук манăн. Гостиницăна каяс пулĕ. Номер илес...

Евтихи Петрович, эп сисесрен хăранă пек, йăпăрт

кăна арăмĕ çине пăхса илчĕ, унтан каллех ман еннелле çаврăнса, хавассăн, çав вăхăтрах тĕлĕннĕ пек:

— Мĕн тума гостиницăна?—терĕ.— Атя ара хамăр пата! Хваттер пĕчĕкех мар пирĕн, пĕр çынна выртмалăх яланах вырăн тупăнать. Каласса ларăпăр, кăштах хăна пулăпăр...

— Аван мар ун пек, çынсене чăрмантарма...—терĕм эпĕ, иккĕленерех тăрса.

— Ничево, ничево! Хамăр çынсем вĕт. Эпир мĕнле пурăннине курăн. Чăрмав çинчен ан та калаç! Эпир Ларочкăпа иксĕмĕр хăнасем йышăнма питĕ юрататакан çынсем...

Упăшкин юлашки сăмахĕсене çирĕплетме тăрăшнă пекех, хайхи арăмĕ те чĕнме тытăнчĕ мана:

— Ан тиркĕр ĕнтĕ пире! Паллах, эсир Европăсенче çӳренĕ çын, сире комфорт кирлĕ, уйрăм номер, тем те пĕр, анчах та ăçтан ĕнтĕ яланах ун пек? Атьăр, атьăр, тархаслаттарса ан тăрăр, эп сире Евтихи Петрович юрататакан пончиксемпе хăна тăвăп...

Пурнăçра туслă та, çывăх та пулман «землякпа» унăн эпĕ пирвайхи хут куракан арăмĕ хама çав тери çине тăрсах хăнана чĕнни мана кăштах тĕлĕнтерчĕ, анчах çапах та эпĕ килĕшрĕм.

— Мĕнех вара пĕр каç выртса тухнăшăн! — Пуринчен ытла «йывăр артиллери» — Лариса Филаретовна хăй ĕçе хутшăнсан, парăнмалла пулчĕ.

— Аван мар та, пырам эппин, — терĕм.

Лариса Филаретовна çавăнтах упăшки еннелле çаврăнса татăклă команда пачĕ:

— Эсĕ пăрахут çине анса арбузне ил эппин часрах, эпир Максим Николаевичпа иксĕмĕр кунта кĕтсе ларăпăр. Манăн калле-малле чупас килмест, чĕрене

йывăр... Анчах та асту, — сассине сасартăк хытарчĕ вăл, — пĕркунхи пеккине илсен — киле кĕртместĕп! Лайăхрах суйла! Тата хакне пама пĕл, укçине йăпăр-япăр кăларса ан тыттар! Пăрахут çинче унта пурте живодĕрсем!

Арăмĕн инструкцине ним чĕнмесĕр итлесе пĕтерсенех, Евтихи Петрович пусма картлашкисем тăрăх шакăлтаттарса анса кайрĕ. «Тыткалать пулмалла куна арăмĕ!» — тесе юлтăм эпĕ хам ăшăмра.

Эпир сак çине лартăмăр. Лариса Филаретовна, сумкинчен тĕкĕр кăларса юсанкаланă май, упăшки çинчен калаcа пама тытăнчĕ:

— Пĕртте пурăнма пĕлмест ман Тиша... Çуламан пăру пек. Тӳсме çук непрактичнăй çын! Ни илме, ни сутма, тенĕ пек... Шаккасах тăма тивет! — Унтан ман еннелле çаврăнса ларчĕ те куçран чăр-р... пăхрĕ:

— Эсир халь ăçтан килетĕр?

— Германирен.

— Самăй Германиренех-и?

— Çавăнтанах. Берлин çывăхĕнчен.

— О-о-о! Ку питĕ интереснă! — Лариса Филаретовна аллисемпе шартах çапса илчĕ. — Апла пулсан, эсир хăвăрăн арăмăр валли чаплă япаласем нумай илсе килтĕр пуль ĕнтĕ! — Унăн пичĕ çинче темле ăнланмалла мар кулă палăрчĕ. — Пĕр-пĕр манто, тĕрлĕрен пурçăн, крепдешинсем... Тен, пианино?

Эпĕ пуçа пăркаласа: çук, терĕм.

— Нимĕн те илсе килмерĕр-и вара? Ыттисем илсе килеççĕ-çке? Ай халĕ юрамасть-и? — Унăн куçĕсем чеен çутăлкаласа илчĕç. — Ан тунăр ĕнтĕ, ан тунăр,

эп сирене нимĕн те тытса илес çук вĕт. Ун пек çын мар эпĕ...

— Чăнах. Тĕрĕссипех каласан, манăн арăм та çук-ха...

— Авланман та-и? Тĕлĕнмелле! Сăнран пăхсан, сире ытла çамрăк çынах темелле мар пек...

— Ку тĕрĕс, анчах та авланма вăхăт пулмарĕ манăн. Малтан вĕреннĕ, унтан çара кайнă, кайран вăрçă пуçланчĕ...

— Ну, арăм пулмасан, савнă хĕр пулма пултарать. Ана валли илсе килмеллеччĕ сирĕн. Лайăх каччăсем хăйсен савнийĕсене яланах парнесем параççĕ вĕт, — лăпланасшăн пулмарĕ Лариса Филаретовна.

— Пулĕ, пĕлместĕп, — терĕм эпĕ. — Анчах эпĕ Германирен çакна çеç илсе килтĕм...

— Мĕн-ши вăл? — куçĕсене каллех çутăлтарса илчĕ хĕрарăм.

Эпĕ сулахай алăри перчеткене хыврăм та аманнă хыççăн кукăрăлса ларнă юлашки виçĕ пӳрнене кăтартрăм.

— Пĕтĕм трофей — çакă манăн. Ана мана Штеттин хулине илнĕ чух туянтарчĕç...

Лариса Филаретовна шăпах пулчĕ. Кăшт тăхтасан тин:

— Питĕ, питĕ шел,—терĕ те, сак çинчен тăрса аялалла пăхрĕ. — Ну, пирĕн Евтихи Петрович хăпарать, кайрăмăр...

Анланаймасăрах юлтăм: те манăн пӳрнесене осколок татса кайнăшăн шеллерĕ вăл, те эпĕ хĕрсем валли хаклă йышши крепдешинсем илсе килейменшĕн...

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-38542

Çитрĕмĕр çаксем патне. Вĕсем хулари тĕп урамсенчен пĕринче, пĕр пысăк çуртăн виççĕмĕш хутĕнче пурăнаççĕ-мĕн.

Алăкран кĕрсе тĕттĕмрех коридорта хывăнсанах, Евтихи Петрович мана хăйсен хваттерĕпе паллаштарчĕ. Хваттерне, чăн та, хурлама çукчĕ вара. Икĕ пысăк пӳлĕм, кухня, ваннăй. Вăл çулсенче хулара кун пек хваттерсем ытла нумаях та пулман пулĕ.

— Ну, пирĕн йăва мĕнлерех пек сана? Кăмăла каять-и? — ыйтрĕ кил хуçи, эпир пĕр пӳлĕмĕнчи диван çине ларсан. — Пурăнма пулать вĕт, э?

— Вăйлă, вăйлă, урăх нимĕн те калаймăн,—терĕм эпĕ. — Нумайранпа пурăнатăр-и кунта?

— Виççĕмĕш çул ĕнтĕ, — терĕ Евтихи Петрович, тутлăн карăнса илсен. — Унччен вăл пĕр профессор хваттерĕ пулнăччĕ, анчах ăна таçта урăх хулана куçарса кайрĕç те, эп йышăнтăм... Малтан начар условире пурăнаттăмăр эпир — Симĕс пасар хыçĕнчи çырмара, пĕр çĕтĕк пӳртре... Питĕ кансĕрччĕ унта, пуринчен ытла хĕлле аптраттăмăрччĕ. Шывĕ инçе, ăшă уборнăй çук, а хамăн манăн час-часах радикулит пулать — пилĕкпе аптратăп. Ну, кайран вара...

Кухньăран Лариса Филаретовна сасси илтĕнчĕ:

— Тиша! Пакăлтатма кайран та пулĕ, кил-ха часрах кунта!

Евтихи Петрович пӳлĕмрен вăшт кăна тухса вăркăнчĕ. Эпĕ стенасем çинчи коверсемпе картинăсем çине пăхкаласа шухăша кайрăм:

— Ăçта ĕçлет-ши ку? Профессор хваттерне панă... Ахăртнех, пĕр-пĕр пысăк специалист пулĕ ĕнтĕ. Инже-

нер, научнӑй работник... Ҫирӗм ҫул хушшинче ҫын таҫта та вӗренсе тухма пултарнӑ! Паллах, пули-пулми ҫынна кун пек хваттер парас ҫук...

Анчах та кун пирки манӑн часах иккӗленсе илмелле пулчӗ. Эпӗ ҫап-ҫутӑ тӗкӗрлӗ, лакпа сӑрланӑ шифоньер ҫумӗнче, тӗттӗмрех кӗтесре тӑракан этажерка патне пырса унта урлӑ-пирлӗ пӑрахнӑ кӗнекесене пӑхма тытӑнтӑм. Малтан чӑн хулӑммине, илемлине илтӗм те, вӑл... «Книга о вкусной пище» иккен, иккӗмӗшне тытрӑм — «Гигиена женщины» лекрӗ, виҫҫӗмӗшӗ — «Моды сезона» пулчӗ, унтан алла революциччӗнхи «Нива» журналӑн комплекчӗсем, хальхи вӑхӑтра пӗр ӑслӑ ҫын та вуламан Шеллер-Михайлов сочиненийӗсем лекрӗҫ, вӗсем айӗнче — «Сны и сновидения», «Руководство для продавцов кондитерских изделий» курӑнчӗҫ. Чӑн юлашкинчен — ку вара мана самаях тӗлӗнтерчӗ! — А. П. Чеховӑн пӗрремӗшпе виҫҫӗмӗш томӗсем тухрӗҫ. Кусем вӗр-ҫӗнӗччӗ, алла та тытман пулас...

Шӑпах эпӗ ҫак томсене уҫкаласа тӑнӑ чух Евтихи Петрович кухньӑран таврӑнчӗ.

— Кӗнекесемпе интересленетӗн-и? Хе-хе-хе...

— Ҫапла, сирӗн библиотекӑпа паллашатӑп-ха,— хам сисмесӗрех кулса илтӗм эпӗ. — Тӗрлӗрен кӗнекесем пур иккен сирӗн...

— Кӗнекисем нумай-ха вӗсем манӑн, — эп тӑрӑхланине ним туймасӑрах аллипе сулчӗ Солнышкин,— сарайӗнче те пӗр корзинка тӑп-тулли!

— Кусене халь илтӗр-и? — Чехов томӗсем ҫине кӑтартрӑм эпӗ.

— Ҫук, 44-мӗш ҫултах. Ответлӑ работниксене ун чух разнарядка тӑрӑх вӑйпах ҫырӑнтарчӗҫ те, ик кӗне-

кине туянмалла пулчĕ. Халь илместĕп ĕнтĕ — вулама вăхăт çук, тата... килĕшмест мана Чехов. Пĕр статьине вуласа тухрăм та — «Хамильон» ятлăччĕ-и çав— пăрахрăм. Темле, çынсенчен кулакан писатель вăл Чехов...

Унтан Евтихи Петрович, аллисене сăтăркаласа, темшĕн ман çине именчĕклĕн пăхрĕ.

— Итле-ха, Максим Николаевич... Аван мар та...

— Мĕн аван марри пултăр? Кала.

— Хам командировкăра чух манăн арăм укçана пĕтĕмпех пĕтерсе пăрахнă... Костюмлăх илнĕ ман валли — трико-метро. Костюмĕсем ахаль те пиллĕк таранах та манăн, ку материалĕ питĕ хăватлă. Высшей марки, тес пулать. И вот... понимаешь, закуска пур, анчах сыпмаллине илме...

— Унсăр та юрĕ-çке,—терĕм эпĕ.

— Ой, çук, çук! Ăçтан юратăр ун пек? Çирĕм çула яхăн курман пулать те пĕрне-пĕри... — Евтихи Петрович тарăннăн сывласа илчĕ те, мана тăрук алăран пăчăртаса тытрĕ. — Сан укçа пур-и? Пар эс мана ыранччен... пĕр çĕр тенкĕ! Ыранах тавăрса паратăп, ей-бо! Аван мар ĕнтĕ хăнаран кивçен ыйтма, анчах ним тума та çук... Нихçан та кун пек укçасăр юлакан марччĕ! Хе-хе-хе... Ху пĕлен, арăмсем çавăн пек вĕт вĕсем: ирхине вунă пин пар — каçчен çав укçана пĕр пус юлми пĕтерме пултараççĕ. Магазинсем тăрăх кунĕпе апат çимесĕр, чĕлхисене кăларса чупаççĕ,— çапах та пĕтереççех... Особеннă ман Лара: ăçта та пулин лайăх материалсем пурри çинчен пĕлчĕ-тĕк — вилсех каять! Кивçен те пулин укçа тупса кайса туянать...

— Мĕнех вара, япала туянни лайăх пуль вăл, — терĕм те эпĕ, Евтихи Петровича çĕр тенкĕ кăларса тыттартăм. Вăл çавăнтах кухньăналла чупрĕ. Часах вĕсем арăмĕпе иккĕшĕ хăвăрт-хăвăрт мăкăртатни илтĕнчĕ. Арăмĕ хăр-хар туса илнине те туйрăм, анчах кăшт тăрсан вăл тухса кайрĕ те, Евтихи Петрович каллех ман пата пычĕ.

— Халех полнăй порядок пулать, — терĕ вăл, аллисене паçăрхи пекех сăтăркаласа. — Ман арăм вăл енчен пултарать, нихçан та черетсенче тăмасть, ăна пур продавщицăсем те палласçĕ те, çынсен пуçĕсем урлах парса яраççĕ...

— Аçта ĕçлет вăл санăн?

— Ĕçлетчĕ те — пăрахрĕ-ха. Кăштах нервăннăй вăл. Çавăн пирки ĕçре кÿренмеллисем пулкаларĕç. Буфетра, ху пĕлен, питĕ йывăр вĕт ĕçлеме, пурне те юраса çитерме çук... Халăхĕ ытла грамăтнăйланса кайрĕ халь, — пулчĕ-пулмарĕ жалăбă кĕнеки ыйтаççĕ! Пĕррехинче тахăшĕ: сăра тулли ярса памастăн, тесе айăплама тытăннă та, Лара вара, çав элеке тÿсеймесĕр, ăна çав сăрапах питĕнчен чашлаттарнă. Хе-хе-хе... Ну, вара следстви, допрос... Нимĕн те тăваймарĕç конешнă, ĕçне чиперех пĕтерсе хутăмăр, анчах службăран вăхăтлăха тухмалла пулчĕ. Халь килтех-ха, мана пăхса пурăнать. Тепĕр тесен, вăл ĕçлени мана питех кирлĕ те мар, эп хамах çителĕклĕ тупатăп...

— Ачасем пур-и тата сирĕн?

— Пурччĕ те — халь çук. Иртнĕ хĕлле качча патăмăр. Чăн та, ман марччĕ вăл, Ларисăн хĕрĕччĕ, анчах хам ача вырăннех шутлаттăм... Чĕрчун вĕт, шалккă!

— Санăн хăвăн вуçех те пулман-и вара?

— А-а... районта пурăннă чух пулнăччĕ. Анчах эпĕ вĕсенчен уйрăлни вунă çул ытла ĕнтĕ.

— Пулăшатăн пуль вĕсене? Е... тӳлетĕн?

— Пулăшасси-мĕнĕ... Вĕсем колхозра вĕт. Хăйсем ӳркенмесен çăкăрĕ те, паранки те, ашĕ те пулма пултарать. Эпир кунта пĕтĕмпех укçа çинче, ху пĕлен.

— Ачисем миçе вара?

— Тăваттă пулас. Хотя эпĕ тăваттăмĕшне курман, вăл манăннах та мар пулĕ, тетĕп. Эп тухса кайсан çуралнă. Аслă ывăлĕ кĕçех салтака каймалла уш. Хам пекех здоровăскер...— Солнышкин ик чышкине чăмăртаса, хăйĕн хулпуççийĕсем мĕнле çирĕппине кăтартрĕ.— Çуркунне килсе кайрĕ пĕрре. Кив костюм парса ярас тесеттĕм те — илмерĕ, хлын, çĕннине пар, тет. Таçтан тупатăп-ха эп ăна валли çĕннине!

— Костюмĕсем санăн пиллĕк таранах темерĕн-и çав эсĕ? — хуллен тĕртсе илтĕм эпĕ.

— Ну, вĕсем... ялта тăхăнмаллисем мар вĕт! Ытла тата... Воопще, хальхи çамрăксем иртĕхсе кайнă...

Çак калаçу вăхăтĕнче Евтихи Петрович тăтăшах буфетра темскер шырарĕ. Пур алăксене те, пур ещĕксене те уçа-уça пăхрĕ, пĕрре чĕрне вĕççĕн тăрса кармашрĕ, тепре эхлете-эхлете пĕшкĕнчĕ, кукленсе ларса ухтарчĕ.

— Аçта шуйттанне чикнĕ вăл ăна? — терĕ юлашкинчен, ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса.

— Мĕн çухалнă? — ыйтрăм эпĕ.

— Графинчик таста кайнă. Эп командировкăран таврăннă тĕле вăл яланах тулли пулаканччĕ... Йăли çапла пирĕн килте. Паян эпĕ ăна тĕкĕнменччĕ-ха. Лариса магазинтан киличчен калаçса лармалăх кăшт кирлĕччĕ-ха пире иксĕмĕре... Чим-ха, кухньăра мар-ши!

Минут та иртмерӗ пулӗ — Евтихи Петрович тӗпне апельсин хупписем пӑрахнӑ пысӑках мар графин тата темиҫе пӗчӗк кукӑль хунӑ турилкке ҫӗклесе пычӗ.

— Арӑму киличчен тӑхтамаллаччӗ пуль... Ҫиленӗ тата, — терӗм эпӗ, Солнышкин черккесем хатӗрленине курсан.

— Ҫо-ок! — аллипе сулчӗ кил хуҫи, — ҫиленмест, характерӗ лайӑх унӑн, хамӑнни пекех! Ылттӑн характер, темелле... Атя, сиксе лар сӗтел патнерех. Иксӗмӗр тӗл пулнӑшӑн, хамӑрӑн сывлӑхшӑн!..

5

— Ну, тусӑм, каласа пар хӑвӑн ҫинчен, ӑҫта, мӗн туса пурӑнтӑн эсӗ ҫак вунпилӗк-ҫирӗм ҫул хушшинче? Ыррине ытларах куртӑн-и, усаллине-и? — терӗ Евтихи Петрович, иккӗмӗш черкке хыҫҫӑн чӗлхе-ҫӑвар лайӑхрах ҫаврӑнма пуҫласан. — Ҫапах та, интереснӑҫке юлташсем ҫинчен пӗлме!

— Манӑн каласа памалли нимех те ҫук, — терӗм эпӗ. — Техникум хыҫҫӑн Вӑтам Азие ячӗҫ, унта пӗр совхозра ӗҫлерӗм, лашасем ӗрчетсе пурӑнтӑм...

— Вӑтам Азире? — тӗлӗнчӗ Солнышкин. — Ой, кансӗр пулчӗ пуль! Унта вӗт пур ҫӗрте те пушхирсем, шакалсем, тигрсем... Астӑватӑп, ача чухне пӗр кӗнеке вуланӑччӗ. Мӗнле халӑх пурӑнатчӗ-ха унта? Басмачсемччӗ-и ҫав?..

— Тӗрӗсех мар ку. Басмачсем — халӑх мар, бандитсем пулнӑ, акӑлчансем хӗтӗртнипе пире хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Вӗсем тахҫанах ҫук ӗнтӗ. Халь унта та, кунти пекех, коммунизм тӑваҫҫӗ...

— Кайса курман, пӗлместӗп. Пулӗ те. Анчах унта пур ҫӗрте те хӑйӑр вӗт-ха, ҫил тухсанах куҫ-пуҫ курӑнми ҫавӑрттарать.

— Пушхирсене те халь ҫӗнтерсе пыраҫҫӗ.

— Вӑл та пулма пултарать, конешнӑ. Хирӗҫместӗп... Вара эсӗ пӗрмаях ҫавӑнта пурӑнтӑн-и?

— Ҫук, пилӗк ҫул ӗҫлесен Мускава, ветеринари институтне кайса кӗтӗм те, вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫул пӗтерсе тухрӑм.

— Лаша тухтӑрӗ эппин эс халь? Хе-хе-хе...

— Ҫавӑ. Анчах кулмалли нимех те ҫук пек унтан.

— Кулса мар-ха, ахаль... — Солнышкин тата тепӗр черкке тултарса ӗҫрӗ. — Лаша — выльӑх вӗт-ха вӑл, тӑнсӑр, чӗлхесӗр чун. Эпӗ ак тӳрех калама пултаратӑп — манӑн час-часах пӗвер ыратать. А лаша мӗн? Унӑн хӑш тӗлте ыратнине ӑҫтан пӗлен? Мӗнле эмеллемелле ӑна?

— Пӗлетӗн-и эс, хӑшпӗр лашасем тепӗр этемрен те ӑслӑрах пулаҫҫӗ? — терӗм эпӗ, юриех Солнышкина йӗкӗлтес шутпа. Анчах та вӑл манпа тӳрех килӗшрӗ:

— Ана илтнӗ эпӗ, илтнӗ! Ун ҫинчен пӗр чӑваш писателӗ калав та ҫырнӑ, терӗҫ. Хам вуламан конешнӑ, мӗншӗн тесен манӑн кӗнекесемпе ларма вӑхӑт ҫук, эп деловой ҫын, тата чӑвашла вулаймастӑп та эпӗ — йывӑр чӗлхе вӑл маншӑн, анчах ҫынсем вуланӑ... Ик!

Евтихие сасартӑк йӗксӳ аптратма пуҫларӗ.

— Ик! Ну, вӑл-ку юрӗ-ха... Кайран, лаша тухтӑрӗ пулнӑ хыҫҫӑн—мӗн?

— Фронта кайрӑм. Каларӑм-ҫке, тин ҫартан таврӑнатӑп.

— Ку аван вара, — терӗ те Солнышкин, каллех

тутлăн карăнса илчĕ.—А эпĕ вăт фронтра пулаймарăм, чорт воçми, питĕ кӳренетĕп уншăн. Пĕр-икĕ орден кирлехчĕ пурнăç валли... Ик! Но — ним тума та çук. Эп айăплă мар уншăн — сывлăх подвел мана. Пĕвер шыçса кайрĕ, ишиас, гастрит, тем те пĕр тапранчĕ. Как рас, вăрçă пуçланнă çул... А кайран—тыл валли питĕ кирлĕ çын эсĕ, терĕç. Ик! Бронь пачĕç...

— Паллах, тылра та камăн та пулин ĕçлемеллех пулнă çав, — ун майлă пултăм эпĕ.

— А какшă! — хавасланса кайрĕ Солнышкин.— Пире те питĕ йывăр килчĕ вĕт кунта, о-о-о! Эрни-эрнипе çывăрмастăмăр эпир. Мĕн тĕрлĕ ĕçре пулмарăм пуль! Аçта недостаткă, прорыв, невыпольнени— мана яраççĕ. Атя, выручай, Солнышкин!.. Ик! Эпĕ ак сана тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парăп-ха, тăхта, Лариса килтĕр...

Вăл сĕтел хушшинчен тăчĕ те каллех буфет патне пырса тем шырама тытăнчĕ.

— Акă, эп сана хамăн трудовой книжкăна кăтартăп. Тĕлĕнсе кайăн! Аçта кăна яман мана...

— Документсем кирлĕ мар, ахелех каласа пар эсĕ! — аллинчен тытса лартрăм çакна.

Солнышкин пирус тивертсе ячĕ те, çăра тĕтĕме çăварĕнчен ункăн-ункăн кăларса, пĕр хушă маччанал-ла пăхса ларчĕ.

— Да, пурнăç, пурнăç... Ик! Тем те курма тивет çав ĕмĕр тăршшĕнче. Кĕтмен япаласем те нумай пулаççĕ. Сăмахран илсен, эпĕ хамăр ялти лавккара продавщик пулнă чух, çакнашкал пурнăçа (вăл алли-пе сарлакан сулса илчĕ...) тĕлĕкре те курма пултарайман... Мĕскер, кам пулнă эп ун чух? Сăмса шăлайман бацан! И вот — куран...

— Унтан эсӗ артист пулнӑччӗ пулас? — аса илтертӗм эп ӑна.

— Пулнӑ, такам та пулнӑ. Пурнӑç çулне шыранӑ, ниме те тиркесе тӑман. Ну, паллах ӗнтӗ, ырӑ çынсем пулӑшмасӑр çӳлелле питех хӑпарма çук. Анчах ун пек çыннисене те тупма пӗлмелле-çке...

— Театртан ӑçта кайрӑн вара эсӗ? — (Çак этемӗн кукӑр-макӑр пурнӑçӗ мана чӑннипех интереслентерме пуçларӗ, вӑл мӗнле çакӑн пек «хӑпарса» кайнинс пӗлессӗм килчӗ. Кӑсӑякасси шкулӗнчен пӑрахса кайнӑ хыççӑн вӑл текех парттӑ хушшине пачах та ларса курманни маншӑн хӑй каламасӑрах паллӑ пулчӗ халь.)

— Ун хыççӑн эпӗ каллех по торговой части кайрӑм, — терӗ Солнышкин, урисене сулкаласа. — Кукка мана райпотребсоюза вырнаçтарчӗ. Заготовка агенчӗ пултӑм. Виçӗ çула яхӑн ӗçлерӗм эп унта. Юлашкинчен шутсӑр йӑлӑхтарса çитерчӗ ку ӗç, мӗншӗн тесен ялан ялсем тӑрӑх сӗтӗрӗнсе çӳрес пулать — юр çӑвать-и, çумӑр-и, шӑрӑх-и, сивӗ-и, пурӗпӗр. Пӗр енчен кӑна лайӑхчӗ унта — хӗрсемпе нумай паллашрӑм. Районра мана пӗлмен хӗр те юлман, тес пулать. Анчах... не все коту масляница, теççӗ-и-ха çав? Хе-хе-хе... Пурӑнсан-пурӑнсан, хӗрсем хӑйсем хам хыççӑн района пыма пуçларӗç: пӗри, тепри, унтан тата тепри... Шутсӑр хӑюллӑ тата хӑйсем—тӗлӗнсе каймалла! Качча ил, атту суда паратпӑр, теççӗ. Пыр та калаç вӗсемпе! Ним тума та çук — пӗрине илсе ямаллах пулчӗ. Ыттисем вара, тав турра, хӑйсемех хӑпрӗç манран.

Евтихи Петрович, теме аса илсе, ассӑн сывласа ячӗ.

— Пурнăçра вăл, пĕр тапрансан, инкек çине синкек пулса пырать вĕт... Çак, манăн арăм тени, хам пата пырсан пĕр виçĕ уйăхранах ывăл çуратрĕ. Ну, ку юрать-ха ĕнтĕ... Анчах тепĕр çулталăкран — татах, çитменнине йĕкĕреш туса пачĕ! Шутсăр тарăхса каййрăм... Чиперех пĕтет вĕт манăн çамрăк ĕмĕр! Эсĕ мĕн, терĕм çакна, кролик ами пек хăтланатăн? Пĕлтĕр пĕрре, кăçал иккĕ, килес çул, тен, виççĕ çуратса парас, тейĕн? Ăçта кайса кĕмелле вара манăн? Мĕн çинчен шухăшлатăн эсĕ?!

Солнышкин тарăхсах чышкипе сĕтеле çапса илчĕ те, унăн каллех йĕксĕ пуçланчĕ.

— Куншăн вăл пĕр-пĕччен айăплă пулман та-ха ĕнтĕ... — унăн ялти арăмне хӳтĕлеме тăтăм эпĕ. — Тĕрĕс мар вăрçнă эс ăна...

— Тĕрĕс! — каллех сĕтеле çапрĕ кил хуçи. — Вăл хăй йĕкĕреш хăраххи пулнă... Ик! Çавăнпа йĕкĕреш пулнă унăн. Мана ун çинчен каламан вăл! Эп вара ăна: вĕçтер аçу-аннӳ патне, манăн вĕренме каймалла, ача пăхса лармалла мар, терĕм те, тепĕр кунне япали-мĕнĕ, ачийĕ-пăчийĕ, веç тиесе ятăм!

— Ху пĕччененех юлтăн-и вара?

— Юлтăм та — нумай пурăнмарăм. Кунта пурăнса çын пулса çитес çук эпĕ, терĕм те — Шупашкаралла ярăнтартăм... Ик!

— Телей шырама ĕнтĕ? — кулса илмесĕр чăтаймарăм эпĕ.

— Паллах! Районра мĕн унта? Горизонтсем питĕ ансăр вĕт! А манăн чун ялан пысăкрах вырăна, ятлăрах та чаплăрах çынсем хушшине туртатчĕ... Ик!

Çак вăхăтра коридор алăкĕ уçăлни илтĕнчĕ те, Солнышкин шăпах пулса ларчĕ.

— Тс-с! Арăм килчĕ!

Курса та юлаймарăм вăл пӳлĕмрен мĕнле пĕрхĕнсе тухса кайнине. Часах вĕсем арăмĕпе иккĕшĕ кухньăналла иртрĕç, унтан хăр-хар, шăй-шай! туни илтĕнчĕ те, пĕр хушă шăпах пулчĕ. Эпĕ шухăша кайрăм... Манăн çак çынсем патĕнчен халех, пĕр тăхтамасăрах тухса каяссăм килчĕ, анчах, ун пек туни аван маррине чухласа, хускалмарăм.

— Тепĕр тесен, мана вĕсенчен нимĕн те çыпăçмасть вĕт, — терĕм. — Итлесе пăхас, кайран мĕнле пурăннă ку ханттар...

Нумаях кĕтмелле пулмарĕ. Эпĕ ларакан пӳлĕме малтан куçа йăмăхтарса яракан сап-сарă пурçăн кимоно тăхăннă Лариса Филаретовна кăвакал ами пек саркаланса кĕчĕ, ун хыççăн — тулли поднос йăтнă Евтихи Петрович.

— Қаçарăр тархасшăн, сире нумай кĕттертĕмĕр...—пĕветнĕ тутисене ирĕлтерсе илчĕ Солнышкина. — Қолбаса патĕнче черет, скандал... Пĕр çынна килоран ытла памаççĕ, дилехтăр патне каймалла пулчĕ, вăл пур, подлец, хама пит лайăх пĕлет пулсан та, калаçасшăн та мар, ларать ампиратор пек... Эп ăна: Евтихи Петрович патне Берлинран пĕр полковник ятарласа хăнана килнĕ, тетĕп, а вăл хăнк та тумасть, норма, тет!

— Полковниках мар та-ха, майор кăна та-ха...— терĕм эпĕ.

— Уншăн пурĕпĕр мар-им, мĕн ăнланать вăл?— пӳлчĕ мана Лариса Филаретовна. — Эсир малалла итлĕр! Норма, тесен, эп тӳссе тăраймарăм вара, тӳрех каласа хутăм: эсĕ ху мĕн, нормăпа çисе сысна пек самăрăлса кайрăн-и çакăнта? Қала-ха! А вăл, ăнла-

нас выранне, мана хирĕç: «Сыснаран илтетĕп!»—терĕ. Ну, пуçланса кайрĕ вара пирĕн. Вăл пĕр сăмах калать — эпĕ иккĕ, вăл иккĕ — эп тăваттă! Пĕтĕмпех аса илтертĕм: Евтихи Петрович «Кожупряжьре» ĕçленĕ чухне хăйне хромовăй атă туса панине те, хам ачапăча столовăйĕн заведующийĕ пулнă чух арăмне кĕрпесем, компотсем тыттарса янине те, пурне те!

— Куна эсĕ ытлашширех тунă вара... — хĕрелерех мăкăртатса илчĕ упăшки.

— Ним те ытлашши мар! — урипе тап! тапса илчĕ арăмĕ. — Ун пек нахалсене çапла вĕрентес пулать, рас хăйсене ыр тунине хирĕç ыр тума пĕлмеççĕ! Тупăннă дилехтăр! Хăйĕн арăмĕ паян кун та салтак пушмакĕпе çӳрет...

— Ну, вара ĕç мĕнле пĕтрĕ сирĕн? Ыйтнине парса ячĕç-и? — интересленчĕ упăшки.

— Асту, парать сана ун пек негодяй! Милиципе хăратма тытăнчĕ вăл мана. Пĕрре-пĕрре арăмне тĕл пулсан, паратăп-ха эп ăна милици! Ĕмĕр манмĕç!

— Ну, Ларочка, пуçлар пулĕ...—терĕ Евтихи Петрович хуллен, хăйĕн ылттăн характерлĕ арăмĕ çине хуçи умĕнче айăпа кĕнĕ йытçури пек пăхса.

— Чим-ха эсĕ, каласа пĕтерем-ха! Ан васка, кӳпсе лартма ĕлкĕрĕн-ха! — аллипе сывлăша каснă пек сулса ячĕ Лариса Филаретовна.— Инкек çине синкек! Хайхи магазинран тухрăм та, часрах килелле чупрăм. Васкатăп ĕнтĕ — тӳсме çук, вăхăт нумай иртрĕ-çке-ха, кунта эсир кĕтсе ларатăр... Кино тĕлне çитсен, урасем пĕр тăрук ик еннелле ярт! шуса кайрĕç те, пăрттуар çине кĕпсĕрт! тăсăлса выртрăм. Çеткăри пĕр кĕленчи чăнкăр-р турĕ. Ну, çилĕ килсе кайрĕ... тарăхман вырăн та юлмарĕ çав! Чут макăрса

яраттӑм. Ним тума та ҫук — буфета кӗрсе ҫӗнӗрен илмелле пулчӗ вӗт!

— Питӗ шел... Укҫи ахаль ҫук...— мӑкӑртатса илчӗ упӑшки. Анчах та кӑлӑхах сӑмах хушрӗ вӑл — арӑмӗ ҫавӑнтах пӑсӑрлантарса тӑкрӗ ӑна:

— Укҫи шел сана! Эпӗ пур — пуҫа ҫурса пӑрахаттӑм! Санӑн хӑвӑн чупмаллаччӗ магазина, услап! Ҫумӑр ҫума пуҫланине куратӑн, ху ҫавах арӑмна кӑларса яратӑн, адиот!

— Эс черетсӗр те...

— Асту, черетсӗр! Мана паллаканнисене пурне те кӑларса янӑ халь унтан.

— Эп пӗлмен...

— Эс нихҫан та нимӗн те пӗлместӗн!

Евтихи Петрович паҫӑр, арӑмӗ ҫук чух, самаях хӗрнӗ пекчӗ, халь пӑхрӑм та — нимӗн те ҫук, тӑп-тӑр урӑ ҫын тӑрать. Йӗксӳ те иртсе кайрӗ унӑн (сасартӑк хӑрасан, ҫав япала тӳрех иртсе каять, теҫҫӗ). Арӑмӗ ҫинчен куҫ илмесӗрех, вӑл:

— Юрӗ-ҫке, Ларочка, каҫар...— текелесе, пукан ҫине ерипен ларчӗ.

Анчах ӗҫ кунпа пӗтмерӗ-ха. Лариса Филаретовнӑн «ылттӑн» характерне тата тепӗр хут курма тӳр килчӗ манӑн. Поднос ҫинчи ӗҫме-ҫимесене сӗтел ҫине лартнӑ чух вӑл леш «командировочнӑй» графинчик пуш-пушах тӑнине асӑрхарӗ те, тӑрук, пӗр самантрах кӑвакарса ҫӗр тӗслӗ пулса кайрӗ. Унӑн самаях илемлӗ кӑвак куҫӗсем тигрӑнни пек ялкӑшса илчӗҫ.

— Эс-с... м-мӗн турӑн?— сӑмахӗсене шӑл витӗр сӑрхӑнтарса кӑларчӗ вӑл.

— Нимĕн те туман... Ху час килмерĕн те, кичем пуласран пĕрер черкке...— куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса илчĕ Солнышкин.

Арăмĕ урăх нимĕн те чĕнмерĕ,— поднос çинче выртакан салфеткăна илчĕ те, упăшкине сăмса урлă çăт-çат! тутарчĕ темиçе хут.

— Лара... Ларочка!—питне аллипе хупласа сиксе тăчĕ Евтихи Петрович. — Ан выля, ан выля ĕнтĕ! Çын умĕнче...

Лариса Филаретовна ăна илтмерĕ, тейĕн. Вăл çавăнтах ман еннелле çаврăнчĕ те каллех çав тери кăмăллăн кулса илчĕ:

— Эсир тем ан шутлăр, Максим Николаевич, эп юратнипе ăна... хăш чух çавăн пек вĕренткелетĕп пăртак... Ахаль эпир унпа çав тери килĕштерсе пурăнатпăр... Çапла-и, Тишок? Ну, каласам!—упăшки çине шăтарасла пăхрĕ вăл.

— Уху, çапла, тĕрĕс,— терĕ Евтихи Петрович, хĕрелсе ларнă сăмсине ывăç тупанĕпе сăтăркаласа.— Питĕ юрататпăр эпир пĕрне-пĕри... Шутсăр, калама çук юрататпăр.

Çемьере каллех мирлĕ тапхăр пуçланчĕ.

## 6

Сĕтел хушшинче пĕр сехет пек ларсан, лару-тăру çав тери юсанса кайрĕ. Евтихи Петровичпа Лариса Филаретовна мана ĕнер çеç авланнă çынсем пек туйăнма пуçларĕç. Арăмĕн кăмăлĕ халь усламçу пек шăранса тăчĕ.

— Тиша, Тишечка, Тишок...— чĕвĕлтетрĕ вăл, упăшкине ăна та, кăна та çиме сĕнсе.

— Лара, Ларочка, Ларёк...—çаван майлах йăпăлтатрĕ ăна хирĕç упăшки, мăкăнь чечекĕ пек пулса кайнă арăмне ним сăлтавсăрах унтан та кунтан чуптуса.

«Кур, эпир пĕрне-пĕри мĕн тери юратса, епле телейлĕ пурăнатпăр», тесшĕн пулчĕç ĕнтĕ вĕсем.

...Ун пек чухне яланах нумай калаçаççĕ-çке-ха, сăмах-юмах таçта та çитсе çапăнать. Халĕ те çаван пекех пулчĕ. Малтан Лариса Филаретовна тек мана тĕпчерĕ: ăçта, хăçан, мĕнле? Пуринчен ытларах, вăл Европăри хĕрарăмсем мĕнле тумланни, вĕсем хăйсене арçынсемпе мĕнле тыткалани тата хăнасене мĕнлерех йышăнни çинчен пĕлме тăрăшрĕ. Ку тĕлĕшпе эпĕ пит те сахал пĕлни ăна, паллах, кăмăла каймарĕ. Эпĕ хам та çак телейлĕ мăшăр çинчен тĕплĕрех пĕлме тăрăшрăм, мĕншĕн тесен вĕсем иккĕшĕ те паянхи пурнăçа сасартăк темле урăх тĕнчерен килсе кĕнĕ пек туйăнчĕ мана.

— Евтихи Петрович, паçăр эсĕ хăвăн çинчен каласа пĕтерейменрĕн, малаллине пĕлесчĕ, çав тери интереслĕ санăн биографи. Пĕр-пĕр писателе каласа парсан—роман çырма пултарать сан çинчен,—юриех илĕртрĕм çакна.

— Ку — тĕрĕс! Пурте çапла калаççĕ!—каллех хавасланса кайрĕ Солнышкин.— Питĕ сложнăй манăн биографи... Анчах эсĕ çуррине те пĕлместĕн-ха вĕт...

— Пĕлместĕп çав, çавăнпа ыйтатăп. Каласа пар...

— Каласа парас, ма каласа парас мар? Ăçта çитрĕм-ха эп паçăр?

— Шупашкара килтĕн.

— Аха, точно...—Арăмĕ буфет патнелле кайнă хушăра вăл ман умри тулли черккене тытса çавăрса

хучĕ.— Шупашкара килтĕм. Та-ак. Тытăнтăм ĕç шырама...

— Мĕнле ĕç шыратăн тата?—сас пачĕ тĕкĕр умĕнче çӳçĕсене юсаса, çурăмĕпе пирĕн еннелле тăракан арăмĕ.

— Хам çинчен каласа паратăп-ха, Максим Николаевич ыйтать те...— терĕ Солнышкин, каллех айăпа кĕнĕ пек.

— А-а, ку маншăн... йӳç купăста пекех,— аллипе сулчĕ арăмĕ.— Эп кăштах кайса канам-ха, тем пуç çаврăнма пуçларĕ манăн...

Арăмне ачаш куçсемпе ăсатса янă хыççăн Евтихи Петрович хăйĕн калавне çĕнĕрен пуçларĕ.

— Ĕç шыратăп, значăт... Паллана сынсем çук манăн. Кукка пĕр çын патне çыру парса янăччĕ, анчах та ăна эп пыриччен пĕр çур çул малтанах растратăшăн хупнă иккен. Вара эп унта, кунта... Телефон юписем çинчи пĕлтерӳсене пăхатăп, хаçатрисене вулатăп — чуна лăплантармалли нимĕн те тупаймастăп! Юпасем çинче грузчиксем, конюхсем, уборщицăсем шыраççĕ, хаçатсенче—вĕренме чĕнеççĕ. Пĕри те мана юрăхлă мар! Конюх пулас пур—эп Шупашкара та килес çук, вĕренесси — ачасен ĕçĕ вăл, мана шалу кирлĕ... Пĕр эрне ытла сулланса çӳрерĕм урамран урама, учрежденирен учреждение. Усси çук! Шикленме те пуçларăм ĕнтĕ — неуштă каллех яла таврăнмалла пулать? Çĕр çăттăр!.. Юлашкинчен, çапах та, тупрăм-тупрăмах. Темле инвалидсен артельне пырса кĕтĕм те — счетовод кирлĕ, терĕç. Пултаратăн-и? Пултаратăп! Хам ун чухне дебет-кредит мĕн иккенне те пĕлместĕп. Маншăн ун чух тем-ха вăл сальдо, баланс, контокорент... Анчах хăраса тăрсан — ĕç тух-

масть. Пултаратăп! Райсоюзра икĕ çул ĕçлесе, терĕм артель председателĕн сĕтелĕ хушшинче ларакан хăрах куçлă çынна. Документсем пур-и? Çук, пасарта бумажнике жуликсем кăларса илчĕç, тетĕп, укçи-мĕнĕпех, веçех... Ĕненчĕ вĕт çак, урăх нимĕн те ыйтмарĕ!

— Юрĕ, ачи çивĕчскер курăнать-ха эсĕ, ыран кил,— терĕ.

Урама тухсан, чутах ташша ярattăм вĕт! Ара, вырнаçрăм-иç! Хулари служащи пулса тăтăм-иç! Шуткă-им ку? Тахçанхи ĕмĕт тулчĕ манăн! Қайранмалтан мĕн пуласси курăнĕ унта...

Евтихи Петрович пырне ликерпа йĕпетсе сывлăш çавăрса илчĕ те тата хавасланарах каласа пама пуçларĕ.

— Ирхине пытăм та — мана пĕр пĕчĕкçеç пӳлĕме кĕртсе лартрĕç. Бухгалтер чирлĕ, халлĕхе пĕчченех ĕçлемелле пулать, терĕç. Ничево, терĕм, аптрамăпăр! Тытăнчĕç хайхи мана темле накладнойсем, квитанцисем, ордерсем пырса пама... Мĕн шуйттанĕ тумалла вĕсемпе — вĕлерсен те пĕлместĕп. Вулатăп, çавăркаласа пăхатăп та — сĕтел ещĕкне хуратăп. Анчах та хам чăн-чăнах счетовод иккенне кăтартмалла-çке-ха манăн! Никам çук чух пӳлĕм алăкне кăшт уçатăп та — тытăнатăп шакăртаттарма: шăкăртти-шакăртти, шăкăртти-шакăртти!—çĕтĕк мотоцикл чупнă пек илтĕнет! Хăш чух служащисем, тĕлĕннипе, алăкран пуçĕсене чиксе пăхатчĕç вĕт: мĕн хăтланать ку счетовод, тетчĕç пулмалла. Қам та пулин пырса кĕрсен— чарăнатăп, хулăн кĕнекесенче темскер шыранçи тăватăп. Ĕçлет çын! Хе-хе-хе...

Уйăх ытла çавăн пек пурăнтăм. Унтан вĕсен бухгалтерĕ — юмăç карчăкĕ пекрех хĕрарăм — сывалса

ĕçе тухрĕ те, пĕр-ик кунтанах эп нимĕн те тума пĕлменнине сиссе, мана ĕçрен хăваласа яртарчĕ!

Пĕтрĕм! Каллех ĕç шырас пулать манăн. Ăçта кайса кĕрес?.. Ним тума аптранă енне, тытăнтăм çакăнти начальникех тархаслама:

— Пулăш ăçта та пулин вырнаçма, ĕмĕр манмăп, пурнăç ăнсан — парăмра юлмăп,— тетĕп.

Хĕрхенчĕ çак мана. Пĕртен-пĕр куçĕпе ман çине чыла-айччен пăхса ларчĕ те:

— Юрĕ, ачи çапах та кăмăлласкер курăнать-ха эсĕ, столовăйсен склачĕн заведующийĕ тăвăп сана,— терĕ.— Пултарăн-и?

— Ара, мĕн пултарманни пур!—тетĕп.

— Пуринчен ытла, пуçлăхсене юрама пĕлес пулать,— вĕрентрĕ вăл мана.— Вĕсен кăмăлне ан пăс... Асту!

Хам айвантарах пулнă пулин те, вăл мана мĕн пирки систернине чиперех ăнлантăм çавăн чух: пуçлăхсене юрама пĕлмелле!

Солнышкин тарăннăн сывласа илсе пирус чĕртсе ячĕ.

— Да-а... Чăнах та пĕлтĕм вара, тĕрĕснех калас пулать... Шалу уйăхне 200 тенкĕ çеç пулнă пулин те, çулталăк çурă хушшинче питĕ лайăх тумлантăм— костюм, пальто, сорочкăсем, шлепке туянтăм... Каç-каç Атăл хĕррине тухсан, хĕрсем мана куçсемпе çиетчĕç кăна вĕт. Укçаран та татăк пулман, хама кирлĕ çынсене хуть те хăçан та хăналама пултарнă. Артель председателĕпе питĕ туслă пурăнтăмăр, вăл мана нихçан та кӳрентерместчĕ, эп те ăна ыр тума пĕлеттĕм. «Евтихи, паян манăн арăмăн менельник», тесе çырса ярать кăна — ăна мĕн кирлине тӳрех ăн-

ланатăп. Лайăх пурăнтăмăр! Анчах та ку артеле темшĕн пĕтерсе хучĕç те, пирĕн уйрăлмалла пулчĕ. Çапах та вăл мана каллех пулăшрĕ: тĕлĕнмелле хăватлă характеристика çырса пачĕ. Ун пек хутпа маншăн пур çĕрелле те çул уçă пулнă!.. Атя-ха, тепрер лампадка хурар...

— Аçталла кайрăн вара эс çав уçă çулпа?— ыйтрăм эпĕ.

— Малтанах ытла ăнăçлах пулмарĕ, коммунхоз системине лекрĕм. Прачечнăй пуçлăхĕ турĕç. Ну, ĕç мар вара вăл! Лапăрчăк кĕпе-йĕмпе супăнь кăпăкĕ кăна вĕт унта. Пĕр уйăх хушши аран-аран тӳскелерĕм. Унтан коммунхоз заведующине пĕр-икĕ хут хăналарăм та — вăл мана хулари парикмахерскисен пуçлăхĕ туса хучĕ. Анчах кунта та кăмăла каймарĕ мана. Каллех супăнь кăпăкĕ, каллех простыньсем, салфеткăсем... Нимĕнле доход та çук тата. Завсклад чухнехи запассем пĕтрĕç, шалу—400 кăна. Нумаях сикеймĕн вăл укçапа! Епле пулсан та, суту-илӳ организацине, «çăкăрлă» вырăна куçас пулать... Тытăнтăм вара унти çынсемпе çывăхрах паллашма, вĕсене хам майлă çавăрма... Юриех пĕр торг начальникĕн ватта юлнă хĕрĕпе çыхлантăм, вĕсем патне килне çӳреме пуçларăм. Хăш чух пилĕк çăлтăрлă кĕленчесем те чиксе каяттăм ашшĕ валли. Мĕн тетĕн эс? Ĕç тухрĕ вĕт! Столовăйсен трестне, заготовка пайне чиксе хучĕ вăл мана. Çăкăрлă вырăн! Малтан заместитель пултăм, çулталăкран — пуçлăх. Ну ĕнтĕ, пурнăç кунта... мĕнле калас?—пыл та çу пулчĕ, темелле! Бухгалтерпе шутсăр килĕштереттĕмĕр,— ку вара, хăвах чухламалла, питĕ усăллă япала. Леш торг начальникĕн ватă хĕрĕ кăна чăрмантаркаларĕ пĕр

хушă, кантура пырсах скандалсем турĕ: атте сана лайăх вырăн тупса пачĕ, а эсĕ пур мана пăрахрăн, сысналла хăтлантăн, текелерĕ, анчах та парăнмарăм— отшил. Ун чух эпĕ çак Ларочкăпа паллашнăччĕ ĕнтĕ, вăл пĕр киоскра сăра сутатчĕ... Пуçлăх пулсан вара пĕр çур çултанах эпир унпа пĕрлешрĕмĕр, мĕншĕн тесен хусах пурнăç йăлăхтарса çитерчĕ: брюки якатакан та, апат пĕçерсе паракан та çук. Хамăр столовăйсенчи апата çиейместĕм эпĕ — тӳрех вар-хырăм пăсăлатчĕ манăн. Ларочка вара вăл тĕлĕшрен — артист! Купца çемйинче çитĕннĕ-çке, 1929 çулччен вĕсен хăйсен магазин пулнă... Ак çак коверсем-мĕнсем— пĕтĕмпех унăн... (Арăмĕ илтесрен хăранă пек, кăна вăл шăппăн, анчах питех те мăнкăмăллăн каларĕ.)

— Вăл санăн халĕ те артистка пекех,— терĕм эпĕ. — Сăнтан та, ытти енчен те...

— А какшă! — савăнса кайрĕ кил хуçи. — Солнышкинăн скус пур унăн, япаласене суйласа илме пĕлет вăл! Хотя эпĕ сирĕн пек академисем пĕтермен, анчах ман уншăн самообразовани вăйлă. Куратăн— мĕн чухлĕ кĕнеке манăн!

— Нумай, нумай...—кулса илтĕм эпĕ.

— Унтан тата эпĕ курссенче те вĕреннĕ,— хĕрсех пычĕ Солнышкин.— Вăрçăччен Çĕрпӳре вунă кун, вăрçă хыççăн Козьмодемьянскра ик эрне... Кирлех пулсан, средни образовани çинчен документ та пур манăн!

— Вунă класс хăçан пĕтернĕ вара эсĕ? — кăштах тĕлĕнтерчĕ ку мана. Эп астăвасса, эсĕ çиччĕмĕш класран...

Солнышкин, аллипе сулса, мана тӳрех пӳлсе лартрĕ:

— Ну, дорогой товарищ, документсем илме не уписательно парттă хушшинче вунă çул ларма.

— Мĕнле-ха тата?

— Питĕ простă. Пĕррехинче манран образовани пирки справка ыйтрĕç те, эп ăна йăпăрт кăна тупса патăм. Ун чух пирĕн ялти шкул директорĕ—хамăрăн йысна ывăлĕччĕ. Çавăн патне кайрăм та, момент удостоверени туса пачĕ вăл мана: Солнышкин, Евтихи Петрович, çав-çав çулта вуннăмĕш класран отлично вĕренсе тухнă...

— Ку — ултав, преступлени вĕт-ха...

— Мĕнле преступлени?—чунтанах тĕлĕнчĕ Солнышкин.—Мĕн вăл, банкран суя чекпа укçа илни-и, çын вĕлерни-и? Подумаешь, пĕр бланк çине темиçе сăмах çырса панă! Рас ыйтаççĕ, тупса памалла-çке ман ăна? Неушлĕ çав хут таткишĕн лайăх ĕçрен тухса каймалла?..

Унпа тавлашнинчен усси пулас çуккине курса, эпĕ ăна хирĕç чĕнмерĕм, хăй çинчен малалла каласа пама ыйтрăм çеç.

— Виçĕ çул питĕ лайăх пырсаччĕ манăн ĕçсем,—терĕ Солнышкин, çыхланма пуçланă чĕлхине çăмăллатма тата тепĕр черкке хурса,—авторитет, хисеп... Хулара пурте паллакан пулса çитрĕç. Анчах тăваттăмĕшĕнче кĕтмен çĕртен пăсăлса кайрĕç. Пĕр усал хĕр пирки...

— Мĕн пулчĕ тата? Эс арăмпа пурăннă-çке...

— Вăл енĕпе мар, уншăн пулсан сăмах та çук,—аллипе сулчĕ Евтихи Петрович.— Вата бухгалтер вилчĕ те пирĕн, ун вырăнне пĕр комсомолкăна илмелле пулчĕ. Халь çеç курс пĕтерсе тухнă хăй, çапах та шутсăр çивĕчскер, никама та маххă парас çук!

Çав хĕр эп тăратакан хăшпĕр документсене йышăнмарĕ. Ун пек туман та кун пек туман, тет... Эпĕ — йышăн, тетĕп, приказ паратăп. Çук, манăн сирĕнпе пĕрле тĕрмене кайса ларас килмест, тет çак. Мĕншĕн тĕрме?—тетĕп. Мĕншĕн тесен ку документсем тĕрĕс мар вĕсем, хвальшивăй, тет. Ну, эпĕ вара хамăн влаçа кăтартма тытăнтăм: шăпах директор вырăнне юлнăччĕ те, кăштах хăратас, терĕм. Йышăн, атту хăвнах япăх пулать, асту, хăвăн карьеруна пăсса хуратăн, тетĕп. Çук! Тарăхнипе макăрса ячĕ, анчах документсене йышăнмарĕ, пурне те ывăçласа тытрĕ те — пĕррех мана питрен печĕ! А-а, эсĕ капла-и, терĕм те вара, секретаре çавăнтах приказ çырма хушрăм:

— Ĕçлеме пĕлменшĕн, руководствăна пăхăнманшăн — уволить!

Анчах пустуех пулчĕ. Профсоюз çак хĕре ĕçрен кăларттармарĕ, хама партбюрона чĕнсе строги выговор шаплаттарса хучĕç.

— Эсĕ... партире тăратăн эппин?—тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— А какшă? Члена куçайман та-ха, анчах...

— Кандидатра нумайранпа-и?

— Стажĕ пур-ха манăн, çичĕ çул ĕнтĕ. Вăрçă пуçлансанах кĕнĕччĕ эпĕ.

— О-о, стаж чăнах та пысăк иккен,—кулса илтĕм эпĕ.—Ытлашшипех те, темелле...

— А вăт, вырăнтан вырăна куçса çӳренĕшĕн вăл,—тӳрре тухма тăрăшрĕ Солнышкин.—Каласа парăп-ха акă...

— Кайран мĕнле, чиперех ĕçлерĕр пуль леш бухгалтерпе?

— Ҫо-ок, йĕрки пулмарĕ,— пуҫне пăркаласа илчĕ Солнышкин.— Кашни пухурах критикăпа самокритика тапранчĕ. Подчиненнăйсем тиркеме пуҫласан, руководительшĕн пурнăҫ пĕтет вара вăл. Пĕр сăмахпа, трестран каймалла пулчĕ манăн. Ырă ҫынсем систернипе, хамах заявлени патăм. Тухса кайни те аван пулчĕ — питĕ ҫирĕп лекме пулатчĕ унта...

— Кайран вара?

— Вара... пулать вĕт пурнăҫра,—пĕр хушă ниепле те ҫирĕппĕн вырнаҫаймарăм. Ĕҫ ҫук пирки мар, ĕҫĕ темĕн чухлехчĕ вăл,— кăмăла каймалли вырăн пулмарĕ. Малтан мана «Заготкожа» ячĕҫ — хамăн атте специальноҫĕ ĕнтĕ вăл. Килĕшмерĕ. Унтан «Союзутиле» куҫрăм—унта та леринчен ырах пулмарĕ. Авторитетсăр учреждениесем, ҫавă питĕ япăх... Ун хыҫҫăн виҫĕ уйăх — кĕнеке магазинĕн заведующийĕ, кайран пĕр вăхăт—сĕтел-пукан тăвакан мастерской пуҫлăхĕ пулса ĕҫлерĕм. Кăмăллă пулмарĕ — филармоние кайса администратора кĕтĕм. Ҫук, ку та ман характера юрăхлă мар! Кунĕн-ҫĕрĕн хула тăрăх чĕлхе кăларса чупмалла, уйăхĕ-уйăхĕпе районсем тăрăх шăнса ҫӳремелле. Пурнăҫ-и вăл? Ҫитменнине, арăм та вăрҫма пуҫларĕ: эсĕ унта юри, артисткăсемпе якăлтатса пурăнма кайса кĕтĕн, тет. Пăрахрăм! Унтан вара арăмăн йыснăшĕ мана хăй патне леспромхоза илчĕ. Чинĕ пысăках марччĕ ĕнтĕ — вутă склачĕн заведующийĕ кăна, анчах питĕ тупăшлă: хам хуҫа! Вутта а́на килогрампа виҫмеҫҫĕ вĕт... Анчах шăнкаларăм та эп унта — пилĕк ыратнипе аптрама пуҫларăм. Ҫулла та иртмерĕ ҫав чир... Калатăп-ҫке, вăрҫа та ҫавăн пиркиех илсе каймарĕҫ — хам питĕ каясшăнччĕ. Ирĕксĕрех тылра лармалла пулчĕ. Ну,

вăрçă вăхăтĕнче вара ĕç мĕн тери нумай пулнине хăвах пĕлетĕн. Таçта та ĕçлеме тӳр килчĕ: ОРС-ра та, «Кожупряжьре» те, индпошиврa та, литернăй столовăйĕнче те, ытти вырăнсенче те... 44-мĕш çулта жилуправление лартрĕç. Çынсем пĕрехмай улшăнатчĕç унта. Ик çул хушшинче вуникĕ заведующи кĕрсе тухса кайнă, эпĕ — вунвиççĕмĕшĕ пултăм. Тĕрĕссипе, унта кĕме эпĕ хам та хытă тăрăшрăм ĕнтĕ—хваттер кирлĕ пирки. Ху начальник пулсан—хăвна кӳрентерместĕнех ĕнтĕ! Анчах та—те çав вунвиççĕмĕш пулнипе—ĕçлеме питĕ йывăр пулчĕ. Пуринчен ытла, салтак арăмĕсем тăна яратчĕç. Тавай та тавай вĕсене! Час-часах оскорблени личности пулатчĕ. Мĕн чухлĕ усал сăмах илтрĕм пулĕ! Унтан тата инвалидсем... Туйисене сăмса умĕнче вылятса кăна тăраççĕ. Хăш чухне кабинетран тухса тарма та тиветчĕ вĕт. Çапах та, темле йывăр пулсан та, нумай чăтрăм, мĕншĕн тесен хама валли хваттер час тупăнмарĕ. Юлашкинчен вара çак хваттере йышăнтăм та, тепĕр уйăхранах коммерчески магазина куçрăм. Лайăхчĕ унта, анчах укçа реформи хыççăн çав магазин хупăнчĕ те, мана маслопрома ячĕç... Паян кун та çавăнта командовать тăватăп...

— Арманта ĕçленине манса хăвартăн-çке эсĕ,— сас пачĕ Лариса Филаретовна юнашар пӳлĕмрен.

Вăл çывăрман иккен, пирĕн калаçăва итлесех выртнă.

— Ах, чăнах та-çке...—терĕ Солнышкин.— Мансах кайнă ăна... Анчах унтине асăнасах та килмест манăн, кӳренмеллисем пулчĕç. Пĕр накладнойпа складран çăнăх парса ятăм та — грузчиксем виçĕ михĕ ытлашши хунă иккен. Хапхара тăракан вахтер вĕсене

тытса чарнӑ. Лешсем ман ҫине янӑ. Скандал! Вара сторожне, ытлашши ан йӑслатӑр тесе, виҫӗ вӑрӑм укҫа кӑларса тыттармалла пулчӗ. Атту, ухмаха пула, тем курса ларӑн! Ирттеркелесе ятӑм ҫапла, никамах та сисмерӗ...

Темшӗн, эпӗ кунта Евтихи ҫамрӑк чухне пирӗн яла театрпа пырсан вальс вырӑнне «барыня» ҫухӑртнине аса илтӗм.

— Ун чух та пултартӑн эсӗ... аптраса ӳкмерӗн!— терӗм эпӗ.

— А какшӑ! — терӗ Солнышкин хаваслӑн, — пурнӑҫра любой йывӑрлӑхран тухма пӗлес пулать...

Унтан вӑл тутлӑн анасласа илчӗ:

— Ҫавнашкал манӑн биографи... Пурнӑҫра нумай курма тиврӗ...

— Н-да, нумай,—терӗм эпӗ,— ытлашшипех курнӑ. Анчах мана пӗр япала тӗлӗнтерет: мӗнле-ха санӑн ӗҫӳсем яланах ӑнса пынӑ? Эсӗ вӗт пурнӑҫунта вӗҫен кайӑк пӗр турат ҫинчен тепӗр турат ҫине сиксе ларнӑ пекех ҫӳренӗ!

— Хе-хе-хе...—тулли кӑмӑлпа кулса илчӗ Солнышкин.— Ҫӗр тенкӗ ан пултӑр та—ҫӗр тус пултӑр, теҫҫӗ вӗт-ха... Унсӑр пуҫне, эп пур ҫӗрте те лайӑх ӗҫленӗ. Таса. Вӑрӑпа тытман мана. Хама тивӗҫлине илкеленӗ, конешнӑ, анчах та—пӗтӗмпех саккунлӑ тунӑ. «Кожупряжьре» чух икӗ сӑран пальто, атӑпушмак ҫӗлетрӗм, индпошивра — костюмсем, жилуправленире чух — хваттер илсе юлтӑм. Ну, ытти ҫӗрте те илкеленӗ, анчах ытлашши мар, хама кирлӗ таран ҫеҫ. Кам айӑплама пултарать мана уншӑн?.. Эп мӗн, гражданин мар штолӗ, манӑн та пурӑнмалла вӗт!

«Çук, гражданин мар эсĕ, общество ӳт-пĕвĕ çинче ӳссе ларнă çăпан, сăрă хурт, шкурник», тесе калас килчĕ манăн ăна, анчах шарламарăм. Коридора тухрăм та васкасах тумланма тытăнтăм. Шăп çав вăхăтра тепĕр пӳлĕмĕнчен унăн арăмĕ анасласа тухрĕ.

— Ăçта кайма хатĕрленетĕр эсир капла? Пирĕн патра выртмастăр-им? — тĕлĕннĕ пек туса ыйтрĕ вăл, мана курсан.

— Кăштах уçăлас тетĕп-ха, пăчă пулчĕ, тӳсме çук пăчă сирĕн, — терĕм ăна. — Эпĕ уçă сывлăша юрататăп...

Атăл хĕрринче чылай хушă уткаласа çӳрерĕм. Кăштах çил вĕретчĕ те, сывлама çав тери çăмăлччĕ. Кăмăл уçăлсах кайрĕ, анчах хăлхара çаплах Солнышкинăн тăкăскă сасси илтĕнсе тăчĕ:

«Çăкăрлă вырăн... вăрра тытман... пурăнма пĕлес пулать... хама тивĕçлине илнĕ...»

Унтан сасартăк манăн çав тери çилĕ килсе кайрĕ. Пуринчен ытла, вăл хăйĕн çинчен ним намăса пĕлмесĕр каласа пани, хăйĕн ирсĕр ĕçĕсемпе ним вăтанмасăр мухтанни тарăхтарчĕ мана.

— Ханттар! — аса килчĕ мана чăвашсен авалхи сăмахĕ. — Йĕксĕк!

Унтан эпĕ Хресчен çуртне çывăрма кайрăм.

* * *

...Калава вĕçлеме те юратчĕ ĕнтĕ, анчах вулакансене Евтихи Вшивцев-Солнышкинăн кайранхи пурнăçĕ çинчен пĕлтересех пулать.

Ана эпĕ тата икĕ хут куртăм. Пĕрре — çур çул иртсен, хам ĕçленĕ районран Шупашкара командиров-

кăна килсен, ăнсăртран урамра тĕл пултăмăр. Малтанхи майлах, пурнăçри ырлăхсемпе мăй таранах тăраннă çын пек, хаваслăн калаçрĕ вăл.

— Халь рыбтрестра ĕçлетĕп, главнăй инженер вырăнĕнче, — терĕ.

— Мĕнле майпа инженер пултăн вара? — ыйтрăм эпĕ, хам унран йĕрĕннине пытармасăрах. — Каллех кама та пулин документ тутартăн-и?

— Çо-ок, — пуçне пăркаласа илчĕ Евтихи. — Унта инженер вырăнĕ пушах пулнă та — илчĕç. Атту вĕсен ĕç укçи фончĕ ахалех пĕтет вĕт! Кĕрсе тух паян пирĕн пата, Лариса пире швежи пулă шаритлесе çитерĕ! Стерлядкăсене ăнтан тухса каймалла тутлă ăшалама вĕренсе çитрĕ — пулăпа пĕрле чĕлхене çăтса ямалла! Кирлĕ пулсан — киле те парса яма пултаратăп...

— Тавтапуç,—терĕм ăна хирĕç,—пулă юратмастăп эпĕ. Швежине те, тăварланине те, вăрланине те... тӳсме пултараймастăп!

...Каçхине эпĕ хаçатра ĕçлекен пĕр юлташ патне кайрăм та, чей ĕçсе ларнă чух хамăн «землякăн» историне пĕтĕмпех каласа патăм.

Юлташ варне тытсах кулчĕ:

— Юмах ярса кăтартрăн пуль эсĕ! Пулма пултараймасть!

— Юмах пулсан аванччĕ те, юмах мар çав, пĕтĕмпех чăн, çав тарăхтарать, — терĕм эпĕ.

Тепĕр ик уйăхран эпĕ Солнышкина каллех çавăн пек ăнсăртран, урамрах куртăм. Анчах та халь вăл питĕ улшăннăччĕ: кивĕ костюмпа, хăй начарланнă, сухалне хырман, куçĕсем путса ларнă, махорка туртнипе пӳрни вĕçĕсем сар сăран тĕслĕ пулса ларнă.

— Мĕнле пурăнан, земляк?

Вăл хаштах сывласа ячĕ:

— Вашнах мар, ача...

— Мĕн тата ун пек?

— Комиссионнăй магазина куçсаттăм та, недостача пулчĕ. Арăмпа пĕрлех ĕçлеттĕмĕр — темле пулса тухнă, хам та пĕлместĕп! Укçине çуррине тӳлекелерĕм, анчах партирен... — Вăл аллипе сулса илчĕ.— Такам шуйттанĕ каласа панă ман çинчен... Пĕтĕмпех пĕлеççĕ: хăçан, ăçта мĕн пулнă, мĕнле пурăннă... Ялти арăмпа ачасем çинчен те аса илчĕç! Тĕлĕнсех кайрăм!.. Ĕçĕ судра халь. Темле пулать-ха ĕнтĕ...

— Мĕнле пултăр, совет сучĕ ĕçе тĕрĕссипе тăвать ĕнтĕ вăл, уншăн пăшăрханмалли çук, — лăплантартăм эпĕ ăна.

Евтихи татах хашт! сывласа ячĕ.

— Ку çеç те мар-ха... Виçĕмкун мана Лариса пăрахса тухса кайрĕ. Эс пĕтмелли çын, манăн — пурăнмалла-ха, хама валли мăшăр эпĕ яланах тупатăп, терĕ...

— Чăнах та санăн ĕçӳсем вашнах мар иккен,— терĕм вара эп ăна.

Урăх мĕн каламаллаччĕ-ха ман?

1953



# ПĂШĂЛ-ПĂШĂЛ...

Тен, эсир ĕненсех те каймастăр пулĕ те, анчах та пирĕн ялта çавăн пек ятлă çын чăнах та пур. Пурте — ватти те, вĕтти те — вăл çынна яланах «Пăшăл-пăшăл» тесе чĕнеççĕ. Хамăр ялсем кăна та мар, кӳршĕ ялĕсем те çаплах калаççĕ ăна...

Паллах ĕнтĕ, ку ята ăна тĕне кĕрткĕ чух паман, паспăрт тăрăх вăл Стратон Хомич Янрайкин тесе шутланать, анчах унăн çак чăн-чăн ятне пĕлекенсем питĕ сайра.

— Мĕншĕн-ха çав Янрайкин (янракан, кĕрлекен, шавлакан çын) Пăшăл-пăшăл (шăппăн, пăшăлтатса калаçакан çын) пулса тăнă апла? — тесе ыйтма пултаратăр эсир.

Çак саккунлă ыйтăва хирĕç тивĕçлĕ ответ пама, манăн сире кĕскен те пулин унăн пурнăçĕпе, унăн кун-çулĕн кукрашки-макрашкисемпе паллаштарма тивет, унсăрăн ăнланмаллах пуласса шанмастăп.

Çав Стратон Хомич Янрайкин, хальхи пек каласан — Пăшăл-пăшăл, ĕлĕк-авал (ытла авалах та мар

ёнтĕ, пĕр вăтăр çул каялла) пирĕн тăрăхра питĕ паллă сынччĕ. Паллă кăна та мар, хисеплĕ çынччĕ, тес пулать. Хуть те ăçта тĕл пулсан та, кашниех ăна пуç тайса саламланă, ырлăх-сывлăх суннă, май килсенех ăна хăнана чĕннĕ, хăнана пырсан вара ăна часрах малти кĕтессе, кĕрекене кĕртсе лартма васканă.

— Тавтапуçах сана, Стратон Хомич, пирĕн пата килсе чыс тунăшăн...

— Ĕç-ха, Стратон Хомич, çырт-ха...

Сĕтел çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех ун умнелле шутарнă, вăл алтăрти кăрчамана сарлака çăварнелле янă чух та, автан тукмаккине шăмми-мĕнĕпех шатăрттаттарса çинĕ чух та хăнари пĕтĕм халăх сывламасăр пăхса тăнă. Вăл хăйне хăй мĕнлерех тыткалани те, калаçни те, ĕçни-çини те çынсене питĕ тĕлĕнтернĕ. Çынна тĕл пулсан — ăна курмасть вăл, унăн пуçĕ урлă таçталла, хур аçи пек каçăрăлса пăхать, калаçма тытăнать — шартах сиктерет, ĕçет пулсан — четвĕрт, унтан кая йышăнмасть. Хĕрсе çитес тĕлĕшпе хăй виçине ларма пуçласан вара темиçе çаврăм юрласа илет (юрри яланах пĕрре унăн — «Расскажи, расскажи, бродяга...», вăл урăхла юрланине никам та илтмен), юлашкинчен вара, сĕтел çинче юлнă ĕçме-çимесене пĕтĕмпех çĕре шăлса тăкать те, пуçне сылтăм алли çине хурса тӳрех çывăрса каять. Пĕр-икĕ минутран вăл пӳрт чӳречисене чĕтрентермелле харлаттарма тытăнать, вара ăна виççĕн-тăваттăн йăтса, çĕмрĕлме пултаракан хаклă япалана тытнă пек, кутнĕк çине кайса хураççĕ...

Ирхине Стратон Хомич, хăй каларĕш, пуçне «ремонт» тăвать, унтан тăрантас çине лашт! кĕрсе ларать те (тăрантас каштисем шатăрах авăнса илеççĕ), хуçи-

не тав тумасӑрах тухса каять. Пӗкки ҫинчи икӗ шӑнкӑрав сасси ял вӗҫӗнче ҫухалсан тин кил хуҫи лач! сурать те пӳрте кӗрет. Анчах тепринче вӑл Стратон Хомича ҫав-ҫавах кӑмӑллӑн йышӑнать:

— Тавтапуҫах сана, Стратон Хомич, пире хисеп тунӑшӑн...

Чаплӑ ҫынччӗ ҫав ун чух Стратон Хомич. Волисполком председателӗ, пысӑк власть! Хӑнара хӗрсе кайсан, хӑех ҫапла калатчӗ: эп хушсан — пӗтӗм вулӑс сывлама чарӑнать, тетчӗ. Ара, пурин те, пурин пирки те ун патне пымаллаччӗ-ҫке: пӳрт юсама темиҫе пӗрене тупмалла-и, вут-шанкӑ илмелле-и, налог чакарттарасси пирки калаҫмалла-и, — сахал пулать-и пурнӑҫра? Ҫам татса парать пур ӗҫсене? Стратон Хомич!.. Анчах та унӑн кӑмӑлӗ ҫирӗп, ӑна ҫавӑрма пӗлес пулать. Пушӑ алӑпа каяймастӑн ун патне. Малтан хӑна туни те питӗ усӑллӑ. Вара ӗҫ хӑвна кирлӗ пек пулса тухасса чиперех шанма пултаратӑн. Аҫта каймасть ҫур витре ханша е виҫ-тӑвата кӑвакал!

Тӗрӗснех калас пулать, хытӑ янӑратчӗ ун чух Янрайкин ячӗ! Пурте калаҫатчӗҫ ун ҫинчен:

— О-о, питӗ пултаракан ҫын вӗт вӑл! Голова!

— Ыр тума та, хур тума та пултарать...

— Шуйттан вӑл сирӗн Стратон, шалчи тулӗ-ха хӑҫан та пулин, кӑларса ҫапӗҫ-ха! — тетчӗҫ тата хӑшпӗрисем.

Чӑнах та, сирпӗтрӗҫ ҫакна. Пӗтӗм вулӑс пӗр-икӗ эрне хушши калаҫрӗ ун пирки. Тӗрлӗрен калаҫрӗҫ: пӗрисем тӗлӗнчӗҫ, теприсем савӑнчӗҫ, ҫав хушӑрах хӗрхенекенсем те пулчӗҫ.

— Пӑх-ха, Стратона мӑкӑлтама пултаракан ҫынсем те пур иккен! Шутламанччӗ...

— Çавă чух-ха ăна! Текех янăраймĕ!

— Çапах та — кирлĕ çынччĕ, унпа яланах ĕç кăларма пулатчĕ. Пĕрре хăна тăватăн та...

— Çавăнпа кăларса ывăтнă та!

Пĕр çур çул ытла илтĕнмерĕ Янрайкин сасси. Таçта кайса пăчланнă пекех пулчĕ вăл. Унтан сасартăк... каллех асăнма тапратрĕç çавна! Халăх судне секретаре кĕнĕ, терĕç.

— Ну, тыткалать халь ку!

— Пуять... Курăр акă! — уççăнах сăмахларĕç çынсем.

Эпĕ хам судлашса курман та, Стратон кунта хăйĕн пултарулăхне мĕнлерех палăртнине пĕлместĕп, анчах «вăрман хăлхаллă, уй куçлă»-çке-ха. Хăйма вăрлама вĕреннĕ кушак аçи хăйĕнне пăрахмастех вĕт,— Янрайкин та каллех пуринчен те кучченеçсем илме тытăннă. Ĕлĕкхи пек шавламан вăл халь, кăшкăрман, хăнана кайсан сĕтел çинчи чашăк-тирĕксене вăркăнтарман, пĕтĕмпех шăппăн, пăштăн-пăштăн туса пынă: пĕринчен ăна илнĕ, тепринчен куна, уншăн суя хутсем тума пулăшнă, ĕçсене арпаштарнă...

Темиçе çул пурăнчĕ вăл çакăнта. Арăмĕ хĕн курса вилсен тепре авланчĕ, лавккари пĕр самăр майра-прикащике илсе ячĕ. Малтанхине вăл нихçан та çутă кун кăтартман, ялан хĕнет, тетчĕç, çĕнĕ арăмĕпе вара çав тери килĕштерсе пурăннă. Унччен те пулмарĕ— район центрĕнчех садлă кил выраннĕ илсе петистеннăй пÿрт лартрĕ, ĕне туянчĕ. Пÿртĕнче—диван, трюмо, çемçе пукансем, кавирсем, тетчĕç. Хырăмĕ те самаях ÿсме пуçларĕ унăн...

Кил таврашĕнче хăй мĕн те пулин тунине никам та курман вара. Такамсем пырса вуттине татса çураç-

çĕ, такамсем паранкă лартса, çумласа, кăларса нӳхрепех хурса параççĕ, ĕнине çулла такам ачи пăхать, шывне суд технички йăтать...

Çынсем тĕлĕнеççĕ кăна:

— Пултарать Стратон! Улпут пек пурăнать вĕт, мур!

Уйăхне тăватçĕр-пилĕкçĕр тенкĕ шалу илнипе çакăн пек «пыл та çу» пурăнма çуккине пурте пĕлнĕ те-ха ĕнтĕ — мĕн тăвăн? Тытман...

Анчах вăрă темле ăста вăрласан та — хăçан та пулин лекетех, теççĕ-и-ха çав? Тĕрĕс калана çавна.

Пĕррехинче Янрайкин ячĕ каллех янраса кайрĕ район тăрăх:

— Арăмĕпе иккĕшне те хупнă, — терĕç. — Хăй службăра пысăк преступленисем тунă, арăмĕн — растрата!

Кĕç — суд, пурлăхне конфискаци турĕç, хăйсене — кирлĕ çĕре, ытла çывăхах мар вырăна ячĕç...

Нумай-нумай вăхăт иртрĕ çавăнтанпа.

Мантăмăр эпир Янрайкин çинчен. Çухалчĕ Стратон. Анчах яланлăхах мар иккен. Темиçе çул каялла чиперех çаврăнса çитрĕ çакă хăй çуралнă çĕршыва. Ну... ытлашши чиперех темелле мар та ĕнтĕ... Пичĕсем пĕркеленнĕ, пуçĕ кукша, çăварĕнче темиçе шăл кăна — тутăхнă пăтасем пек курăнаççĕ. Сасси те ĕлĕкхи мар, çĕтсе ларнă, аран илтĕнет — нăй-нăй-нăй, сăмса витĕр. Куçĕсем хĕсĕннĕ, хĕрлĕ сухалĕ сайралса кайнă, хай каларĕш — виçĕ пĕрчи тăвата еннелле...

Малтанах Стратон унта-кунта çӳрекелерĕ, паян — пĕр çĕрте, ыран — тепĕр çĕрте; çăкăр-тăварлăх çынсене тĕрлĕ прошенисемпе кассацисем çырса парса тупкаларĕ курăнать, ăна час-часах суд коридорĕнче

курма пулать, хӑй ялан табак шӑршлать те темле порошоксем ӗҫет, тетчӗҫ. Унтан, кӗтмен ҫӗртен, ҫак ҫын пирӗн яла пырса кӗчӗ — нумайранпа пӗр-пӗччен пурӑнакан Ялампи патне. Лешӗ вӑл, Ялампи тени, ялан халӑхран уйрӑм пирӗн: колхозра ячӗшӗн кӑна ӗҫлекелет, пуринчен ытларах — пасарсем тӑрӑх йӑкӑр-йӑкӑр, ӑна илет те куна сутать, тӗпсакайӗнче хуть те хӑҫан та ик-виҫ четверть ларать унӑн, ӗлӗкрех юмӑҫ та пӑхатчӗ пулас. Суд та турӗҫ ӑна пӗрре, анчах темле ҫӑлӑнкаласа тухрӗ. Стратонпа ҫав Ялампи таҫта паллашнӑ та, калаҫса татӑлнӑ курӑнать ҫав...

Ну, пӗрле пурӑнма пуҫларӗҫ ҫаксем. Ҫынсемпе хутшӑнсах каймастчӗҫ, те пур вӗсем ялта, те ҫук... Анчах Стратонӗ, кӑшт пурӑнсан, пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн ял хушшине тухса ҫӳрекен пулчӗ. Пухусене пырать, правление, ял Советне, клуба кайса ларать. Нимех те калаҫмасть хӑй, итлет кӑна.

Аванах пурӑнатпӑр ӗнтӗ, ӗҫлетпӗр. Колхозӗ начар мар пирӗн — хуҫалӑх енӗпе те, культура тӗлӗшпе те ҫынсенчен юлмастпӑр, намӑс курмастпӑр. Хам эпӗ завклубчӗ ун чух. Кружоксем ӗҫлеҫҫӗ унта пирӗн, спектакльсем, вечерсем пулаҫҫӗ. Қаҫ-каҫ ҫамрӑксем нихҫан та татӑлмаҫҫӗ клубран: каччисем те, хӗрӗсем те. Ваттисем те тӑтӑшах ҫӳреҫҫӗ: ҫӗнӗ хаҫатсем вулама, докладсем итлеме... Тӗрӗссипе каласан, пирӗн клуб районра пӗрремӗш вырӑнта тӑратчӗ. Хурламан пире.

Анчах пӗррехинче сасартӑк районран комисси пырса тухрӗ ман пата — виҫӗ ҫын.

— Жалоба пур, — терӗҫ, — тӗрӗслеме килтӗмӗр.

— Мӗнле жалоба-ши тата?

— Эсир клубра мӗншӗн иртӗнсе пурӑнтӑр?

— Ним те туман-ҫке!



— Суятăн, — теççĕ мана. — Ĕçлес вырăнне ашкăнатăр кăна! Кашни каç ахăрсаман сирĕн кунта, спектакльсенче ӳсĕр вылятăр, сцена хыçĕнче хĕрсене кӳрентеретĕр, библиотекăна юхăнтарса янă, анчах хăвăрăн ĕçĕр çинчен суя отчетсем çыратăр...

Тĕлĕнсе хытсах кайрăм: ĕмĕрне пулман япаласемшĕн айăпласшăн мана.

Икĕ кун тĕрĕслерĕ çав комисси. Çамрăксене чĕнсе пуху ирттерчĕç, ял Совет ларăвĕ турĕç, тĕпчерĕç, çырчĕç. Ну, паллах, жалоба пĕтĕмпех суя пулни палăрчĕ. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ, тесе çырма çеç тиврĕ вĕсен...

Анчах ку пуçламăшĕ çеç пулчĕ-ха. Çакăн хыççăн пирĕн яла комисси хыççăн комисси пыма пуçларĕ, — шалт хăшкăлса çитрĕмĕр! Фермăна пырса тĕрĕслерĕç, — унта пирĕн выльăхсем нумай вилсе пĕтнĕ имĕш, анчах — тĕрĕссипе — çулталăк хушшинче пĕр путек кăна ăнсăртран лачакана лексе вилнĕ; шкула тĕрĕслерĕç — унта директор итлемен ачасене хăй патне чĕнсе кĕртсе хăлхаран пăрать иккен, — ку та нихçан та пулман... Кĕç тата колхоз председательне çавăрса илчĕç — вăл хăнана кайсан, çул çинче мулкачă хăваласа ăратлă ăйăра пăшăхтарса вĕлернĕ пулать. Ăйăрĕ — чип-чиперех, кĕçенсе кăна тăрать!

Çине-çине, темĕн те пĕр! Такам мурĕ çырать те çырать — хаçат редакцийĕсене, районри учреждениесене, Шупашкара... Кашнинчех тĕрĕслеме килеççĕ. çынсене пухаççĕ, чăрмантараççĕ те — ахалех каяççĕ. Икĕ çул хушшинче сахалтан та пĕр çирĕм комисси пулчĕ пуль çав! Мĕн чухлĕ çул укçи, суточнăй, хваттершĕн тӳлерĕç пуль вăл комиссисене, мĕн чухлĕ хаклă вăхăт сая кайрĕ пуль — вĕсен те, пирĕн те! Ăна шутласа кăларма ятарласа бухгалтер тытас пулать.

Чылайччен пĕлеймесĕр пурăнтăмăр эпир çав жалобăсене кам çырса янине. Питĕ тарăхса çитрĕмĕр. Унтан пачах та ăнсăртран пĕлмелле пулчĕ. Пĕррехинче лавккари Васук-приказчик, ĕç пĕтсен, урайĕнче хĕррисем сӳсленсе пĕтнĕ чылай хулăн тетрадь выртнине асăрханă та, ăна илсен уçса пăхнă. Чи малти страници çине пысăк саспаллисемпе: «Секрет! Пăшăл-пăшăл!» тесе çырнă иккен, унтан «С. Янрайкин» тесе алă пуснă.

Хайхи Васук вулама тытăнса кайнă. Киле каймасан, çурçĕрччен, пĕр чарăнмасăр вуланă вăл... Ытла та интереслĕ пулнă-çке тетрачĕ, аларан пăрахма та май килмен ăна. Ялти пĕтĕм сăмах-юмах, пулни те, пулманни те, пĕтĕм элек, пĕтĕм лапра тулнă унта.

Тепĕр кунне эпир вăл тетраде правление пухăнсах вуларăмăр... События пулчĕ вĕт вăл пирĕншĕн, элекçĕ кам иккенне тинех пĕлтĕмĕр! Кулмалли те, тарăхса сурмалли те питĕ нумай тупăнчĕ... Тем те пĕр çырса тултарнă вĕт шуйттан Стратонĕ!

Акă, сăмахран:

«Çырмара икĕ курак вилли выртать. Ял Совечĕ зараза сарăлнипе кĕрешмест, санитаришĕн пачах та тăрăшмасть тесе Сывлăх министрне çырса ярас. Штраф пулать!»

«Председатель ĕнер каçхине Сухви (бригадир) патĕнчен тухрĕ. Ахаль мар ку. Асăрхас. Е халех пĕлтерес: ĕçлес вырăнне пирĕн предколхоз маткасем хыççăн...»

«Райисполком уполномоченнăйĕ М. ял Совет секретарĕ патĕнче ик каç выртса кайрĕ. Паллах, вĕсен ĕçкĕсĕр пулман. Систерес.»

«Нумай пулмасть колхоза килнӗ агроном Веселова вечерсенче хытă ташлать-ха. Пӗлтерес: йăх-яхă çын, авторитечӗ çук, тес...»

«Ачасене шкул пахчинче ӗçлеттерессӗ. Кӗркунне çимӗçӗ директор валли пулать ӗнтӗ. Эксплуатаци! Министр патне...»

Тата ытти те, т. ыт. те — тем те пур, пӗтӗмпех çавăн майлă! Пулать те вӗт çавăн пек лапăрчăк çын!.

Тетрадьне вăл лавккана тем илме пырсан ăнсăртран кăларса ӳкернӗ пулмалла ӗнтӗ...

Эпир çиййӗнчех нимӗн те шарламарăмăр: малалла мӗн тăвать-ха ку, сăнас, терӗмӗр, пурпӗр пирӗн алла лекетех! Анчах ялта ун пек хыпар пит час сарăлать-çке... Пӗри — теприне, тепри — тата теприне «питӗ вăрттăн» пӗлтерет те, кайрӗ вара!

Кӗскен каласан, хăйӗн тетрадьне эпир тупни çинчен пӗлсен, вăл хăйне урнă йытă çыртнă пекех чупса пычӗ правление.

— Как имел право?! Суда паратăп! Манăн унта государственнăй секретсем пур! — тесе çухăрма тытăнчӗ çак.

Анчах эпир ăна: тӳрӗ те таса çынсем çинчен элекленӗшӗн хăвна суда паратпăр акă, уголовнăй кодексра сана валли кирлӗ статья тупăççех!—тесен, тӳрех чӗлхине çыртрӗ. Çемçелсе, йăвашланса кайрӗ, унтан, çӗрелле пăхса, чӗтрекен сасăпа:

— Хӗрхенӗр ват çынна, тек ун пек нихçан та тумастăп, алла кăранташ та тытмастăп, тупа туса калатăп... — тесе йăйкăшма тытăнчӗ.

Тӳсме çук йӗрӗнтӗмӗр эпир унран...

Çавăн хыççăн ăна пурте «Пăшăл-пăшăл» тесе чӗнме тытăнчӗç. Пӗр-пӗр чарусăр ача ашкăнсан та,

ашшĕ-амăшĕсем ăна тӳрех: асту, Пăшăл-пăшăл кĕнекине лекетĕн акă, тесе хăратаççĕ.

Анчах Пăшăл-пăшăлĕ тек жалобăсем çырмасть пулас, комиссисем урăх пымарĕç. Тепĕр тесен — çыртăрах ара, ăна халь пурпĕр никам та ĕненмест...

Сирĕн таврашра та çавăн пек пăшăл-пăшăлсем çук-и, юлташсем? Йĕри-тавралла лайăххах çавăнса пăхăр-ха!

1954



# САМОСВАЛ

Калама та çук ёнтӗ — техника тени этем ывӑль-хӗрӗшӗн питӗ лайӑх, шутсӑр усӑллӑ япала. Акӑ, сӑмахран, автотранспортах илер. Мӗнешкел ырлӑх вӑл çыншӑн! Пӗр вунпилӗк çул каялла эпир Шупашкара икӗ талӑк ытла каяттӑмӑрччӗ— лӑпӑс-лӑпӑс, лӑстӑр-лӑстӑр... Халӗ пур — автобус çине кӗрсе ларатӑн та, ик-виç сехет хушши пружинлӑ сак çинче çемçен кӑна сиккелесе пынӑ хыççӑн Хӗрлӗ площаде тухса та тӑратӑн. Автобус çине ёлкӗреймесен — грузовикпе кайма та начарах мар. Такси тӗл пулсан — пушшех те ырлӑх вара.

Анчах... ырлӑхӗ ырлӑх та, ытла пур чухне те мар çав. Тепӗр чух тем те пӗр курса пӗтетӗн. Хам çинченех каласа парам-ха сире...

Нумаях пулмасть, кӗтмен-çӗртен, хамӑр колхоз почтальонӗ, каçӑр сӑмсаллӑ Петюк, мана телеграм илсе пырса пачӗ. Тӗлӗнсех кайрӑм: камран пулма пултарать ку? Часрах уçрӑм та — вулатӑп:

— «Çатракасси... Степан Степанович Степанова... Аслă ывăла авлантаратăп... Вунвиççĕмĕшĕнче туй... Чунтан кĕтетĕп... Тусу Панкрат».

Панкрат! Хамăн фронтри тус, пĕрле нумай хурашур курнă, пĕррехинче мана вилĕмрен хăтарнă шанчăклă юлташ туя чĕнет иккен мана.

— Каятăп! — терĕм те хам ăшра, телеграма тата тепĕр хут вуласа тухрăм.

— Вунвиççĕмĕшĕнче туй... — Çавăнтах тухса кайма хатĕрленнĕ почтальонран: — Паян мĕнле числа-ха çав? — тесе ыйтрăм.

— Вунвиççĕмĕш, — терĕ вăл, пĕр тытăнса тăмасăрах.

— Çук пуль! — ĕненес килмерĕ манăн. — Мĕнле-ха апла? Чим-ха, телеграмне хăш числара панă? Саккăрмĕшĕнче! Эппин, вăл 100 километра 5 кун килнĕ? Кунне 20-шер километр... Вăл хушăра çурран икĕ хут кайса килме пулать вĕт унта!

Петюк çине çиленсех кăшкăрса пăрахрăм:

— Аçта выртнă вăл ку таранччен? Эп сире, мурсене, куншăн...

— Эп айăплă мар, Çтаппан пичче, районри почтăра выртнă вăл, — терĕ Петюк лăпкăн кăна, — унта час-часах манса каяççĕ... Вĕсене вăрç эсĕ...

Мĕн тăвас-ши ĕнтĕ? Каяс пулсан — çитейĕп-ши, çук-ши? Хамăн ĕнтĕ, тĕрĕссипех калатăп, çав тери каяссăм килет... Вăрçăран пĕрле таврăннăранпа та курман эпир пĕрне-пĕри, сайра хутра çырусем çӳреткеленĕ çеç. Юлашки çырăвĕнче вăл: кăçал ывăла авлантаратăп, сана туя чĕнетĕп, пымасан — юлташ мар вара эсĕ, курсан та калаçмастăп, тесе çырнăччĕ.

Ана хирӗҫ эпӗ: систер кӑна, кайӑк пекех вӗҫсе ҫитетӗп, тесе ответ патӑм. Ҫук, каясах пулать!

Кӗҫех ман арӑм фермӑран апат ҫиме таврӑнчӗ, ӑталӑх ывӑл та шкултан килчӗ. Эпӗ вӗсене Панкрат телеграмне вуласа патӑм та:

— Мӗнле шутлатӑр эсир? — тесе ыйтрӑм.

— Мӗн шутласа тӑмалли пур, паллах, каймалла ун пек ҫын патне, — терӗ арӑм.

— Ёлкӗрӗп-ши? Инҫе вӗт-ха, Шупашкар урлӑ каймалла... Унтан тата Канаш ҫулӗ тӑрӑх тепӗр сакӑр километр.

— Машинӑсем ҫӳреҫҫӗ-иҫ! Ҫулӗ те такӑр халь...

Ман ача йӑпӑр-япӑр сумккинчен хутпа кӑранташ туртса кӑларчӗ.

— Чиччас, шутласа кӑларатпӑр, — терӗ вӑл. — Халӗ кӑнтӑрла иртни 1 сехет. Тепӗр сехетрен эсӗ хатӗрленсе тухса кайма пултаратӑн. Шоссе ҫине тухма — ҫур сехет... Ну, тепӗр ҫур сехет кӗтсе тӑмалла пултӑр унта. Тӑваттӑра машин ҫине ларатӑн, улттӑра Шупашкарта пулатӑн. Унта Канашалла каякан машинсем пурах ӗнтӗ, пӗр ларсан 20 минутранах кирлӗ ҫӗре ҫитетӗн. Кӗскен каласан, атте, эсӗ 7 сехетре тусу патне ҫитсе сӑра курки тытатӑн!

Савӑнтарсах ячӗ ку мана...

— Каятӑп эппин!

— Хам та кай тетӗп-иҫ ара, мӗн шухӑшласа тӑмалли пур, — каллех килӗшсе каларӗ арӑм.

Эпӗ ӑна ҫӗнӗ костюма арчаран кӑларса хатӗрлеме хушрӑм та, хам сельмага васкарӑм. Аслӑ-тӑнлӑ ҫынсем туя парнесӗр каймаҫҫӗ вӗт, мана та пушӑ алӑпа пырса кӗме аван мар пулать, терӗм.

Магазина кӗтӗм те, парнелӗх юрӑхлӑ япала шы-

рама тытӑнтӑм. Нимех те курӑнмарӗ ҫӳлӗксем ҫинче: хӑмӑтсем, йӗнерчӗксем выртаҫҫӗ, пӑта ещӗкӗ пур, тутӑхса кайнӑ лампӑсем... Ҫук, кусем ман валли мар... Халь ҫеҫ пӗрлешекен мӑшӑра хӑмӑт кайса параймастӑн ӗнтӗ! 10—15 тенкӗ тӑракан «ходики» илсе кайма та аван мар, тен, вӗсен иккӗшин те аллисем ҫинче вӗр-ҫӗнӗ «победӑсем» е «звездасем» шаккаҫҫӗ?

Сасартӑк, мачча ҫумӗнчи ҫӳлӗк ҫинче, тусанпа витӗннӗ ӑпӑр-тапӑрсем хыҫӗнче темле илемлӗ япала курӑнса кайрӗ.

— Мӗн ҫав санӑн?—ыйтрӑм продавецран.

— Посуда. Сервиз, теҫҫӗ-и ҫав... Чей ӗҫмелли хатӗр-хӗтӗр, вуникӗ ҫын валли. Чейникӗ те пур унта, сӗт ямалли те, тем те... Пилӗк ҫул выртать ӗнтӗ вӑл хлам, никам та илмест. Те списать тумалла пулать кӑҫал...

— Кӳр-ха ӑна кунта!

Продавец ман ҫине тӗлӗнерех пӑхса илчӗ те ыйтнӑ япалана ман умма антарса лартрӗ. Нимӗнле хлам та мар, питӗ лайӑх, хитре, чӑн-чӑн хрустальрен тунӑ сервиз иккен. Пӳрне хулӑмӗш тусанпа хупланни кӑна сӑнсӑрлатса лартнӑ ӑна.

— Мӗн хак?

— 220.

— Тавай, халех шӑлса тасат та—чӗркесе пар!

— Эсӗ мӗн... заемпа выляса илмерӗн пулӗ-ҫке?— каллех тӗлӗнсе пӑхрӗ продавец ман ҫине.

— Калаҫса ан тӑр эсӗ, ман васкамалла!

...Килте ҫак хаклӑ япалана тирпейлӗн чӗркесе чемодана чикрӗм, лайӑх кӑна тумлантӑм та — васкасах мӑн ҫул еннелле утрӑм. Тепӗр ҫур сехетрен шоссе ҫине тухса та тӑтӑм. Нумай та кӗтмелле пулмарӗ

манăн—Етĕрне енчен пĕр грузовик ыткăнтарса килни курăнчĕ. Анчĕ ман пурнăç! Шоферĕ ларттăр кăна... Вара каçчен Шупашкара çитетĕп те—малалла!

Машин хам пата пĕр çĕр метр çитиччен алла çĕклесе «сасăлама» тытăнтăм. Тавай, лартса кай, тетĕп ĕнтĕ. Ыйтни, чăнах та, харама каймарĕ: грузовик чарăнчĕ.

— Аçта çити?—кăшкăрчĕ шофер, пуçне самантлăха кабинăран кăларса.

— Шупашкара...

— 30 тенкĕ!

— Ку тĕлтен 20 анчах илекенччĕ-çке?—терĕм эпĕ ăна хирĕç.

— Ну, как хош. Пирĕн санпа тавлашма вăхăт çук. Пирĕн—стахановла рейс!—Шофер алăкне шарт! хупса лартрĕ те, газ хушрĕ. Каять пăрахса!

— Юрĕ эппин, юрĕ!—хăрасах кайрăм эпĕ.—Ме, тыт!

Машин хуçи укçана ман çине пăхмасăрах кĕсйине пĕтĕрсе чикрĕ. Эпĕ йăпăр-япăр кузова хăпарса темле михĕсем çине лартăм. Машин çавăнтах тапранса кайрĕ. Лайăх кайрĕ, тес пулать, пĕр сехетре 50—60 километр хăвăртлăхĕпе ячĕ ăна шофер,—хăлхасенче çил шăхăрса кăна пырать. Анчах темшĕн вăл мана питех тӳрĕ пыман пек туйăнчĕ... Пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле пăркаланать. Халь çеç савăннăскер, шикленмех пуçларăм: çак «стахановла рейса» тухас умĕн ку шофер хăйне ытлашширех «заправить» туман-ши? Аллисем баранкăна ытла çирĕппех тытмаççĕ пулас...

Чăнах-мĕн! Асламас сăрчĕ çине хăпарсан пĕр икĕ километр те кайрĕ, те каяймарĕ çак — малти кустăр-

мисем аплалла, каплалла пăрăнкаларĕç те, машин çул хĕрринчи канава кăппăшт! кĕрсе ларчĕ. Чун юлмарĕ вĕт! Ара, туя лекес вырăнне чиперех асаттесемпе юнашар кайса выртатăп вĕт!

Шофер машинăна каялла чакарса кăларма пикенчĕ, мотора йынăштарчĕ кăна: у-уу! у-уу!—анчах кайри кустăрмисем пĕр вырăнтах çаврăнаççĕ, малтисем канаври юр ăшне шалтан шала путаççĕ... Пăчланчĕ пирĕн «стахановла рейс»! Пăхса лартăм-лартăм та, кунта тем чухлĕ кĕтсен те усси пулас çуккине кура, чемоданĕ-мĕнĕпех çĕре сиксе антăм.

— Машинсем татах пулаççĕ пуль-ха, ларкаласа кайăп...—лăплантартăм хама хам. Шофер та кабинăран тухрĕ, ун хыççăн лайăх кăна пальто тăхăннă, мечĕк пек çавракан çын шуса анчĕ. Пăхатăп—иккĕшĕ те пиçсе çитнĕ. Пуринчен ытла — çавраки, ура çинче те тăраймасть, ансанах канава кĕрсе выртрĕ.

— Юлташ,—терĕм эпĕ шофера йăвашшăн,—манăн урăх машинпа кайма тивет. Укçана тавăрса парăр эсир...

— Мĕнле укçана?! Хăçан панă эс мана?—тăрукках кăшкăрса пăрахрĕ çак ман çине.

— Епле-ха апла... Çур сехет каялла 30 тенкĕ патăм-çке!

— Кай çăва патне!—канавран рак пек каялла чакса тухнă май кăшкăрчĕ çавраки.

— Чимĕр-ха, шӳт ан тăвăр эсир...

— Мĕн шӳчĕ сана?—каллех çухăрса ячĕ мечĕк пекки.—Парăпăр сана шӳт! Куран — машин кĕрсе ларчĕ! Укçа-а...

— Çынтан ун пек мăшкăллама саккун çук, юлташсем. Эсир мана кирлĕ çĕре илсе çитереймерĕр—илнĕ

укçана каялла таварса парас пулать, мана вăл урăх шофера тÿлеме кирлĕ,— çирĕпреххĕн каласа хутăм эпĕ, пĕтĕм чун-чĕрепе тарăхма пуçласа. Анчах та, çапла каланипе машин хуçисене ÿкĕте кĕртес вырăнне, уртарса ятăм кăна эпĕ.

— Мĕнле саккун?—мана кăкăртан тытмах пикенчĕ çавраки.— Эп хам саккун кунта! Кампа калаçнине пĕлетĕн-и эс, тăм çамка? Старши контролер тăрать сан умăнта, каккуй-нипуть йĕпе сăмса мар! Хочу — лартатăп, хочу — уй варринче персе хăваратăп! Понял? Кала акă тепĕр сăмах — халех катлет тăватпăр сантан!

Эпĕ ÿсĕрсемпе тек калаçас темерĕм, вĕсенчен пăрăнса машин номерĕ çине пăхрăм, анчах вăл вуçех те палăрмасть иккен. Ахăртнех, юри çавăн пек тунă пулĕ...

Хĕл кунĕ — кĕске, часах тĕттĕмленме те пуçларĕ. Кăшт тăрсан, эпир халь çеç килнĕ енчен автомобиль фарисем çутăлни курăнчĕ.

— Тен, каятăп-и-ха çакăнпа...—ассăн сывласа илтĕм эпĕ, хама лăплантарма тăрăшса.

Ку — çăмăл машин пулчĕ. Такси мар, темле учреждени машинĕ пулмалла. Пирĕнпе танлашсан, вăл хăех чарăнса тăчĕ те, шоферĕ алăкне уçса ыйтрĕ:

— Лекрĕр-им?

— Ансăртран пулчĕ, кайри кустăрмасене ывăтса пăрахрĕ,—терĕ машина кутăн чăмтараканни ун патнелле тайкаланса пырса.— Çын пулăшмасăр никак та тухаяс çук. Курмарăн-и, хыçалтан грузовиксем килмеççĕ-и унта?

— Курăнмарĕ, тусăм... Пĕлме çук, тен санăн ирчченех «загорать» тумалла пулать кунта. Ничево,

запас çур литр пулсан аптрамастăн,— кулса илчĕ «легковик».

Эпĕ ун патне пырса хама лартса кайма ыйтрăм. Тĕлĕнмелле! Халь çеç кулкаласа калаçнă çын сасартăк... чул пек пулса тăчĕ! Ман еннелле пăхма та кăмăл тумарĕ вăл, стартĕрне пăрнă май:

— 20 тенкĕ,— терĕ кăна.

Нимĕн те шарламарăм, часрах укçа кăларса тыттартăм та машин ăшне кĕрсе лартăм. Шоферпа юнашар тата тепĕр çын пур иккен. Кăшт кайсан, эпĕ леш грузовик хуçисем хамран мĕнле мăшкăллани çинчен каласа пама тытăнтăм, анчах вĕсем ман сăмахсене илтмен пекех пулчĕç,—шăпăрт, нимĕн те чĕнмерĕç. Ку вара: сан пек ухмахсене çапла кирлĕ те ĕнтĕ! тенĕ пекех пулса тухрĕ. Пулаççĕ вĕт чунсăр çынсем, мĕн тăвас тетĕн эс вĕсене?

«Победа» питĕ лайăх пычĕ. Нискассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, Юнкă патнелле çывхара пуçларăмăр. Эпĕ ĕнтĕ пăртак лăплантăм, Панкрат тусăм хама мĕнле кĕтсе илесси, хамăн хаклă парнене çамрăк мăшăра епле мăнкăмăллăн тыттарасси çинчен шухăшлама тытăнтăм... Шоферпа унăн юлташĕ хăйсем хушшинче тем çинчен мăкăр-мăкăр каласа пычĕç. Эпĕ пăт-пат, уйрăм сăмахсене çеç илтрĕм.

— Килте çук пулсан?—тет пĕри.

— Кам, Нинук-и?—тет тепри.

— Вăл та, Маруçĕ те.

— Э-э, ăçта кайччăр вĕсем? Яланах килте!

— Лавкка пур-и-ха унта?

— Тупаççĕ!

Çак калаçу мĕне пĕлтернине эпĕ кайран тин тавçăрса илтĕм. Юнкă тĕлне çитсен, шофер «Победăна»

чарчĕ те, унăн юлташĕ яла чупса кĕрсе кайрĕ. Чылай вăхăт пулчĕ вăл унта... Эпĕ каллех пăшăрханма пуçларăм...

— Ма тăратпăр вара эпир? — тесе ыйтрăм хуллен (хытă калаçма хăратăп ĕнтĕ халь).

— Бензин пĕтет, паллана шофертан кивçен илес тетпĕр.

Эпĕ, ухмах пуçăмпа, ĕнентĕм çавна... Пĕр çур сехет те иртрĕ пулмалла. Чĕрем каллех кăрт-кăрт-кăрт тапма пуçларĕ. Мĕн пулать-ха капла? Бензин пулмасан — çĕр выртаççĕ-ши вара кусем? Анчах манăн мĕн тăвас? Каллех тепĕр машина кĕтмелле-и?..

Юлашкинчен, яла кайни таврăнчĕ.

— Ну, мĕнле унта?—ыйтрĕ шофер.

— Çавăр лашуна,— терĕ лешĕ.

Шофер вара пуçне ман еннелле çавăрчĕ те:

— Ан, гражданин. Бензин çук, эпир çак ялта çĕр выртатпăр,— терĕ сиввĕн.

Манăн пĕтĕм çан-çурăм пĕçерсе кайрĕ. Тӳрех хайхи Нинукпа Маруç ячĕсем аса килчĕç.

— Улталатăр эсир, бензин пур сирĕн! Юри каймастăр!—терĕм хыттăн.

— Кунта санăн ĕç çук вара!—татса хучĕ шофер.

— Тĕттĕм пулчĕ ĕнтĕ, манăн халь ăçта каяс-ха?

— Пĕлместĕп.

— Уй варринче мар вĕт, ял çумĕнче, пĕр-пĕр хусах арăм хваттере яма пултарать,— тăкăскă сасăпа кулса илчĕ тепри, ман çине темле мăшкăлламалла пăхса. Ку вара мана тӳсме çук тарăхтарса ячĕ.

— Намăссăр çынсем эсир! Епле хăятăр мана çавăн пек калама? Эпĕ — арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă çын! Эсир хăвăр çавăншăн юлатăр пулас кунта!

— Ку та сан ĕç мар. Тух машинăран, атту хăлех хамăр сĕтĕрсе кăларатпăр. Укçуна илме пултаратăн, ме!—Шофер мана 5 тенкĕ ывăтса пачĕ.

— Ма кун чухлĕ анчах?—татах хĕрсе кайрăм эпĕ.—Мĕншĕн жуликланатăр? Эп сире 20 патăм!

— Кунта çити ахалех илсе килмеллеччĕ-и сана? Тух теççĕ машинăран!

Йытта хăвалана пекех хăвалама тытăнчĕç мана! Тем те пĕр калаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн эсĕ хулигансемпе? Ятлаçса та усси çук. Чемодана йăтрăм та, çул çине тухса тăтăм. Лешсем вара вăшт кăна ялалла пăрăнса кĕрсе куçран çухалчĕç.

Çав вăхăтра манăн мĕн тери çилĕ килнине каласа пама та пĕлместĕп. Тарăхнипе пĕтĕм сывлăш пӳлĕнсе ларчĕ, ал-ура сиксе чĕтрет çав... Хăçанччен тăмалла пулать-ши манăн кунта? Пĕр сехет, иккĕ, виççĕ, е — ирчченех? Шăнса та хытăн унччен...

Çул варринчех чемодан çине лартăм та, чĕлĕм чĕртсе ятăм. Миçе сехет-ши халь? Ултă, çиччĕ? Хальтерех машин пулсан—туя çитме те пултараттăм та... Ах, ку шоферсене! Ну, хам пулсан тыткалăттăм! Ытла та иртĕнсе кайнă вĕт, мурсем! Контролерĕсем те вĕсемпе пĕрлех ашкăнаççĕ-мĕн...

Вăхăт тем чухлĕ иртрĕ — ăна пĕлместĕп, çапах та — ман телее — çул çинче каллех машин курăнчĕ. Питĕ хăвăрт çывхарса килет вăл.

— Ну, мĕн пулать, мĕн килет, тепре ларса пăхам!

Эпĕ ал тăратсанах ку машин та тăпах чарăнчĕ те, кабинăран шофер пуçĕ курăнчĕ.

— Шупашкара...— теме ĕлкĕртĕм çеç, вăл мана пӳлчĕ те тӳрех:

— Çур литр! Укçине — алла! — терĕ.

Хайхискер, эпĕ паян шоферсене укçа тӳлеме хаяхса çитнĕ те, пĕр сăмахсăрах 25 тенкĕ кăларса патăм. Укçи — харама, çитес çĕре çитесчĕ кăна епле те пулин!

— Лар часрах! — команда пачĕ вара шофер.

Хăпарса лартăм. Самосвал иккен, кузовĕ — тимĕр, пăртан та сивĕ. Пĕр ывăç улăм пуласчĕ хуть! Анчах ун çинчен шухăшлани те усăсăр халь... Тепĕр тесен — аптрасах каймăп-ха, çиткелĕп, тетĕп.

Машин вĕçет кăна. Çĕр çĕмĕрсе, музыкăпа пыратпăр, — тимĕр кузов хăлхана хупласа лартмалла кĕмсĕртетет, кайри кустăрмана яваласа илнĕ сăнчăр вĕçĕ мăлатукпа сунтал çине çапнă пек чанклаттарса пырать: чанк! чанк! чанк! чанк! — минутра çĕр хут!

Калайкассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, вăрман витĕр тухрăмăр: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! чанк! чанк! Аякран пăхсан, уйăх çутинче пирĕн машин ĕрĕхсе кайнă арçури пекех туйăнмалла çав: икĕ куçĕ вутпа çунаççĕ, хыçалтан шурă тусан йăсăрланса пырать.

Малта çутăсем курăнса кайрĕç. Хыркасси! Шупашкара кунтан пурĕ те 15 километр кăна. Панкрат патне çитетĕпех паян! Çăва патне, Шупашкарта такси тытатăп та...

Хыркасси тĕлĕнче, çул хĕрринче, пĕччен пĕр çурт ларать, ăна пурте пĕлеççĕ. Лайăх çурт, тес пулать, ма тесессĕн шăннă хыççăн унта апат çиме те, чей ĕçме те, е мĕнпе те пулин урăххипе те ăшăнма пулать. Сайра машин чарăнса тăмасть ун умĕнче. Çак çурт патне çитсен, пирĕн самосвалăн кустăрмисем те çаврăнма пăрахрĕç, мотор сасси те путланчĕ. Шоферпа тепĕр çын тӳрех тухса чупрĕç.

— Ку юрать-ха, хамăн та ăшăнас пăртак,—терĕм. Хăвăрах чухламалла ĕнтĕ, хĕллехи каç уçă машин çинче ларса пырсан, шăлсем самаях шаккакан пулаççĕ.

Кĕтĕм, чей илтĕм, чей ăшне аллă грамм ятăм. Пит аван пулчĕ, çан-çурăм ăшăнсах кайрĕ. Ĕнтĕ, кайма та юрать. Анчах шоферсем васкамаççĕ темшĕн. Куртăм, пĕрер стакан сыпрĕç вĕсем, кăштах çырткаларĕç те пулас. Халь пирусcем мăкăрлантараççĕ, темĕн калаçаççĕ. Эпĕ те пĕр пирус туртса ятăм. Стена çинчи шăнасем вараласа пĕтернĕ «ходики» йĕпписем саккăрмĕш сехет çине кусна. Вăхăт чылай!..

Шоферсем васкаманнине кура, эпĕ вĕсем ларакан сĕтел патне пырса мĕн май килнĕ таран йăвашшăн:

— Мĕнле, юлташсем, хусканатпăр-и?—терĕм.

— Каятпăр, каятпăр,—терĕ пĕри.—Пельмень пĕçереççĕ-ха пире валли, хатĕррисем пĕтнĕ те, çĕнĕрен тăваççĕ.

— Ара, вăл час пулмасть вĕт?

— Ничево, пире нумай кĕттермеççĕ!

Ним тума та çук, хамăн малтанхи вырăна кайса лартăм. Пăхатăп—буфетчица ман «хуçасем» умне татах сыпмалли пырса лартрĕ. Хăй те ларчĕ вĕсемпе пĕрле. Чун татах вĕчĕхме пуçларĕ: кусем паян кайма шутламаççĕ пулас! Калле-малле уткалатăп, чĕлĕм туртатăп...

Вăхăт шăвать, тăххăрмĕш сехет çине куçрĕ. Хăçан пиçет-ха кусен пельменĕ? Аха, тинех пырса пачĕç.. Çиме тытăнчĕç. Буфетчица татах икĕ стакан илсе пычĕ. Шавлăн калаçма пуçларĕç... Ну, ĕç тухмасть манăн кусемпе!

— Итлĕр-ха, юлташсем, каясчĕ... Эпĕ питĕ шутсăр васкатăп, манăн вăхăтра çитмелле...

Шофер юлташĕ ман çине вăкăр пек пăхрĕ. Куçĕсем хĕп-хĕрлĕ.

— Акă мĕн, гражданин... Пирĕнпе пĕрлех пырас тетĕн пулсан—ан чăрмантар пире ĕçме-çиме, аппетита ан пăс! Эпир хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр!

— Эпĕ те хамăнне пĕлетĕп,—тетĕп ăна хирĕç.— Калатăп-çке, манăн питĕ шутсăр васкамалла!

— Апла пулсан—тух та ут! Саншăн эпир тарçăсем мар кунта. Эс илсе каймастăн вĕт пире, эпир сана хĕрхенсе илсе каятпăр.

— А эп сире укçа тÿленĕ уншăн...

— Вăл ниме те пĕлтермест.

— Епле пĕлтермест? Вăрланă укçа мар вĕт манăн, ĕçлесе илнĕ укçа!

— Эпир вăрлатпăр, тесшĕн-и эс?—хăйĕн юлташĕ пекех хаяррăн пăхрĕ ман çине шофер.

— Ун пек каламастăп эпĕ, анчах хама Шупашкара часрах илсе çитерме ыйтатăп!

Шофер çиленсех кайрĕ:

— Ак ĕнтĕ, эпĕ çисе тăранмасăрах тухса вĕçтеретĕп пуль саншăн! Епле çивĕч эсĕ, ха! Каяссу килет пулсан—кĕтĕн! Все!

Каллех хам вырăна кайса лартăм. Вĕсем, малтанхи пекех, васкамарĕç. Вунă минут, çирĕм, хĕрĕх... Сехет йĕпписем тăххăртан та иртсе кайрĕç. Пĕтрĕ пуç!

Тата тепĕр çур сехетрен тин тăранса çитрĕç хайхискерсем. Тăн тухатчĕ вĕт кĕте-кĕте!

— Ну, халь кайма та юрать,—терĕ шофер юлташĕ çыхланма пуçланă чĕлхепе, буфетчицăна алă парса.— Тепре куриччен, Марфуша!



Машин патне çитеспе шофере мана:

— Ну, васкакан çын, çирĕпрех ларса пыр, атту темрен тем пулĕ,—терĕ.—Самолет пек илсе каятăп!

Эпĕ ăна хирĕç ним каламасăрах кузов çине хăпарса лартăм. Машин тапранса кайрĕ. Каллех, паçăрхи пекех: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! чанк! чанк! Пĕр минутранах Хыркасси курăнми пулчĕ, вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Ну, пыратпăр çав, ну вĕçетпĕр! Унтан сасартăк... Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те ăнланса юлаймарăм. Çил хăвăртлăхĕпе ыткăнса пынă самосвал тăп! чарăнса тăчĕ те, çав самантрах мана хыçран такам тĕксе çĕкленĕ пек туйăнчĕ... Чăнах та, таçта çӳлелле хăпарса кайрăм, унтан вăшт кăна аялалла шуса антăм та хытă çул çине нач! турăм. Кĕç ман пуç çине темле йывăр япала ӳкрĕ. Ку— хамăн чемодан пулнă иккен. Эп тăна кĕрсе сиксе тăриччен машин вырăнтан хускалса та кайнă, унăн хыçалти хĕрлĕ çутине çеç курса юлтăм...

Мĕн тăвассу пур? Чемодана çĕклерĕм те утрăм вара... Çĕрĕпе утрăм, Шупашкара çурçĕр иртсен виç сехетре тин çитрĕм. Пĕр вăй юлмарĕ, хырăм выçса татăлса ӳкет... Автостанцине пытăм—пуш-пушах, пĕр машин тĕсĕ те çук. Çиччĕре тин пулаççĕ, терĕ сторож Ла-артăм вара сĕнксе! Хама та вăрçатăп (мĕн мурĕ тума тухрăм килтен, тетĕп), хама асаплантарса пĕтернĕ шоферсене те ылханатăп. Анчах мĕн усси пултăр унран?

Тарăхни-мĕнĕпе, ирхине Кӳкеçелле каякан автобуса та кĕтсе тăмарăм, чи малтан пырса тăнă таксие тытрăм та, Панкратсен ялне вĕçтертĕм...

Панкрат эпĕ пынăшăн мĕн тери хĕпĕртенине, мана епле йышăнни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Çав тери

лайăх йышăнчĕç: часрах кĕрекене кĕртсе лартрĕç, хăналама тытăнчĕç... Кăшт ăшăнсан, нервăсем пăртаках лăплансан вара хамăн парне çинчен аса илтĕм.

— Кӳр-ха, Панкрат тусăм, ман чемодана, манăн унта çамрăксем валли темскер пурччĕ,—терĕм.

Чемодана вăл сĕтел çинех пырса хучĕ. Эпĕ ăна пурин умĕнчех, васкамасăр, меллĕн уçрăм та... чĕре çурăлсах каятчĕ манăн. Хаклă та хитре сервиз вырăнне чемоданра ванчăк купи çеç выртать иккен! Леш шуйттан самосвалĕ çинчен вăркăнса ансан çĕмĕрĕлнĕ ĕнтĕ вăл... А эпĕ ăна вунпилĕк километр алă вĕççĕн çĕклесе килтĕм тата!

Панкрат та, унăн арăмĕ те, ывăлĕпе кинĕ те, вĕсен хăнисем те ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхса тăчĕç. Ара, кам-ха парне вырăнне пĕр чемодан тулли кантăк ванчăкĕ илсе пырать?..

Пĕр-икĕ минут хушши эпĕ тăрук чĕлхесĕр пулса ларнă çын пек тăтăм. Унтан аран-аран:

— Каçарăр, эп айăплă мар... Автотранспорт айăплă... Самосвал...—терĕм те, çул çинчи тертсем çинчен пĕтĕмпех каласа патăм. Пурте чунтанах хĕрхенчĕç мана.

...Çапла çав, техника тени этем ывăль-хĕрĕшĕн питĕ аван япала та вăл, анчах лайăх та шанчăклă алла лексен кăна çав!

1954



# СĂВĂС



Прокопий Прохорыч Яснов, пер районри прокурор помощникĕ, хăй умĕнче выртакан тем хулăмĕш «делон» юлашки страницине вуласа пĕтерчĕ те, куçлăхне çамки çине хăпартса лартса, пĕтĕм кăкрипе хаш-ш!.. сывласа ячĕ, унтан, кăшт тăрсан, пырне тем ларнă пек туйăннипе, хыттăн ӳсĕрсе илчĕ.

Фанер стена хыçĕнче ларакан ватă хĕрарăм-секретарь, çакна илтсен, тӳрех ăнланчĕ: Прокопий Прохорыч паян пĕр-пĕр шутсăр кăткăс ĕçĕн вĕçне тупнă... Йăли çавăн пек пулнă унăн: пысăк ĕç тунă хыççăн яланах хаш! сывланă та, ӳсĕрсе пырне тасатнă. Сахал мар лапра-пылчăк çăтма тивет-çке тепĕр «делосене» вуланă чух! Акă, халь те...

...Питĕ йывăр килнĕ çав Прокопий Прохорыча çак кунсенче, тӳрех калас пулать ăна. Иртнĕ эрнере, командировкăна тухса каяс умĕн, начальство ăна çак ĕçе васкасах, çине тăрсах пăхса тухма хушса хăварнă:

— Часрах таталас пулать ку канительне, ахаль те темиçе уйăха пырать... Çитет аппаланма!

Виçĕ кун та виçĕ каç ларчĕ вара Прокопий Прохорыч ĕçпе паллашса, кабинетран та тухмарĕ...

Шуткă-им! «Делора» 333 страница пулнă—шура, кăвак, хăмăр, сарă тата ытти темĕн те пĕр тĕслĕ страницăсем. Чернилпа та, хăрăм шывĕпе те, кăранташпа та, авторучкăпа та çырнă вĕсене, машинкăпа та пичетленĕ. Пĕччен мар, иккĕн мар, вуншар çын каласа панисем пулнă унта. Пыр-ха эс, ăнлан вĕсене пурне те, туп—хăшĕ тĕрĕс калать, хăшĕ суять? Ун пек чух суяканĕсем ытларах пулаççĕ...

Прокопий Прохорыч саккунсене питĕ лайăх пелекен, пур ĕçсене те çав тери тĕплĕ тăвакан, çирĕм пилĕк çул хушшинче çĕршер чи пăтравлă ĕçсен вĕçĕ-хĕррисене тупнă, нумай сăтăрçăсене, вăрăсене, намăсĕсене çухатнă суя этемсене тăрă шыв çине кăларнă опытлă çын пулнă пулсан та, халь та-арăн шухăша кайрĕ...

Қайăн!.. Пулаççĕ вĕт тепĕр чух çавăн пек этемсем,—шуйттан та ăнланса çитес çук вĕсен чунне!

Шухăшланă май, Прокопий Прохорыч, хăй сисмесĕрех, умĕнче выртакан «дело» хуплашкине тепĕр хут уçрĕ те, ун умне саспаллисене унăн-кунăн кукăрткаласа çырнă заявлени тухса выртрĕ.

«...Кăçал, июлĕн 26-мĕшĕнче, вырсарникун,—каллех хăй сисмесĕрех вулама пуçларĕ Прокопий Прохорыч,—вырăнти вăхăтпа 14 сехет те 15 минутра, Мучикасси çынни Савали Чаплашкин, эпĕ унпа чи ырă кăмăлпа калаçса тăнă чух, хăйĕн крыльци çинчен сасартăк тигр пек siksе анса, мана икĕ чышкипе (чышкисем хăйĕн — чукмарсем пек!) пĕр хăрăс

кăкăртан питĕ хытă чышрĕ те, эпĕ шĕвĕ кĕсел евĕрлĕ пылчăк çине персе антăм. (Вăл кун çак ялта вăйлă çумăр çунă та, урамсем епресех кайнăччĕ) Эпĕ часрах тăрса тарма пикентĕм, анчах Чаплашкин мана каллех çапса антарчĕ те ӳппĕн-питтĕн йăвалан тарма тытăнчĕ. Çав сăлтавпа манăн загранлицăран илсе килнĕ çутă-кăвак (люкс йышши) костюм çара лапра пулчĕ и даже аялти кĕпе-йĕм те хытах вараланчĕ. Кайран, Шупашкара таврăнсан, эпĕ костюма химически чисткăна парса тасаттартăм, уншăн 48 тенкĕ те 50 пус илчĕç, аялти кĕпе-йĕмшĕн прачкăна 5 тенкĕ тӳлерĕм. Кунсăр пуçне, гражданин Чаплашкин çавăн пек бандитла хăтланнине пула, манăн куçлăх ӳксе çĕмрĕлчĕ—25 тенкĕ те 12 пус тăрать (алăра аптека панă квитанци пур), çĕнĕ фетровăй шлепке хур чĕпписене шыв ярса панă валашкана лексе юрăхсăра тухрĕ—88 тенкĕ (ун пирки те таварнăй чек пур).

И тата акă мĕн. Мучикассине эпĕ хамшăн питĕ важнăй ĕçпе кайнăччĕ, анчах хăвна çавăн пек пылчăк ăшне пăрахса таптанă хыççăн мĕнле ĕç тăватăн-ха, çынсем умне мĕнле куранатăн?! Кайса килни ахалех пулчĕ, билетшăн (калле-малле) 37 тенкĕ те 40 пус тӳлени харама кайрĕ, вăл манăн калама та çук непроизводительнăй расхут пулчĕ. Ун пек усăсăр расхутсем тăвассине эпĕ хамăн личнăй бюджетра пачах та палăртман.

Çакна та шута илмелле: манăн кĕсъере пĕр бутылка коньяк (чи хакли, пилĕк çăлтăрли) пурччĕ, вăл та ванса юхса тухрĕ. 45 тенкĕ тăрать, ун пирки суту-илӳ министерствинчен пĕлме пултаратăр.

Паллах, питĕ шел, анчах та гражданин Чаплаш-

кин манран çаван пек издеваться тунине куракансем пулмарĕç, эпĕ темле кăшкăрсан та никам та пымарĕ (Чаплашкин хăйсене хĕнесе тăкасран хăрарĕç пул малла), унăн качча каяймасăр пурăнакан путсĕр хĕрĕ çеç—ашшĕ пекех тискер чунлăскер пулас—мана пылчăк ăшĕнче йăвантарни çине чӳречерен пăхса хăйне хырăмĕнчен такам кăтăкланă пек ахăлтатса ахăрса кăна тăчĕ. Ăна эпĕ свидетель тумастăп, мĕншĕн тесен вăл мана хирĕç кăна çаптарма пултарать. Çапах та манăн кун пирки документ пур,—урса кайнă Чаплашкинтан тарса хăтăлсанах, эпĕ, сельсовета кайса, Чаплашкин мана хĕнесе, вараласа пĕтерни çинчен справка çыртартăм. Председательпе секретарь туя кайнă пирки справка çине сельсовет техничкин ал пусмалла пулчĕ, анчах та ку, ман шутпа, пурпĕр, мĕншĕн тесен техничка та власть органĕнче ĕçлекен çынах, вăл та шалу илет!

Çак заявленипе эпĕ иртĕнсе кайнă Чаплашкина саккун тăрăх питĕ хытă айăплама ыйтатăп. Ун пек хулигансен вырăнĕ тĕрмере кăна пулмалла. Пуринчен ытла, çакна шута илĕр: вăл вĕт простой çынтан та мар, Отечественнăй война инвалидĕнчен издеваться турĕ! Не позволю! (Хам инвалид и тата пенсионер пулни çинчен манăн каллех документ пур.)

Анчах та маншăн Чаплашкина тĕрмене хупни çителĕксĕр. Рас вăл мана материальнăй ущерб турĕ, пĕтĕмпех тӳлетĕр! Çавăнпа та мана унран 256 тенкĕ те 12 пус укçа (шлепке, куçлăх, коньяк хакĕ, костюм тасаттарни, калле-малле билет хакĕ) шыраса илсе пама ыйтатăп. Судне хăвăрт и тата эпĕ ыйтнă пек тăвасса шанатăп.

Çакна шута илме ыитатап, гражданин прокурор. Эпĕ питĕ чирлĕ çын, ача чухнех нумай хĕн-хур курнă, пĕррехинче аслăк çинчен ўксе хырăма ыраттарнă, тухтăрсем ун чухнех мана урăх ўкме хушман, ўксен— вилетĕн, тенĕ, анчах çав Чаплашкин чышса ўкерчĕ. Эпĕ вилме пултарнă вĕт! Вилме!

...Ним айăпсăр хĕн курнă *Филимон Шуськов».*

...Çак пит те ăста çырнă сочинение тепĕр хут вуласа тухнă хыççăн Прокопий Прохорыч тата чылай хушă ним чĕнмесĕр ларчĕ. Вăл ĕнтĕ заявлени çинчен кăна мар, «делори» ытти 332 листа çинче çырнисем пирки те шухăшларĕ пулмалла. Унтан каллех хашш! сывласа ячĕ те, хăй тĕллĕн мăкăртатса илчĕ:

— М-да... Филимон Соломон-н... Филька... Эп астăвасса «Филька шпандырь» ятлă киню пурччĕ—шпана сăмахран... Хушамачĕ те темле... шуçлак!

Вăл татах заявлени çине пăхса илчĕ.

— Чăн-чăн «филькина грамота» ĕнтĕ, урăх ним калама та çук. А Филимонĕ хăй—чăн-чăн прохвост!

Заявленипе унăн авторне çакăн пек хаклама Прокопий Прохорычăн сăлтавсем çителĕклĕ пулнă пулмалла çав. Ахальтен мар вăл виçĕ кун та виçĕ каç ларнă çак «делопа». Филимон Шуськовăн пурнăçĕпе ĕçĕсене вăл халь тĕкĕр çинчи пекех курса тăнă. Енчен те çав Шуськов историре паллă вырăн йышăнмалли çын пулнă пулсан, Прокопий Прохорыч ун çинчен питĕ тĕплĕ монографи çырма та пултарнă пулĕччĕ!

...Вунçичĕ çула çитиччен Хĕлимун пурнăçĕнче нимех те пулман, темелле. Ача чухнехи пурнăçĕнчен вăл амăшĕ хăйне нўхрепрен хăйма вăрласа çинĕшĕн нумай хутчен çаптарнине тата пĕррехинче, тырă вырнă

вăхатра, кўршĕсен аслăкĕ çинчи чăх йăвинчен çăмартасене хĕве тултарса ларнă чух кил хуçи арăмĕ тăрук пырса тытса, ăна кĕпине хăпартсах вĕлтренпе пĕçертнине, çавăн хыççăн хăй пĕр эрне хушши çурăм çине выртайманнине çеç лайăх астунă.

Пĕçерккесем час та часах леккеленĕ пулсан та, Хĕлимун питĕ ачаш ўснĕ. Ĕçлеме вăл мĕн пĕчĕкренпех юратман, темле ĕç хушсан та пăрăнса юлма тăрăшнă. Ку енчен чеелĕх çитнĕ вара унăн. Пулчĕ-пулмарĕ пуçĕ ыратма тытăннă, сасартăках варсăр пулса ларнă вăл. Чи малтанхи хут уя тырă вырма илсе тухсанах кача пўрнине каснă та, вара ĕмĕрне те çурла тытса курман...

Ашшĕне Хĕлимун астуман; çынсем каланă тăрăх, унăн ашшĕ улшуç пулнă та, пĕррехинче çĕнĕ лашапа таврăннă чух кĕпер айне кайса вилнĕ. Анчах, ашшĕ çук пулсан та, аптраман вĕсем: амăшĕ, чухăн çемьере çуралса ўснĕскерĕ, питĕ ĕçчен çын пулнă. Колхозра та, килте те ырми-канми пĕлмесĕр ĕçленĕ вăл. Кахал пулнăшăн ывăлне текех ятланă, анчах та Хĕлимун, амăшĕ хытăрах калама пуçласан тўрех асламăшĕ патне тухса тапнă. Лешĕ вара ăна ялан пуçĕнчен лăпкаса ачашланă, çăкăр çине пўрне хулăмĕш пыл сĕрсе çитернĕ.

— Пĕртен-пĕр мăнук вĕт эсĕ пирĕн, епле хĕрхенес мар-ха сана? Ĕçĕ тармĕ-ха вăл, шăмма-шакка çамрăклах хуçкалас мар...

Мăнукĕ шав ашкăннă, урамра пĕчĕк ачасене макăртнă, анчах тепĕр чух хăйне шаккаса ярсан, асламăшĕ каллех ун хутне кĕнĕ...

Ачашшăн ўснипе, Хĕлимун çамрăклах хăйне мăнна хума, тантăшĕсем çине çиелтен, йĕрĕнчĕклĕн пăхма

хăнăхса пынă, аслисемпе те хар-хар калаçма веренне. Вунулттă тултарнă тĕле вăл пĕвĕпе тăсăлса мăн çын пекех пулса кайнă. Вунçиччĕ çине пуссан вара, çăварни эрнинче, кăмака умĕнче икерчĕ пĕçерекен амăшĕ патне пырса тăнă та, хăйне кура мар хулăм сасăпа:

— Авлантар мана!—тенĕ.

Амăшĕ тĕлĕнсех кайнă, аллинчи çатма аври те шăнкăртах тухса ӳкнĕ унăн.

— Эсĕ... шӳт тăватăн-и, е... чăнах?

— Пĕртте шӳт тумастăп!

— Ир-ха вĕт сана авланма, ара, ача вĕт-ха эсĕ!— хăрасарах каланă амăшĕ.

— Нимĕн те ир мар!—татса хунă Хĕлимун.—Авлантар тавай. Çитет мана хусах пурнăçпа пурăнса! Асанне хирĕç мар, унпа калаçрăм уш эпĕ. Хĕрне те хăех тупса паратăп, тет.

Асламăшĕ, пурнăçа самаях çăмăллăн пурăнса ирттернĕ çын, мăнукне авлантарасси çинчен чăнах та шухăшлакаланă-мĕн, никама систермесĕрех унта та кунта килĕшӳллĕрех хĕрсене пăхкаланă вăл: кам ĕçлеме вашават, камăн тупри ытларах—çи-пуçĕ-мĕнĕ, тыррипулли, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, тенĕ пек... Хĕлимунĕ çамрăкрах пулнипе çеç кун пирки кинĕпе калаçман вăл. Халь вара, ку сăмаха Хĕлимун хăй пуçласа ярсан, пĕтĕмпех ун майлă пулса тăнă:

— Ачин хăйĕн ун пек шалани пур пулсан, ма чарас? Авлантăр-иç! Ашшĕне те вунçиччĕрех авлантарнăччĕ эпир!

Хĕлимун амăшĕ ним тума аптраса ӳкнĕ. Ывăлне халех авлантарасшăн пулман вăл. Анчах Хĕлимунпа асламăшĕ ăна хупăрласах илнĕ, калаçма та паман. Ирĕксĕрех килĕшме тивнĕ... Вара типпе тухичченех

весем кӳрше яленчен Униç ятлӑ пите лӑпкӑ та сӑпайлӑ, кӑшт çеç чӗкеç шатриллӗ, çапах та илемлӗ хӗре лартса килнӗ...

Асламӑшӗ, палкама юратаканскер, çынсем умӗнче хӑйсен кинӗпе ниçта кайса кӗрейми мухтаннӑ:

— И-и! Мӗн каламалли-и! Тупри виçӗ лав пулчӗ вӗт, кӗпи-тумтирне вунӑ çулта та тӑхӑнса пӗтерес çук, унсӑр пуçне тата хӗрӗх пӑт тырӑ, хӗл каçнӑ пӑру, икӗ сысна çури, виçӗ кӑркка илсе килтӗмӗр... Ӗçре те никамран та юлас çук, шутсӑр ӳрӗк! Аçтан кӑна телей пулчӗ пуль пирӗн тӗле!..

Кӗçех тата тепӗр телей сиксе тухнӑ вӗсемшӗн: ял Совет секретарӗ чирлесе кайнӑ пирки Хӗлимуна ун вырӑнне ӗçлеме илнӗ, мӗншӗн тесен, шкулта пуринчен начар вӗреннӗ пулсан та, вӑл саспаллисене апла та капла кукӑрткаласа, чӑн-чӑн «писсӑрла» çырма пӗлнӗ. Председателӗ хӑйсен пӗлӗшӗ пулни те пулӑшнӑ кунта.

— Пурӗпӗр килте нимӗн те тумастӑн, Хлимкка, пырса лар, пысӑках мар пулсан та—шалу илетӗн,— тенӗ вӑл.

Часах ӑна яланхи пек Хлимкка тесе мар, Хӗлимун Аристарччӑ, тесе чӗнме пуçланӑ. Епле пулсан та, начальствӑ-çке! Хӑй вара çавӑнтанпа кил таврашӗнче алла турпас та тытса курман. Ирхине, лайӑх кӑна çывӑрса тӑраннӑ хыççӑн, хырӑмӗ параппан пек пуличчен çисе лартнӑ та—кӑнтӑрла çитиччен кайса ларнӑ, унтан киле пырса каллех тепре пехленӗ те—каçчен таврӑнман. Пур ӗççене те амӑшӗпе арӑмӗ туса пынӑ..

Вӑхӑт шунӑ... Хӗлимун тантӑшӗсем чылайӑшӗ вӗренме кайнӑ, килте юлнисем пикенсех колхозра ӗçленӗ, хуçалӑха вӑйлатма тӑрӑшнӑ, «ят тухсан» Çара

кайна, анчах Хӗлимун ҫав-ҫавах секретарьте ларнӑ, ӑна Ҫара та илмен, мӗншӗн тесен унӑн ура лапписем лаптак пулнӑ иккен... Ҫулла, ҫынсем хӗрсех утӑ ҫулнӑ е уйра тырӑ вырнӑ вӑхӑтра ял Советне эрни-эрнипе те никам пырса кӗмен чух та, вӑл ниҫта та кайман, пӗр-пӗччен, урамра ыйхӑллӑн утса ҫӳрекен качакасем ҫине чӳрече витӗр пӑхса, шӑл витӗр чӑрт та чӑрт! суркаласа е мӑн хӑяр вӑрри шӗкӗлчесе ларнӑ. Уйран йӑпӑртлӑха киле килнӗ пӗр-пӗр инке, ун тӗлӗпе иртсе пынӑ чух, ӑна:

— Хӗлимун Аристарччӑ, ма хуть пӗрре те пулин хире тухса курмастӑн? Тыррине ытармалла мар вӗт! — тесен, вӑл тутлӑн карӑнса илнӗ те:

— Нашшӑ делӑ—канцелярри...—тесе хунӑ.

Анчах праҫниксем пуҫлансан, ӑҫта та пулин туй таврашӗ тапрансан, ӑна тупма питӗ хӗн пулнӑ. Виҫӗ-тӑватшар кун, тепӗр чух эрнипе те пырса курман вӑл канцелярине, пӗр-пӗр кирлӗ хут ҫыртарма пынӑ ҫынсем ӑна килтен киле шыраса чупсах хӑшкӑлнӑ. Сыпас енчен пултарнӑ вӑл... Пӗччен пӗр витре сӑра ӗҫсен те хӑнк та туман, мур илешшӗ, куҫӗсем кӑна ҫиленнӗ вӑкӑрӑнни пек пулса кайнӑ. Киле таврӑнсанах арӑмӗ ҫине сиксе ӳкнӗ:

— У-у, хӗсӗр ӗне! Шатра шуйттан! Кай тухса ман килтен!..

Арӑмӗн вара час-часах кӳршӗсем патӗнче ҫӗр каҫмалла пулнӑ. Хӑш чух тата ӑна упӑшкинчен ҫеҫ мар, вӗсем патне пӗрмай пырса ҫӳрекен асламӑшӗнчен те лекнӗ: ку ӑна ҫимеллипех ҫинӗ...

— Пӗтӗм ял халӑхӗ умӗнче намӑс кӑтартатӑн пире, Хӗлимун ятне яратӑн! Виҫӗ ҫулта пӗр ача тӑвай маран, пуш хырӑм! Тьху, тьху, киремет!..

Киремечĕ—кинĕ мар, хăй пулнă та-ха, çапах та вăхăт çитиччен тӳснĕ лешĕ... Кинĕ нихăш енчен те айăплă маррине пĕлсе, Хĕлимун амăшĕ ун хутне кĕме тытăннă. Çамрăк чухне ăна хăйне те хунямăшĕ сахал мар хĕсĕрленине пит лайăх астунă-çке вăл. Çавăнпа та кинĕпе питĕ килĕштерсе пурăннă.

— Пĕтĕмпех аслашшĕне хывнă, эсрелĕ!—вăрçнă амăшĕ тепĕр чух, ывăлĕ çине çиленсе çитсен.—Чисти аслашшĕ! Лешне ахальтен мар Шуйттан Куçми тенĕ вĕт... Пĕреххут, тухса кайтăрччĕ ăçта та пулин, атту пурăнать пирĕн çумра усал сăвăс пек!

...Пĕррехинче, çуллахи ăшă кун, каçалапа, Хĕлимун ял Советĕнче пĕр-пĕчченех анаслакаласа ларнă чух, унта вырăсла тумланнă пĕр хĕрарăм пырса кĕнĕ. Питĕ капăр тумланнăскер пулнă вăл—куçа йăмăхтармалла сап-сар беретпа, хĕп-хĕрлĕ кофтăпа, сип-симĕс юбкăпа, çинçешке урисем çинче—çӳлĕ кĕлĕллĕ сенкер туфли, çӳçĕсене вĕттĕн-вĕттĕн кăтралатнă, çӳхе тутисене кăшт кăна сăрланă, куç харшисене пĕкĕ пек кукăртса хуратса лартнă.

— Страстĕ,—тенĕ çав хĕрарăм, кăмăллăн кулнă май малти тимĕр шăлĕсене кăтартса.

— Килĕрех,—пуçĕпе сулса илнĕ Хĕлимун, анчах çавăнтах, ку хĕрарăм епле пулсан та хуларан килнине тавçăрса илсе, вырăсла хушса хунă:—Топро божаловать... Иртĕр малалла, ларăр...

Кĕтмен хăна хыççăр пукан çине ларнă та, аллинчи сăмса тутри ăшĕнчен хĕвелçаврăнăш илсе хыпса шĕкĕлчеме тытăннă.

— Эсир мана паллаймастăр пулас...—куçĕсене вылятса, каллех кулса илнĕ вăл.

— Темле, курнă пек те...—нимӗнле мар пулса кайнă Хĕлимун.—Ăçтисем пулатăр вара эсир?

— Çак ялсемех-çке-е...—куçĕсене тата ытларах вылятса илнĕ лешĕ.—Çемĕчкĕ çиетĕр-и? Пошалстă, кушăйти!—Вăл Хĕлимун умне пĕр ывăç хĕвелçаврăнăш пырса хунă.—Лайăхрах пăхăр-ха, тен, узнавать тăватăр? Неушлĕ эп çав териех улшăннă?

— Эсир... Чакак Мирунĕн Маттĕрни мар пулĕ те?

— А-а, палларăр-и? Çавă конешнă! Анчах та халь мана Маттĕрне мар, Рона, теççĕ. Хулара, снаете, Маттĕрне ятпа пурăнма аван мар, приличнă пулмасть. Унта инделегенци вĕт...

Ку çынна Хĕлимун ачаранпах пĕлнĕ. Катăк йĕмпе çӳренĕ чухне вĕсем урамра та пĕрле чупнă, шыва та пĕрле кĕнĕ, пĕр-пĕрине çӳçрен те тăпăлтарнă... Унтан Маттĕрнене хулана нянька пулма илсе кайнă, терĕç. Анчах халĕ ав епле пулса кайнă вăл—картинка! Ытармалла мар!..

Сăмах хыççăн сăмах. Вĕсем кĕçех пĕр-пĕрине «эсир» мар, «эсĕ» теме пуçланă. Хĕлимун Маттĕрнерен вăл хулара ăçта ĕçлени çинчен ыйтсан, лешĕ ăна самаях мăнкăмăллăн:

— Пĕр наргоматра ĕçлетĕп,—тенĕ те, тĕкĕр кăларса çӳçĕсене тӳрлеткелесе илнĕ.—Лайăх пурăнатăп так-тă. Квартир каçоннăй, оттельнăй комнăт... Халь вотпуска килтĕм-ха темиçе кунлăх, аннене курманни нумай пулатчĕ... А сирĕн пата эпĕ пĕр пĕчик ĕçпе кĕтĕм-ха. Иртнĕ эрнере манне пашпăрт вăрларĕç. Çĕннине илме ялтан справка кирлĕ, терĕç. Пĕр паллана милици пур та, çав каларĕ. Çырса паратăр пуль?

Эп... чăрмавшăн ахаль тумăп, сами понимаете... Ĕçрен пушансан, кĕçĕрех хăнана пыма пултаратăн...

Вăрахчен калаçса ларнă вĕсем. Маттĕрне хăйĕн хулари пурнăçĕпе, цирксем те, зверинецсем те курнипе, хăйне каччӑсем питĕ кăмăлланипе мухтаннă, анчах хăй рассыльнăй кăна пулса ĕçлени тата ку хушăра икĕ хут качча кайса килни çинчен каламан...

Хĕлимун ăс-пуçĕ пăтрашсах кайнă: вăт, хĕр-тăк хĕр! Эх, çакăн пек арăм пулсанччĕ! Çĕр çинче урăх нимĕн те кирлĕ марччĕ ĕнтĕ! Анчах лекес çук çав ун пек телей...

Қаçхине вăл тӳрех вĕсем патне кайнă. Хăйне иккĕ виç черкке лексен, Маттĕрне ăна тата илемлĕрех, пушшех те ытармалла мар пек курăнма пуçланă. Қиле самаях ӳсĕр таврăнсан, вăл пĕр сăмах каламасăрах арăмне хĕнесе кăвакартса пĕтернĕ.

Тепĕр каçхине Хĕлимун Маттĕрне патне ĕçмеллисене хăй чиксе кайнă. Тата ытларах çунма тытăннă унăн чĕри. Пилĕк кун пурăннă ялта Маттĕрне, пилĕк каç хăнара пулнă ун патĕнче Хĕлимун, юлашки каçĕнче вара киле те таврăнман.

. . . . . . . . . . . .

Прокурор помощникĕ П. П. Яснюв тĕпчесе тухнă «делора» Хĕлимунпа Чакак Мирунĕн Маттĕрни хăйсем пĕрлешесси çинчен мĕнлерех калаçса татăлнине уçăмлăн кăтартса паракан хутсем пулман. Анчах та эпир çав ĕç çапларах пулнă пулĕ, тесе шутлатпăр.

...Юлашки каç. Ыран ĕнтĕ Маттĕрне каллех хулана тухса каять. Хĕлимунăн кĕçĕр епле пулсан та татăклă ответ илмелле: Маттĕрне унăн арăмĕ пулма килĕшет-и, çук-и? Вăл сĕтел çинчи çурлитра тытса черккесене тултарать те, ĕçме сĕнет:

— Юлашкине те санăн ырă сывлăхушăн...
— Спаççипă. Хăвăншăн та пултăр!
Хĕлимун черккере мĕн пуррине янках çавăрса хурать, анчах Маттĕрне кăшт çеç сыпса лартать. Вăл тăраннă ĕнтĕ, унăн пуçĕ паçăрах Кушлавăш вăрманĕ пек кашлать.
— Ну, Маттĕрне...
— Рона!—тӳрлетет ăна хĕрарăм.
— Ну, Рона...
— Мĕн?
— Юлашки хут ыйтатăп, кала: килĕшетĕн-и?
— Мĕн—килĕшетĕн-и?
— Каларăм вĕт-ха: манпа пĕрлешме! Ман арăм пулма!
— Миçе арăм кирлĕ вара сана? Пĕр арăму пур-иç, ăна ăçта чикетĕн?
— Арăм мар вăл манăн!—тăрук ӳлесе ярать Хĕлимун, кăкăрне чышса. Куçĕсем вăкăрăнни пек пулса каяççĕ.—Вĕлерсен те пурăнмастăп эп унпа, хăваласа яратăп, ак, паянах, кĕçĕрех!..
— Вара мĕн?—Маттĕрне пирус чĕртсе ярать те, пĕр урине теприн çине хурса сулкалама тытăнать.— Мана вара хăвăнпа пĕрле ялта усрас тетĕн-и? Колхозра сыснасем пăхса пурăнмалла пулать-и манăн? Ха-ха-ха!—ахăрса ярать вăл. Унтан, тĕтĕмпе чыхăнса, пӳрнипе юнаса илет:—Çук, ачамккă, халь тин эс мана яла илсе килейместĕн, такой дело ĕç тухмасть! Эп хуларан пăрахса килес пулсан, юлташсем те питрен сурса пĕтерĕç мана... Пирĕн унта шутсăр лайăх опчествă вĕт, пĕр хĕрĕнчен тепри чаплăрах. Каçсерен пурте пĕрешкел тумланса тухатпăр та çав, пĕтĕм урам

тĕлĕнсе пăхать пирĕн çине. Кай, ĕмĕрне те пăрахас çук эпĕ вăл опчествăна!

— Хам та хулана пырасшăн эпĕ!—йынăшсах илет Хĕлимун.—Эсĕ мана качча пыма килĕшес пулсан— тем тума та хатĕр эпĕ! Кунти кил-çурта сутатăп та хулара пӳрт лартатăп...

— Аннӳне те илсе пыратăн-и? А эпĕ терпеть не могу карчăксене, ялан вĕсем лăрканине итлесе пурăн...

— Анне... Вăл мунчара та пурăнма пултарать, мунчине сутмастăп. Ну? Çапла килĕшетĕн-и? Кала ĕнтĕ, ан çунтар ман ăшчике!

Маттĕрне ун çине куçĕсене хĕссе пăхса ларать-ларать те, сасартăк сиксе тăрса, ăна майĕнчен ыталаса илет.

* * *

Ирхине Маттĕрне тухса кайнă...

Паллах, Хĕлимун пĕр ун çинчен кăна шухăшласа пурăннă. Канцеляринче нимĕн те туман, ĕçпе пыракансем çине çаврăнса та пăхман, чĕнсен кăшкăрса тăкнă, хăй тек савнийĕ патне çырусем çырнă, теççĕ. Çынсем пăхнă-пăхнă та, пĕррех кирлĕ çĕре жалоба çырса панă ун çинчен:

— Кирлĕ мар пире кун пек секретарь! Лайăххине, тивĕçлине, тупатпăр!..

Унтан виç кун та иртмен—Хĕлимуна ял Советĕнчен кăптăр-каптăр хӳтерсе кăларса янă. Анчах... Хĕлимун куншăн пĕртте кӳренмен, çук! Тĕп-тĕрĕс сведенисем тăрăх, вăл тепĕр темиçе кунтан килти пĕр ултçичĕ пăт туртакан сыснана пустарса шăматкун пасара

кайса сутнă та—киле таврăнман, тӳрех Шупашкара вĕçтернĕ...

Маттĕрне патне вăл каç пуласпа пырса çитнĕ. Унăн пӳлĕмĕнче, сĕтел тавра, темле çынсем хăна пулса ларнă. Темшĕн, вĕсем Хĕлимун çине питĕ сиввĕн пăхнă...

«Мĕнле этем эсĕ, кам шуйттанĕ сĕтĕрсе килчĕ сана кунта?» тенĕ пекех пулнă вăл.

— Шăллăм ку манăн, тăван шăллăм, паллашăр!— тенĕ Маттĕрне, пĕçернĕ рак пек хĕрелсе кайса. Çакăн хыççăн вара Хĕлимун çине пурте кăмăллăнах пăхма тытăннă. Ана сĕтел хушшине лартса «штрафной» ярса панă... Хĕрме пуçласан, Хĕлимун хăй те—ялтан килнĕ çын пулсан та—ытти хăнасенчен кая маррине кăтартас шутпа кĕсйинчен çĕр тенкĕлĕх хут кăларса сĕтел çине çатлаттарнă:

— Илсе килĕр ман ятпа! Халь эпĕ хăна тăватăп!..

Паллах ĕнтĕ, кун пек туни унăн авторитетне калама та çук ӳстерсе янă...

Унтан хавасланса кайнă хăнасем Хĕлимуна çав тери мухтама тытăннă, ыталанă, çурăмĕнчен лăпканă, тахăшĕ чуптунă...

— Маттур каччă иккен эсĕ!

— Сан пеккисене эпир питĕ хисеплетпĕр!

— Юл хулара! Çын тăватпăр эпир санран! Любой ĕç, любой вырăн тупса паратпăр—суйла! Эпир вĕт... Пирĕн вĕт...

Каярахпа мĕн пулнине Хĕлимун астуман. Ирхине вăл сĕтел айĕнче вăраннă. Пуçĕ такам тукмакпа çапса тăнă пек ыратнă, хăй ăçта пулнине те тăруках тавçăрса илеймен. Кăштах тăна кĕрсен, тӳрех кăкăрĕ çинчи кĕсйине çавăрса тытнă та:

— Укçа!..—тесе йынăшса янă.

Кĕсйинче пĕр пус та пулман. Вăл тăрук ухмаха ернĕ пек сиксе тăрса, кравать çинче саркаланса çывăракан Маттĕрнене хулпуççинчен силлесе вăратнă:

— Укçа! Укçа çухалнă манăн! Икĕ пин ытла! Пĕтрĕм эпĕ! Халех çакăнатăп!..

Маттĕрне куçĕсене кахаллăн уçса тутлăн карăнса илнĕ те:

— Çакăнма тăхта, санăн укçу ниçта та çухалман, пĕтĕмпех ман çумра,—тенĕ.—Ĕнер пурне те валеçсе пама тытăнтăн та, туртса илмелле пулчĕ. И вопше укçа яланах ман алăра пулмалла—хулара йăли çапла...

Хĕлимун лăпланнă. Маттĕрне кравать айĕнчен ĕнерхин юлашкине кăларса пуçне тӳрлеттерсен, кăмăлĕ пĕтĕмпех юсанса çитнĕ унăн. Унтан Маттĕрне тумланнă, сăрланнă та, Хĕлимуна мăйĕнчен ыталаса илсе, унăн куçĕсенчен пăхса:

— Атя-ха магазинсем тăрăх çӳрер, иксĕмĕр пĕрлешнĕ ятпа илсе пар мана пĕр-пĕр подаркă—хулара йăли çапла, юратакан çынсем хĕрарăмсене яланах парнесем параççĕ,—тенĕ.

Хĕлимун хирĕçмен...

Икĕ пин тенкĕ—сахал укçах мар ĕнтĕ, анчах вăл та пĕтме пултарать çав. Шыв пек япала вĕт вăл, укçа тени, юхать те юхать. Хĕлимунăн та пĕр уйăх—уйăх çурă хушшинче сысна укçи пĕтĕмпех юхса тухнă. Вара çине тăрсах ĕç шырамалла пулнă. Çиес-ĕçес пулать-çке-ха, Маттĕрнен 150 тенкипе иккĕн ăçтан пурăнатăн?

Ĕçне тупма хайхи Маттĕрне хăнисем пулăшнă: хула тăрăх краççын сутса çӳрекен туса хунă ăна. Ĕçĕ

йывăрах пулман ку: Хĕлимун ирхине потребсоюз лашине кӳлсе тухнă та, базăна кайса тимĕр пичкене пăкă шăтăкĕпе тан тултарнă, унтан вара урамсем тăрăх кăшкăрса утнă:

— Краççы-ын! Қама краççын? Первăй со-орт!..

Анчах та ку ĕç ăна часах йăлăхтарса çитернĕ. Тупăшĕ сахал пулнă—хулари майрасене краççын сутнă чух 10—15 пусшар каялла тавăрса паманнипе нумаях пуяймăн! Çитменнине, теприсем уншăн та ятлаçнă, жалоба çырса парассипе хăратнă. Маттĕрни те час та часах кăмăлсăр пулса тутисене мăкăртса хунă:

— Фу, шăрш перет санран... Юнашар ларма та восмошнăç çук!

— Мĕн тăвас-ха манăн, тварĕ çавăн йышши те...—тӳрре тухма тăрăшнă Хĕлимун.

— Мана мĕн? Туп тасарах ĕç!

— Таçта-ха вăл...

— Нимĕн те пултараймастăн çав эсĕ! Мужик тăк—мужик!—куçĕсене çилĕпе çутăлтарса илнĕ Маттĕрне.—Қаллех хамăн тăрăшас пулать ĕнтĕ саншăн!

Тепрер уйăхран Хĕлимун пасарта ăна-кăна сутма пынă колхозниксенчен вырăн укçи пухса çӳрекенни пулса тăнă. Ку ĕнтĕ малтанхинчен нумай лайăхрах пулнă: нимĕн те сутмастăн, вараланмастăн, квитанци татса паратăн та—укçа шăйăрса илетĕн... Япăх-им?

Çапах та Маттĕрне кăмăлĕ тулман...

— Этем мар иккен эсĕ—юман юпа! Çулламан пăру! Пĕлтĕрсем сан вырăнта манăн пĕр снакоми ĕçлетчĕ те, кулленех хăйне пĕр утмăл-çитмĕл тенкĕ хăваратчĕ. Мĕнле майпа, тетĕн-и? Ирхине татса панă квитанцисене каçаллапа каялла пухса илетчĕ те, те-

пěр кунне каллех çавсене тыттаратчě. Ялтан килнě çын мěн чухлать вăл? Уншăн—тӳлени пултăр! Сана кам чарать çавăн пек тума?

Хěлимун вăл вěрентнě пек тума тытăннă. Анчах Рона-Матрена çаплах ăна хăйрама чарăнман-ха. Халě вăл Хěлимуна ялти кил-çурчě пирки час та часах аса илтерме тытăннă:

— Каласа татăлнине мантăн-им? Кунта пӳрт лартатăп, терěн-иç? Ма кайса сутмастăн тата? Е каллех çав усал арăму патне таврăнас шуту пур-и? Апла пулсан, паянах тухса кай ман патăмран! Хама валли эп урăххине те начасах тупатăп!

Куна хирěç Хěлимун мăшлатнă кăна:

— Тăхта-ха кăштах... Ăçтан пурне те тăрукках?..

— Çурт лартсан, улпутсем пек пулатпăр вěт!— хистенě Маттěрне.—Хваттирантсем ярсах пурăнма пулать ку чухне! Ěçлеме те кирлě мар вара!

Унпа килěшсе, Хěлимун вăкăр пек мěкěрнě кăна.

— Юрать, ара, юрать, кайса сутатăп...

Анчах вěсен ěмěчě сасартăк татăлнă...

Пěр ирхине, хăйсем вырăн çинчен тăричченех, вěсем патне Хěлимунсен ялěнчи Çарăк Илли тенě çын пырса кěнě.

— Аннӳ çыру парса ячě сан валли,—тенě çав çын, шăлавар кěсйинчен лутăрканса пěтнě хут татки кăларса.—Питě тунсăхласа çитнě пулмалла саншăн: виç кун шыра та—пурěпěр тупса пар, тесе ячě...

Хăйсен ял çыннине курсан, çитменнине тата вăл тӳрех амăшě çинчен асăнсан, Хěлимун кăвак тăпра тěслě пулса кайнă, сив чир тытнă пек, пěтěм кěлеткипе чěтреме тытăннă. Ара, сиснě ěнтě вăл ырă пулас

çуккине! Çапах та, хăй пăлханнине палăртасшăн мар пулса, вăл:

— Ну... мĕнле пурăнаççĕ вĕсем унта?—тесе ыйтнă.—Выçса вилмерĕç-и-ха мансăр?

— Э-эй, мĕн вилмелли! Питĕ лайăх пурăнаççĕ!—тенĕ колхозник хавассăн.—Хальхи вăхăтра сан аннӳ пек тăрăшакан çын выçă ларать-и вара! Ĕçлет вĕт кунĕн-çĕрĕн, тепĕр çамрăкран та ирттерет! Арăму та унран юлмасть, иртнĕ правленире ăна чăх-чĕп фермине шанса пачĕç-ха, хĕле кĕрсен çав ĕçе вĕренме курса ярас, терĕç...

Хĕлимун пикенсех тӳмланма тытăннă, анчах ниепле те ĕç тухман унăн: малтан шăлаварне каялла тăхăннă, унтан сылтăм урине сулахай атти ăшне чиксе лартнă. Çав хушăра, утиял айĕнчен тухмасăрах, амăшĕн çырăвне Маттĕрне тытса вулама пуçланă. Питĕ хаяр пулнă вăл çыру...

«Хлимкка! Ку çырăва эпĕ сана пĕтĕм чун-чĕререн ылханнине пĕлтерес шутпа çеç çыратăп. Йытă эсĕ, шулĕк, мăн çул çинчи хурах, ман ывăл мар! Кам пур сан пек тăван амăшне çаратаканни? Ĕмĕрне те каçармастăп сана куншăн! Сысна вăрласа кайнипе пуятăп, терĕн-и? Çук, ачам, ун укçине эп санран судпах шыраса илетĕп, мĕншĕн тесен вăл сыснана эс пăхса ӳстермен, эс ăна пĕр паранкă та пăрахса паман!

Тата эсĕ ялти кил-çурта сутасси çинчен лĕпĕртететĕн, тенĕ сас пур. Ан та шухăшла! Эсĕ ку кил-çурта пĕр турпас та илсе кĕмен, вăл пĕтĕмпех манăн. Акă арăму часах ача çуратса парать те, пĕтĕмпех ун çине çыртаратăп, сана пĕр тутăхнă пăта та лекмест, пĕлсех тăр!

Ку çеç те мар. Ачу çуралсан тепĕр куннех санран элимент шыратпăр. Çакна та кĕтсех тăр!

Пире ан асăн, кил çинчен ан шухăшла, мĕнле пĕлетĕн—çапла пурăн. Эпир нихçан та аптрас çук хуть, пур лайăх çынсем те пирĕн майлă. Хăçан та пулин хăвах килсе пуççапăн та-ха пире, анчах эпир ун чух сан çине апчху! тăватпăр çеç.

Санпа манăн урăх пĕр сăмах та çук, пулма та пултараймасть!»

...Маттĕрне çырăва çăтăр-çатăр лутăркана та, Хĕлимуна питĕнчен пере панă:

— Ме, çи! Пит лайăх пуйтарать сана аннӳ!

Ну ĕнтĕ, çакăн хыççăн Хĕлимун пурнăçĕ мĕнлерех пулса кайнине хăвăрăннах чухласа илмелле сирĕн. Çивĕч шăллă Маттĕрне пĕр çутă кун та кăтартман вара ăна. Юлашкинчен Хĕлимун ун патĕнчен тухса тарасси патнех çитнĕ, анчах çав вăхăтра вăрçă пуçланнă...

Çарта нихçан та пулса курманскере, ăна унта питĕ йывăр килнĕ. Чăннипех калас пулать: запаснăй полкра ун пек сӳтĕк салтак та пулман çав. Пичĕ-куçĕ тăр лаппа, шинелĕн хлястикĕ çук, обмоткисем ялан саланса каяççĕ, пăшал пеме кайсан — пĕр пули те мишене лекмест, походсенче стройран татăлса юлать... Командирсем шалт аптраса çитнĕ унпа. Чипер каласса та пăхнă, ятласа та илнĕ, черетсĕр нарядсем те панă—Хĕлимун пурĕпĕр çавăн пекех пулнă. Тӳррипе калас-тăк—плахая пенĕ вăл...

Унтан сасартăк, унăн пуçĕ çине кĕтмен телей йăтăнса аннă: пĕррехинче батальон командирĕ çак Хлимкка çыру çырса ларнине курнă та, унăн почеркĕ самаях аваннине асăрхаса, ăна писарь туса лартнă.

Чун кĕрсех кайнă вара Хĕлимуна! Çав тери пысăк савăнăç пулнă ку уншăн. Халь тин ĕнтĕ походсене те каймалла мар, пăшал пеме те çӳрес çук, нарядсем те пулмаççĕ. Епле пулсан та, ку телее шăлпах çыртса лартас пулать, ан вĕçерĕнтĕр вăл!

Чăн та, хытă тăрăшнă вара Хĕлимун... Унччен веле-селе, урисене те аран-аран сĕтĕркелесе çӳренĕ салтак пулнăскер, халĕ вăл тăруках çивĕчленсе кайнă, вăрт та варт! çаврăнкаланă, хушнă ĕçсене çийĕнчех, тĕп-тĕрĕс туса пынă, начальствăна юрасшăн шыва сикме те хатĕр пулнă. Ротăсем пĕрин хыççăн тепри фронта ăсаннă, вĕсем вырăнне çĕннисем пухăннă, вĕреннĕ те—каллех вăрçа кайнă, Хĕлимун çав-çавах писарьте ларнă. Шав çырнă вăл, шав çырнă...

Виç уйăх, çур çул, çулталăк...

Фронт хĕвеланăçнелле куçса пынă май, запаснăй полк та майĕпе хыççăн шунă, анчах Хĕлимун пурнăçĕ улшăнман. Улшăнма мар—лайăхланса пынă, темелле: темлерен ăна интендантствăна куçарнă та, вăл ятарласа чĕртме хупнă сысна пекех самăрălса кайнă...

...Ĕнтĕ вăрçă пĕтесси те инçех юлман, çапăçусем тăшман çĕрĕ çинче пынă. Анчах Хĕлимун çав сехете кĕтсе илеймен çав, аманнă вăл, мĕскĕн! Ак çапла аманнă: чĕрĕ пулă çиес килнипе пĕр юханшыв хĕррине пырса, ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут граната пеме тăнă вăл, анчах ĕретлĕ ывăтайман та, пĕр осколокĕ хăйнех пырса тивнĕ. Сылтăм аллинчи виç пӳрнине çĕçĕпе касса татнă пекех татса кайнă, мур илешшĕ. Ай, çухăрнă вара, ай ӳленĕ Хĕлимун!..

— Виле-еп! Вилтĕ-ĕм! Çăлă-ăр!..

Суранĕ ытла хытă ыратнипе те мар, çав тери хăра-

са ӳкнипе çухăрнă вăл. Шуткă-им? Виçĕ пӳрне татăлнă вĕт, тата юн та тухнă!

...Госпитальре пĕр уйăх пек выртсан, вăл киле таврăннă. Самаях пуян пулнă тет хăй.

* * *

Малашнехи пурнăç пирки Хĕлимун госпитальрех тĕплĕн шухăшласа план тунă.

— Паллах, ĕçе кĕме васкамастăп. Ухмахах марха. Ĕçлеччĕр, камăн питех ĕçлес килет. Манăн пенси пулать. Ку пĕрре. Вăрçă инваличĕ пулнипе, мана пур енчен те çăмăллăх, пулăшу пама тивĕç. Ку иккĕ... Маттĕрне хăйне валли урăххине тупнă пулĕ-ха, ахальтен мар чылайранпа çырмарĕ, çавăнпа та çĕннине шырамалла пулать... Тухăçлăраххине конешнă... Пĕр-пĕр столовăй заведующине е буфетчицăна... Анчах та хĕрарăм тупасси—пысăк ыйтăвах мар-ха хальхи вăхăтра. Мана халь вĕсенчен любойĕ мăйран уртăнать! Ялти кил-çурта сутма анне виличчен тăхтамаллах пулать витнă, эсрелĕ, ним тума та çук. Ытла нумаях пурăнмасть пулĕ те-ха...

Çитет хайхискер тăван хулана. Виçĕ пысăк чемоданне багаж усракан камерăна парать, тăваттăмĕшне, çăмăлтараххине, хăйпе пĕрле илет те, Маттĕрне хваттерĕн алăкĕнчен пырса шаккать. Анчах та ăна хирĕç... хăйĕн савнă Маттĕрнийĕ мар, пĕр пĕчĕкçеç хура карчăк тухса тăрать.

— Кам кирлĕ?

— Рона Миронна....

— Çук вăл. Тахçанах тĕрмере ларать.

— Тĕрмере? Мĕншĕн?—тĕлĕнсех каять Хĕлимун.

— Спекуляци тунăшăн.

...Темиçе кун вăл хăйне хăй ниçта чикме пĕлмесĕр çӳренĕ. Урамсем тăрăх ним тĕлсĕр утнă, пасара кайса пăхнă, буфетсене кĕркелесе тухнă. Юрать-ха, укçи пулнă та...

Чылай хушă ахалех çапкаланса çӳренĕ вăл. Унтан çапах та служба çинчен шухăшлама пуçланă. Тупăшлăрах вырăн шыраса пĕр çĕре, тепĕр çĕре çитнĕ, пуçлăхсем патне кĕрсен тӳрех:

— Эпĕ—вăрçă инваличĕ, парăр мана лайăх ĕç!— тенĕ.

Вырăнĕсем нумай пулнă, анчах Хĕлимун кăмăлне тивĕçтерекеннисем тупăнман. Хăш çĕрте управделами пулма сĕннĕ, хăш çĕрте — пĕр-пĕр коммунальнăй çурт коменданчĕ пул, тенĕ, тем те... Пĕр пуçлăхĕ тата харăсах икĕ ĕç сĕннĕ: е возчик, е каçхи хуралçă... Ну, Хĕлимун питĕ тарăхса кайнă вара куншăн, апайтурух!..

— Как смеешь мăшкăллама?! — кăшкăрса парахнă вăл çав пуçлăх çине. — Эпĕ фронтра юн тăкнă сын!.. (Тĕрĕссипе, унăн: «эпĕ фронтра пулă тытнă сын», темелле пулнă та ĕнтĕ...) За родину çапăçнă, а эс мана сторож тăвасшăн! Не позволю!..

— Ара, санăн нимĕнле специальность те çук-çке!— тенĕ лешĕ.

— Çук пулин! Мĕне кирлĕ мана специальность? Эпĕ вĕт...

— А мĕн эсĕ?

Хĕлимун ответ парайман.

Такки тупайман вара вăл тупăшлă вырăн. Юлашкинчен сурнă та — аллипе сулнă:

— А-а, çăва патне! Ĕçлеместĕп луччă! Хватгер илетĕп те — ахалех пурăнатăп!

Анчах хваттерĕ те ытла тăруках лекмен. Жилуправленине пĕр вунă хут та кайса кисретнĕ вăл:

— Эп инвалид! Мана хваттер живо-два памалла сирĕн! За што кров проливали?!

— Черет, — тенĕ ăна. — Инвалидсен те хăйсен черечĕ пур. Кĕтĕр.

Хĕлимун пурнăçĕ кансĕрленсех çитме пуçланă. Гостиницăра куллен укçа тӳлемелле, апат-çимĕçне хатĕрлесе паракан çук, çăкрине те, пурне те карточкăсем тăрăх, черет тăрса илмелле...

— Яла каймалла мар-ши пĕрреххут, — шухăшлакалама пуçланă çак. — Инвалидсене колхозсем те пулăшаççĕ вĕт-ха... Пыратăп та — çăнăх, аш-какай, çу çыртарса илетĕп... Утар та пурччĕ пулас-ха вĕсен, тен, пыл та илме пулать... Пурăнатăп вара пĕр хушă!

Пит илĕртӳллĕ шухăш пулнă та çав ку, анчах ăна часах пăрахма тӳр килнĕ... Пĕрре, кĕр енне, пасарта пахча çимĕçĕсен речĕпе пынă чух, вăл кĕтмен çĕртенех хăйне такам ятпа чĕннине илтет. Çавăнтах унталла, кунталла пăхать те, хăйсен ялĕсене, хăй вăрçă умĕн Маттĕрне хваттерне амăшĕн çыруне пырса панă Çарăк Иллине курах каять. Ал параççĕ вĕсем, калаçма тытăнаççĕ...

— Ма пĕрре те киле пырса курмастăн? — ыйтать Çарăк.

— Пырасшăн-ха çак кунсенче, — тет Хĕлимун.— Мĕнлерех пурăнатăр эсир унта?

— Начарах мар, спаççипă! Акă, колхоз кишĕрне сутма килтĕмĕр-ха... Ме, çисе кур! Хăвăн аннӳ çитĕнтернĕскер... Пахча бригадирĕ вăл пирĕн. Шутсăр нумай пулчĕ кăçал пахча çимĕç! Çисе те, сутса та пĕтерес çук! Пăхасса та аван пăхрĕç те ĕнтĕ... — пĕр

чаранмасар калама тытанать Илле. — Араму — илтнĕ пуль? — иккĕмĕш çул ĕнтĕ председательре çӳрет; чиперех ĕçлет-ха, çынсем те мухтаççĕ... Ывалу та пысакланса кайрĕ ĕнтĕ — пиллĕке пусрĕ пулмалла. Шутсар маттур, касна-лартна эсĕ! Пырса курасах пулать ана пĕрре, Хĕлимун Аристарчча... Атту... хе-хе... ашшĕ те пур, анчах талах пек ӳсет... Темле, килĕшмест вĕт ун пек, э?

Хĕлимунан кишĕр çыртакĕ сасартак пырне ланкса ларна. Вал чыханса кайна, ӳсĕрсе илнĕ, унтан мак-мак! тукалана та, аяккалла паранса утна.

— Униç — председатель... Анне — бригадир...— мак-картатна вал, урам тарах ним тĕлсĕр утса. — Çук, çук... Вĕсем мана пулашас çук... Кунтах майлашас пулать! Шыракан тупать, теççĕ.

Мĕн тетĕр эсир? Майлашна вĕт Хĕлимун! Пĕрре-хинче кинона кайна та, пĕр хĕрарампа паллашна. Выранĕсем юнашар пулна вĕсен. Сеанс пуçланиччченех самах хушса илнĕ те, унтан киле кайма та пĕрле тухна. Самах çине самах... Сисмен те, хĕрарам пура-накан çурт умне çитсе те тана. Пĕр «хупа столовай» пуçлахĕ пулна лешĕ. Пĕччен çын. Упашки варçаччe-нех вилнĕ. Питĕ камалла, йĕркеллĕ калаçать... Çам-ракан мар та ĕнтĕ, çапах илемне çухатман-ха, аптра-масть.

Хĕлимунĕ хай те ана ытла пит нĕрсĕр пекех туйан-ман куранать.

— Тепĕр чух кĕрсе тухар чей ĕçме... — тенĕ хĕр-арам, чылай калаçса тана хыççан. — Эп ав çаванта, иккĕмĕш хутра пуранатап...

Çав каç вара Хĕлимун çĕрĕпех çыварман. Нихçанхи пек те мар хыта шухашлана вал, темиçе хутчен тарса

ларса чӗлӗм туртнӑ, калле-малле уткаласа ҫӳренӗ, ҫамкине сӑтӑркаланӑ. Вӑл хӑйӗн чӑн-чӑн телейӗ тупӑннине туйнӑ... Пӗччен ҫын, хваттерлӗ, ун аллинче темӗн чухлӗ апат-ҫимӗҫ... Ҫук, куна вӗҫертме юрамастех, куна вӗҫертсен ҫӗр ҫинчи чи аслӑ ухмах пулатӑп эпӗ! — тенӗ Хӗлимун.

Вӑхӑта вӑраха ямасӑрах, тепӗр каҫхинех ҫав хӗрарӑм патне пырса кӗнӗ:

— Ҫаҫарӑр, пӗччен питӗ кичем те, килсе ларас, терӗм...

Тата ҫывӑхрах паллашнӑ вӗсем. Ненила Петровна та, унӑн хваттерӗ те, унӑн тутлӑ шур куклисем те ҫав тери кӑмӑла кайнӑ ӑна. Вара Хӗлимун чӗри темиҫе ҫул каялла Маттӗрне пирки ҫуннӑ пекех ҫунма тытӑннӑ.

— Сансӑр пӗр кун та пурӑнма пултараймастӑп! Хӗрхен тӑлӑх ҫынна! Атту кӗҫӗрех Атӑла кайса сикетӗп, манӑн характерӗ ҫавӑн пек! — тенӗ вӑл тепӗр ик кунтан, Ненила Петровна умне чӗркуҫленсе.

Лешин ӑна Атӑла сиктересси килмен пулмалла...

Э-эй, пурнӑҫ пуҫланнӑ вара Хӗлимунӑн! Хваттерӗ ӑшӑ та ҫутӑ, минтерӗсем — мамӑк, пашт! анчах кӗрсе выртатӑн, куллен — ҫич-сакӑр тӗслӗ апат, пӗринчен тепри тутлӑрах, тата веҫех ахаль, пӗр пуссӑр... Ненила упӑшкинчен темиҫе костюм—бостон та коверкот!— юлнӑ, пурте ятарласах Хӗлимун валли ҫӗленӗ пек... Рай!

Ытахальтен, Ненила Петровна ӑна столовӑй штатне кӗртнӗ, кладовщик тунӑ. Анчах ӗҫ-им вӑл? Шӳт кӑна пулнӑ! Повӑра кунне пӗрре продуктӑсем пар та, кайран хуть те кун каҫипех маччана сурса вырт!

Икĕ çул ытла ыр курнă Хĕлимун. Çынсем тертленнĕ, ĕç хыççăн черетсенче тăнă, а вăл тек самăрланнă... Çумра ялан укçа пулнипе час та часах буфетсене çӳренĕ, пуринчен ытларах — пуклак сăмсаллă пĕр Малашкă сут тунă çĕре. Лешин кулли ытла та пит килĕшнĕ ăна.

— Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр... И-ии-ха-ха-ха! — каçсах кайнă вăл, хăйне айăкĕнчен пӳрнепе тĕртсе илсен.

...Çĕршыври пурнăç юсанса лайăхлансах пынă. Вăрçă хыççăн карточкăсем те пĕтнĕ, лавккасенче те, пасарта та апат-çимĕç çителĕклех пулма пуçланă. «Хупă столовăйсене» хупма тытăннă... Ненила Петровнăн столовăйне те хупса лартнă...

Хĕлимун пуçĕнче çĕнĕ плансем çуралнă. Вăл каç-каç час таврăнми пулнă, Ненилăна ним вырăнне те хуми пулса пынă.

— Сăрă хурт эсĕ, наян! — кăшкăрнă Ненила. — Эп сана икĕ çул кӳптерсе усрарăм, а эсĕ çакăн пек хăтланатăн-и халь?

Хĕлимун ку сăмахсене хăлхана та чикмен. Ненила ытлах вăрçма пуçласан, унăн куçĕсене те кăвакарткаланă. Тарăхса çитнĕ Ненила пĕррехинче вара милици чĕнсе пынă та, чыша-чышах хăваласа янă ăна.

Анчах Хĕлимун çакна кĕтсех пурăннă, тес пулать: «Эп кайман, хăй пурăнасшăн пулмарĕ!» Çав каçах вăл Малашкă патне кайса вырнаçнă. Кайран, Ненилине «тавăрас» шутпа, ăна судсем тăрăх сĕтĕрсе тăнне янă. Тем те ыранă вăл унран: тахçан юрăхсăра тухнипе кăларса пенĕ салтак аттине те, çĕтĕлсе пĕтнĕ аялти кĕпи-йĕмне те, шăл тасатмалли щеткăсене те...

— Çаратса юлчĕ мана! — тенĕ вăл. — Не позволю инвалидран мăшкăллама!..

Тăватă хут пулнă çав суд, Хĕлимун килĕшменнипе ĕç пĕр участокран тепĕр участока куçнă, юлашкинчен ăна вăл аслă суда та çитернĕ. Паллах, Хĕлимуна нимĕн те шыраса паман, судьи — чăнах та вăрçă инваличĕ пулнăскер — ăна хăйнех хăтăрса, намăслантарса пĕтернĕ, анчах та намăслантарни — мĕн вăл? Намăс — тĕтĕм мар, куçа çимест, теççĕ вырăссем... Хĕлимун хăнк та туман!

Каллех питĕ лайăх пурăннă вăл. Ĕçе ниçта та кĕмен, Малашкăна пулăшнă çеç — сăрана кăпăклăрах туса сутма, ўсĕрсене «сдачи» панă чух улталама, виçерен иртме пуçланисене урамалла тĕртсе (тепĕр чух сĕтĕрсе те) кăларса ывăтма...

Анчах сасартăк инкек пулнă: вар-хырăмĕ ыратнипе аптраса ўкнĕ вăл.

— Язва санăн, операци тумалла, — тенĕ тухтăрсем.

Вилес пекех хăраса ўкнĕ Хĕлимун, анчах ним тума та май килмен, кастармаллах пулнă... Самаях выртнă вара больницăра. Малтанхи вăхăтра ун патне Малашкă пыра-пыра кайнă, анчах унтан, темшĕн, сасартăк пачах çўреме пăрахнă. Санитаркăсем урлă çырусем те ярса пăхнă ун патне Хĕлимун — ответ пулман.

— Мĕн амакĕ пулчĕ куна? — тĕлĕннĕ вăл.—Юратнă пекехчĕ-çке, чиперех пурăнаттăмăр! Мĕнле-ха вара тўрех манчĕ пулать? Ну, тăхта, тыткалатăп-ха эп сана куншăн, пуклак сăмса, сывалса тухам кăна!

Хулара, унăн тусĕсем хушшинче, çав вăхăтра питĕ кулăшла хыпар сарăлнă-мĕн:

— Фăлимон Аристарччă арăмĕн упăшки таврăннă. Вăт-тăк номер! Ха-ха-ха!..

Хĕлимунĕ хăй кун çинчен сывалса тухсан тин пĕлнĕ. Больницăран вăл тўрех Малашкă хваттерне

кайнӑ, унта хуҫа пекех пырса кӗнӗ, анчах кӗрсенех диван ҫинче хӑйӗнчен пӗр-икӗ хут тӗреклӗрех, пӗтӗм кӑкрине, хулӗсене темиҫе пуҫлӑ ҫӗленсемпе, чӗрене чиксе шӑтарнӑ кинжалсемпе эрешлесе пӗтернӗ ҫын пирус пашлаттарса выртнине курнӑ. Ҫан-ҫурӑмӗ сӑр-сӑр-р... туса кайнӑ Хӗлимунӑн.

— Мӗн кирлӗ сана? — ҫӗтсе ларнӑ сасӑпа ыйтнӑ ҫав ҫын сиввӗн. — Қам патне килтӗн?

— М-малашкӑ... — тенӗ Хӗлимун, хӑйӗн ал-урисем чӗтреме пуҫланине туйса.

— Қам вара эс? — Ҫын тӑрса ларнӑ.

— М-м... ун упӑшки эпӗ... Вӑл — ман арӑм...

— Ак ҫакна куратӑн-и? Мӗнлерех пек?—Ҫын хӑйӗн темӗн пысӑкӑш чышкине чӑмӑртаса Хӗлимун сӑмси патнелле илсе пынӑ. — Ҫак самантрах отбивной катлет пулса выртас килмест пулсан — тухса сирпӗн тавай. Шӳт тума юратмастӑп эпӗ. И малашне кунта килсе кӗме мар — ҫак ҫурт тӗлӗпе те иртсе ан ҫӳре! Понял?

Хӗлимун чӗлхесӗр пулса ларнӑ... Мӗнле тухса кайнӑ вӑл унтан — никам та пӗлмест, хӑй те астумасть ӑна. Тепрер эрнерен тин, нервӑсем кӑштах лӑпланнӑ пек пулсан, палланӑ ҫынсенчен пӗлнӗ вӑл: ҫав хаяр арҫын Малашкӑн малтанхи упӑшки пулнӑ иккен, такама хӗненӗшӗн таҫта икӗ ҫул хушши «юсанса» пурӑннӑ...

— Юрать-ха, вӑхӑтра тухса шӑваннӑ эпӗ, — тесе саваннӑ Хӗлимун, — атту пулсан айӑк шӑммисемсӗр юлаттӑмччӗ пуль...

...Ҫакӑн хыҫҫӑн Шуськов пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланнӑ. Йывӑр тапхӑр, тес пулать. Аран-аран хваттер тупкаланӑ вӑл. Укҫа-тенкӗ енчен хӗсӗкрех пулнӑ.

Çитменнине — сывлăхĕ начарланнă. Кунтан ыратать те унтан ыратать. Тек поликлиникăна утас пулать!

— Э-эх, пĕр-пĕр тухтăра качча илесчĕ! — хытă минтер çинче выртнă чух ĕмĕтленнĕ Хĕлимун. — Вăт пурнăç пулĕччĕ... Килтех сывататчĕ вăл мана!

Анчах та ку ĕмĕте пурнăçа кĕртме май килмен. Тухтăрĕсем питех калаçман унпа. Приема пырсан çарамаслантарса итленĕ, унтан-кунтан шаккаса, пускаласа пăхнă, рецепт çырса панă та — сывпул!

Çапах та Хĕлимун аптраман. Вăрçă инваличĕ пулнипе, ик-виçĕ хутчен те пĕр пус тӳлемесĕрех курортсене кайса килнĕ—Сочи, Ялта, Симеиз! Каллех вăкăр пек пулса кайнă вара, пичĕ-куçĕсем ялан услам çупа сĕрсе янă пек çутăлса тăнă.

Анчах укçа... ах, çав укçа тениех хупланă-çке Хĕлимун пурнăçне! Вăл укçа пирки хĕн курма пуçланă, мĕншĕн тесен ăна кĕтмен-туман çĕртенех пенсисĕр тăратса хăварнă. Юлашки хут комиссине чĕнтерсен, ырă пулас çуккине сиссе, Хĕлимун тем пекех чееленнĕ, комисси ларакан пӳлĕме ахлаткаласа, туя çине тайăнса, чĕрине тытса кĕнĕ, тухтăр трубкипе итлеме тăрсан сулăнса кайса ӳкмех тапратнă, анчах опытлă сынсене ăçтан улталатăн?

— Çитĕ сана симуляци туса пурăнма, — тенĕ ăна комисси председателĕ, — ĕçлес пулать, юлташ! Кун пек сывлăхпа грузчик пулма та юрать!..

Халь çеç ура çинче аран-аран тăнă Хĕлимун ку сăмахсем хыççăн тăрук урса кайнă:

— Как так апла?! Точнă чирлĕ вĕт эпĕ, ĕçлеме никак та пултараймастăп! Хам сывлăха сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп ĕнтĕ! Жалоба паратăп сирĕн çинчен, Мускава çитетĕп!

Ал айне лекнĕ пукана çавăнтах шарт! çавăрса çапнă вăл... анчах пурĕпĕрех пенсисĕр тăрса юлнă.

Тинех вара унăн пурнăç пирки çине тăрсах шухăшлама тивнĕ. Выçса вилмелле мар-ха вĕт! Малтанласа вăл каллех тупăшлă арăм пирки шухăшлакаланă та — усси пулман. Ухмахсем çукрах-çке ку чухне! Хулара вăл камне те лайăхах пĕлсе çитнĕ тата...

Ирĕксĕрех хайхискерĕн службăна кĕмелле пулнă. Темле питĕ кăткăс, вунвиçĕ сăмаха пĕрлештерсе тунă ятпа тăракан кантура вырнаçнă вăл. Кантурĕ мĕн тунине те лайăххăн пĕлмен: темскер хатĕрлет, темскер сутать пулмалла...

— Ответлă исполнитель пулатăн, — тенĕ ăна темшĕн яланах тарлакан сăмсаллă директор.

— Мĕнле ĕç пулать вара манăн? — ыйтнă Хĕлимун, «ответ» сăмахран кăштах шикленсе.

— Мĕн хушатăп — çавна тăватăн, — ăнлантарнă пуçлăх. — Анчах асту, малтанах каласа хуратăп: сехет механизмĕ пек ĕçлес пулать. Тата ытлашши каласма кирлĕ мар. Ăнлантăн-и? Тоттă çав. Лайăх ĕçлесен — хăвнах лайăх пулĕ.

Тытăннă Хĕлимун ĕçлеме.

— Хĕлле валли вутă турттармалла, — тенĕ çав кунах директор. — Анчах малтан кантура мар, ман хваттере пилĕк машин леç. Суйлама пĕл тата, çăкаăвăс мар, юманпа хыр пултăр.

— Есть! — салтакри пек ответ панă Хĕлимун.

Ирхине директор ăна тав тунă:

— Молодец, спасибо. Пултаратăн.

— Паян кантур валли турттарас-и ĕнтĕ? — ыйтнă çĕнĕ ответисполнитель.

— Çук-ха, паян ман çемьене дачăна леçсе килес пулать, ăна-кăна йăткалама пулăш эс унта.

— Есть!

Тепĕр кунне кĕтмен çĕртен çумăр çума тытăннă. Ирхине ирех пуçланă та, кастарнă та кастарнă...

— Паян вутă турттарасси пулмасть, Шуськов юлташ, — тенĕ директор, — анчах сана валли çавах та ĕç пур: ĕнер манăн арăм, васкани-мĕнĕпе, хăйĕн зонтикне манса хăварнă... Анчах çанталăкĕ — ав епле... Пĕтет вăл унта зонтиксĕр... Леçсе кил çавна. Çула май пĕр-икĕ корзинка сăра кайса лартас пулать унта.

Хĕлимун каллех дачăна вĕçтернĕ... Кантур машинĕпе калле-малле сакăрвун çухрăм тăвасси йывăр-им? Усси те пур: çул çинче пассажирсем лартса ĕнер те шоферпа иккĕшĕ аллăшар тенкĕ илнĕччĕ-ха...

Çынна кăлăхах тиркес мар: Хĕлимун лайăх ĕçленĕ. Нимрен ытла, вăл пуçлăха мĕн кирлĕ пулассине малтанах пĕлме пултарни аван пулнă. Сăмахран, çырласем пиçме пуçласан варени валли инçетри колхозран йӳнĕ хакпа темиçе ещĕк çырла илсе килме сĕннĕ вăл, кĕр енне — хăяр-купăста, кăмпа... Хĕл каçа закуска сахал кирлĕ пулать-им? Ăна малтанах хатĕрлесе хурас пулать вĕт!

Директорне хăйне кăна мар, унăн арăмне те кăмăла кайнă Хĕлимун. Пулчĕ-пулмарĕ, лешĕ:

— Филькăна калас, Филькăна хушас, вăл тупса килет! — тенĕ.

Лайăх ĕçленĕшĕн директор арăмĕ ăна малтанхи çур çул хушшинчех виçĕ хутчен преми партарнă. Хĕлимунĕ хăй теуншăн ырăпа тавăрма пĕлнĕ çав. Таçтан, хулара çук йышши хура кĕлеллĕ «капрон» чăлха тупса пынă, таçтан апельсин илсе пырса çитер-

нĕ. Директорăн кĕçĕн ачин менельникне тунă каç вара пĕтĕм хăнасене тĕлĕнтернĕ: ача валли сĕрме купăс калакан сысна тата сике-сике вĕрекен анчăк çури илсе пынă вăл...

— Ну, Филя! Ну, маттур та иккен эсĕ! — ниçта кайса кĕрейми мухтанă ăна директор арăмĕ.

Хĕлимун ирĕлсе кăна тăнă... Тата лайăхрах ăнланнă вăл: лайăх пурăнас тесен начальнике çеç мар, унăн арăмне те, унăн хуняма карчăкне те, кирлĕ пулсан çенĕкре шăмă кăшласа выртакан унăн ула йыттине те юрама тăрăшмалла...

...Чылай хушă юраса пурăннă вара вăл çапла, пĕр-ик çула яхăнах пулас. Кантурта директор хыççăн пĕрремĕш вырăн йышăнакан çын пулса тăнă. Унтакунта çӳренĕ чух, çывăхра пĕлекен çынсем пулмасан, пĕр хĕрелмесĕрех хăйне «директор заместителĕ», тенĕ. Канашлусем ирттернĕ чух яланах пуçлăхпа юнашар ларнă. Калаçасса хăй питех калаçман, çынсем каланисене çырса пынă çеç, анчах кам та пулин директора кăшт тиркесенех чăтса тăрайман вара, тӳрех сиксе тухнă:

— Данил Данилыч çинчен кун пек калама — намăса пĕлес пулать! Данил Данилыч вунвиçĕ çул ларать ку вырăнта, ун ĕçне халиччен те никам та хурламан, хурлама та пултараймасть! Ылттăн руководитель вăл! Анчах хăшпĕрисем...

Тытăннă вара, тытăннă ырлама! Тепĕр чух Данил Данилыча хăйне те аван мар пулса кайнă уншăн, çапах та Хĕлимуна чарман вăл, мĕншĕн тесен унăн хĕрӳллĕ сăмахĕ хыççăн тек калакансем пулман та, канашлу чиперех вĕçленнĕ.

Ытлашши калаçма юратакансене директорпа Хĕ-

лимун кайран лайăх тыткалама пĕлнĕ: пĕрине пĕр-пĕр сăлтав тупса выговор шартлаттарнă, теприне кĕçĕнрех вырăна куçарнă, виççĕмĕшне, «ĕçлеме пултараймасть» тесе, ĕçрен кăларса янă. Çавăнпа та кантурти пухусемпе канашлусем яланах питĕ лăпкă иртнĕ...

Анчах çав ылттăн руководитель пирки сасартăк хаçатра шутсăр çивĕч фельетон тухнă. Данил Данилыч тĕрлĕ майсемпе хысна укçине хăй çумне нумай чикнĕ иккен, кантур шучĕпе хăй валли хаклă шифоньерсем, дивансем, комодсем тутарса тултарнă, клуб валли тесе илнĕ пианинона та хăй патне кайса лартнă, кăçал туяннă «Победа» унăн арăмĕн «личнăй» машинĕ пулса тăнă, тем те пĕр! Хĕлимуна та аванах тивертсе илнĕ — подхалим, Данилов лакейĕ, наян, кантурти сăвăс, тесе пĕтернĕ... Фельетонне тата ахаль те мар, сăвăласа çырнă, тӳсмелле мар кулăшла ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ!

Данил Данилыч çавăнтах чирлесе ӳкнĕ. Хĕлимун та ĕçре ларайман, — вăл пырса кĕрсенех иртнĕ хĕлле кантурти комсомолкăсем çине тăрсах хутла вĕрентнĕ вата техничка Натали çав фельетона юриех сасăпа вулама тытăннă:

> ... Çав подхалим Хĕлимун
> Нихçан нимĕн ĕçлемен!
> Данилова юраса,
> Ана ялан ырласа,
> Шав пурăннă юрласа...

Пĕр эрне хушши пĕтĕм хула кулнă çав фельетона асăнса.

Унтан Данил Данилыча партирен кăларса суда панă, ун вырăнне çĕнĕ директор — нумай пулмасть

çартан таврăннă çамрăк та кăмăллă çын пырса кĕнĕ. Чăн малтан вăл кантурта ĕçлекенсен пухуне ирттернĕ; çав пухура çынсем Хĕлимуна шутсăр хытă çунтарнă... Ирхине вара çĕнĕ директор ăна чĕнсе илнĕ те:

— Ĕçрен тухма заявлени çыр, — тенĕ.

...Қаллех пурнăç çинчен шухăшламалла пулнă унăн... Запас укçа пур-ха та ĕнтĕ, пĕр çур çула çитмелле вăл, анчах кайран мĕнле? Хаçатра кун пек «чапа кăларнă» хыççăн нимĕнле начальник те хăй патне йышăнас çук... Пĕтес пулать вĕт!

Хĕлимун кĕсйинчи сехет вĕçĕмсĕр шакканă. Сехетсем, талăксем, эрнесем иртнĕ. Хĕлимун пуçĕ çинче капланса тăракан хура пĕлĕтсем çаплах сирĕлмен, пĕр пекех салху пулнă унăн сăн-пичĕ.

...Анчах та, хăвăрах пĕлетĕр, çанталăк ĕмĕр-ĕмĕр пĕрешкел тăмасть вĕт-ха, улшăнатех хăçан та пулин. Хĕлимуншăн та улшăнма пуçланă вăл. Ерипен, ерипен, майĕпе... Пĕлĕтсем сирĕлсех пынă, унтан хĕвел те пăхма пуçланă...

— Хĕвелĕ — «Çăлтăр» колхозри фермăсен пуçлăхĕ, Марине ятлă çав тери илемлĕ хĕр пулнă. (Унăн илемĕ çинчен эпĕ пĕртте илĕртсе каламастăп, ăна ялта та «Чипер Марине» тесе чĕннĕ.) Çав Марине хулана пĕр уйăхлăх курса вĕренме пынă та, Хĕлимун хваттерĕн хуçисем патĕнче чарăнса тăнă, — унăн аппĕ ку çынсемпе ĕлĕкренпех туслă пулнă-мĕн. Хĕлимун ăна пирвайхи хут курсанах ун çине куç хывнă... Юратсах пăрахнă, тесен те юрать. Хăй хĕрĕхелле сулăннă пулсан та, чĕри сивĕнмен-çке унăн!

Чăнах, хĕрĕ ытла та юратмалласкер пулнă çав. Сап-сар çӳçлĕ, пысăк сенкер куçлă, питçăмартисем çап-çавракка, кулнă чух вĕсем çинче хитре путăксем

пулса тăраççĕ, шап-шур шăлĕсем тип-тикĕс, пĕвĕпе вăтам, тăп-тăп, кăкрисем пысăк панулмисем пек мăкăрăлса тăраççĕ, ытармалла мар! Сарă хĕрсем чаас-часах кăшт хăюсăртарах, йăваш кăмăллăрах пулаççĕ, ют çынпа калаçнă чух кушран тӳррĕн пăхма хăймаççĕ, анчах та ку — çав тери çивĕч иккен, хуть чăвашла, хуть вырăсла калаçас пулсан та никама та парăнас çук, бритвăпа каснă пекех касса хурать...

— Ой, — тенĕ Хĕлимун, — ой, куна хам майлă çавăрасчĕ!

Хĕр çине наступлени пуçличчен вăл разведка тума шут тытнă, Марине килте çук чух ун çинчен хваттер хуçи арăмĕнчен ыйтса пĕлме тытăннă:

— Çак сирĕн хăна... Кам вăл? Хĕр-и, е арăм-и?

— Хĕр-çке, — тенĕ лешĕ.

— Миçе çула çитнĕ вара вăл? Ытла çамрăках мар пулĕ ĕнтĕ?

— Çулĕ пур та, хĕр пуççăнах çӳрет-ха.

— А ма качча каймасть? Илекен çук-им? Тен, пĕр-пĕр сиен е йăнăш пулнă унăн? — çине тăрсах тĕпчеме тытăннă Хĕлимун.

— Эсĕ ху — йăнăш! — татса хунă ăна хваттер хуçи. — Ун патне аллă çын та хăтана пынă пуль! Хăйваскамасть. Унăн каччине вăрçă чарăнас умĕн виç кун малтан вĕлернĕ те... çавна манаймасăр пурăнчĕ вăл. Тата вăхăчĕ те çук унăн — ялан ĕçре çунать. Вĕсен колхозĕн фермисенче тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх пин пуçран та иртнĕ тет те, ответ тыт-ха эс вĕсемшĕн! Çынни партейнăй... теприсем пек, ĕçе лăп-лап тăвакансĕр мар, тисчиплинăна хытă тытать.

Хĕлимун тутисене ват кушак пекех çулласа илнĕ те, Маринесен килйышĕ çинчен, вĕсем мĕнлерех пурăн-

ни ҫинчен ыйтса пӗлнӗ. Пурте кӑмӑла кайнӑ ӑна: Марине хальхи вӑхӑтра ашшӗпе амӑшӗн пӗртен-пӗр хӗрӗ пулни те, вӗсен пятистеннӑй пӳрт, лайӑх сад, тӗрлӗрен килти выльӑх-чӗрлӗх, вӗллесем пурри те, ялта вӗсене пурте хисеплени те... Ашшӗ колхозра ревизи комиссин председателӗ иккен. Хисепсӗр ҫынна ун пек ҫӗре суйламаҫҫӗ ӗнтӗ!

— Амӑшӗ мӗнле тата, вӗриҫӗлен пекки мар-и?— кулам пек туса ыйтнӑ Хӗлимун.

— Эс мӗн ытла пурне те пӗлесшӗн ҫак? — тӗлӗннӗ хваттер хуҫи. — Марине патне киле кайса кӗме шутламастӑн-и?

— Ҫу-ук, — вӑрттӑн кулса илнӗ Хӗлимун. — Ман пеккине пӑхать-и ҫавӑн пек чаплӑ хӗр...

— Пӑхмасть конешнӑ! — тенӗ хӗрарӑм, темшӗн хаярланма пуҫласа. — Пӑхма та кирлӗ мар. Ват сӑпса вӗт эсӗ! Хам пулсан та качча пырассӑм ҫук сана...

Хӗлимун чӗнмен, анчах унӑн пуҫ мимми ҫав тери хытӑ ӗҫлеме тытӑннӑ. Маринене ҫавӑрас та, унӑн ашшӗ-амӑшӗпе паллашас та, хама лайӑхрах кӑтартас та... вара... эх!

Малтан хӗрне хулана чӗннӗ пек тӑвас. Паллах, вӗсем пӗртен-пӗр хӗрне хӑйсенчен уйӑрасшӑн пулас ҫук. Ҫавӑнпа та: аплах пулсан, хамӑр патра пурӑнӑр эппин, теҫҫӗ... Эп кӑштах курнӑҫкалатӑп та — килӗшетӗп. Ик ҫул, виҫҫӗ иртет... Ну, ҫӑва патне, пиллӗкех иртсе ӗр! Ваттисем вилеҫҫӗ, вара эп сто процент хуҫа пулса юлатӑп!..

Ҫав кунах, каҫхине, вӑл Маринене кинона чӗннӗ. Кино хыҫҫӑн Атӑл хӗрринче чылай ҫӳренӗ вӗсем. Тепӗр каҫхине театрта пулнӑ, киле каллех васкамасӑр таврӑннӑ. Хӗлимун вара хӑй юррине юрлама тытӑннӑ:

эп çавăн пек, эп кун пек... Вăтăр сакăр çулхискер, çирĕм сакăр çулхи çын пулса тăнă. Çарта питĕ пысăк чинра пулнă иккен, темиçе орден та илнĕ вăл, анчах госпитальре выртнă чух курайман çынсем вăрланă вĕсене. Ку таранччен авланма вăхăт пулман, халь авлансан та юрать ĕнтĕ, анчах хуларисемпе çыхланас килмест...

Виççĕмĕш каçхине те час киле таврăнман Хĕлимунпа Марине.

Хваттер хуçи Киркка инке хăрасах ӳкнĕ: ку вата шуйттан хĕр пуçне чăнах çавăрса ан ятăр тата! Ирхине ирех Маринене пахчана чĕнсе тухнă та: «Хĕрĕм, хĕрĕ-ĕм! Эсĕ ху кампа çыхланнине пĕлетĕн-и?»—тенĕ хурлăхлă сасăпа. — «Пĕтерет вĕт вăл сана, пуçна çие-ет!..» Унтан Маринене хурлăхансем хушшинчи сак çине лартнă та, Хĕлимун çинчен пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа панă...

— Хĕрарăм мурĕ вĕт вăл, сăвăс пек этем! Асту эсĕ, асту-у!

Марине вăл каласа пĕтеричченех ним чĕнмесĕр итлесе ларнă, унтан вара йăл-л... кулса янă.

— Тавтапуç асăрхаттарнăшăн, анчах эс мана кăлăхах ухмах выранне хуратăн, Киркка инке! Мĕн, эп хам курмастăп-им? Вунçич çулхиех мар-ха, çынсене кăштах чухлакалатăп, — тенĕ вăл.

— Эппин-тĕк, ма çӳретĕн унпа?

— Интересшĕн.

— Мĕн интересĕ пултăр ун çумĕнче?

— Питĕ нумай! Çын мĕн тери икĕпитлĕ пулма пултарнине сăнатăп. Çĕлен пек авкаланать вĕт вăл. Пуçĕнче пĕр шухăш — çăварĕнче урăх сăмах, ăшчикки — пĕр майлă, сăнĕ — тепĕр тĕслĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Çынсене лайăхрах пĕлме. Манăн çĕр çинче нумай пурăнмалла-ха вĕт!

Хĕлимун çак калаçу çинчен нимĕн те пĕлмен, çавăнпа та наступленине вăйлатсах пынă. Марини хăй ун çинчен пĕтĕмпех пĕлнине пĕртте палăртман, унăн çуллă та илĕртӳллĕ сăмахĕсене ĕненме пуçланă пекех кăтартнă, çапах та хăйне качча пыма ӳкĕтлеме тытăнсан:

— Пĕлместĕп-ха, атте-аннепе калаçса пăхас пулать, тем шутлаççĕ вĕсем...— тесе пуçне пăркаланă çеç.

— О-о, ун пирки ан пăшăрхан эсĕ! Хам пырса калаçатăп та, рас анчах çавăратпăр вĕсене! — хăлаçланнă Хĕлимун. — Эсĕ ху килĕш кăна, чунăмçăм...— Унтан вăл лĕх-лĕх-лĕх кулса илнĕ: — Эпир малтан çырăнатпăр та, вĕсем вара пĕр сăмах та калаймаççĕ пире! Улталатпăр эпир вĕсене... чике тăршшĕ лартатпăр!

Çунатланса кайнă Хĕлимун хĕре ыталасшăн пулнă, анчах Маринен ăна çутăлтарса ярасси килнĕ...

Çакăн хыççăн пĕр-ик кунтан, курс вĕçленнĕ май, Марине киле тухса кайнă. Ăна Хĕлимун курмасăрах юлнă. Каçхине хваттере таврăнсан, вăл сĕтел çинче пĕчĕк кăна çыру курса вуланă:

«Сывă пул, сар каччă! Маншăн тунă расхутсемшĕн 50 тенкĕ хăваратăп. Вăл сана ытти хĕрсен пуçĕсене çавăрнă чух кирлĕ пулĕ. *М.*»

Хĕлимун урсах кайнă... Мăшкăл вĕт ку! Çав тери пысăк мăшкăл! Ну, тăхта эп сана, хамăн арăм тăвам кăна! Курăн ун чухне...

Маринене арăм тăвасси пирки вăл пĕртте иккĕленмен. Ялти хĕр, колхозница, ăна, Хĕлимуна тиркет пулать?!

Хĕлимун çав каçах Марине патне тăхăр страницăллă çыру çырнă. Виç кунтан, хирĕç ответ киличченех, вунпĕр страница кĕрлеттернĕ. Унтан вара кашни кун, кашни кун, хăш чух — кунне иккĕ! Маринене ылттăнпа та, кĕмĕлпе те, хĕвелпе те, уйăхпа та, чĕкеçпе те, саркайăкпа та танлаштарнă, ăна юратнипе хăйĕн чĕринчен Везувий вулканĕ пек хĕм сирпĕнни çинчен каланă (ăна вăл пĕрре кинора курнă-мĕн), хăш чух тата хăй çакăнса вилессипе те хăратса илнĕ.

Ответ пулман...

Вара вăл татăклă та хăюллă утăм тума шут тытнă:

— Килне каятăп! Пурпĕрех вĕсен пурлăхне хамăн куçпа курас пулать, тен, илĕртсе калаççĕ, улталаççĕ мана? Килĕ-çурчĕ чиперех пулсан, ашшĕ-амăшĕпе калаçатăп та... Вĕсен умĕнче кутăнланаймасть вăл!

Маринесен килĕнче çав вăхăтра акă мĕн пулса иртнĕ.

Почтальон кашни кунах тĕрлĕрен-тĕрлĕ — хĕрлĕ, кăвак, сарă, сенкер конвертсем пырса пама тытăнсан, амăшĕ тĕлĕнме пуçланă та, пĕррехинче хĕрĕнчен:

— Камсем çыраççĕ сан патна кун чухлех? — тесе ыйтнă.

— Курсра пĕрле вĕреннĕ хĕрсем... — куларах ответленĕ Марине.

— Хирĕç ма çырмастăн тата? Çырма мар, вуламастăн та курăнать, ĕнер сĕтел сунтăхĕнче сакăр çыру куртăм, пĕрине те уçман... Аван мар-иç апла?

— Вăхăт çук-ха... Ерçсен кашни кун вуншар çырма пуçлатăп акă, — каллех кулса илнĕ хĕрĕ.

Колхозри почтальонра çӳрекен хура та чееърех куçлă Натали, Марине патне пĕрешкел почеркпа çырнă çырусем йатса йăлăхма пуçласан, ультиматум лартнă:

— Кала луччă, кам мурĕ кашни кун уттарать мана сан патна? Атту-тăк пĕр çыру та илсе килместĕп урăх!

Ку каçаллапа, ерçнĕ вăхăтра, пулнă; Марине кулакулах Наталие хăйĕн хĕрӳллĕ корреспонденчĕ кам пулни çинчен ним пытармасăр каласа кăтартнă. Хĕрсем пӳртре хăйсем кăна, тесе шутланă та, Хĕлимун çырăвĕсен уйрăм сыпăкĕсене вула-вула каçса кайсах ахăлтатнă. Анчах пӳртре Марине ашшĕ пулнă-мĕн. Кăштах тĕлĕрсе илес тесе вăл тĕттĕм чăлана кĕрсе выртнă иккен, анчах хĕрсем тултан кĕрсе шавлăн калаçма тапратсанах вăраннă та, вĕсен калаçăвне пĕтĕмпех илтнĕ...

— Вăт, йытă... — шухăшланă старик, Хĕлимун çинчен ытларах та ытларах пĕлсе выртнă май. — Вăт прохвостă! — Пуринчен ытла, Хĕлимун ăна хăйне улталама шутлани тарăхтарса янă.—Вĕри çĕлен! Тĕл пулсан, кăтартăттăм эп сана пĕрре!..

Çапах та Маринене вăл нимĕн те каламан, хăй ăшĕнче ăна ырланă çеç.

... Темиçе кунтан çак Марине ашшĕн — ячĕпе каласан Савали Чаплашкинăн — тем ĕçпе Шупашкара каймалла пулнă. Каялла автобуспа таврăннă чух, вăл хитре кăвак костюм, шлепке, куçлăх тăхăннă, хул хушшине пысăк сар портфель хĕстернĕ çынна питĕ сăнаса пăхнă. Малтанах çав çын кондукторпа шавласа илнĕ: вăл лармалли вырăна лайăх шăлса тасатман

иккен, тата пружинĕ тухма пуçлана, брюкине хырма пултарать... Унтан, машина тапранса кайсанах, вăл хăй умĕнче ларакан икĕ çамрăк хĕрпе кирлĕ-кирлĕ мара пакăлтатма тытăннă: ăçтисем, ăçта каяççĕ, Шу пашкарта лайăх каччăсем курнă-и, çивĕтсенчи ку хăюсене ăçта илнĕ... Çавăнтах пĕр хĕрне ĕнсинчен кăтăкласа илме те пăхнă...

— Мĕнле вата якăлти ку? Мĕнле йăх-ях? — унран тĕлĕнсе йĕрĕннĕ Чаплашкин. — Тăрри шăтăк пулинех... — Е ытлашширех сыпнă? Пулать те вĕт йĕксĕк!

22-мĕш километр юпи тĕлĕнче автобус чарăннă.

— Мучикасси çулĕ! Камăн анса юлмалла? — кăшкăрнă кондуктор.

— Манăн! — тенĕ Марине ашшĕ. — Халех...

— Оп! Манăн та анас пулать! — виксе тăнă хайхи çул тăршшипех пакăлтатнă этем те. — Ну, сыв пулăр та пур пулăр! — хĕрсене шлепкипе сулса илнĕ вăл.— Шел, пит час уйрăлмалла пулчĕ!

Вулакансенчен пытарас мар: çак çын вăл — эпир паллана Хĕлимун Шуськов пулнă... Вăл Маринепе ĕç татма васканă...

— Эс ку енчисем-и, мучей? — ыйтнă вăл автобус çинчен аннă-анманах. — Мучикасси инçе-и кунтан?

— Инçе мар, вăрмантан тухсанах курăнать, — тенĕ Марине ашшĕ. Çав вăхăтрах хăй ăшĕнче: «Вăт, тупăнчĕ тата ман телее! Тытăнать пуль-ха каллех... усал чакак пек пакăлтатма», — тесе шухăшланă.

Вăл йăнăшман. Хĕлимун малтан вăрманти çул лапра пулнă пирки вăрçса пынă, пушмакне хĕрхеннĕ, куклене-куклене ăна курăкпа шăлса тасатнă, Европăри шоссесене мухтанă, унтан хăйне кирли çинчен ыйтма пуçланă...

— Ку енчисем пулсан, Мучикасси мӗнлерех ял иккенне пӗлетӗн пуль эсӗ?

— Пӗлкелетӗп, — тенӗ Чаплашкин, анчах хӑй шӑп ҫав ялсем пулни ҫинчен шарламан.

— Ничево-и вӑл ял? Пурӑнма пулать-и?

— Ҫынсем пурӑнаҫҫӗ, — тенӗ те старик, ун ҫине тинкеререх пӑхнӑ. — Сирӗн унта пурӑнмалла пулать-им?

— Пулать те пуль ҫав... — ассӑн сывласа илнӗ пек тунӑ Хӗлимун.

«Ку пирӗн пата янӑ ҫӗнӗ учитель е пӗр-пӗр выльӑх тухтӑрӗ пулмалла... Агрономах пулас ҫук, тусан-лапраран ытла пит хӑрать»... — шухӑшланӑ Савали.

— Тен, эсӗ унти ҫынсене те паллатӑн? — каллех тӗпчеме пуҫланӑ Хӗлимун.

— Кӑштах пӗлкелетӗп...

— Сӑмахран, Чаплашкин тенӗ ҫынна паллатӑн-и?

Савали чӗри ҫӑтӑр-р... пӗҫерсе кайнӑ. Ара... ара ку леш шуйттан, Марине патне куллен ҫыраканни мар пулӗ те? Тем тесен те ҫавӑ вӗт! Ахальтен ма ыйттӑр вӑл ман ҫинчен?.. Ну, юрӗ, юрӗ... Шарлар мар-ха, малалла мӗн пулӗ!

— Хӑш Чаплашкинӗ кирлӗ сире? Вӗсем виҫҫӗ те унта...

— Савали-и ҫав, Сантали-и... — кулса илнӗ Хӗлимун.

— А-а, Савали Ҫитӑрччӑ!.. Пӗлетӗп.

— Мӗнлерех мужик вӑл? Пурнӑҫ тытма пӗлекенскерех-и?

— Чиперех пурӑнать пек. Ял халӑхӗ умӗнче намӑсах курмасть...

— Кил-ҫурчӗ те чиперех-и?

— Тиркемеллех мар.

— Калăпăр, опись тăвас пулсан, миçе пин тăма пултарать?

— Пĕр 60—70-сем тăрать те пуль...

«Эсремет! Ав мĕне ĕмĕтленет вăл! — шăлĕсене шатăртаттарса илнĕ Чаплашкин. — Асту, сана валли хатĕрлесе хунă, кĕтсех тăр!»

Хĕлимун ăна-кăна сисмен те, малалла тĕпченĕ:

— Унăн хĕрĕ пур-и-ха çав?

— Пур, теççĕ...

— Чиперех-и? Ун-пек кун-пек сăмах çук-и ун çинчен? Тен, пăрахăçа тухна япала? Çамрăк мар-ха вĕт вăл? Тен, ачи те пур? Хальхи хĕрсем çавăн пек вĕт: рас! качча тухаççĕ те рас! каялла вĕçтерсе пыраççĕ. Пурнăç çине питĕ çăмăллăн пăхаççĕ!

— Хĕрсем çинчен илтсех кайман, анчах арçынсем хушшинче чăнах та час-часах тĕл пулаççĕ ун пекки-сем, — тенĕ Чаплашкин, Хĕлимун çине сиввĕн пăхса.

— Тавлашмастăп, арçынсем хушшинче те подле-цăсем пур! — килĕшнĕ Хĕлимун. Унтан татах ыйтнă:

— А унăн... ну, çав Савалин, кăмăлĕ вопше ниче-во-и тата? Тен, хыт-кукар вăл? Тен, пĕр çăмартана икĕ кун çиет? Ох, юратмастăп вара çавăн пеккисене!.. Э? Ун пек мар-и?

— Пĕлместĕп, хăйне курса калаç, — тенĕ Чаплаш-кин. — Çав вăхăтрах хăй малашне мĕн тăвасси çинчен шухăшланă...

Ял патне çитсен, вăл сасартак сулахаялла пăранса униче карти çуммипе утнă.

— Хăш тĕлерех пурăнать вăл, Чаплашкин? — кăш-кăрса ыйтнă Хĕлимун.

— Шыра, тупатӑн! — ун еннелле пӑхмасӑрах сас панӑ Марине ашшӗ.

— Вӑт нахал! Ҫынпа калаҫма та пӗлмест! — тутине кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртса илнӗ те Хӗлимун, ялалла кӗрсе кайнӑ.

Чаплашкинсем анат кукӑрта пурӑнаҫҫӗ-мӗн. Урамри ачасем ешӗл акацисем ӑшӗнчи тимӗр витнӗ ҫӗнӗ пысӑк пӳрт ҫине тӗллесе кӑтартсан, Хӗлимун пӗр йӑмра хыҫне тӑрса яланах хӑйпе илсе ҫӳрекен тӗкӗрӗ ҫине пӑхса илнӗ, галстукне, шлепкине тӳрлетнӗ, костюмне кӑшт-кашт шӑлкаланӑ та, пуҫне капмар ӑйӑр пек каҫӑртса, аналалла кайнӑ.

Икӗ минутран вӑл ҫав илемлӗ пӳрт умне ҫитсе чарӑннӑ. Крыльца ҫинче... кам пулӗ тетӗр эсир? хайхи автобус ҫулӗ ҫинчен пӗрле килнӗ старик тӑра панӑ! Аллисемпе пилӗкӗнчен тытса, урисене кӑшт сарарах пусса, темшӗн ҫав тери ҫиллессӗн пӑхса тӑнӑ вӑл.

— Эс... эс кунта ҫитнӗ те-ҫке? — тенӗ Хӗлимун, ӑна курнӑшӑн савӑннӑ пекрех пулса. — М-м... Чаплашкин килӗ ҫак-и-ха?

— Ҫакӑ. Мӗн тума кирлӗ вӑл сана? — сиввӗн ыйтнӑ Савали.

— Калаҫмалли пур, ятарласа ун патне килтӗм вӗт...

— Мӗн ҫинчен калаҫмалла? — сассине хытарнӑ старик.

— А вӑл... секрет, пурне те каласа пама пултарайместӑп, — куҫӗсене мӑч-мӑч тутарса илнӗ Хӗлимун, старик сӑнӗ хаярлансах пынине курса. — Манӑн Чаплашкинне хӑйне курмалла!

Вăл крыльца çинелле хăпарма тăнă, анчах Савали унăн çулне пӳлнĕ те:

— Эп Чаплашкин! — тенĕ.

— Ну-ну, шӳтлеме кирлĕ мар, мучей! — татах хăпарма пиженнĕ Шуськов. — Килте-и Чаплашкин?

— Қаланă сана, — Чаплашкин — эпĕ вăл! Анчах сана киле кĕртместĕп, санпа калаçмастăп та!

— М-мĕнле апла?

— Çаплах! Кĕртместĕп, мĕншĕн тесен эс камне тата мĕншĕн килнине витĕрех курса тăратăп!

— Эсс... Эсс... ӳсĕр пулмалла! Не имееш право ĕçпе килнĕ çынна чăрмантарса тăма!.. — хыттăнах кăшкăрнă та вара Хĕлимун, Савалие çаннинчен тытса крыльца çинчен туртса антарма пиженнĕ. Савали унран вăш кăна вĕçерĕнсе урипе шарт! тапнă:

— Қай кунтан, йĕксĕк! Атту акă...

Вăл хăмсарнă çеç, анчах Хĕлимун хăраса каялла сикнĕ те, темрен такăнса, пӳрт умĕнчи шĕвек пылчăк çине начлатнă. Шлепки пĕр çĕрелле, портфелĕ тепĕр çĕрелле вăркăннă. куçлăхĕ хăрах хăлхинчен çеç çакăнса юлнă.

— За што-о? — хăйне мăка çĕçĕпе пусма тытăннă пек çухăрса янă та Хĕлимун, Савали çинелле ыткăннă, анчах çав вăхăтра таçтан чупса тухнă пĕчĕкçеç йытă ăна уринчен кап! тутарнă. Ку вара ăна тата ытларах хăратса янă:

— А-аа! Йыттуна çырттаратăн-и? Ну, куншăн эп сана... — Вăл çĕрте выртакан вараланчăк патака илнĕ те, Чаплашкин çине хăмсарса чупнă. Анчах çапайман, мĕншĕн тесен Савали патакне туртса илсе çăтăр çатăр хуçса ывăтнă.

— Ан çулăх, темрен тем пулĕ!

— Суда паратăп! Не позволю мăшкăллама!.. Мĕн турăн эс ман костюма? Икĕ пин тăрать вăл! Пӳртне сутса тӳлеттеретĕп!

— Ырăпа калатăп: ан çулах.

Çав вăхăтра чӳречерен Марине сасси илтенне:

— Мĕн ахăрса çӳретĕн эс кунта, Шуськов? Мĕн кирлĕ сана?

Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе, Хĕлимун чĕлхине çыртсах лартнă.

— Эп... эп нимĕн те ахармастăп, — хашт та хашт сывласа илнĕ вăл, — эп сан патна ыр кăмăлпа килтĕм, анчах çак ват шуйттан...

— Шуйттан мар вăл, ман атте! Ан хăйнă пултăр ун пек калама! — татса хунă Марине. — Кам чĕннĕ сана кунта? Мĕн шăршласа çӳретĕн?

— Каларăм-çке, сан пата... Юрататап-çке эп сана!

— Малтанхи арăмусене кайса юрат, кунта санăн юратăву никама та кирлĕ мар, Шуськов юлташ! Ухмахсене тупрăм, тесе те ан шутла. Пĕлетпĕр сан йышшисене! — тарахса кайнă Марине.

Савали пӳрчĕ умĕнче шăв-шав пуçланнине илтсе, çак вăхăтра унтан та кунтан çынсем пухăнма пуçланă. Анран тухма тытăннă Хĕлимун ăна асăрхаман, вăл халь Маринепе ятлаçма тытăннă:

— Аха-а! Апла эс мана хулара улталаса пурăнтăн пулать? Во-он епле хĕр иккен эсĕ! Эп укçаллине сиссе ман çумма çулăхса пурăнтăн-пурăнтăн та, халь кун пек калаçатăн-и?! Хор-ро-шо-о!.. Апла пулсан, аçупа иксĕре те тыткалатăп сире. Суд умĕнче ответ тытатăр и... и...

Мăшкăлланă пекех, çав самантра хайхи пĕчĕкçеç хураçка ăна каллех уринчен пырса çыртнă...



— Ай! — тенĕ те Хĕлимун, пылчăк çине лач! ларнă. — Чорт! — Çилли килнипе вăл йытта портфелĕпе пенĕ...

Марине тӳсеймесĕр кулса янă. Курса тăракан çынсем те ахăлтатсах кулнă:

— Ай Хураçка! Пĕчĕк пуçĕпех ют çынна паллать!..

Халь çеç пырса тăнисем Савалирен васкасах ыйтнă:

— Мĕн пулчĕ? Мĕнле çын ку, ма шавлать?

— Пĕлместĕп, темлескер килчĕ те, вăйпах ман пата кĕрсе каясшăн, вăрçать те вăрçать, — тенĕ Савали. — Шалт аптрарăм...

— Документсене тĕрĕслес пулать унăнне, — канаш панă пĕри.

Хĕлимун ăна илтмен. Вăл хăйĕн сапаланса выртакан япалисене пуçтаркаланă та, каллех çухăрма тытăннă:

— Каçармастăп ку мăшкăлшăн! Халь кулатăр та-ха, кайран макăрмалла пулĕ! Эп камне пĕлместĕр-ха эсир! Эпĕ хам главсудра ĕçлетĕп, любойне хуптарма пултаратăп!..

— Суй, ытларах суй! — кăшкăрнă ăна хирĕç Марине. — Ниçта вырнаçаймасăр çапкаланса çӳренине пĕлетпĕр вĕт...

Хĕлимун çынсем патне чупса пынă та пĕр старике хулпуççинчен ярса тытнă:

— Эс мĕн ятлă? Кала! Сана свитетлĕ тăватăп.

— Йăван, — тенĕ старик, — анчах эпĕ эс кăшкăрнисĕр пуçне нимĕн те курмарăм-ха...

Хĕлимун çавăнтах теприне куçĕнчен тăраннă:

— Эс тата?

— Пăван, — тенĕ ку.

Пурте каллех лаха-лăха-лăха кулса яна...

— Кулатăр эппин? Пурте мана хирĕç? — ниçта кайса кĕреймесĕр, тата хытăрах кăшкăрса янă Хĕлимун. — Апла-тăк, пурне те айăплаттаратăп сире манран мăшкăлланăшăн! Пурин те суда каймалла пулать! Курăр акă! Эп сире... ялĕпех, пурне те! Эп вĕт...

Çав самантра халăх хушшинчен салтакла тумланнă илемлĕ те тĕреклĕ йĕкĕт тухса тăнă.

— Чим-ха, гражданин, ан çухăр! Кăтарт-ха паспортна, кам пулатăн эсĕ...

— Сана мĕн ĕç? — ун çине те кăшкăрса пăрахнă Хĕлимун. — Эс ху кам пулатăн? Мĕнле право пур мана тĕрĕслеме? Суратăп эп сан çине!

— Эп çак ял çынни, çавăнпа та хамăр ялта ашкăнакансене кирек хăçан та чарма пултаратăп. Кăтарт паспортна!

— Кăтартмастăп!

— Апла пулсан, сана милицие ăсатмалла пулать.

— Тĕрĕс, тĕрĕс! — шавласа кайнă çынсем. — Мĕн калаçса тăмалли пур унпа! Сĕтĕрĕнчĕк пулмалла вăл! Кам пĕлет, тен шăпийон?

— Тытмалла та, çапăпа хăваласа ямалла çеç!..

Хĕлимун хăрама пуçланă: халăх вĕт, тем тума та пултарать! Тытĕç те, çыхса пăрахсах илсе кайĕç, хăйнех айăплĕç...

— Эп хамах каятăп, анчах эсир мана асăнатăрха... Пуринчен ытла эсĕ, мăк сухал! — аллипе Савали çине тĕлленĕ вăл. — Санăн аскăн хĕрӳ те ырă каччăсене нумаях улталаса пурăнаймĕ!

Çак юлашки сăмахсене вăл ытла та асăрханмасăр персе янă... Хăйсен ялĕнчи чи лайăх та ĕçчен хĕре

çакан пек калани çынсене калама та çук çилентерсе, пăлхатса янă.

— Мĕ-ĕн?! Кам калать ун пек?

— Эсĕ ху çавăн йышши пулмалла!

— Намăссăр!

— Тухса вăркăн часрах пирĕн ялтан! Атту халех тытса лăскатпăр пĕрре! Хăвăн ятна та манса кайăн!

— Тавай, чăнах милицине кайса парас!—ун çинеллех пĕр харăс кĕпĕрленсе пыма пуçланă çынсем... Хĕлимун каялла чакса пынă-пынă та, тăрук çаврăнса, уй хапхи еннелле мулкач пек ыткăннă. Хыçалтан ши! ши! ши! шăхăрни çеç илтĕнсе тăнă..

... Менле шухăшсемпе утнă Хĕлимун уя тухсан, ăна эпир пĕлместпĕр. Анчах та вăл çав кас хулана кайман, тĕттĕм пулсан хăйĕн тахçан тăван пулнă ялне çитнĕ. Вунвиç çул пулман вăл кунта, анчах паян тем шĕн пырса кĕнĕ. Вăрă пек, пĕр-пĕччен, унăн-кунăн пăхкаласа утнă урамсем тăрăх... Яла икке уйăракан çырма урлă каçнă, хăйсен тăкăрлăкне пăрăннă та... килне тупайман. Кил вырăнне тупнă-ха вăл, анчах хăй çуралса ӳснĕ икĕ пĕчĕк чӳречеллĕ те улăм витнĕ пӳрт пулман унта. Пăру çулласа кайнă, тейĕн. Ун вырăнĕнче урамалла тăватă чӳречеллĕ, хитре крыльцаллă, çӳлĕ, вырăсла хапхаллă çурт ларнă.

Чылай хушă пăхса тăнă ун çине Хĕлимун. Мĕне пĕлтерет ку? Ăçта кайнă пирĕн пӳрт? Ирĕксĕрех, çав çурт умне хунарлă велосипедпа пырса чарăннă арçын ачаран ыйтмалла пулнă унăн:

— Кам пӳрчĕ ку?

— Пирĕн, — тенĕ ача.

— Ехрем арамӗ аҫта пуранать вара халь? — (Унӑн амӑшне ялта ҫапла чӗннӗ).

— Ҫакӑнтах.

— Мӗнле ҫакӑнтах? Эсӗ: ку пирӗн пӳрт, терӗн-ҫке? — темшӗн чӗтреме пуҫласа ыйтнӑ Хӗлимун.

— Пирӗн ҫав. Эпӗ унӑн мӑнукӗ те...

— Мӗнле мӑнукӗ?

— Ҫавӑн пеккиех. Ывӑлӗн ывӑлӗ эппин...

Хӗлимунпа хӑйӗн ывӑлӗ калаҫнӑ. Ҫаплах, тӗп-тӗрӗс, хӑй нихҫан та курман, алла тытса пӑхман, пӗр чӗлӗ ҫӑкӑр касса паман ывӑлӗ тӑнӑ унӑн умӗнче.

— Сана кам кирлӗччӗ? — ыйтнӑ ача.

— Никам та кирлӗ мар, — тенӗ Хӗлимун. — Иртсе каяттӑм та, ахалех ыйтрӑм.

Унтан ача килне кӗрсе кайнӑ, Хӗлимун юпа пек хытса тӑрса юлнӑ. Кайран таҫта ҫӗр выртнӑ вӑл, ӑна каллех пӗлместпӗр, анчах тепӗр кунне, хулана ҫитсенех, нимрен малтан хӑйне Мучикасси ҫынни Савали Чаплашкин тем те пӗр кӑтартса пӗтерни ҫинчен прокурор патне ҫырма ларнӑ.

... Прокурор помощникӗ П. П. Яснов чылай шухӑшласа ларнӑ хыҫҫӑн тата тепӗр хут хашш! сывласа илчӗ те, хӑйӗн умӗнче выртакан «дело» ҫине хулӑн хӗрлӗ кӑранташпа: «Таса ҫынсем ҫинчен элекленӗшӗн Ф. Е. Шуськова 161-мӗш статьяпа айӑплама̀лла тӑвас», тесе ҫырса хучӗ.

1954



# САХАР МУЧИ, ЧЕМПИОН



Нумай пулмасть эпĕ тахăш хаçатра хăш пĕр спорт командисем ăмăртусем умĕн çителĕксĕр хатĕрленни çинчен вуларăм та, пĕлтĕр пулнă пĕр истори аса килсе кайрĕ...

Пирĕн ялта Сахар мучи пур. Питĕ лайăх старик, ĕçчен, кăмăллă çын. Утарта хурт-хăмăр пăхса пурăнать. Утмăлалла çитнĕ пулсан та, кĕреçе сухалĕ кĕмĕл тĕслĕ пулма пуçланă пулин те—аптрамасть-ха, тĕреклĕ, пĕр шăлĕ те ӳкмен.

Çамрăкрах чух вăл икĕ алăпа икшер пăт кире пуканĕсене çĕклесе çăмăллăнах пуç çинче вылятатчĕ, анкартинчен килхушшинчи кĕлете сакăр пăт таякан миххе нимĕн те мар йăтса çитеретчĕ. Чупас тĕлĕшпе ăна хăваласа çитекен çын та пулман. Мĕн пĕчĕкренпех кĕтӳçĕ пулнă та вăл — шăна-пăван вăхăтĕнче ĕрĕхсе кайнă ĕнесем хыççăн хăваласа шутсăр шухăланса çитнĕ. Спортсменсем пек каласан, тренировка вăйлă пулнă çав унăн, çавăнпа та пĕр тапранса кайсан

арçури пекех чупатчĕ! Анчах, ялти çын, нихçан та ятарласа спортпа хăтланман вăл, ниепле те спортсмен теме çук ăна. Ни ăмăртусенче, ни кроссенче пулман вăл нихçан та, çапах та — мĕн тăвассу пур! — çав Сахар мучие кĕтмен-туман çĕртенех пĕр спорт ăмăртăвне хутшăнма тӳр килнĕ. Чип-чипер пурăннă çĕртех, шутламасăр-ĕмĕтленмесĕрех, чемпион ятне илчĕ. Тĕлĕнетĕр-и эсир? Тĕлĕнетĕр те пуль çав, эпир хамăр та хытă тĕлĕнтĕмĕр унран...

Ĕçĕ акă мĕнле пулнă.

Иртнĕ çулла Сахар мучие Шупашкара, колхозсенчи хурт-хăмăр ăстисен канашлăвне кайма хушнă. Ну, паллах, ку хирĕçсе тăман, кайнă. Ма каяс мар-ха? Çынсем мĕнле ĕçлени çинчен пĕлес, май пулсан — хамăн та каласа парас, тенĕ вăл... Карчăкне аш куклипĕçерттерсе кушиле чикнĕ те, станци еннелле тухса уттара панă.

Çул çӳресе курнă çын, вăл хулана чиперех çитнĕ, министерствăна пырса хăй камне, ăçтан килнине çыртарнă, унтан вара халăхпа пĕрле Колхозник çуртĕн пысăк залне кайса ларнă. Пĕр доклад итленĕ, иккĕ итленĕ. Унтан Сахар мучи пекех колхозсенчен пынă хурт-хăмăр ăстисем хăйсем тухса калама пуçланă. Кам мĕнле ĕçлет, мĕнле паха опытсем тунă...

— Манăн та тухса калас мар-ши хамăрăн утар çинчен? — шухăшланă пирĕн старик. — Епле пулсан та, юлашки çулсенче утара 250 вĕллене çитертĕмĕр вĕт-ха!

Çавăнтах записка çырать те — президиума парать. Тепĕр çур сехетрен председатель унăн хушаматне асăнса та илет.

— Халь агроном Овсова сӑмах паратпӑр, ҫитесси — Одноухов юлташ пулать, «Ҫиҫӗм» колхозран...

Одноухов — Сахарсен хушамачӗ вӑл, ялта вӗсене «Хӑрах хӑлха» тавращӗ, теҫҫӗ. Вӗсен аслашшӗне тахҫан ӗлӗкех, ӗҫкӗре ҫапӑҫма кӗрсе кайсан, хӑйӗн пуҫаниех пӗр хӑлхине ҫыртса татса илнӗ имӗш, ҫавӑнпа ҫав ят тухса кайнӑ та вӗсен. Салтака кайнӑ чух писарь «Хӑрах хӑлха» тенине вырӑсла куҫарса ҫырнӑ та, вара чӑн-чӑн хушамат пулса тӑнӑ.

... Хӑйӗн хушаматне илтсенех, Сахар йӑпӑр-япӑр блокнот кӑларса, мӗн ҫинчен каламаллине план туса хунӑ. Ну, калатӑп ӗнтӗ пӗрре, хамӑрӑн утарти ӳсӗмсемпе тӗлӗнтеретӗп, — тенӗ хӑй ӑшӗнче.

Анчах та ҫавӑн чухнех тухса калама тӳр килмен ӑна. Хайхи Овсов агроном каласа пӗтерсенех перерыв пулнӑ та, пурте апат ҫиме кайнӑ.

— Перерыв хыҫҫӑн чӑн малтан Одноухов юлташ тухса калаҫать, — асӑрхаттарнӑ председатель. Сахар кӑштах кӑмӑлсӑрланнӑ, анчах мӗн тӑвас тетӗн? Юрӗҫке эппин, ун чухне те калӑп, кая мар-ха, канашлу пӗтмен вӗт, текелесе лӑплантарнӑ вӑл хӑйне.

Апатне вӑл хырӑмӗ панк! пуличченех ҫисе лартнӑ — тӑватӑ тӗслӗ апат илнӗ. Ҫиелтен тата пӗр мӑн курка хӗрлӗ квас ӗҫнӗ те, ӑшӗ кансах кайнӑ унӑн.

Ҫаҫхи лару тепӗр ик сехетрен тин пуҫланассине кура, Сахар мучи васкаман, столовӑйран тухсан Атӑл хӗрринелле утнӑ. Ҫанталӑкӗ питӗ лайӑх пулнӑ, лӑпкӑ, хӗвелӗ ҫав тери хӗртнӗ. Атӑл хӗррине тухсан пирӗн старик йӑлӑм еннелле пӑхать те — унта ҫав тери халӑх нумайӑйине курах каять. Ҫанмалли кун пулнӑ вӑл. Пӗрисем хӗвел ҫинче хӗртӗнсе выртаҫҫӗ, теприсем шывра чӑмпӑлтатаҫҫӗ.

Çавсем çине пахса тана май, хайхи Сахаран та шыва кĕресси килсе каять...

— Çынсем кĕреççĕ, мана юрамасть-и-мĕн? — тет вăл. — Кĕрсе ишес-ха пĕрре, çан-çурăма кантарас! Вăхăт пур-ха...

Анчах çав вăхăтрах вăл хула çыннисем шыва ытла пĕтĕмпех çарамасланса мар, кĕске йĕмсемпе кĕнине аса илет. Арçынсемпе хĕрарăмсем пĕрле-çке-ха, аван мар...

— Аялти йĕмпе кĕмелле пулать-ши? — шухăшлать вăл. — Ача чухнехи пек, йĕмпĕççине тавăрса хăпартса лартас та... Çук, ун пек тусан та килĕшӳллех мар...

Унтан сасартăк хăйне хăй вăрçса илет:

— Э-э, ват тăмсай! Мĕн шухăшласа тăратăн çак эпĕ?! Укçасăр çын пек! Тимĕр пăрçа хыт-кукар пулман-ха ку таранччен! Лавккаран çав кĕске йĕме илсе ямалла кăна-иç! Кайран мăнуксене те юрать вăл...

Каланă — тунă. Сахар урамри киоскран труççик илет, унтан вăрăм пусма тăрăх чупса анать те, «двадцатка» çине ларса Атăл леш енне каçать, майлăрах вырăн тупса салтăнать, унтан шыв хĕрринерех пырса тăрса пăртак сивĕнет, вара шалалла кĕрсе каять.

Сасартăк, вăл хăй хыçĕнче музыка кĕрлесе кайнине илтет. Çавăнса пăхать те — перевоз пристанĕ енчен темĕн чухлĕ халăх музыка выляна май утса килнине курать.

Ну, мĕнех ĕнтĕ унщăн? Паллах, ку ăна нихăш енчен те интереслентерме пултарайман. Канмалли кун пулнă май пĕр-пĕр завод е учреждени коллективĕ уçăлса çӳреме каçнă пулĕ... Ăна мĕн ĕç? Тепĕр минутран вара вăл шывра кăвакал пекех хăтланма тытăнать: шыв çийĕпе те ишет, тĕпнелле те чăмать, месерле те çавăнса выртать...

Сахалтан та пĕр çур сехет киленнĕ вăл. Шывра нумай вăхăт пулнипе пӳрни вĕçĕсем те пĕркеленме пуçланă. Унтан: ну ĕнтĕ, часах лару та пуçланать пулĕ, как-никак манăн пуринчен малтан тухса каламалла, текелесе, йĕпе сухалне сăтăркаласа, çыран еннелле утнă. Хăйĕн кăмăлĕ çав вăхăтра калама та çук лайăх пулнă. Ну... нимĕн те кирлĕ мар ĕнтĕ!

— Вперед!—тесе кăшкăрнă сасартăк тахăшĕ сулахай енче. Унччен те пулман — Сахар мучи тĕлĕпе сахалтан та пĕр аллă çын пулĕ—шатах çарамас, пĕр труççиксемпе çеç чупса иртсе кайнă. Ним çине пăхмасăр ыткăнса пынă вĕсем. Мĕн мурĕ, кама хăвалаççĕ кусем?—тесе шухăшланă та Сахар, часрах çыраналла утнă. Тумланас та; каяс кунтан, тенĕ ĕнтĕ. Анчах та... мĕн тетĕр эсир? Унăн кĕпи-йĕмĕ пач! çухалнă. Ана тирпейлесе хунă чул та курăнман, ахăртнех кĕпи-йĕмĕпе пĕрлех илсе кайнă пулĕ... Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ ку? Чĕри сăрр... туса кайнă çакăн. Пĕтрĕ пуç! Çаклатса кайнă вĕт унăн кĕпи-йĕмне, библири Адам пекех, амăшĕ çуратса янă тумпа кăна тăратса хăварнă! Унталла пăхнă вăл, кунталла... Çук! Йĕри-тавра — тап-таса!

— Çавсем тунă!—çиçĕм пек шухăш вĕçсе илнĕ Сахар пуçĕнче.— Çав çарапакартан чупакансем шăхăртнă ман кĕпе-йĕме! Урăх никам та пулман кунта! Хăвалас часрах, тен çитсе туртса илĕп...

Нумай шухăшласа тăма вăхăт пулман унăн. Çийĕнчех хăваламасан, лешсем инçе кайма пултарна, шыра вара вĕсене! Сахар пĕррех тапса сикнĕ вĕсем хыççăн...

— Пурпĕр çитетĕп! Пурĕпĕр çăлатăп хамăн япаласене!..



9. Кулас килет.

Эх, чупнă вара, эх, ыткăннă! Сарлака сухалĕ ик еннелле вĕлкĕшсе кăна пынă! Пĕр çĕр метр пек кайсан, ăна шыв хĕрринчи çынсем асăрханă та, тем пулнă пекех кăшкăрма тапратнă:

— Э-эй, мучи кая юлнă!..

— Асту, сухална çухататăн!

— Нажимай, дедушка...

— Улю-лю-лю!

Анчах та Сахар мучи вĕсем «нажимай» темесĕрех пур вăйран чупнă. Унăн епле пулсан та малтан чупса иртекенсене çитсе кĕпе-йĕмне тупмалла пулнă-çке, унсăрăн вăл каçхи ларăва мар, хулана та пырса кĕме пултарайман. Çавăнпа та унăн ура тупанĕсем çĕре те перĕнмен, ура кĕллисем кăна купарчана тивсе пынă...

Тата тепĕр çĕр метр чупсан, вăл темле хавшак этеме хăваласа çитнĕ. Унăн аллинче нимĕн те çуккине кура, чарăнса тăмасăрах малалла чупнă. Çын, хашкана ернĕскер, Сахартан татăлса юлнă. Куна кура, таврари çынсем (халь ĕнтĕ вĕсем чупакансен икĕ енĕпе те стена пекех тăнă...) старике хавхалантарма тытăннă:

— Молодец, мучи!

— Яра пар, яра пар!..

— Кăтарт çамрăксене...

— Не сдавай-ай!..

Çынсем кăшкăрнă, ку чупнă. Хăшĕсем куласшăн та пулнă пулĕ ĕнтĕ унран, анчах ку хăнк та туман уншăн, пурĕпĕр малалла çатлаттарнă.

Акă ĕнтĕ, вăл пĕринчен, тепринчен иртнĕ, виççĕмĕшĕнчен, тăваттăмĕшĕнчен... вуннăмĕшĕнчен... Анчах унăн тумĕсем никам аллинче те курăнман, çавăнпа

та татах чупма тӳр килнĕ. Халăхĕ халь пĕр ун çине кăна пăхнă пек пулнă, тек кăшкăрашнă:

— Охо-хо, сухал!..

— Вĕçтер, вĕçте-ер!

— Чемпион пулатăн!..

Юлашкине ăнланман вăл, темле мурле сăмах пулнă вăл уншăн — халиччен те илтмен ара ăна... Çаплах чупнă. Малтан мала, малтан мала. Труççиклĕ çынсем пĕрин хыççăн тепри унран юлса пынă. Вăйĕ ăçтан тухнă пулĕ! Юлашкинчен Сахар курми те, илтми те пулса çитнĕ, çын мар — хускатса янă мотор, тейĕн. Анчах чупсан-чупсан вăл пат! чарăнса тăрать. Унран малта никам та çук иккен, пурте кайра... Пуринчен те иртсе кайнине хăй те асăрхаса юлайман вăл. Малта çула урлă карнă кĕрен хăю çеç курăннă.

Сахар чарăнса тăнине курсан, çынсем тата хытăрах шавлама тапратнă:

— Ма чарăнтăн? Чупсам, чуп часрах!..

— Вăхăтна çухататăн, мучи! Чуп малалла!

— Часрах, часра-ах!..

Сахар мучи пурĕпĕр вырăнтах тăнă. Лешсем кăшкăрнă, ку тăнă. Ăнланман вăл нимĕн те: ăçта чупмалла, мĕншĕн чупмалла? Пăхать—хайхи кая юлнисем ăна каллех хăваласа çитеççĕ. Çав вăхăтра халăх хушшинчен темле каччă сиксе тухать те, Сахар мучи патне сиксе пырса ăна аллинчен карт! туртать.

— Чуп часрах, ав çав хĕрлĕ хăю патне çитиччĕн чуп!—кăшкăрать вăл. Хăй те чупать, Сахара та чуптарать. Темиçе самантран вĕсем кĕрен хăюва татса иртсе каяççĕ.

Халăх ăнран тухса кайнă пек шавласа ярать.

Музыка кĕрлет. Сахар мучи патне пĕр харăсах вунă-вуннилĕк çын чупса пырса, унăн аллисене чăмăртаççĕ...

— Ну, матур, мучи!

— Кăтартрăн класс!

— Хăш командăран эсĕ? «Спартакран-и» е «Динаморан»?

— Тренировка нумай турăн-и?

Анчах Сахар мучи халĕ те нимĕн те ăнланмасть. Мĕншĕн мухтаççĕ ăна? Мĕншĕн матур вăл? Мĕнле «Спартак»? Мĕнле «Динамо»? Мĕн тума кирлĕ ăна вĕсем? Ăна хăйĕн кĕпи-йĕмĕ кирлĕ! Нимĕнле ответ та пама пĕлмест вăл. Унтан куçĕсене мăчлаттарса тăрать—тăрать те сасартăк:

— Тавайăр манăн тумтире! — тесе кăшкăрса пăрахать.

— Мĕнле тумтир?—тĕлĕнеççĕ лешсем.

— Мĕнле тумтир пултăр? Кĕпе, йĕм, атă, картуз...

Физкультурниксем пĕр-пĕрин çине кăн-кан пăхкаласа илеççĕ.

— Эс... Эс кам пулатăн вара?

— Епле кам? Колхозник эпĕ! «Çиçĕм» колхозран, Одноухов Захар, пчеловодсен канашлăвне килнĕскер! — хаяррăн каласа тăкать ку.

— Хăш командăшăн чупрăн вара эсĕ?

— Никамшăн та чупман эпĕ, хамăн кĕпе-йĕмшĕн чупрăм! Шыва кĕтĕм те, хам çăвăнса тухиччен такам мăйракалли мана çаппа-çарамас тăратса хăварнă! Эсир илсе тарнă пуль, тесе шутларăм. Çавăнпа чупрăм та сирĕн хыççăн. Пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна!..

Сахар сывлăш çаварса илнĕ те, йăвашраххăн, ӳкĕтленĕ пек калама тытăннă:

— Эсирех илтӗр пулсан, тархасшӑн тавӑрса парӑр... Манӑн кӗҫех заседани пуҫланать, манӑн унта сӑмах каламалла. Йӗмсӗр кайма пултараймастӑп вӗт эпӗ! Ҫылӑх сире ват ҫынтан кулма...

Сахар сӑмахӗсем физкультурниксене кӳрентерне пулмалла. Темиҫе самант хушши вӗсем пӗр-пӗрин ҫине ним чӗнмесӗр пӑхса тӑнӑ. Унтан пӗри, куҫлӑхлӑскер, тарӑннӑн сывласа янӑ та, старике хулпуҫҫинчен лӑпкаса илнӗ.

— Ну, нимех те мар, мучи! Паян пирӗн хулари физкультурниксен кросӗ—чупу ӑмӑртӑвӗ пулчӗ... Эсӗ ҫав ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑнтӑн... кросс чемпионӗ пулса тӑтӑн...

— А мӗн вӑл «чемпион» тени?—хӑрарах ыйтнӑ Сахар.

— Ну...мӗнле калас сана... Ну, пуринчен маттурри, пуринчен ҫивӗчреххи! Пирӗн обществӑра членра тӑман пирки эпир сана преми пама пултараймастпӑр, анчах та ҫак жетона ил эсӗ.

Ҫавӑнтах вӑл Сахара ҫап-ҫутӑ значок тыттарнӑ.

— Мӗн тӑвас ӗнтӗ ман унпа?—ыйтнӑ старик.— Мӗне кирлӗ вӑл мана?

— Ҫакса ҫӳре,—тенӗ куҫлӑхли.—Ун пек значоксене кӑкӑр умне тирсе ҫӳреҫҫӗ... Пурте эсӗ пирӗн кросӑн чемпионӗ пулнине пӗлсе тӑччӑр!

— Вара вӑл манӑн вӑрласа кайнӑ кӗпе-йӗм вырӑнне пултӑр-и?—тарӑхупа тӑрӑхласа илнӗ Сахар.

Лешӗ сӑмаха урӑх еннелле пӑрса яма тӑрӑшнӑ:

— Кунсӑр пуҫне, акӑ мӗн тата... (Вӑл каллех старике хулпуҫҫинчен лӑпкаса илнӗ). Малашне пирӗн ӑмӑртусене татах хутшӑнас пулать ӗнтӗ санӑн, мӗншӗн тесен эпир сана члена илетпӗр...

Тытăннă вара Сахар мучие агитацилеме... Анчах ун сăмахĕсем старик хăлхине те кĕмен, вăл çаплахха хăйĕн кĕпи-йĕмĕ çинчен шухăшласа, ытларан ытларах пăшăрханнă: мĕн тăвас пулать-ха халь! Укçи те йĕм кĕсйинчех кайнă вĕт-ха, атту мĕн те пулин илсе тăхăнма пулатчĕ хуть!..

Анчах çав вăхăтра... (хайхи, телей куçа курăнса килмест, тенĕ пек), вĕсем патне тепĕр çамрăк каччă пырса тăнă та, аллинчи япалисем çине кăтартса:

— Мучи, çаксем санăн мар-и?—тесе ыйтнă.

— Манăн! Ӑçтан пултăр тата?!—кăшкăрса янă Сахар. Чун кĕрсех кайнă ăна! — Ӑçтан тупрăн? Кам мурĕ вăрланă пулнă? Кăтарт-ха мана вăл çынна, эп тăн кӳртем ăна пĕрре...

— Никам та вăрламан,—тенĕ йĕкĕт пĕр пăлханмасăр, кросс пуçланас умĕн вĕсене çул çинчен илсе купальнăна пуçтарса хунă çеç...

Тек Сахар мучи нимĕн те калаçса тăман, часрах тумланнă та, хуланалла васканă.

...Колхоза таврăнсан, вăл пире çак мыскара çинчен каласа пачĕ те, варсене тытсах култăмăр çав! Пурте ăна «чемпион» тесе чĕнме пуçларĕç. Анчах старик куншăн пĕртте кăмăлсăр пулмарĕ, сарлака сухалне якаткаласа кулкаларĕ çеç. Кăçал, хамăр патра «Колхозник» спорт обществин организацине туса хурсан, комсомолецсем Сахар мучие председателе суйларĕç. Чиперех ĕçлет халь.

1939—1954.





# ПАТТĂР САЛТАК ÇĂПАЛА ИВАНĚ

ТĂВАТĂ ÇУЛ ХУШШИ ВĂРÇĂРА ПУЛНĂ ХЫÇÇĂН
ТĂВАН КИЛНЕ ТĚРĚС-ТĚКЕЛ ТАВРĂНСАН
ЯЛЙЫШСЕНЕ ПĚР ЮПТАРМАСĂР

## КАЛАСА ПАНИСЕМ

# САХВИНЕПЕ „МЕССЕРШМИТТ“

Хăварах пĕлетĕр вĕт, тăвансем, юптарас йăла пирĕн йăхра çук вăл. Эпĕ хам та ни суякан, ни мухтанакан çын мар, çавăнпа та сире пĕтĕмпех тĕп-тĕрĕссине каласа паратăп...

Мĕнех мухтанас ĕнтĕ—манăн çарти служба ытла ăнăçлах пуçланмарĕ, ун вырăнне кӳренмеллисем ытларах пулчĕç... Акă, халь эсир манăн кăкăрăм çинче икĕ орден куратăр, медальсем те шăкăриех авă. Анчах та малтанхи вăхăтра эпĕ орден илмелле пуласса шанманччĕ çав. Шутламан та ун пирки, мĕншĕн тесен шутлама майĕ те пулман манăн. Ăçтан шутлатăн-ха? Ордена ăна пĕр-пĕр паттăрла ĕç тунăшăн параççĕ-çке-ха!.. Ну, калăпăр, эсĕ атака вăхăтĕнче тăшман траншейине никамран малтан сиксе кĕрсе темиçе фашиста леш тĕнчене ăсатнă е, хăвăн çинелле ĕрĕхсе пыракан «тигра» ПТУ пăшалĕпе çамкинчен шаплаттарса, ăна спичка коробки пекех çунтарса янă, е тата çавăн пекки мĕн те пулин тунă... А эпĕ малтанхи вăхăтра ни ăна, ни кăна туман, тата — тĕ-

рĕссипех калас пулать—тума та пултарайман, мĕншĕн тесен, эпĕ стрелок та, противотанкист та, никам та пулман, манăн специальность — повар пулнă...

Çапла çав, повар! Пин те çичçĕр çитмĕл çиччĕмĕш полкри иккĕмĕш стрелковăй рота поварĕ. Хама та мана Çăпала Иванĕ теççĕ вĕт-ха, мĕншĕн тесен, эпĕ мĕн ачаранпах кухньăра çапăçса пурăннă: паранкă шуратнă та—купăста туранă, аш вакланă та—лапшу çăрнă. Эпĕ вăрçăччен районри чайнăйра повар пулса пурăннине пĕлсен, фронтра та мана çав кичем ĕçех хушрĕç...

Эпир — çĕнĕ пополнени ĕнтĕ — фронтра çапăçакан полка çитсессĕнех, старшина ман юлташсене пурне те вĕр-çĕнĕ автоматсем туянтарчĕ, гранатăсем, патронсем пачĕ, а мана... мана темĕн пысăкăш çăпала тыттарчĕ — яп-яка авăрлă пăхăр çăпала! Ме сана, терĕ, эс çакăнпа çапăç, терĕ. Паллах ĕнтĕ, стройра таракан пĕтĕм рота ахăлтатса кулса ячĕ, хам эпĕ кĕрхи помидор пекех хĕрелсе кайрăм, çамка çине пăрça пек тар тапса тухрĕ, чĕлхе çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ манăн... Шутласаттăм пĕрре çав çăпалана пĕтĕм строй умĕнчех çырманалла вăрас тесе, анчах çарти дисциплинăна пăсма юраманнине вăхăтра аса илтĕм те— тивес мар, терĕм. Атя, мĕн хушаççĕ, çавна тăвас!

Ну, юрĕ... Тытăнтăм ĕçлеме. Тепĕр тесен, фронтра яшка пĕçерни те боевой ĕçех вĕт-ха, çавăнпа та чунтанах тăрăшрăм: епле пулсан та юлташсене лайăхрах тăрантарас, фашистсене шаккама вĕсен вăй ытларах пултăр, терĕм. Тен, вăхăчĕ çитсен, мана та тав тăвĕç, манăн та савăнмалли кун çитĕ-ха, тесе шутлакалаттăм хам ăспа, кăштах ерçнĕ вăхăтсенче.

Çук вĕт! Савăнмалли вырăнне манăн тăтăшах тарăхмалли те кӳренмелли çеç тупăнса пыратчĕ. Ну... Пĕррехинче манăн чип-чипер пиçсе çитнĕ, çулласа лартнă хуратул пăттине — пăтти хуран тулличчĕ! — таçтан мурĕнчен пĕр ухмах снаряд пырса лексе сывлăшалла сирпĕтни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Тепринче тата, вăрман хушшипе малти позицисем еннелле кайнă чух, асар-писер бомбежка тапранчĕ те, манăн кухньăна туртса пыракан ула кĕсрене вĕлерсе пăрахрĕç. Кĕсри ça-ав тери ăслăччĕ, апат юлашкийĕсене пăру пекех çиетчĕ... Питĕ шалккă пулчĕ. Шӳрпене боецсем патне вăхăтра çитерейменрĕм те, капитан мана уншăн çур сехет хушши тăн кĕртрĕ...

Анчах ку тата нимех те мар-ха. Вăрçăра тĕрлĕренех пулать унта, хăвăрах пĕлетĕр.

Пуринчен ытла эпĕ виççĕмĕш рота поварне, Вася Котлеткина, медаль пани çинчен илтсен хуйха ӳкрĕм. Ман пек телейсĕр çын тĕнчере урăх çук та пулĕ, терĕм хама хам... Малти позицисенче çапăçакансем медаль мар — темиçешер орден илсен те тĕлĕнмелли çук, ăна тивĕçлĕ вĕсем, анчах та ку... ку вĕт ман пекех повар! Ман пекех паранкă шуратса, концентрат пăтти пĕçерсе пурăнать! Хăшпĕр енчен илсен, вăл манран каярах та тăрать, темелле. Сăмахран каласан, вăл тĕрлĕ йышши «тефтелисене», «отбивнойсене», «беф-строгановсене» — кутăн çаксан та хатĕрлеме пĕлмест. Анчах хăй çапах та медаль илнĕ — «За боевые заслуги»... А мĕн заслуги пулнă тетĕр унăн? Пĕррехинче передовойĕнчен çурăм хыçне пушă термос çакса таврăнать-мĕн те, вĕт вăрманлă çырма урлă каçнă чух пĕр тĕмĕ айĕнче икĕ фриц йăпшăнса ларнине курах кайнă çак. Ну... тепĕр тыловик пул-

сан хăраса ӳкме пултарнă конешнă, мĕншĕн тесен фрицĕсем иккĕн, ку — пĕччен пулнă, анчах та Вася çухалса кайман. Карабинне йăпăр-япăр «на-перевес» тытнă та, çав фрицсем патнерех йăпшăнса пырса, ухмаха ернĕ пек кăшкăрса янă:

— Руки вверх! Хенде хох!..

Лешсем вара, ниçталла та тарса ӳкес çуккине курса, кĕрхи вĕрене çулçисем пек чĕтресе, аллисене пĕлĕтелле çĕкленĕ те—«Гитлер капут, Гитлер капут... плен, плен...» — тесе мăкăртатма тытăннă.

Нимĕçсем хăйне нимех те тăваяс çуккине туйса, пирĕн Вася татах паттăрланса кайнă.

— Вставай! Снимай штаны!—тесе кăшкăрнă вăл.

Паллах, фрицсем вăл мĕн хушнине ăнланман, вара Вася вĕсенчен пĕрине ĕнсинчен тытса ура çине тăратнă та, унăн йĕмне вĕçертсе чĕркуççи таранах антарса лартнă. Ăна курса, тепри хăех çавăн пек тунă.

Ăсне çитернĕ вара хăй, шельмăскер! Фрицĕсем çул çинче таçталла тарасран тунă вăл çавăн пек, хăйсен йĕмĕсемпех тăлласа лартнă вĕсене... Ну, вара иккĕшне те батальон штабне хăваласа пынă та, тепĕр эрнерен полк командирĕ ăна шăнкăрт кăна медаль тыттарнă! Леш фрицĕсем пирĕн командованине пит те кирлĕ сведенисем пĕлтернĕ, тет те, çавăншăн ĕнтĕ...

Мĕн тăвас тетĕн — телей!

Çакăн çинчен пĕлсен, тупата туршăн, темиçе кун хушши темле тĕтре ăшĕнче çӳренĕ пек çӳрерĕм эпĕ. Ма-ха çав телейĕн ман тĕле пулмалла пулман? Эпĕ те передовойне каятăп-çке, эпĕ те çав çулпах çӳретĕп! Тĕмĕ айĕнче çавнашкал тăнсăр фрицсем ларнине



курсан, эп вĕсене хӳтерсе килме пĕлместĕмччĕ-и? Йĕмĕсене антарса мар, эп вĕсен аллисене каялла ҫыхса, мăйĕсенчен кантрапа кăкарса сĕтĕрсе килнĕ пулăттăм! Ҫук ҫав, телей ҫуках манăн, терĕм кăна хама хам...

Ҫакăн хыҫҫăн вăхăт нумаях та иртмерĕ—ман пуҫ ҫине тепĕр хурлăх татăлса анчĕ. Пачах та кĕтмен ҫĕртен, ҫуллахи уяр кун юр ҫума тытăннă пекех пулчĕ вăл. Темĕн чухлĕ асап кӳчĕ мана...

Ҫуллахи наступлени пуҫланас умĕн пĕр виҫĕ эрне малтан пирĕн ротăна ҫĕнĕ санитарка ячĕҫ. Тĕлĕнсе хытса каймалла, ҫав тери хитре тутар хĕрĕччĕ вăл—Сахвине ятлăскер. Пĕвĕпе хăй пысăках та мар, анчах калама ҫук илемлĕ, тăп-тăп станлăскер. Ну, сăнĕ-пуҫĕ вара... ун пек сăн-пуҫ, тупата, нихҫан та курман эпĕ! Питҫăмартисем панулми пек, тутисем пиҫнĕ хăмла ҫырли тĕслĕ, куҫĕсем—шăп та шай хура ҫĕмĕрт, ҫунса кăна тăраҫҫĕ: ҫын ҫине пĕрре пăхсанах ҫунтарса, кĕллентерсе яма пултараҫҫĕ. Мана та вĕсем малтанхи хут курсанах ҫавăн пек ҫунтарса ячĕҫ...

Ахальтен мар ҫав тепĕр чух: чĕрене приказ пама ҫук, теҫҫĕ. Чăнах иккен вăл. Ну, хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха эсир: таврара кунĕн-ҫĕрĕн вăрҫă кĕрлет, унта та кунта минăсемпе снарядсем ҫурăлаҫҫĕ, тул ҫутăлнă вăхăтран пуҫласа тĕттĕм пулса ларичченех пĕлĕтре ҫăханла «юнкерссем» явăнса ҫӳреҫҫĕ — пуҫ ҫине пĕр-пĕр йывăр бомба татăлса анасса кĕтсех тăр, пĕр сăмахпа—вилĕм сан хыҫҫăн йĕрлесех ҫӳрет, а санăн чĕрӳ ҫав вăхăтрах кама та пулин юратса пăрахать! Ытахальтен мар тата, пирĕн ротнăй писарь калашле—шаля-валя мар, чăннипе, пĕтĕм ăс-тăна пăтратса ямалла, чуна вырăнтан хускатмалла юрат-

са лартать!.. Мĕн тăвас тетĕн? Мĕнпе чаратăн ăна, мĕнле взыскани хурăттăн ун çине? Тӳррипех калатăп — нимĕн те тăваймастăн. Хамăн хурлăхлă опыта шута илсе калатăп эп сире куна, мĕншĕн тесен манăн чĕре çавăн пек туса хучĕ те — нимĕнпе те чараймарăм эп ăна.

Кĕскен каласан, ман чĕре çав Сахвине пирки вутçулăмпах çунма тапратрĕ. Ниçта кайса кĕрейместĕп—унăн сăнĕ кăнтăрла та, каç та, хуран çунă чух та, боецсем валли передовойне апат леçме хырăмпа шуса кайнă чухне те куç умĕнчех тăрать. Унăн шăпчăк юрри евĕрлĕ сасси те хăлхаран тухма пĕлмест. Ĕмĕрте те пулманччĕ манăн ун пекки! Хайхи, пирвайхи юрату тени тапранчĕ пулмалла ĕнтĕ...

Ĕçре те кансĕрлеме пуçларĕ мана вăл: пĕринче, ытлашши шухăша кайнипе, пĕр хуран пăтта çунтарса ятăм, тепринче купăста яшкине çăвара сыпмалла мар тăварласа лартрăм. Иккĕшинче те мана старшинаран питĕ селĕм лекрĕ конешнă...

Пĕр кун иртет çапла, эрне те иртет... Манăн юрату вăйланнăçемĕн вăйланса, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырать,— ăна ĕнтĕ халь тин нимĕнле вăй та чарас çук, пушар насосĕнчен шывпа сапсан та сивĕтес çук...

Анчах хам никама та нимĕн те шарламастăпха. Кама калатăн? Çынсем кулма тытăнасран та хăрушă... Мĕн калĕç вĕсем кун çинчен пĕлсен?

— Ха! Повар хĕре юратса пăрахнă! Поварăн чĕри яшка пек вĕрет! Ха-ха-ха!..

Сахвинене хăйне те каламастăп, хăратăп: вăл хам юратни çинчен каланине хирĕç хаяррăн кăна лаплаттарса хурсан—мĕн тăвас? Çĕр тĕпнех анса каймалла вара!.. Тӳсес пулать ĕнтĕ майлăрах самант çаврăнса

çитиччен, тетĕп. Çав вăхăтрах чĕре иккĕленсе те илет: ман çине вăл нихçан та çаврăнса пăхас çук пуль çав, ун пек хитре хĕр валли лейтенантсем те, темиçешер орденлисем те тупăнма пултараççĕ... А эпĕ кам? Эпĕ пĕтĕмпе те ротнăй повар кăна, Çăпала Иванĕ, çитменнине манăн кăкăрăм та çап-çара, орден мар—пĕрпĕр значок та пулин çук вĕт...

Çапах та, шанчăка çухатас килмест: кам пĕлет, тен, унăн кăмăлĕ ытлашши хаярах та мар пулĕ, тен, ăна чиперех хама майлă çавăрма пулĕ? Майне, меслетне пĕлес пулать кăна... Анчах наступление мĕнрен, еплерех пуçлас-ши?

Шухăшларăм-шухăшларăм та—тавай, куна тутлăрах çитерме тытăнас, эп хăйне юратни çавăнтан палăрма пуçлатăр, терĕм.

Тытăнтăм вара!

Как Сахвине ман кухньăна котелок çĕклесе пырать — эп ăна йăпăр-япăр, черетсĕр-мĕнсĕрех ярса паратăп. Ыттисене панă пек-и тата? Асту! Çăпалана хуран тĕпнелле аври курăнми пуличчен чиксе яратăп та, чи çăрине ăсса кăларатăп, çара какай! Ăна котелок ăшнелле тӳнтерсен, çăпала хĕррипе шӳрпе çинче çиелтен ярăнса тăракан çăва ăсса илсе ярса паратăп. Ме, çи, çи те—эпĕ хăвна епле савнине сис, тетĕп хамăн ăшăмра.

Анчах... ой, çав «анчах» сăмаха нихçан та каламăттăм!

Тăрăшни пустуях пулчĕ вĕт, ахалех сая кайрĕ!

Пĕрре ярса патăм çавăн пек, тепре ярса патăм,— чиперех çирĕ манăн савнă хĕр,—анчах виççĕмĕшĕнче скандал турĕ-хучĕ çав! Хăйне котелок тулли какай. çиелтен сап-сар çу ярса парсаттăм кăна, вăл: эсĕ,

прохвост, мĕн тăватăн, кам хушрĕ сана кун пек хăтланма?—терĕ. Малтанах ăнланаймарăм эпĕ, вăл мана мар, кама та пулин урăххине вăрçнă пек туйăнчĕ, анчах та котелокне ман сăмса патне илсе пырса хаяррăн силлесен — чухларăм вара...

— Эсĕ мĕншĕн мана ыттисенчен раснах çитерме тăрăшатăн? Ытти боецсенчен мĕнрен уйрăм эпĕ? Мĕншĕн эсĕ мана боецсен тӳпине катса паратăн?— тесе кăшкăрса тăкрĕ çак мана. Хĕрсе кайсах, çиленсех кăшкăрать!—Асту, рота командирне пĕлтеретĕп кун çинчен, тыткалĕ вăл сана куншăн... Эккей, тупăннă фокусник!—тет...

Алăри çăпала шăнкăрт! тухса ӳкрĕ манăн...

Пыр та калаç эс унпа, э? Хăйне савнипе эп ăна пĕтĕм чунтан ыр тăвасшăнччĕ, а вăл уншăн... пăскăртма тытăнчĕ мана, рота командирне калассипе хăратма тапратрĕ. Вот вĕт тамаша! Пулать те этем çĕр çинче...

Ну ёнтĕ, хăвăрах чухламалла, кун хыççăн манăн чĕрери пĕтĕм шанчăк пĕрхĕнсе тухса кайрĕ. Мĕн юратăвĕ пулма пултартăр ёнтĕ çавăн хыççăн?

Шăла çыртрăм та нимĕн те чĕнмерĕм урăх.

— Çил-тăманлă кун çуратнă пулĕ мана анне, çавăнпа телей çук пуль манăн,—терĕм кăна.

...Анчах йăнăшнă иккен эпĕ. Çавăн пек хурлăхлă вывод тума ытлашши васканă. Ытлашшиех телейсĕр çын пулман-мĕн эпĕ, тупата.

Телей куçа куранса килмест, теççĕ-çке. Тĕрĕс каланă çавна. Аслă çын пулнă çавна калаканни. Манăн телей те ăнсăртран, пачах та кĕтмен çĕртен йăтăнса тухрĕ. Тĕлĕнсе каймалла!

Акă епле пулчĕ вăл...

Пĕрре, август уйăхĕн вĕçĕнче, пирĕн участокра наступленилле çапăçусем пуçлансан виççĕмĕш кунĕнче, эпĕ, яланхи пекех, малти линири салтаксене апат çитерме кайсаттăм. Ну, окопсене чиперех çитрĕм ĕнтĕ, пурне те пĕрер черкке эрех ĕçтертĕм, какай яшки çитертĕм, унтан термоса çурăм çине майласа çакрăм та каялла кайма тухрăм. Пульăсем ман тавра сăпсасем пек сăрлатаççĕ, утма мар—пуçа çĕклемелли те çук.

Пĕр километр пек хырăмпа шуса кайсан, эп обстрел айĕнчен тухрăм та чиперех тăрса утрăм. Хăрамалли нимĕн те çукчĕ халь, унта-кунта снарядсемпе минăсем çеç ӳккелетчĕç...

Пыратăп ĕнтĕ утса, унталла-кунталла пăхкалатăп. Тип-тикĕс хире снарядсемпе бомбăсем сыснасем пекех чавса пĕтернĕ—кашни темиçе утăмрах воронка, шăтăк та путăк тĕл пулать... Çапăçăвĕсем пит вăйлă пулнăччĕ çав ун чух, пирĕннисем фашистсене калама çук хытă тӳнккерĕç!

Сасартăк, эпĕ çав уй варринче хама хушаматпа чĕннине илтех кайрăм:

— Черпаков! Черпаков!

Тĕлĕннипе тăпах чарăнса тăтăм та йĕри-тавралла пăха-пăха илтĕм... Никамах та курăнмарĕ. Мĕн ку, туйăнчĕ-ши мана?—тетĕп. Унччен те пулмарĕ, хайхи сасă каллех илтĕнчĕ:

— Черпаков!..

Халĕ уççăнах уйăрса илтĕм: хĕрарăм сасси. Анчах та кам, хăш енчен чĕнет—ниепле уйăраймастăп...

— Кунта! Кунта кил! Часрах!..—тата тепĕр хут кăшкăрчĕ мана куçа курăнман çын. Эп ăна шырама тытăнтăм, куçа чарса пăрахсах тавралăха ухтаратăп.

Ак тамаша! Пĕр воронкăран Сахвине пуçĕ курăнсах кайрĕ. Чунтан мана кăчăк туртать—кил, кил, тет...

Чĕререн вĕри шывпа сапнă пекех туйăнса кайрĕ. Пит-куç та пĕçерсе илчĕ, çурăм тирĕ те темшĕн сăр-сăр-сăр-сăр... турĕ. Шуткă-и-мĕн: Сахвине мана хăй чĕнет! Эп ăна тинех кирлĕ пулнă!

Тăруках çунатсем шăтрĕç пулас манăн—вăшт кăна ыткăнса çитрĕм ун патне. Пăхатăп—тарăн воронка тĕпĕнче икĕ аманнă салтак выртаççĕ, вĕсем патĕнче Сахвине тăрмашать...

— Ах, сана курни питĕ аван пулчĕ-ха ку!—терĕ вăл, ман çине шăтарас пек пăхса.—Вĕсем иккĕн, пĕри те утаймаççĕ, эп—пĕччен, ниепле те илсе çитерес çук вĕсене. Пĕрине санăн çĕклесе пымалла пулать... Ăнлантăн-и?

— Ăнланатăп,—терĕм ăна хирĕç,—саншăн пулсан эпĕ тем тума та хатĕр, эс кăна мана ним выртăнне те хумастăн, калаçасшăн та мар манпа...

— Ухмах эсĕ!—лаплаттарса хучĕ çак мана, ыра сăмах калас вырăнне.—Маншăн мар куна, аманнисен пурнăçне çăласшăн тăвас пулать!

Каллех вырăнлă пулмарĕ ман сăмах. Чип-чиперех, ним сăлтавсăрах ухмах ятне илтрĕм. Хăй çавăнтах манпа во-всю командовать тума тытăнчĕ:

— Çак плащ-палаткăна часрах сарса хур! Лайăххах сар! Ку салтакне пуçĕнчен тыт! Хуллентерех! Купăста пуçĕ мар вĕт вăл, этем пуçĕ! Вăрт-вартах çаврăнкала, упа пек ан пул! Кай, ăнăçсăр, санăн аллусене йывăçран тунă пуль!

Пĕтерет!

Хама çакăн пек хăтăрнă пирки аптрасах ӳкрĕм,

ниепле те вăл хушнă пек тăваймастăп. Уншăн вăл мана тата хытăрах хăтăрать...

Мĕн пулса çитетчĕ—пĕлместĕп, анчах çав вăхăтра пирĕн пуç çийĕпе сасартăк фашистсен «мессершмичĕ» çил пек ыткăнса иртсе кайрĕ. Аялтанах вĕçсе иртрĕ—пĕр çĕр метртан та ытла мар пулĕ. Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе эпир, хамăра такам пуçран çапнă пек, воронка тĕпне лăпчăнса лартăмăр...

Çапах та, «мессер» пире асăрхама ĕлкĕрчĕ пулмалла. Ик минут та иртмерĕ-и тен, вăл калама çук хăвăрт вĕçсе каялла çаврăнса пычĕ. Пирĕн тĕле çитсен чĕпĕ тытакан хурчкалла пикировать турĕ те пулеметран шатăртаттарчĕ. Пульăсем воронка таврашĕнче пăрçа пекех тăкăнчĕç. Эпир ку вăхăтра каллех çĕр çумне лăпчăнтăмăр...

Анчах та ĕç кунпа пĕтмерĕ-ха. Темиçе минутран фашист çăханĕ каллех таврăнчĕ. Татах пикировать турĕ, татах пулеметран сапрĕ. Кăшт тăрсан, виççĕмĕш хут атакăларĕ пире!

Анлантăмăр—ку «мессер» епле пулсан та пуçĕпех «хупласа хурасшăн» пире. Лектерессипе лектерейместех хăй, мĕншĕн тесен эпир кашнинчех воронкăра вăл вĕçсе килнĕ еннелле йăпшăнатпăр, пульăсем тепĕр енне пырса çапăнаççĕ, анчах шăтăкран тухса каясси çинчен шухăшламалли те çук—тӳрех çапса антарма пултарать.

...Вăхăт иртет, манăн ĕнтĕ часрах ротăна çитсе каçхи апат хатĕрлемелле. Сахвине те пăлханать, унăн аманнă салтаксене хăвăртрах медпункта илсе çитерсе тыла ăсатас пулать, анчах шуйттан «мессерĕ» пирĕнтен çаплах хăпмасть, çине-çинех пырса тапăнать!

Мĕн тăвас? Ниçта кайса кĕрейми тарăхса çитрĕм ĕнтĕ. Май пулнă пулсан, тем туса тăкăттăм эсреле!

Аптранă енне — тавай, куна персе пăхас, терĕм... Карабин пур вĕт-ха манăн! Пирĕн дивизире ун пеккисем пулкаланăччĕ, ахаль винтовкăранах ик-виç самолета çапса антарнăччĕ. Ман карабин унран каяим? Е эп хам пеме пĕлместĕп-и? Хай, вырăссем калашле, попытка — не пытка! Часрах çурăм хыçĕнчи пăшала çавăрса тытрăм та тытăнтăм çакна пеме... Пĕтĕм чĕререн тарăхса, шăла çыртса перетĕп! Пирĕн çине пикировать тума тытăнсанах, тĕллетĕп те — перетĕп, тĕллетĕп те — перетĕп. Пĕрре петĕм, иккĕ петĕм, виççĕ, тăваттă...

Аманнă салтаксенчен пĕри мана: ан пер пустуй, патронсене сая ан яр, пурпĕр нимĕн те тăваймастăн, карабин—зенитка мар вĕт, тет. Анчах та вăл çапла каларĕ кăна—эп пиллĕкмĕш хут персе ятăм та, сасартăк ним ăнланмалла мар япала пулса тăчĕ... Пиккене кĕнĕ «мессер» пирĕн пуççем çийĕпе «ши-и-и!» шăхăрса иртсе кайрĕ те, пирĕн воронкăран пĕр çĕр аллă — икçĕр метр иртсен сăмсипе çĕре жач! пырса тăрăнчĕ. Хӳри çӳлелле çĕкленчĕ, унтан хăрах çунатти çине тайăнса мук-мукăлчак туса илчĕ те, çунма тапратрĕ. Çак пĕтĕм ĕç пĕр-икĕ секунд хушшинчех пулса иртрĕ...

Ăнлантăр-и? Пире тарăхтарса çитернĕ «мессер» çĕре персе анса пăрккиех саланчĕ те—хыпса çунса кайрĕ!

— Ваня! Мĕн турăн эсĕ!—кăшкăрса ячĕ çав самантрах Сахвине.

— Курмастăн-им, персе антартăм-çке,—терĕм эп ăна хирĕç мăнкăмăллăн.—Ав епле çунать...

— Ӳкрĕ-им? Ӳкрĕ-им? — хыпăнса ыйтрĕҫ аманнă салтаксем, воронка тулашĕнче мĕн пулса иртнине курма пултарайманнипе.

— Ӳкрĕ ҫав! Чул пек татăлса анчĕ! Ваня персе антарчĕ вĕт!—хавассăн кăшкăрса ячĕ Сахвине.

Чухлăр-ха эсир: вăл мана «Ваня» терĕ!..

Эпир воронкăран сиксе тухса ҫунакан самолет патнелле чупрăмăр. Анчах патнех пыма шиклентĕмĕр — пулисем шатăртатса ҫурăлма тапратрĕҫ, хăй те кăвайт пекехчĕ. Ну, кăштах пăхса тăркаларăмăр та Сахвинепе иксĕмĕр, унран: «Мĕн шыранине тупрăн-и? Ҫав кирлĕ сана, ҫăхана!» тесе, хамăрăн аманнă салтаксем патне таврăнтăмăр, вара вĕсене ҫĕклесе батальона илсе кайрăмăр.

Хамăн чĕре ҫул тăршшĕпех кăкăртан сиксе тухас пек тапса пычĕ... Пĕлетĕп-ҫке халь мĕн пулассине! Тинех ĕнтĕ мана орден лекет!.. Медаль те мар— орден!

Такам систернĕ — ăна пĕлместĕп, анчах та ҫав каҫхинех ман патăма дивизи хаҫачĕн корреспонденчĕсем хашкаса чупса ҫитрĕҫ.

— Каласа пар, Черпаков юлташ, епле турăн эсĕ ку паттăр ĕҫе?—теҫҫĕ.—Питĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха ку...

— А мĕн пит тĕлĕнмелли пур унта,—терĕм эп вĕсене хирĕҫ,—петĕм те—ӳкертĕм! Ӳкрĕ те—ҫунса кайрĕ, пĕтĕм ĕҫĕ те ҫавă ҫеҫ...

Унччен те пулмарĕ, хаҫатра манăн сăн йăтăнса тухрĕ. «Мессершмита» ҫапса антарнă гварди рядовойĕ Черпаков Иван, тесе ҫырнă аяла. Ҫавăн хыҫҫăн вара... эрне те иртрĕ, те иртмерĕ—мана дивизи штабне чĕнсе илсе орден тыттарчĕҫ—«Отечественной вой-

ны II степени». Генерал хӑй тытса чӑмӑртарӗ ман алла:

— Маттур, Черпаков юлташ, малашне те ҫавӑн пек пул,—терӗ.

— Служу Советскому Союзу!—терӗм эп ӑна хирӗҫ тулли кӑмӑлпа.

Эпӗ дивизи штабӗнчен ротӑна таврӑннӑ тӗле ман кухня патне пӗр ҫирӗм ҫын ытла пухӑнса тӑнӑччӗ: ездовойсем, сапожниксем, ҫӗвӗҫсем, шорниксем, темиҫе повар—пурте мана саламлаҫҫӗ, алла тытса чӑмӑртаҫҫӗ... Вася Котлеткин, хайхи «За боевые заслуги» илни, кӑштах сыпса пынӑ пулмалла та, мана кӳпшек аллисемпе ыталаса илсе чуптумах тапратрӗ:

— Молодец, Ванька! Сӑпаҫҫипах сана—поварсен ятне манран та ытларах чапа кӑлартӑн, ӗмӗр манмӑп сана куншӑн!—тет хӑй.

Ыттисем пирӗн ҫине калама ҫук ӑмсанса пӑхса тӑчӗҫ...

Ҫав хушӑра Сахвине те пырса ҫитрӗ. Ӑна асӑрхасан, эпӗ хам пата пухӑннӑ тыловиксене юриех ӑс панӑ пек пултӑм:

— Ан кӳренӗр, тусӑмсем, эсир те кашниех орденлӑ пулма пултаратӑр, паттӑр пулӑр кӑна! Пирӗн Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн паттӑрӗсене нихҫан та манмасть...

Сахвине ман ҫине ҫав тери ӑшшӑн пӑхрӗ. Иксӗмӗрӗн куҫӑмӑрсем ӑнсӑртран тӗл пулсан, вӑл ҫемҫен кӑна йӑл-л... кулса илчӗ.

Манӑн питҫӑмартисем кӑвар пек пӗҫерсе кайрӗҫ, чӗрем кӑрт-кӑрт-кӑрт тапма тытӑнчӗ.

— Юрататъ! Юрататъ халь вӑл мана! Ахаль пулсан мӗншӗн ҫавӑн пек пӑхтӑр-ха ҫын? Эх, чунӑмҫӑм!..

Эп ҫавӑнтах ун патне чупса пырса, никамран именсе тӑмасӑрах ӑна ыталаса чуптӑвасси патне ҫитрӗм. Юрать—ухмахланман. Сахвине вӑрҫӑ пуҫланиччен пӗр эрне малтан качча кайнӑ пулнӑ. Фронта тавӑл упӑшкипе пӗрлех килнӗ-мӗн.



# „ТИГР ЧĔЛХИ“

Стрелковăй ротăра пĕр çулталăк ытла пурăнтăм эпĕ. Унтан пĕррехинче, кĕр енне, ман пата сасартăк хамăрăн писарь хашкаса чупса пычĕ те:

— Сана батальон командирĕ чĕнет!— терĕ. Тĕлĕнсех кайрăм... Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши эп ăна? Эпĕ... командир та мар, строевик та мар, манăн ĕç—çынсене тăрантарасси кăна... Мĕн хăямачĕ! Çавăнтах, шикленнĕ пек те пултăм: мĕншĕн те пулин айăпласшăн мар-и мана? Ун пек те пулмалла мар пек... Хамăн ĕçсене яланах йĕркеллĕ туса пынă, орден илнĕ хыççăн пушшех примерлă пулма тăрăшнă...

Нимĕнле ответ та тупайманнипе, писарьтен ыйтрăм:

— Ма чĕннине пĕлместĕн-и, тусăм?

Анчах та вăл, мана лăплантарас вырăнне, хăрах куçне хĕсрĕ те, аяккалла пăхса, хаштах сывласа ячĕ:

— Паллах ĕнтĕ, ырăшăн мар! Штаба унта пирĕн пеккисене мунча кĕртме кăна чĕнеççĕ... Жалоба панă пуль кам та пулсан.

— Ман ҫинчен нимӗнле жалоба та пулма пултараймасть,—пуҫа пӑркаласа илтӗм эпӗ.—Апат-ҫимӗҫ енчен ку таранччен никама та кӳрентермен!

— Кӳрентернӗшӗн кӑна мар, тепӗр чух хӑшпӗрисене ытла тутлӑ ҫитерме тӑрӑшнӑшӑн та лектерме пултараҫҫӗ,—каллех куҫне хӗссе илчӗ ҫак.—Илтнӗччӗ эпир кӑштах...

Вӑл мӗн пирки сӑмах тӗкнине ӑнланса, эп унпа урӑх калаҫса та тӑмарӑм. Пӗрре сиввӗн кӑна пӑхса илтӗм те, саппуна хывса хурса, ҫи-пуҫа тӳрлеткелесе, батальон штабӗ вырнаҫнӑ ҫырма еннелле уттартӑм. Хам вара ҫул тӑршшӗпех пуҫа ҫӗмӗрсе пытӑм:

— Мӗншӗн чӗннӗ? Мӗн пирки? Нихҫан та чӗнменччӗ-ҫке! Тен, чӑнах та кам та пулин элеклесе панӑ?

Пӗр ҫирӗм минутран батальон штабӗн ҫӗр пӳртне кӗтӗм те, замкомбат умне пырса тӑрса, хӑюсӑртараххӑн рапортларӑм:

— Капитан юлташ, эсир хушнӑ тӑрӑх гварди рядовойӗ...

Анчах вӑл мана каласа пӗтерме памарӗ, урайӗнчи каска-пукан ҫине кӑтартрӗ те:

— Лар,—терӗ.

Чӗре тинех кӑшт лӑпланчӗ... Эппин, нимӗн те хӑрамалли ҫук! Начальник тӳрех ларма сӗнет пулсан— ятлама чӗнмен вӑл, ырӑ ӗҫпе чӗннӗ.

— Эсӗ, Черпаков юлташ, чаплӑ повар,—терӗ унтан замкомбат, мана нимӗҫсен сигаретне сӗнсе,— ротнӑй кухньӑра кӑна мар, ресторансенче те ӗҫленӗ, ҫитмӗл те ҫичӗ тӗслӗ апат пӗҫерме пӗлетӗн, теҫҫӗ, хӑвӑн паттӑрлӑхна та ҫителӗклӗ кӑтартрӑн...

— Служу...—теме пуҫланӑччӗ эпӗ, анчах вӑл мана пӳлчӗ:

— Эпир сана разведчиксем патне куçарасшăн, килĕшетĕн-и?

— Так точно, килĕшетĕп!—терĕм эпĕ ăна хирĕç, ним шухăшласа тăмасăрах. Ара, хăвна çавăн пек мухтанă хыççăн епле хирĕçсе тăратăн-ха!

— Анчах та асту, вĕсене юрама пĕлес пулать вара, ун пек кун пек пулсан, калăпăр — вĕсем заданирен таврăннă çĕре санăн апат сивĕнсе кайнă пулсан, е ывăнса килнĕ çынсем валли пĕрер черкке хатĕрлесе лартман пулсан, вĕсем санăн сывлăхна пăсса хума пултараççĕ. Çакна яланах асра тытас пулать,—каласăва хутшăнса асăрхаттарма тытăнчĕ штабри писарь. — Питĕ çивĕч те вĕри йĕкĕтсем вĕт разведчиксем...

Чухларăм—ку мана кăштах хăратма хăтланать, тăрăхласшăн манран, урăхла каласан—«на пушку» илесшĕн. Çавăнпа та тӳрех татса хутăм ăна хирĕç:

— Ничево, куркаланă хамăн пурнăçра,—терĕм.— Ытлашши хăравçă йăхранах мар, таçта ярсан та, тем хушсан та аптрассăмах çук.

Йăпăрт кăна замкомбат çине пăхса илтĕм те, вăл кулкаласа ларнине курса, каллех писаре качарăм:

— Астăватăн пулĕ, пĕлтĕр «мессершмита» карабинран...

— Вăл санăн ăнсăртран пулнă,—парăнмарĕ писарь.

Ку вара мана тарăхтармаллипех тарăхтарса ячĕ! Хăй паттăр çын пулнă пулсан, татах калаçтăрччĕ хуть, атту хăй—шĕпĕн пек кăна, çитменнине суккăр тата, куçлăхсăр тĕмĕ хыçне те тухса лараймасть, çапах та—шăлне йĕрет...

— Эсӗ ху ҫавӑн пек «ӑнсӑртран» пӗр-пӗр самолета персе антар та—кайран калаҫ!—терӗм ҫавна, ҫилӗ килнипе.—Эсӗ мӗн мана разведчиксем патӗнче ӗҫлеме йывӑр пулассипе хӑрататӑн?

Тавлашсах каяттӑм пулӗ те, замкомбат чарчӗ.

— Шанатпӑр сана, шанатпӑр, ҫавӑнпа чӗнтӗмӗр...

Анчах эпӗ, хӗрсе кайнӑскер, татах персе ятӑм:

— Кирлӗ пулсан, эп хам та разведкӑна кайса «чӗлхе» сӗтӗрсе килме пултаратӑп!

Штабрисем ахӑлтатсах кулса ячӗҫ.

— Ну, куна эс ытлашширех ҫавӑрса хутӑн вара, Черпаков юлташ... Загнул пӑртак, — терӗ тахӑшӗ.

Чӑнах та, ку сӑмахсем ман ҫӑвартан ытла тӑрук тухса кайрӗҫ ӗнтӗ, кӑшт мухтаннӑ пекрех пулчӗ, анчах та манӑн пӗрре каланӑ сӑмахран каялла чакассӑм килмерӗ.

— А мӗн? Пултараймастӑп, тетӗр-и? Нипочем пултаратӑп!

— Курӑпӑр ара, курӑпӑр, малтанах тавлашмӑпӑр, туман тиха пилӗкне ан хуҫ, тенӗ пек,—каллех сӑмах тӗкрӗ писарь.

— Кайран, тен, разведчик та пулӑн, анчах халь эс вӗсене лайӑхрах апат пӗҫерсе ҫитер-ха,—терӗ замкомбат.

— Есть!

...Ҫак калаҫу хыҫҫӑн манӑн чӑнах та разведчик пулас, хама шанманнисене хӑҫан та пулин натялӑ кӑтартса парассӑм килсе кайрӗ.

«Эккей,—терӗм ӑшӑмра,—эпӗ повар пулса служить тунӑ пирки мана чӑн-чӑн боец выранне те хурасшӑн мар... Чимӗр акӑ, кӑтартӑп-ха сире хамӑн пултарулӑха!»

Çынни çавăн пек эпĕ: лăпкă чухне—питĕ лăпкă, анчах хама чĕререн пырса тивретеççĕ тĕк—нихçан та манмастăп ăна. Çавăн чух батальон штабĕнче хамран тăрăхларах калаçнине те манмарăм вара, асра тытсах пурăнтăм...

...Разведчиксем патне куççан, эпĕ чăн малтан вĕсем мĕнлерех çынсем иккенне сăнама тытăнтăм. Вĕсем кухньăна апат илме пырсан, кашнин çинех витĕр шăтарас пек пăхаттăм. Вĕсем хăйсем хушшинче калаçнисене пĕр сăмах сиктермесĕр итлеттĕм. Мана вĕсем пачах расна йышши çынсем, герой пулса çуралнăскерсем, пек туйăннă-çке-ха!

Анчах пурне те палласа çитрĕм те, тĕлĕнмелли нимех те çук иккен... Так, ман пек йĕкĕтсемех, темелле: вăрçăччен хăшпĕрисем ăçта та пулин заводра ĕçленĕ, теприсем колхозра—хăшĕ конюх, хăшĕ бригадир пулнă, пĕри тата темиçе çул хушши парикмахерскинче майрасен çӳçĕсене кăтралатса пурăннă-мĕн. Халь вара кашниннех кăкăр тулли орден та медаль, шӳлкеме пек, чăнкăртатаççĕ. Чăн та, задание тухса кайнă чух вĕсене пурне те старшинана парса хăвараттчĕç, анчах ахаль чухне вара—йăлтăртаттарса кăна çӳретчĕç çав...

Хăйсем çав тери чапа тухнă çынсем пулнă пулин те, пĕртте мăнаçланмастчĕç, пурте калама çук уçă кăмăллăччĕ. Разведкăран таврăнса çывăрса тăнă хыççăн пĕри купăс калать, теприсем хавассăн юрă шăрантараççĕ:

**Была бы только ночка,**
**Да ночка потемней...**

Ку юрра вĕсем пуринчен те ытла юрататчĕç: каçĕ тĕттĕм пултăрах! Е тата хăйсем каçхине постра тăра-

кан фрица сухари миххипе хупласа, сысна тушкине сётёрсе килнё пек сётёрсе килнине аса илсе куласçё. Пётём тавралăх янăраса тăратчё çав вёсем кулма тапратсан!

Пёр уйăх хушшинче вёсене икё хутчен наградӑсем пачёç. «Чёлхе» сётёрсе килеççё—медаль туянаççё, тепре тупса пыраççё—орден! Тёлёнсе кăна пурăнатăп çав. Хăйсем те пит чарусăр та харсăр хăтланатчёç те ёнтё... Пёринче вёт чип-чипер кăнтăр кунёнче, çитменнине янкăр уяр, хёвеллё кун тытса килчёç нимёçсен пулеметчикне. Хăйне кăна мар, пулеметне те çёклесе килнё. Ытти нимёçсем сиссе те юлайман çавна, пирённисем хамăрăн траншейăсене ыткăнса çитсен тин пеме тытăннă....

Анчах та эпё кăшт аяккалла сулăнтăм-ха. Манăн сире хам çинчен каласа памалла-ха вёт. Разведчиксем пёрле пёр тёлёнмелли ёç туса хуни, «тигр чёлхи» тытса килни çинчен каласа памалла.

...Пёррехинче пирён йёкётсем çавнашкал «ухутана» кайма хатёрленнине сисрём. Сисрём те—çав тери пăлханма тытăнтăм. Мёншён, тетёр пуль? Мёншён тесен эпё вёсемпе пёрле разведкăна кайма шутласа хунăччё. Пёр енчен, манăн хăйхи пёркун штабра хама шанманнисене «сăмса шăлса» ямалла, тепёр енчен манăн пёр-пёр боевой ёç тăвас килекен пулса çитрё. Пёрмай хуран кутёнче тăни, тёрёссипе каласан, йăлăхтарса çитерет вăл...

Кăнтăрлахи апат валеçнё чухах эпё пёринчен шăппăн ыйтса пёлтём:

— Кёçёр каятăр-и?

— Каятпăр, — терё вăл...

— «Чёлхе» тытма-и?

— Точно.

— Нумайййăн каятăр-и?

— Пĕр çиччĕн-саккăррăн..

Эпĕ пĕтĕм кăкăрпа хаштах сывласа ятăм.

— Сана мĕн тума кирлĕ ку?—ыйтрĕ разведчик.

— Так, ахалех...

Хăрарăм хамăн чăн-чăн шухăшсене каласа пама. Аçтан-ха тӳрех: «Эпĕ те сирĕнпе разведкăна пыма шутлатăп», тесе калатăн? Хăвăрах пĕлетĕр, манăн должнăçĕ çавăн пекрех-çке... Повар вĕт-ха эпĕ. Ĕне чĕлхи тĕлĕшпе пултаратăп ĕнтĕ, ăна тем тĕрлĕ те пĕçерсе пама пĕлетĕп: пăрçапа та, улма нимĕрĕпе те, çупа та, горчицăпа та, анчах тăшман «чĕлхи» тĕлĕшпе хамăн пултарулăха ку таранччен пĕрре те кăтартайман...

Çапах та, хăюлăх çитертĕм-çитертĕмех, апат валеçсе пĕтерсен часрах хурана çуса тасатса лартрăм та тӳрех командир çĕр пӳртне чупрăм. Задание тухса каяс умĕн вăл тимлесех карттăна вĕренсе ларать-мĕн,—ман çине çаврăнса та пăхмарĕ. Чăнах та çав, ăна çак вăхăтра мĕн тума кирлĕ пулнă повар?

Пĕр минут тăтăм алăк патĕнче, ик минут тăтăм, унтан пиллĕк те иртрĕ пулмалла... Чĕрем хамăн тăнк-тăнк тăвать. А вăл ман çине халь те пăхмасть. Вара эпĕ пĕтĕм строевой формăпа юсанса тăтăм та:

— Лейтенант юлташ, ыйтма ирĕк парсамăрччĕ,— терĕм.

Тинех пуçне ман еннелле çавăрчĕ çакă.

— Мĕн сана?

— Тĕрĕссипе каласан...

— Тĕрĕссине кала çав!

— Тĕрĕссипе каласан, лейтенант юлташ, эпĕ кĕçĕр

сирĕнпе пĕрле разведкăна пыма шутлатăп,—терĕм хайхи. Хамăн чĕркуççисем çав самантрах сăр-сăр-сăр... туса кайрĕç. Акă ĕнтĕ, хăйне çак ответлă вăхăтра килсе кансĕрленĕшĕн ку мана халех пăскăртса кăларса ярать, çиелтен тата пĕр виçĕ черетсĕр наряд шаплаттарса хурать, тетĕп. Пыр та типсе ларчĕ.

Анчах лейтенанчĕ пирĕн лайăх кăмăллă çынччĕ те, ун пек тумарĕ. Ман çине чăр-р... пăхрĕ те, пĕр-ик минут хушши пулĕ чĕнмесĕр ларнă хыççăн:

— Эсĕ мĕн, паян нормăран ытлашширех сыпмарăн пулĕ те?—терĕ.

— Никак нет, лейтенант юлташ, ытлашши мар, хамăн нормăна та çынна патăм. Ĕненместĕр пулсан, хуть те шăршласа пăхăр. Кĕрсен те, манран ыхра шăрши кăна кĕме пултарать, мĕншĕн тесен эп ăна мĕн пĕчĕкренпех юрататăп та, ялан кĕсъере чиксе çӳретĕп,—терĕм.

— Апла пулсан, епле-ха эсĕ кун пек шухăш тытрăн?—каллех ыйтрĕ манран лейтенант.

— Мĕншĕн тесен манăн боевой ĕç тăвас килет!—персе ятăм эпĕ.

— А-а...—лейтенант ман çине пăхса сассăр кулса илчĕ. Куна курсан, мана чун кĕрсех кайрĕ. Пулчĕ хайхискер, ман ыйтăва ахаль хăвармасть ку, тесе шухăшларăм савăнăçлăн.

Анчах та савăнма васканă иккен-ха эпĕ.

Лейтенант тата тепĕр хушă ним чĕнмесĕр пăхса ларчĕ те çапсах хуçрĕ мана...

— Шухăшу аван, çапах та вăл шухăша пуçăнтан кăларса пăрах эсĕ,—терĕ.—Разведкăна çӳресси—повар ĕçĕ мар. Эсĕ луччă эпир «чĕлхе» тытса таврăннă

çĕре пĕркунхи пек ĕне чĕлхи шаритлесе хатĕрле, пĕркун мана вăл пит те кăмăла кайнăччĕ...

Ку сăмахсем мана йĕп-йĕпе тара ӳкерчĕç. Халь çеç вĕри мунчаран тухнă пекех пулса кайрăм. Пĕтĕм ĕмĕт татăлчĕ вĕт манăн! Хапха юпи пек кăнт хытса тăтăм та, нимĕн те калаймастăп.

— Ăнлантăн-и?—тесе ыйтрĕ лейтенант кăшт тăрсан, малтанхи пекех мана куçран пăхса.

— Ăнлансах çитеймерĕн пулсан, тепĕр хут каласа пама пултаратăп, эп мăн кăмăллă çынах мар,—терĕ лейтенант татах.

Сасартăк сисрĕм — манпа хăй хаяррăн калаçнă пек курăнасшăн, анчах хăйĕн куçĕсем пурпĕр кулса тăраççĕ. Çавна пула вара эпĕ, тепĕр хут хăюлланса кайрăм та, хам ăшра мĕн пуррине çăтăр-çатăр каласа тăкрăм:

— Лейтенант юлташ, тархасшăн ман ыйтăва хирĕç ан пулăр, ан татăр ман кăмăла! Неушлĕ вара манăн фронтри пĕтĕм пурнăç паранкă шуратсах иртсе каймалла? Эпĕ мĕн, воин мар-и? Алла пăшал тытма пĕлместĕп-и? Акă, сăмахран, пĕр виçĕ уйăх каялла эпĕ «мессершмита» персе антартăм... Кирлĕ пулсан, эп хуть те мĕнле вут ăшне те кĕрсе кайма пултаратăп! Илсе кайăр мана разведкăна, тархасласа ыйтатăп. Кайран, тен, хăвăрах тав тăвăр мана!

Питĕ витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ каларăм пулмалла...

Лейтенант мана куçран тепĕр хут шăтарас пек пăхса илчĕ те — килĕшрĕ.

— Ну, юрĕ эппин, — терĕ, — илсе кайăп сана разведкăна, анчах асту, ун пек-кун пек пулсан...

Вăл мĕн каласшăн пулнине ăнланса, эпĕ ăна каласа пĕтерме те памарăм, пӳлсе хутăм:

— Çук, çук, Черпаков çине эсир чул стена çине шаннă пекех шанма пултаратăр. Тупа туса калатăп!

— Курăпăр, тенĕ суккăр çын... — кулса илчĕ лейтенант.

— Курăпăр çав! — кăкăра каçăртсах честь патăм эпĕ.

... Тепрер ик сехетрен эпир, маскировочнăй халатсем тăхăнса, гранатăсем илсе, автоматсем валли запаслăх дисксем чиксе, разведкăна тухса кайрăмăр.

Вăрмантан тухса, малти окопсенчен нумай мала шуса иртрĕмĕр те, юр çине ним палăрми пулса выртрăмăр. Сăнатпăр. Тĕттĕм пуличчен пирĕн тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлмелле-çке-ха.

Чылай вăхăт иртрĕ. Унтан сасартăк, пачах кĕтмен çĕртен, нимĕçсен артиллерийĕ ухлаттарма тапратрĕ. Малтан эпир ку вăхăтлăх артналет пулĕ, тесе шутланăччĕ, анчах та вĕсем, çĕр çăтмансемсем, чăн-чăн артподготовка пуçласа ячĕç. Малти лини таврашĕнче снаряд хыççăн снаряд çурăлать, осколоксем шăхăраççĕ кăна, малалла кайма мар, пуçа çĕклемелли те çук.

— Ырра мар ку, ахăртнех контратака тăвасшăн пулмалла, — терĕ манпа юнашар выртакан боец.— Пулмарĕ кĕçĕр разведка!

— Черпаков айăплă, — хушса хучĕ тепри, — урăх никам та мар.

— Мĕншĕн эп айăплă пулам? — тĕлĕнтерчĕ ку мана.

— Илтмен-им, тухман çын тухсан — яланах тăман тухать, теççĕ...

Ана хирĕç лайăх кăна тавăрса хурасшăнччĕ те эпĕ, вăхăт пулмарĕ, ĕçсем вĕриленсе кайрĕç. Сулахай енчен пирĕн çинелле икĕ танкпа виçĕ самоходка килни

курӑнчӗ. Полным ходом, тупписенчен пере-пере ыткӑнса килеҫҫӗ. Унччен те пулмарӗ, вӗсем хыҫҫӑн шур юр ҫине кӑткӑ пек пехота тапса тухрӗ.

— А ну, ребята, держись! — тесе кӑшкӑрчӗ пирӗнтен маларахра выртакан лейтенант.

Халь ку иртнӗ япала ӗнтӗ... Ҫавӑнпа та пытармасӑрах калама пулать: малтанхи самантсенчех ҫамка ҫине ай-вай сив тар тапса тухрӗ. Хӑрушӑ пулса кайрӗ. Епле пулсан та, хӑнӑхман-ҫке эпӗ. Танкӗсем те ыткӑнса килеҫҫӗ, самоходкисем те килеҫҫӗ, пехоти те чупать... Пурте сан ҫинелле переҫҫӗ, сана таптаса лапчӑтасшӑн, сан кӗлеткӳне пульӑсемпе шӑтарса ала пек туса хурасшӑн! Акӑ, эс ҫак самантра чип-чипер пӑхса, сывласа выртатӑн, анчах темиҫе минутран санӑн кӗлеткӳ пӗҫермен катлет пек пулса выртма пултарать...

Анчах нумая пымарӗ ку. Юлташсем тӑшман еннелле ним хускалмасӑр пӑхса выртнине куртӑм та — лӑпланнӑ пек пултӑм. Ҫумри гранатӑсене, унтан автоматӑн затворне тӗрӗслесе илтӗм, пеме лайӑхрах пултӑр тесе майланса выртрӑм.

Фашистсем ҫывхарсах килеҫҫӗ. Инҫе те мар ӗнтӗ вӗсем, пулсан пулӗ пӗр тӑватҫӗр метр. Асӑрхарӑмӑр — ӳсӗр вӗсем! Уҫӑлса ҫӳреме тухнӑ пекех килеҫҫӗ, пӗшкӗнмеҫҫӗ те! Пӑлхатса янӑ йытӑ кӗтӗвӗ пекех шавлаҫҫӗ тата — тем шуйттанӗ кӑшкӑраҫҫӗ..

— Психически тӑваҫҫӗ! — кӑшкӑрчӗ лейтенант.— Эп команда париччен никам та ан перӗр! — Ҫывӑхарах килччӗр!

Эпир ӗнтӗ пӳрнесене спусковой крючоксем ҫинчех тытатпӑр, хуть хӑш самантра та пеме пуҫлама хатӗр... Анчах пересси пулмарӗ пирӗн. Сасартӑк пирӗн хыҫри

вăрманта «катюша» выляса ячĕ: кĕмсĕр-р... кĕмсĕр-р... Тупăсем ухлатрĕç. Пĕри, тепри, виннă, çирĕм! Ах, тапранчĕ, ах, тапранчĕ! Пĕр хушă хамăр умра эпир вутпа çулăм çеç куртăмăр. «Катюша» снарячĕсем айне пулнă фашистсем вĕри çатма çине хунă чĕрĕ кăртăшсем пекех ăшаланма тытăнчĕç.

Хыçалтан тата темиçе залп пани илтĕнчĕ.

— Çунать! Çунать, проклятăй! — кăшкăрса ячĕ манпа юнашар выртакан боец, сулахаялла кăтартса.

Пăхрăм та курах кайрăм: пирĕн еннелле килекен пĕр танк çурта пек çунать, тепри хăяккăн, ним хусканмасăр ларать... Иккĕшĕ те пиçнĕ! Самоходкисем каялла тараççĕ, вĕсем тавра унта та кунта пирĕн снарядсем çурăлаççĕ. Акă, малти чарăнчĕ, лекрĕ пулмалла ăна, иккĕшĕ вара, гусеницисемпе юра сирпĕнтерсе, курăнми пулчĕç...

— За мной! — хыттăн команда пачĕ те лейтенант, юр ăшĕнчен сиксе тăрса танксем патнелле чупрĕ. Эпир, паллах, ун хыççăн...

— Пулать пирĕн «чĕлхе»! — чупнă çĕртех кăшкăрчĕ лейтенант.

Пĕр çĕр метр пек юлсан, çунман танкран пирĕн çинелле пулеметран сапрĕç. Пирĕн икĕ юлташ çавăнтах ӳкрĕç. Вĕсене иккĕшне те урисенчен тивнĕ иккен.

— А-а, эсир капла-и? — тарăхса кайрăмăр эпир.— Ну, тăхтăр!

Пирĕн телее, çывăхрах пысăк лупашка пулнă-мĕн, танкран тем чухлĕ персен те пĕр пуля та лекес çук унта. Аманнисене часрах çавăнта вырнаçтартăмăр та, çунса кайнă танк хӳттипе малалла шума тытăнтăмăр. Перкелерĕç-перкелерĕç нимĕçсем, анчах нимĕн те тăваймарĕç пире.

— Ну, халь пĕтĕмпех пулчĕ, — терĕ лейтенант, çунăк танк çумне пырса тăрсан. «Тигра» йĕри-тавра 9 метр хушши — «мертвое пространство», унта нимĕнле хăрушлăх та çук. Шалта лараксансене туртса кăларасси çеç юлчĕ. Вĕсене çунтарса янинчен усси çук, пире «чĕлхе» кирлĕ!

Пурте шухăша кайрăмăр... Мĕнле тăвас? Ахаль чĕннипе танкран тухас çук-çке-ха вĕсем, çывăха пыма та кансĕртерех — пулемечĕ ĕçлет вĕсен...

— Ничево, çиччас! — терĕ пĕр боец.

Çавăнтах калпак пысăкăш юр чăмăркки туса хӳтлĕхрен сиксе тухрĕ те, леш танкăн пăхмалла шăтăкĕнчен шаплаттарчĕ.

— Килĕр кунта-а!..

Темиçе самантран эпир танка йĕри-тавра сырса илтĕмĕр. Автоматсем, гранатăсем — хатĕр. Ним те чĕнместпĕр. Минут иртет, иккĕ, виççĕ. Унтан танкăн çӳлти люкĕ е-ерипен çĕкленме пуçларĕ. Пирĕн лейтенант вăшт кăна танк çине хăпарса тăчĕ... Люк пĕр чышкă кĕмелĕх уçăлсанах вăл унта йăпăрт çеç «Ф—1» граната чиксе хучĕ.

— Кĕмсĕ-ĕрт! турĕ те шалта, тĕтĕм палкаса тухса кайрĕ...

Халĕ эпир пурте танк çине хăпарса тăтăмăр. Лейтенант люка кăшт кăна уçса: «выходи!» тесе кăшкăрчĕ. Анчах ответ пулмарĕ. Вара эпир люка пĕтĕмпех уçса, çӳлте ларакан фрица туртса кăлартăмăр. «Чĕлхе» пулма юрăхсăр иккен вăл — чунĕ тухнă. Иккĕмĕшне сĕтĕрсе кăлартăмăр — вăл та сывламасть. Пăхатпăр — аялта виççĕмĕшĕ, водитель, тĕтĕмпе чыхăнса, авкаланса ларать. Тумтирĕ те çунма тытăннă унăн. Йăпăр-япăр юр çине туртса кăларса

пăрахрăмăр та çакна — тытăнтăмăр йăвалантарма, пăс кăна тухса тăрать. Шуйттан! Хăрăлтатрĕ-хăрăлтатрĕ те, лăпах шăпланса выртрĕ, ним пĕлми пулчĕ. Ак инкек! Мĕнле тăна кĕртес кăна?

Аса илсех кайрăм: ман кĕсъере нашатырнăй спирт пурччĕ, кухньăра сĕрĕм тивес-тăвасран эп ăна яланах хам çумра тытнă.

— Халех! — терĕм, — калаçакан пулать вăл манăн!

Пĕрре шăршлаттартăм нимĕçе, иккĕ шăршлаттартăм, пуçне юрпа сăтăркаларăм та, куçне уçрĕ хайхискер. Чĕрĕлчĕ пирĕн «чĕлхе»!..

Эпĕ çавăн пек хăтланнă вăхăтра ыттисем танка пур енчен те пăхса, тĕрĕслесе тухнă иккен.

— Ку урапапа хамăр пата кайсан лит аванччĕ те ĕнтĕ... — терĕ тахăшĕ. — Шикарно пулĕччĕ те...

— А мĕн? Кайма та пултаратпăр, — терĕ лейтенант, ку шухăша ырласа.

Нумай та шухăшласа тăмарĕ вăл. Эп чĕртнĕ нимĕçе хăйĕн вырăнне кĕрсе ларма хушрĕ, хăй те унпа пĕрле кĕчĕ. Унта вăл татăлнă темле проводсене сыптаркаланă та, танк хускалчĕ кайрĕ! Эпир савăннипе «урра» кăшкăрса ярсах хăпарса лартăмăр танк çине.

Анчах ытла савăнмаллах пулман-ха. Пирĕн вĕт хамăрăн батарейăсем çинеллех пыма тӳр килнĕ-çке. А вĕсем пĕр залп парсанах пире танкĕ-мĕнĕпе пĕрлех сирпĕнтерме пултарнă. Çавăнпа та эпир тутăрсене кăларса сулма тытăнтăмăр.

— Парăнатпăр! — тетпĕр ĕнтĕ...

Унччен те пулмарĕ, çакна хыçалтан нимĕçсем асăрхарĕç пулмалла та, тупăсенчен пеме тапратрĕç. Хамăрăннисем çине те шансах каймастпăр, кĕç-вĕç

тӳнклеттерме тытăнма пултараççĕ. Лару-тăру, хай каларĕш, пит те кăтăкланмалла пулса тăчĕ пирĕн!

Юрать, лейтенант ăс çитерчĕ.

Малти люка уçрĕ те вăл:

— Кузькин, Черпаков, Миронов! Халех танк çинчен анса, танк умĕн чупăр!

Сиксе антăмăр та, вăл хушнă пек, танк умĕн ыткăнса пыма тытăнтăмăр: çĕлĕксемпе сулатпăр, кăшкăратпăр. Танк пирĕн хыççăн чăнкăртатса пырать...

Мĕн тетĕр эсир? — Чип-чиперех çитрĕмĕр хамăр пата! «Чĕлхе» те пулчĕ пирĕн, «тигр» та тытса пытăмăр. Таврара кам пулнă — пурте чупса тухрĕç пире хирĕç. Çав тери шăв-шав тапранса кайрĕ... Мĕнле кăна ырламарĕç пуль пире!

Халăх хушшинче шăпах батальон писарьне асăрхарăм та, вăл пĕркунне хамран тăрăхласа калаçни аса килсе кайрĕ. Тӳрех утса пытăм та çавăн патне:

— Куртăн-и? — терĕм мăнкăмăллăн, пĕрре танк çине, тепре вилнĕ çын тĕслĕ пулса кайнă нимĕç çине кăтартса.

— Куратăп-çке, — терĕ вăл именерех. — Маттур, маттур эсир... Каламалли те çук урăх...

— Тоттă çав! А эс мана: разведчика пултараймастăн, терĕн пĕркун. Çăпала Иванĕ тем тума та пултарĕ вăл, хăшпĕрисем пек мар!

Писарь тек нимĕн те калаймарĕ...



# МЫСКАРАЛЛĂ КУН



Пулаççĕ вĕт тепĕр чух этем пурнăçĕнче çавăн пек мыскараллă кунсем...

Ирхине чип-чиперех ырă кăмăлпах вăранатăн, мĕншĕн тесен лăпкăн çывăрнă эсĕ: ни усал тĕлĕксем курман, ни пăрça-хăнкăла тавраш̆ĕ те çырта-çырта тарăхтарса пĕтермен сана çĕр каçа, анчах çапах та, тăнă-тăманах кӳренмелли сикçе тухать те, вара каç пуличченех тупăнса пырать мĕн те пулин. Инкек çине синкек, йĕпе çине сапа!

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи сентябрь уйăхĕнче, Днепр патнелле çывхарса пынă чух, эпир кашни кунах çирĕм-вăтăр километр малалла каяттăмăр. Кăшт, темиçе сехетлĕхе, чарăнса тăратпăр, лашасене кантаратпăр, хамăр çерçи ыйхине çывăрса илетпĕр те, каллех— атя, пошол! Малалла, хĕвеланăçнелле! Ĕретлĕн апат пĕçерсе илме те май килместчĕ час-часах. Пĕçерни те нумай хутчен харама кайрĕ, — çиекен çук, пурте таçта малта, тăшмана хăвалаççĕ. Хуса çит-ха вĕсене! Хамăр пĕрмай вăрманпа пыратпăр тата, çулĕсем ним латти çук...

Пĕррехинче çанталăк калама та çук пăсăлса кайрĕ. Қаçалапа кăвак тӳпене кивĕ салтак шинелĕ тĕслĕ пĕлĕтсем хупласа илчĕç, çил тухрĕ, çумăр кастарма тытăнчĕ. Часах вăрманта пăч тĕттĕм пулса ларчĕ, çамкаран тукмакпа пырса çапсан та — çапаканне паллаcа юлас çук. Пирĕн обоз чарăнса ларчĕ. Çакăнтах çĕр выртатпăр, терĕç.

Ну, мĕнех ĕнтĕ, выртмалла-тăк — выртмалла, пĕччен мар, халăхпа. Эпĕ хамăн кĕсрене тăвартăм та, кухня урапинчен кăкарса утă патăм. Хам плащпалаткăпа пĕркенсе хуран çумне тайăнтăм... Паллах ĕнтĕ, тĕлĕрсе кайнă. Тул çутăлма пуçланă чух вăранатăп та — манăн кухня патĕнче кĕсре çук! Ак тамаша! Унталла пăхрăм, кунталла — ниçта та курăнмасть. Часрах сиксе тăр та — шырама. Обоз тăрăх чупса тухрăм (ман кĕсре камăнне те пулин утă вăрлама кайман-ши, тесе) — çук! Çынсенчен ыйткаласа пăхрăм — никам та курман. Апай-турух! Пĕтетĕп вĕт капла, пĕчченех тăрса юлма пултаратăп, тетĕп, мĕншĕн тесен ыттисем лашисене кӳлме те пуçларĕç ĕнтĕ. Пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ. Шуткă-им çак сĕм вăрманта пĕччен юлма? Çынни эпĕ хăраканскерех мар та, çапах шикленмелле: ку таврара нимĕçсен сапаланчăк ушкăнĕсем нумай çӳреççĕ, тенĕ хыпар пурччĕ. Аçталла та пулин тарса тухмалли май шыраççĕ, тет. Сасартăк, çавăн пеккисене тĕл пулсан? Çук, çук, халăхран ним тусан та уйрăлма юрамасть...

Хашкакан пуличченех чупса шыраса çӳрерĕм кĕсрене. Хамран хама тар шăрши кĕрекен пулса çитрĕ. Сахалтан та пĕр пилĕк километр чупрăм йĕри-тавралла. Çук... Йĕп пекех пулнă ман кĕсре!

Обоз патне каялла пырса тухрăм тə юлташсене ӳкĕтлеме тытăнтăм:

— Тархасшăн, хăшĕ те пулин ман кухньăна çаклатса кайăр!

Ӳкĕте кĕрекен никамах та пулмарĕ. Хамăрăн та йывăр, лашасем ывăннă, теççĕ. Хăвăн лашунах шыраса туп, ниçтах та кайман-тăр вăл, тăрать пулĕ-ха пĕр-пĕр тĕм хыçĕнче...

Манăн пурнăç кансĕрленсех çитрĕ. Хай каларĕш— ни туди, ни сюди. Ывăнса çитнĕскер, пĕр тунката çине лартăм та, шухăша кайрăм. Мĕн те пулин шухăшласа кăларасах пулать-çке!

Çав вăхăтра обоз патне хамăрăн полкăн почтальонĕ, шĕвĕр сăмсаллă, яланах хаваслă Вакула юланутпа çитсе тăчĕ.

— Ăçтан килетĕн, тусăм? — тесе ыйтрăм çакăнтан.

— Тылран килетĕп, — тет.

— Çул çинче, ăçта та пулин, лаша курмарăн-и?

— Лаша нумай курнă эпĕ, ак халь те обозĕпех куратăп, — кулса илчĕ Вакула.

— Çук, эпĕ хамăн лаша çинчен ыйтатăп. Çĕрле вĕçерĕнсе кайнă, эсрелĕ, хăмăчĕ-йĕнерчĕкĕпех... Аптрал халĕ...

Вакула самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ, сăмси вĕçне кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ те, манран:

— Çӳренскер, хушка çамкаллăскер-и? Хăмăчĕ çĕнĕ, сар сăранпа витнĕскер... Çапла-и? — тесе ыйтрĕ.

— Тĕп-тĕрĕс! Çапла! — яштах сиксе тăтăм эпĕ.— Хăш тĕлте куртăн эсĕ ăна? Инçе-и?

— Ытла инçех мар, пулсан пулĕ пĕр километр. Çырмара, тăрăхла уçланкăра, курăк çисе çӳрет...

Чун кĕрсех кайрĕ мана! Вакуларан тек ыйтса та,

унпа урăх калаçса та тăмарăм. «Тавтапуç, тусăм, çăлтăн эс мана, ĕмĕрне те манмăп куншăн», терĕм те, тӳрех çул тăрăх тыл еннелле ярăнтартăм. Теприсем кросра та ун пек чупмаççĕ пулĕ. Хирĕç пулакансем, тĕлĕннипе, каялла çаврăна-çаврăна пăхаççĕ ман çине.

— Ухмаха ернĕ-им ку, — тенине темиçе хут та илтрĕм эпĕ.

Анчах вăл маншăн халĕ пурĕпĕр пулнă. Хуть те мĕн калаччăр ман çинчен, çăва патне, манăн пĕр ĕмĕт — часрах кĕсрене тупса кӳлесчĕ те, юлташсенчен юлас марччĕ!

Акă, çул сулахаялла пăрăнчĕ, акă вăл çырманалла анать. Акă тăрăхла уçланкă... Ăçтарах çӳрет-ши-ха ман кĕсре? Ну, тытсассăн пĕрре паратăп ĕнтĕ эп ăна, вĕрентетĕп çĕрле хуçана пăрахса тарма! Нумайччен астăвĕ паянхи куна.

— Машка! Машка!..

Унталла чупса кайрăм, кунталла, лерелле... Чĕнетĕп, шăхăратăп, кăшкăратăп. Ман сасса илтсен, вăл яланах кĕçенсе яраканччĕ. Анчах та халь нимĕнле ответ та пулмарĕ. Ниçта та çук иккен ман лаша. Пĕр сехет пуль ухтартăм çырмара — усси пулмарĕ, тата ытларах ывăнса çитрĕм кăна. Те такам тытнă ăна, те хăй таçталла кĕрсе кайнă. Мур пĕлет-и...

Çурранах танккарăм обоз тăнă çĕрелле. Çул тăршшĕпех кухньăна камран та пулин кăкарса малалла илсе каясси çинчен шухăшласа пуçа çĕмĕрсе пытăм, анчах патне çитрĕм те — пат! — юпа пек хытса тăтăм. Обоз çук та иккен, тапранса тухса кайнă, пĕр ман кухня çеç тăрать сĕм вăрманти шăтăк-путăк çул çинче.

Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ халь?.. Тарăхса, кӳренсе, пĕтĕм чĕрепе вĕчĕхсе, макăрса ярас патнех çитрĕм.

— Кётес пулать ёнтё тылран пёр-пёр машина килессе... Унсӑрӑн ниҫта та хусканаяс ҫук...

Кухня ҫине хӑпарса лартӑм та, ним тума аптранӑ енне чӗлӗм мӑкӑрлантарма тытӑнтӑм. Чыхӑна-чыхӑна, пирус хыҫҫӑн пирус туртатӑп. Паллах, эпӗ кухня ҫине те, пур продуктӑсем ҫине те ал сулса, обоза ҫурранах хӑваласа ҫитме пултарнӑ, анчах та боевой пурлӑха пӑрахни салтакшӑн каҫармалла мар ҫылӑх преступлени пулать-ҫке, юрамасть ун пек тума.

— Здоровӑ, Ҫӑпала! — тени хӑлхана кӗрсе кайрӗ сасартӑк. Пуҫа ҫӗклесе пӑхрӑм та — хам уммах юланутсемпе икӗ боец ҫитсе тӑнине куртӑм. Пӗрин пуҫне бинтласа лартнӑ, тепри сулахай аллине ҫыхса мӑйӗнчен ҫакса янӑ. Малти линирен таврӑнаҫҫӗ курӑнать. Лашисем вара — калама та ҫук тӗреклӗ, слонсем пекех, хӳрисем кӑна мулкачӑнни пек кӗске. Тӳрех ӑнлантӑм — вырӑс лашисем мар.

— Мӗн пуҫна усса ларатӑн? — ыйтрӗ манран вӗсенчен пӗри.

— Хурлӑха лекрӗм-ха, — терӗм эпӗ ӑна хирӗҫ.— Хуть те кутӑн кайса чӑм.

— А мӗн пулчӗ ун пекех?

— Ларса юлтӑм ҫак вӑрманта тӑр пӗччен, никам пурӑнман утрав ҫинчи пек...

— Робинзон Крузо евӗр-и? — кулса илчӗ пуҫне ҫыхнӑ боецӗ.

— Унтан та начартарах. Робинзонӑн хуть юлташӗ пулнӑ, Пятница, а мана юлашки кӗсре пӑрахса тарчӗ...

— Епле апла?

— Ҫаплах вӑт...

Эпӗ вӗсене хамӑн инкек ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа патӑм. Ман калава итлесе пӗтерсен, вӗсем пӗрре

ман ҫине, тепре пӗр-пӗрине куҫран пӑхса илчӗҫ. Пӗр хушӑ нимӗн те чӗнмерӗҫ, унтан:

— Юлташа пулӑшас пулать пулӗ? — терӗ пӗри теприне.

— Эпӗ те ҫавӑн пекех шутлатӑп, — ответ пачӗ лешӗ. — Парас ӑна ҫак фриц лашисене, кӳлсе кайтӑр...

Ой, ҫак сӑмахсене илтсен, манӑн чӗре мӗнле тапма тытӑннине илтесчӗ сирӗн! Савӑннипе ним тума пӗлей-мерӗм, ниҫта кайса кӗреймерӗм ҫав!

— Чӑнах-и? Чӑнласах калатӑр, юлташсем?!

— А мӗн, чӑн пулмасӑр тата! — терӗ аллине мӑйӗнчен ҫакнӑ боец. — Эпир вӗсене ҫул ҫинче тытса утлантӑмӑр, пирӗн мар вӗсем. Хамӑрӑннисем нимӗҫ-сен пӗр-пӗр обозне аркатсан тарнӑскерсем пулмалла. Куран, хӑмӑтсемпех... Тыт та — кӳл! Медсанбата эпир ҫуран та ҫитме пултаратпӑр, пирӗн урасем сывах вӗт.

Вӗсем пӗр харӑсах лашисем ҫинчен сиксе анчӗҫ.

— Ну, тем пысӑкӑш спаҫҫипӑ сире, тӑвансем!

Ҫав тери тав тӑвас килсе кайрӗ манӑн вӗсене. Тем кӑларса парӑттӑм!

— Хырӑмсем выҫӑ мар-и сирӗн? Манӑн кӑлбас-си те, консервӑ та пур, пыра чӳхемеллине те тупӑп,— тесе сӗнтӗм ҫаксене.

— Кӑшт ҫырткаласан кансӗрлесех каймасть пулӗ,—килӗшрӗҫ вӗсем.

— Халех хӑналатӑп!

Лашасене йӑпӑр-япӑр тӑратрӑм та, кухня ҫумне ҫыхнӑ ещӗкрен мӗн пуррине пурне те туртса кӑлар-тӑм. Сӑмах майӗн каласан, эп ун чух тӗрлӗ ликер-сенчен те, коньяксенчен те татӑк пулман. Ун пек тро-фейсем сахал мар лекетчӗҫ пире.

— Çийӗр, юлташсем, ӗçӗр, сирӗншӗн пулсан нимӗн те шел мар! Эсир мана çав тери пысӑк нушаран хӑтартӑр вӗт...

Тепӗр çур сехетрен боецсем ерипен тылалла уттарчӗç, эпӗ кухня çине хӑпарса лартӑм та, тилхепене тытса карт! туртрӑм.

— Н-но, пошол! — терӗм. — Ш-и! шӑхӑртӑм тата.

Лашасем... вырӑнтан та хускалмарӗç. Хӑлхисене еплe урлӑ ярса тӑнӑ — çаплипех тӑраççӗ, хӑнк та тумаççӗ.

— А ну, трогай! — тесе кӑшкӑртӑм та тепӗр хут, каллех тилхепене кӑрт-карт турткаласа илтӗм.

Пурӗпӗр хускалмаççӗ! Мӗн хӑямачӗ? Мӗнле саботаж ку? Неушлӗ гитлеровецсем хӑйсен лашисене те фашистла воспитани панӑ — совет çыннисене хирӗç пымалла? Апла пулсан, эп сире халех урӑхла воспитани паратӑп!

Çавӑнтах пӗр лайӑх кӑна хурама туратти хуçса илтӗм те, çурӑмӗсем тӑрӑх темиçешер хут сӗвӗнтертӗм. Тӑпӑрт! анчах тапса сикрӗç хайхискерсем. Вырӑсла пӗлмен пирки вырӑнтан хускалман иккен вӗсем. Анчах патака часах ӑнланса илчӗç.

Ну, пыратӑп ӗнтӗ вӑрманпа... Пӗчченех. Ни малта, ни кайра никам та çук. Шӑп. Çапӑçу кӗрлевӗ таçта малта, питӗ инçетре илтӗнет. Тен, вунӑ çухрӑм та пулӗ. Фрицпа Ганса хӑвалатӑп та хӑвалатӑп. Лашасене çавӑн пек ятсем патӑм эпӗ. Кайсан-кайсан пӗр уçланка тухрӑм та, сасартӑк, хамран сылтӑм енче, çав тери тӗлӗнмелли картина курах кайрӑм...

Ман еннелле — пӗр аллипе хутаç çӗкленӗ, тепӗр аллипе мӑкла пуçлӑ ӗне çавӑтнӑ старик утса килет, ун хыççӑн виçӗ нимӗç утаççӗ... Чӑн кайри — винтовкӑ-

па, анчах вăл ăна хулпуççинчен çакман, кĕпçинчен тытса сĕтĕрсе пырать.

Мĕн мурне пĕлтерет ку япала? Виççĕн пĕр старике конвойласа пыраççĕ-и? Ахăртнех, вăл партизан пулĕ?..» Сăмах майĕн каласан, вĕсем мана та тытас, тейĕç?

— Ну, çук, шалиш... Чĕррĕнех парăнассăм çук-ха, çитменнине кунта тăшман йышăннă территори те мар!

Çав вăхăтрах хайхи старик, мана асăрхаса, мĕн вăйĕ çитнĕ таран кăшкăрса ячĕ:

— Боец, боец! Ывăлăм! Ан кай-ха, тăхта! Пĕр сăмах кăна...

Эп лашасене чарса тăратрăм та, часрах карабина тытса нимĕçсем çинелле тĕллерĕм.

— Ха-альт! Хендо хо-ох!..

Нимĕçсем тăпах чарăнса аллисене çĕклерĕç, кайри винтовкине те пăрахрĕ. Старик ĕнине вĕренĕпе сĕтĕре-сĕтĕрех чупрĕ ман патăмалла.

— Хăтар мана тархасшăн çак наянсенчен! — тесе кăшкăрать хăй.

— Ăçта илсе каяççĕ вĕсем сана? — тесе ыйтрăм çакăнтан, карабинпа нимĕçсем çине тĕллесех тăрса.— Тыткăна-и?

— Çук, мана мар, — терĕ старик хашка-хашка.— Вĕсем хăйсем тыткăна лекесшĕн... Гитлер капут, где плен та где плен, теççĕ! Виçĕ кун çўретĕп ĕнтĕ вĕсемпе вăрманта, шалт йăлăхса çитрĕм... Ниепле хăпмаççĕ манран. Пĕр хутаç сухари пурччĕ, веç çитерсе ятăм, виçĕ хут ĕне суса сĕт патăм. Çисен уйрăлса кайĕç-ха, тесеттĕм, анчах та çук вĕт — çаплах ман хыççăн сĕтĕрĕнсе пыраççĕ...

— Эсĕ ху кам пулатăн вара? Ăçта тĕл пултăн вĕсене?

— Кам пулам эпӗ? Вырӑс ҫынни, колхозник... Эсир кунталла ҫитсен, хамӑра фашистсем вӗлерсе пӗтересрен пурте вӑрмана тухса тартӑмӑр. Ӳплесем туса пурӑнтӑмӑр. Унтан ман ӗне ҫухалчӗ. Ӗне шырама кайрӑм та — ҫаксем тӗл пулчӗҫ... Плен, плен, теҫҫӗ...

Маншӑн халь пӗтӗмпех паллӑ пулчӗ. Ку нимӗҫ салтакӗсем — пирӗннисем ҫапса аркатнӑ пӗр-пӗр полк е дивизи юлашки. Тӑнсӑр сурӑхсем пекех ҫухалса кайнӑ, выҫса ҫитнӗ, тыткӑна парӑнса вилӗмрен ҫӑлӑнасшӑн...

— Илсе кай вӗсене хӑвӑнпа, — ӳкӗтлерӗ мана старик каллех. — Мӗн тӑвас ман вӗсемпе, хӑвах шухӑшласа пӑх-ха...

— Юрӗ, — терӗм ӑна, — ҫак самантран вӗсем манӑн пленнӑйсем пулаҫҫӗ. Штаба кайса леҫетӗп.

Эп ҫапла каласанах, старик сӑхха ячӗ.

— Тав турра, тинех ҫӑлӑнтӑм эсреметсенчен!

Эп алӑпа султӑм та, шӑнса кӳтнӗ, ыйту палли пек кукӑрӑлса ларнӑ нимӗҫсем ман кухня патне пычӗҫ.

— Форвертс! Малта пырӑр! — хушрӑм ҫаксене.— Каялла ҫаврӑнса пӑхмасӑр пырӑр!

Те ӑнланчӗҫ вӗсем мана, те ӑнланмарӗҫ, ӑна пӗлместӗп, анчах та эп хушнине тӗп-тӗрӗс туса пычӗҫ, сӑмах та чӗнмерӗҫ.

Пыратӑп ӗнтӗ малалла. Уҫланкӑ пӗтрӗ, каллех вӑрмана кӗрсе кайрӑм. Ҫулӗ кунта аван, сарлакаччӗ. Кайсан-кайсан ҫырма хӗррине пырса тухрӑм. Ҫакӑнта вара манпа тепӗр мыскараллӑ япала пулса тӑчӗ...

Сӑртран анса ҫитесси инҫе те юлманччӗ — сасартӑк хамран пӗр ҫӗр метрта, ҫул хӗрринче, темиҫе нимӗҫ салтакӗ тӑнине курах кайрӑм. Полнӑй формӑпа, мӑйӗ-

сенчен автоматсем çакнă. Ман çине шăтарас пек пăхаççĕ.

— Ак хайхи... Тинех лекрĕм пулас! — шухăш вĕçсе илчĕ те пуçра, хам сисмесĕрех тилхепене кăрт-карт турткаласа илтĕм. Ман лашасем тăпăрт! тапса сикрĕç те малалла — анаталла ĕнтĕ — ыткăнтарчĕç кăна. Те хăйсен халăхне палларĕç, мур пуçĕсем, — тем пек чарма хăтлансан та чарăнмарĕç, нимĕçсем çинеллех илсе кайрĕç мана. Тепри пулсан, паллах, кухня çинчен сиксе анса вăрманалла пĕрхĕнмелле, анчах эпĕ хăракан çын мар çав. Нимĕçсем патне çите пуçласанах пĕтĕм вăйран çухăрса ятăм:

— Сдава-айсь! Бросай оружие! Хенде хо-ох!

Пĕри, малти, çулваррине тухрĕ те хăрах аллине çĕклерĕ, ыттисем вырăнтах тăчĕç. Вĕсем тĕлне çитсен, лашасем те тăпах чарăнчĕç манăн.

— В чем дело? Мĕн кирлĕ сире? — тесе кăшкăртăм çакăн çине хаяррăн. Анчах, тĕрĕссипе каласан, хамăн çав вăхăтра пĕтĕм çан-çурăм пĕрре сивĕнсе, тепре тарласа кайрĕ...

— Ми плен... Германьски зольдат плен... Кушайт нет... Колотно, — мăкăртатса илчĕ нимĕç.

— Аха-а, эсир те çавăн йышшисемех иккен, — шухăшларăм та вара эпĕ, хăрасси-тăвасси тӳрех иртсе кайрĕ.

Çав вăхăтра манăн паçăрхи нимĕçсем те, лашасем ĕрĕхсе кайсан татăлса юлнăскерсем, çитсе тăчĕç. Тытăнчĕç кусемпе палкама, хур аçисен кĕтĕвĕ какăлтатнă пекех туйăнса кайрĕ, — ним ăнланма та çук. Палкарĕç-палкарĕç те, иккĕш-виççĕшĕ вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

— Кусем плена пыма килĕшмеççĕ эппин, — терĕм

вёсем çине пăхса. — Эпĕ ĕнтĕ, малалла каяс тесе, тилхепене тытсаттăм, анчах çул çине малтан тухса тăраканни каллех аллине çĕклерĕ те:

— Не ходи, Иван... Зейчас много зольдат плен...— терĕ.

Чăнах та, вăрмантан кĕçех пĕр хĕрĕхĕн тухрĕç. Апай-турух, мĕнлисем кăна çукчĕ вĕсем хушшинче! Шăлсăрри те, сухалĕ шăтманни те, хăрах куçли те, шакла пуçли те, — веçех хайхи «тотальнăйсем». Тата ĕмĕрне те пичĕсене çуман пулмалла, хуп-хура çав, çĕр айĕнчен тухнă шуйттансем тĕслĕ!..

Мĕн тăвас кусемпе?

Пăхса тăтăм-тăтăм та:

— А ну, давай сюда оружие! — терĕм хыттăн.

Вырăсла ăнланакансем пулчĕç пулмалла. Каллех пĕр-пĕринпе палкаса илчĕç те автомачĕсене ман кухня çине пыра-пыра хучĕç. Пĕр лав автомат тиерĕм вĕт! Çухатса пĕтересрен вĕренпе çыхса лартрăм.

— А ну, теперь стройся! — команда патăм кун хыççăн. — Юлашки хут салтаксем пек пулăр хуть!

Командир пекки те тупăнчĕ, йĕркелесе тăратрĕ çак сурăх кĕтĕвне.

— Форвертс! Малалла! — каллех патăм эпĕ, кухня çине хăпарса тăрса.

Тапранчĕ хай манăн «войско». Ӳсĕреççĕ, сунаслаççĕ, уксахлаççĕ, хыçкаланаççĕ... А эпĕ пур — тек кăшкăркалатăп:

— Йĕркеллĕрех утăр! Хăвăртрах! Марш!

Тепĕр икĕ сехетрен çаксене чип-чиперех хамăрăн дивизи штабне илсе çитертĕм. Самăй штаб патне çитеспе юриех ик-виçĕ хутчен «хенде хох» тесе кăш-

кăрса, пурне те аллисене пĕлĕтелле çĕклеттертĕм — интереслăрах тума.

Ну, кулчĕç те вара штаб таврашĕнчисем! Хырăмĕсене тытта-тыта, антăхса кайса кулаççĕ.

— Ак сана Çăпала Иванĕ! Пултарнă, шельма, пăх-ха ăна!..

— Яланах мĕнле те пулин номер туса кăтартать,— теççĕ хăйсем.

Вĕсемпе пĕрле эпĕ те култăм.

Сире вара эпĕ кун çинчен мухтанас-тăвас шутпа мар, ахальтен çеç каласа патăм. Хам енчен нимĕнле паттăрлăх та пулмарĕ вăл кун, анчах мыскарине çителĕклех туртăм çав...



# МУНЧА



Тепринче тата манпа акă мĕнле истори пулса иртрĕ. Пĕр енчен—тарăхмалла, тепĕр енчен—кулмалла истори, тес пулать. Çав вăхăтрах тата савăнмалли те пулчĕ.

Днепр урлă каçсан, эпир Белоруссире пĕр пысăк ялта чарăнса тăтăмăр. Октябрь уйăхĕ пуçланнă пулин те, çанталăк питĕ лайăхчĕ, пĕрмай хĕвел пăхать, çилмĕн çук... Пĕр хушă кунта ытла вăйлă çапăçусемех пулмарĕç те, самаях лăпкăн пурăнтăмăр. Анчах пирĕн йĕкĕтсен — разведчиксен — çав-çавах ерçӳ çукчĕ, вĕсем пĕрмаях заданисене каятчĕç те, тепĕр чух ик-виç кунтан тин таврăнатчĕç.

Пĕррехинче, темлерен, пурте килте пулчĕç çавсем.

— Паян, атьсемĕр, мунча хутса кĕретпĕр! — терĕ старшина ирхи апат хыççăн. — Пĕр анкартинче тĕрĕстĕкел мунча тупрăм эпĕ.

— Ашши пама та пулать-и? — ыйтрĕ тахăшĕ.

— Хуть те антăхса кайиччен çапăн!

— О! Апла пулсан — тавай, хутас!

— Хутас!..

Разведчиксем вёсем çав тери туслă халăх вĕт. Мĕн те пулин тума шут тытаççĕ пулсан — карр! пухăнаççĕ те çав ĕçе наччасра туса хураççĕ. Халь те çавăн пекех пулчĕ: пĕрисем вутă тупса, татса çурчĕç, теприсем шыв çĕклеме тапратрĕç, иккĕшĕ вăрмана милĕк хуçма кайрĕç...

Манăн хурансенче кăнтăрлахи апат пиçиччен мунча пулса та çитнĕ.

— Эс те кĕретĕн пуль? — ыйтрĕ манран старшина, кухньăна пырса тухсан. — Çапăнма юрататăн вĕт-ха?

— Епле пултăр-ха тата? Паллах, юрататăп! — терĕм. — Анчах та манăн чăн юлашкинчен каймалла пулать пулĕ ĕнтĕ, ма тесессĕн каçхи апат хатĕрлемелле...

— Ничево, — терĕ вăл, — ĕлкĕретĕн, ăшши те, шывĕ те нумай, пурне те çитмелле. Таса кĕпе-йĕм хăваратăп эп унта сан валли.

— Тавтапуç!

Унтан эпĕ пурне те апат çитерсе ятăм, шыв ăсса пырса хурансене çуса тасатрăм, каçхи апат пĕçерме вутă хатĕрлерĕм... Вăхăт самаях иртрĕ. Кайран вара хамăн трофейлă автомата хулпуççинчен çакрăм та (хĕçпăшалсăр эпир пĕр утăм та тумастăмăр) мунча еннелле уттартăм.

Мунчи хамăр чарăнса тăнă килтен чылай инçетре, ял хĕрринчи пĕр анкарти вĕçĕнче, çурта пек тӳрĕ ӳсекен çамрăк шурă хурăнсем хушшинче ларать-мĕн. Хурăн çулçисем саралнăччĕ ĕнтĕ, хĕвел çутинче вĕсем ылттăн пек йăлтăртатаççĕ. Анкарти хыçĕнчи тӳрем улăхра пысăках мар кĕтӳ çӳрет. Çав улăхваррипе

пӗчӗк кӑна юханшыв лӑпкӑн шӑнкӑртатса выртать, ун леш енче — пӗр ҫур километртра — вӑрман, вӑл та ылттӑн тум тӑхӑннӑ ӗнтӗ, шухӑша кайнӑ пек, ним хускалмасӑр тӑрать. Аҫталла ан пӑх — пур ҫӗрте те чуна ҫав тери йӑпатакан кӗрхи илем...

Мана тӑван кил, хам ҫуралса ӳснӗ ҫӗршыв аса килсе кайрӗ.

— Эх! Хӑҫан таврӑнмалла пулӗ-ши унта?.. Хӑҫан ҫакӑн пек хамӑр мунчара ҫапӑнмалли вӑхӑт ҫитӗ? Нумаях юлмарӗ те-ха ӗнтӗ...

Ҫакнашкал шухӑшсемпе эпӗ мунчана кӗрсе кайрӑм. Унта никам та ҫук иккен, пурте ҫӑвӑнса тухса кайма ӗлкӗрнӗ.

— Ҫурӑм ҫуса яракан кирлӗччӗ те... юрӗ-ҫке, уншӑн хама ирӗк! — терӗм ӑшӑмра.

Салантӑм та, чӑн малтан ҫине-ҫине ӑшши парса, питӗ вӑйлӑ тарларӑм. Мунча вӗри пулнине питӗ шутсӑр юрататӑп ҫав эпӗ, — ку енчен хамӑрӑн асаттене хывнӑ пулмалла. Астӑватӑр та пулӗ, вӑл мунчара ӑшши парса тултарса ҫапӑнма тытӑнсан, никам та тӳссе тӑраймастчӗ вӗт, пурте тухса таратчӗҫ! Эпӗ те ҫавӑн манерлӗрех... Пӗрре ҫапӑнтӑм, иккӗ ҫапӑнтӑм, унтан пахчана тухса пӗр кана курӑк ҫинче пӑсланса выртрӑм... Ах, ырӑ-ҫке! Унтан каялла кӗтӗм те тапратрӑм ҫӑвӑнма... Шывӗ нумай, вӗри... Пуҫа ик-виҫӗ хут ҫурӑм, унтан пӗтӗм шӑмма-шакка кӑпӑкласа лартрӑм — ниҫта пӗр ӳт татки курӑнмасть, мамӑк-кӗрӗк тӑхӑннӑ пек!.. Фронтра кун пек мунчасем ытла час-час тӗл пулмаҫҫӗ-ҫке, пӗрре май килнӗ чух — ыр курас, терӗм ӗнтӗ...

Анчах ҫав вӑхӑтра маншӑн пачах та кӗтмен япала пулса тӑчӗ: мунча тулашӗнче тӑрук кӗрс-кӗрс! кӗм-

сĕрт! турĕ те, мунча чӳречи чăнкăр-р! вăркăнса тухса кайрĕ...

Мĕн шуйттанĕ? Мĕне пĕлтерет ку? Ниçта та ним те çукчĕ-çке?

— Кĕрс! кĕрс! шăтăр-шарт! — турĕ каллех. Мунча сив чир тытнă пек чĕтресе илчĕ, маччаран ман таптаса пуç çине шăпăрр! тăпрапа тусан тăкăнчĕ...

Пĕтрĕм! Ак сана мунча! Вĕри мунча вырăнне тип мунча!

Пĕррех сиксе тухрăм тулалла...

Хăлхана самолет сасси кĕрсе кайрĕ:

— Ăррр... ăррр...

Пăхатăп — сывлăшра, шăп ман пуç тăрринче, нимĕçсен «хейншелĕ», хайхи, «турчка» текенни, вĕçе парать! Ху-уллен вĕçет, пĕр вырăнта тăнă пекех...

— Кĕрс! кĕрс!

Шуйттан пуçĕ, çĕр çинче никама сиен тумалли тупайманнипе, улăхра çӳрекен пĕчĕк кĕтӳ çине гранатăсем ывăтать иккен. Тупнă вĕт «объект»! Пирĕн выльăхсене те пулин вĕлерсе хăварасшăн, çăхан! Антан тухса кайнă мĕскĕн ĕнесемпе пăрусем ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ, тискеррĕн мĕкĕрсе унталла та кунталла ыткăнаççĕ, виççĕшĕ-тăваттăшĕ вилнĕ е аманнă пулмалла, улăх варринче выртаççĕ.

Ы-ых, çилĕ килсе кайрĕ манăн! Чышкăсем хăйсемех чăмăртанчĕç, шăлсем шăтăртатса илчĕç... анчах мĕн тăватăн-ха ăна? Нимĕн те тăваймастăн! Тăратăп ухмах пек пăхса... Хам çаппа-çарамас, ӳт çинчи супăнь кăпăкĕ типсе хытса ларма пуçларĕ, тата ытла пит ăшах та мар, тес пулать. Анчах мунчана кĕме шикленетĕп ĕнтĕ — паклаттарĕ те пĕрре, патĕнчех кукăрăлса выртăн!

Унччен те пулмарӗ, ҫак «турчка» пулеметран шатӑртаттарчӗ. Темиҫе пуля ман таврашрах ҫӗре тӑрӑнса тусан сирпӗтрӗ...

Аяккалла тапса сикрӗм вара, мӗн тӑвас тетӗн? Чип-чипер курса тӑнӑ ҫӗртех вилсе выртни е аманни — кама кирлӗ вӑл? Ӑҫта та пулин пытанас пулать кунтан! Анчах ӑҫта пытанас-ха? Йӗри-тавра тип-тикӗс, пӗр шӑтӑк-путӑк та ҫук, пӗр лакӑм та! Пульӑсенчен хӑтӑлма пулӗ-ха хуть, анчах та вӑл эсремет каллех гранатӑсем ывӑтма тытӑнсан? Тен, унӑн бомбӑсем те пур, кам пӗлет ӑна?

Хӑвӑрах чухлатӑр ӗнтӗ, манӑн шухӑшласа тӑма вӑхӑт пулман... Эпӗ ҫатан карта урлӑ яшт! сиксе каҫрӑм та юханшыв еннелле вӑркӑнтӑм кӑна — ҫат-ҫат-ҫат-ҫат... Хыҫалта татах кӗрслетрӗ, татах шатӑртатрӗ... Кӗҫ, малта пӑтранчӑк шывлӑ лупашка пуррине асӑрхарӑм. Те тарӑн вӑл, те ӑшӑх, ӑна-кӑна шутламарӑм, часрах чупса ҫитрӗм те — лап! выртрӑм ҫавӑнта... Ҫулларахпа, шӑрӑх чух, кунта ӑшӑпа аптранӑ кӑвакал чӗпписем ыр курнӑ пулмалла та ӗнтӗ, анчах халь мана та юрарӗ. Лайӑххах вырнаҫрӑм — ҫывӑхрах граната мар, бомба ҫурӑлсан та осколоксем тивес ҫук мана. Ку та темех тӑрать ун пек чух!

Выртатӑп ӗнтӗ хашкаса... Хӗрсе кайнӑскер, малтан нимӗнех те сисмерӗм, анчах та шывӗ сивӗ иккен. Ал-урана ҫатӑрах тытма пуҫларӗ. Туятӑп — нумаях тӳссе выртаяс ҫук. Ытларах выртсан — пӑсӑлма та пулать, мур илесшӗ!

Нимӗҫ тата пӗр-икӗ хутчен печӗ те шӑпланчӗ.. Хуллен кӑна пуҫа ҫӗклесе пӑхатӑп... «Хейншель» улӑх ҫийӗн тата тепре ҫаврӑнчӗ те хӗвеланӑҫнелле ҫул тытрӗ. Киле каять... Выльӑхсене вӗлерсе, амантса



пĕтерчĕ те — чиперех, лăпкăнах каять халь! Никам та тивмест ăна, никам та кансĕрлемест! Эх, ирсĕр!..

Эп лупашкаран сиксе тухрăм. Ну... тунмасăрах калас пулать: хам çине пăхма та хăрушăччĕ çав! Тăп-тăр лапра вĕт! Лупашкинче шывран ытларах йăлмака пулнă та... Çав вăхăтра кам та пулин курас пулсан, кулсах вилмелле ĕнтĕ манран. Ну, Çăпала-а, пи-ит лайăх çăваннă иккен эс мунчара! Тепĕр сысна çури те кун пекех вараланаймасть!—тейĕччĕç мана.

Анчах эпĕ хам çинчен шухăшларăм. Эпĕ «турчка» çинчен куç илеймесĕр тăтăм. Темĕн тĕрлĕ те ылхантăм ăна. Вăл инçетрен инçете кайса пырать, часах куçран та çухалать акă... Епле мăшкăл! Епле тарăхмалла ку!

Ним тăвайманнипе, чунăм пӳлĕнсе çитнипе, лач! суртăм та, каялла, мунча патнелле чупрăм.

— Тепре ăшши парса лайăхрах хĕртĕнес те, тасалкаласа часрах ротăна таврăнас...

... Нумай та каяймарăм — сулахай енчен самолетсем хыттăн кĕрлени илтĕнчĕ. Пат! чарăнса тăтăм. Камăн-ши кусем? Каллех фашист çăханĕсем-ши?.. Çук иккен, хамăрăн! Хамăрăн! Вăрман хыçĕнчен хĕрлĕ çăлтăрлă икĕ «хурчка» çиçĕм пек вăркăнса тухрĕç те тӳрех хайхи «турчка» çинелле ыткăнчĕç.

— Ёррр... кĕрр... ёрр... кĕрр...

Иккĕшĕ ик енчен пырса тапăнчĕç фашиста. Пĕри çӳлерехрен, тепри аяларахран... Тапратрĕç пулеметсенчен çунтарма! Кун пек пуласса кĕтмен тăшман унталла пăрăнма тăчĕ, кунталла — çук, шалиш!

— Аха-а, лекрĕн-и, бандит! — кăшкăрса ятăм эпĕ, çав тери хĕпĕртесе кайса. — Тин вĕçерĕнеймĕн пирĕн алăран!..

Унччен те пулмарӗ, вут хыпса та илчӗ ҫакна. Малтан ҫулӑм курӑнчӗ, унтан хура-кӑвак тӗтӗм палкаса тухрӗ... Ҫав самантрах ун айӗнче шурӑ чӑмӑркка курӑнчӗ — летчикӗ парашютпа сикрӗ ӗнтӗ...

— Пулчӗ! Капут! — такама илттерме тӑрӑшнӑ пекех кӑшкӑрса ятӑм та вара эпӗ, мунча еннелле тата хытӑрах чупрӑм...

— Тытатӑпах ку ҫӑхана! Чӗрӗллех тытса килетӗп!..

Мунчана кӗнӗ-кӗменех хам тӑрӑх ик-виҫ курка шыв ятӑм, унтан, васканипе, ҫара ӳт ҫинех брюки, пурттенкке чӗркемесӗрех атӑ тӑхӑнса ятӑм та, автомата ҫӗклесе, каялла сиксе тухрӑм.

Парашютист вӑрман ҫинелле анать... Часах йывӑҫсем хушшине кӗрсе куҫран ҫухалма та пултарать. Васкас пулать манӑн! Эпӗ мӗнле чупнине хӑвӑрах чухламалла ӗнтӗ. Пӗлместӗп, тен, эпӗ нихҫан та ун пек чупман пулӗ...

Эпӗ вӑрман патне ҫитеспе парашютист чӑнах та курӑнми пулчӗ. Анчах куншӑн эпӗ пӑшӑрханмарӑм: пӗлетӗп вӗт-ха, парашютран ытла тӑруках вӗҫерӗнсе пытанма ҫук. Мана урӑххи тарӑхтарчӗ: кунта шурлӑх пуҫланать иккен... урасем путма пуҫларӗҫ! Анчах ним тума та ҫук, пурӗпӗрех малалла каймалла, тӑшмана тытмаллах манӑн. Тӗмеске ҫинчен тӗмеске ҫине, тунката ҫинчен тунката ҫине сиксе, тепӗр чух чӗркуҫҫисем таранах кӗрсе ларса, вӑрмана ҫитрӗм. Вӑрманӗ ытла ҫӑрах мар иккен — чылай инҫетри курӑнать. Маншӑн ку аван пулчӗ-ха...

Вӑрмана кӗрсен, пӗр икҫӗр метр та чупмарӑм пулас — йывӑҫран ҫакӑннӑ сенкер парашют курӑнса та кайрӗ хайхи. Йывӑҫ ҫумӗнче ҫын мӗлки тӗрмешет:

ахӑртнех, парашют стропisenчен часрах вӗҫерӗнме тӑрӑшать-тӑр.

— Сто-ой! Ха-альт!.. — кӑшкӑрса ятӑм эпӗ.

Фашист, паллах, нимӗн те чӗнмерӗ. Йывӑҫ хыҫне пытанчӗ те ман еннелле умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ хут печӗ. Пӗр пули хампа юнашар йывӑҫах пырса тиврӗ.

— Чанк! — турӗ те йывӑҫ хуппине вистесе кайрӗ.

«Аха-а, эс капла эппин-ха, парӑнма шутламастӑн пулать! — терӗм тата ытларах тарӑхса. — Юрӗ апла пулсан!..»

— Шатӑрр! — тутартӑм автоматран.

Пӗр хушӑ шӑп пулчӗ. Эп малаллах пыратӑп: пӗр йывӑҫ хӳттинчен тепӗр йывӑҫ патне... Унтан нимӗҫ татах печӗ ман ҫинелле. Эпӗ те хирӗҫ петӗм... Вӑл перет — эпӗ перетӗп.

— Сдавайсь! Ха-альт! — кӑшкӑртӑм каллех.

Анчах та нимӗҫ епле пулсан та хӑтӑлатӑпах тенӗ пулмалла. Анӑҫсӑр хытӑ тарма тапратрӗ. Йывӑҫсем хушшинче вӗлт те вӗлт! кӑна тӑвать унӑн кӗлетки. Эп — ун хыҫҫӑн... Чухласа илтӗм: унӑн пистолетӗнче патронсем пӗтнӗ те, тин ӗнтӗ мана нимӗнле сиен те тӑваяс ҫук та, тарса ӳкесшӗн...

Чылай хӑваламалла пулчӗ ҫакна. Чупатӑп-чупатӑп та автоматран ҫунтарса илетӗп, унтан каллех чупатӑп. Патронсем пур-ха манӑн, ӗнер кӑна диска туптулли авӑрланӑччӗ!

Ҫав вӑхӑтра урасем каллех путма тытӑнчӗҫ — татах шурлӑх пуҫланчӗ. Куратӑп — фашист шурлӑха чӗркуҫҫи таранах кӗрсе кайрӗ, путасран аллисемпе сывлӑшран тытма хӑтланнӑ пекех хӑлаҫланать. Кӗҫех манӑн та ун хыҫҫӑн кӗрсе кайма тивет. Каллех вара-

ланмалла пулать! Тарăхни-мĕнĕпе вара тепре чарăнса тăтăм та лайăх кăна тĕллесе шатăртаттартăм...

Фашист аллисене тăрук çӳлелле çĕклесе илчĕ те, вăрăммăн çухăрса ярса, малалла тирĕнсе кайрĕ. Пулчĕ хайхискер!

Тепĕр минутран, шĕвĕ пылчăка пур еннелле сирпĕнтерсе, ун патне чупса çитсе тăтăм. Хам та ĕнтĕ пĕçĕ кăкĕ таранах лапра ăшне путнă.

— Цурюк, эсрелĕ! Цурюк! — автоматпа султăм ун çинелле.

Ман тăшман, этем сăнне çухатмаллах вараланса пĕтнĕскер, ура çине тăма пикенчĕ, анчах çавăнтах ӳкрĕ. Аманнă ĕнтĕ, тăраймасть.

— Мой нога нет... — йынăшса ячĕ хăй.

Уринчен тивнĕ иккен. Утаймасть. Мĕн тăвас-ха кунпа? Тыткăна лекнĕ чĕрĕ тăшмана лачакара пăрахса хăвармастăн ĕнтĕ! «Чĕлхе» вĕт вăл! Епле паха «чĕлхе» тата!..

Нумай шухăшласа тăмасăрах, çухавирен çавăрса тытрăм та çакна, шурлăхран типĕрех çĕре туртса кăларса хутăм.

— Нога... — каллех йынăшса ячĕ вăл.

— Кăтарт, хăш тĕлте? — тетĕп.

Вăл чĕркуççисенчен çӳлерех тĕллесе кăтартрĕ. Ăна икĕ уринчен те лекнĕ пулнă. Ним тума та çук, хăйĕн аялти кĕпине çурсах суранĕсене çыхса ятăм. Анчах та ку нимех те мар-ха. Манăн ăна ротăна илсе çитермелле, унтан штаба ăсатмалла вĕт-ха! Таврара никам та çук... Ирĕксĕрех çак тăп-тăр лапра пулнă фашиста хамăн йăтса каймалла пулчĕ. Паллах, вăл мана çул çинче кансĕрлесрен эпĕ унăн аллисене каялла çыхса лартрăм. Тăшман мĕн шутланине ăçтан пĕлетĕн! Пычĕ

вара ман хулпуççи çинче сысна тушки пек силленсе. Йывăр тата хăй. Юрать-ха, хамăн вăй пур та, аптрамарăм...

Вăрмантан тухнă чух мана хирĕç хамăрăн ротăри йĕкĕтсем чупса çитрĕç. Пирĕн «хурчкасем» «хейншеле» çапса антарнине вĕсем те курнă-мĕн, вĕсем те çак парашютиста тытма васканă пулнă. Анчах вĕсем кăшт каярах юлчĕç, эп малтарахран ĕлкĕртĕм.

Хамăр йĕкĕтсем мана епле мухтани çинчен каламастăп ĕнтĕ, вăл ахалех паллă. Вĕсем çавăнтах йывăç тураттисенчен носилка пекки турĕç те нимĕçе ун çине хурса йăтса кайрĕç. Эпĕ вара тепĕр хут мунчана таврăнса питĕ лайăх çăвăнса тухрăм...



# ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

Юлашкинчен хам авланни çинчен каласа парам ĕнтĕ сире. Ман арăма пĕлетĕр-ха вĕт эсир, вăл пĕлтĕр ялхуçалăх институчĕ пĕтерчĕ те халь МТС-ра агрономра ĕçлет...

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн эпĕ киле тăрукках таврăнмарăм, виçĕ çула яхăн сверхсрочнăйра пултăм. Командирсем юрататчĕç те мана, шав ӳкĕтлетчĕç:

— Тепрер çула юл ĕнтĕ службăра! Ăçта васкатăн? Килте сана арăму кĕтет-и, ачу-пăчу пур-и?—тетчĕç.

Старшина званине çитерчĕç, офицерсен столовăйĕнче начальник помощникĕ турĕç, ĕç укçи лайăх тӳлеççĕ. Васкамарăм вара, служить турăм та турăм. Пурпĕр мар-им хуть те ăçта ĕçлесен те — çĕршыв валли!

Анчах пĕр-ик çултан анне киле чĕнме пуçларĕ: ватăлатăп ĕнтĕ, кил-çуртăмăр пушă пек туйăнать, санпа пĕрле кайнисем таврăнса арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă пулса пĕтрĕç, манăн кăна кин те, мăнуксем те çук, тет...

Шел пек туйăнчĕ карчăка. Хăçантанпа пĕччен пурăнать вĕт. Атте 1941 çултах, Мускава хӳтĕленĕ чух пуçне хунă, аппан хăйĕн çемйи пур, эпĕ те килтен кайни нумай пулать.

Таврăнтăм вара. Çуркунне, çутçанталăк илемлĕ ешĕл тум тăхăнсан, çарансем çинче чечексем çурăлма тытăннă вăхăтра çитрĕм. Ну... паллă ĕнтĕ, анне калама та çук хĕпĕртерĕ, сăра турĕ, тăвансем пыра-пыра кайрĕç, хăйсем патне те чĕнчĕç. Йалине хăвăр пĕлетĕр.

Çапла ик-виç кун иртрĕ те, анне мана авлантарасси çинчен калаçма тытăнчĕ. Вăхăчĕ çитрĕ ĕнтĕ, çирĕм пиллĕкрен иртрĕн, атту тата ват хусах ячĕ тухĕ, текелет.

Ăна хирĕç тăруках нимĕн те каламарăм. Кулкалатăп çеç:

— Халь те тиркеççĕ пуль ĕнтĕ мана,—тетĕп.

Çак вăхăтра, утта тухиччен, пирĕн тăрăхра «пухăсем» йышлă пулаççĕ: Ишлей пуххи, Ишек пуххи, Храути пуххи, Мамăш пуххи... Çуллахи ярмăркăсем ĕнтĕ вĕсем. Хăшпĕр çĕрте вĕсене çимĕк теççĕ пулас.

— Хамăр ялта кăмăла каяканни çук пулсан, пухăсенче лайăхрах пăхса çӳре,—вĕрентет мана анне.

— Лайăхраххине тĕл пулсан, вăрласа килес-и?—каллех кулатăп эпĕ.

— Вăрлама саккун çук-ха вăл, ун пек тăвас мар, анчах паллашсан—кайса калаçма юрамасть-им? Сан пек каччăнах тиркес çук-ха,—тет анне.

Ман хыççăн пĕр эрнерен хамăн ача чухнехи тусăм Христофор таврăнчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух эпир ăна «Христофор Колумб» тесе чĕнеттĕмĕр, ма тесессĕн вăл çырмари пĕвере кĕпе çумалли валашкасене пухса

«флот» тума юрататчĕ. Эпир пĕр çыранта индеецсем пулаттăмăр, унăн «флочĕ» çине ухăсемпе переттĕмĕр, вăл испанецсен командирĕ пулса пире тапăнатчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак Христофор флота лекнĕ те чăнах та Америкăра пулса курнă иккен. Ик-виçĕ кун хушши калаçа кăтартрĕ вăл Америка çинчен, хăй сура-сура вăрçать; пуринчен ытла унта негрсене этем выранне хуманни тарăхтарнă-мĕн ăна.

Анчах ку—сăмах майĕн кăна-ха.

Çак «Колумб» та ман пекех хусахчĕ. Ăна та амăшĕ авлантарасшăнччĕ. Ман аннерен те ытларах хистетчĕ:

— Ĕç çине тухиччен кин тупнă пултăр ман валли!

Хайхи, тытăнтăмăр çакăнпа пухăсене çӳреме. Ятарласа, хĕрсем тупас тесех мар, халăхпа пĕрле пулма, вăл савăннине курма. Ну... хĕрсемпе калаçма та хирĕçех пулман ĕнтĕ. Каччăсем вĕт.

Чăн малтан Ишлее кайрăмăр. Христофорăн кунта аппăшĕ пур, почтăра ĕçлет. Иртерех çитнипе, юлташ мана ун патне илсе кĕртрĕ. Хăна тукаларĕç пире. Эпир сĕтел хушшинче ларнă чух темле икĕ хĕр пырса кĕчĕç. Пĕри—сап-сарă, пысăк кăвак куçлă, вырăсла тумланнă, тепри—хурарах сăнлă, куçĕсем хура хурлăхан пек, пĕвĕпе сарринчен лутрарах, ялти пек тумланнă: кĕрен тутăр, шап-шур катанпир кĕпе, симĕс пурçăн саппун, уринче хура туфли. Иккĕшĕ те çав тери кăмăла каймалласкерсем...

Пире паллаштарчĕç.

— Тоня,—терĕ сарри, пире алă парса.

— Вера,—пуçĕпе сулса илчĕ хурараххи.

Вĕсене сĕтел хушшине лартрĕç. Эпир ĕнтĕ ку хĕрсемпе сăмах-юмах пуçласа ярасшăнччĕ, анчах Христо-

фор аппăшĕсем патне татах эпир палламан çынсем пырса кĕчĕç те, калаçасси пулмарĕ. Часах эпир ярмăрккăна кайса çаврăнса çӳрес терĕмĕр.

— Атьăр пирĕнпе, — чĕнтĕмĕр хĕрсене.

Вĕсем килĕшрĕç. Урама тухсан, Христофор саррипе юнашар утрĕ, эпĕ — хурараххипе. Хĕрсем енĕпе моряксем хăюллăрах вĕт-ха,—Христофор тӳрех ыйтса пĕлме тытăнчĕ:

— Ăçтисем пулатăр эсир, хĕрсем? Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ...

— Эп кунтисемех, — терĕ Тоня.

— Ăçта ĕçлетĕр?

— Почтăра, сирĕн аппупа пĕрлех, телефонисткăра ĕçлетĕп.

— Эсир тата?—ыйтрăм эпĕ те Вера тенинчен.

— Çĕньялсем...

— Ĕçлетĕр-и?

— Ĕçлемесĕр кам çăкăр çиет?—Темшĕн Вера хăйĕн юлташĕ çине чăрр... пăхса илчĕ. Унăн илемлĕ питкуçĕ çинче вăрттăн кулă палăрчĕ.

— Секрет эппин?

— Ним секречĕ те çук. Колхозра ĕçлетĕп.

— Мĕнле ĕçре? Сирĕн лек çамрăк пикесем кучухне фермăсенче ĕçлекен...

— Çук, унта мар. Пожарникре ĕçлетĕп.—Вера тутисене тутăр вĕçĕпе хупласа, сасăпах кулса илчĕ. Тӳрех сисрĕм — улталать ку, анчах сисмĕш пултăм.

— Пур йышши пушарсене те сӳнтеретĕр-и вара?— ун куçĕсенчен пăхса ыйтрĕ Христофор.

— Пурне те,—терĕ Вера.

— Калăпăр, пĕр-пĕр каччăн чĕри çунма тытăнсан, ăна та сӳнтерме пултаратăр-и?

— Ун пеккинех сӳнтерсе курман та, анчах кирлех пулсан сӳнтерме пулать те пулӗ.

— Пултармалла пек ҫав...

Чылай ҫӳрерӗмӗр ҫавӑн пек калаҫкаласа, кӑмӑллӑн кулкаласа. Ҫав хушӑрах хӗрсене грецки текен мӑйӑр илсе ҫитертӗмӗр, вӗсемпе пӗрле карусель ҫине ларса ҫаврӑнтӑмӑр, цирк курса тухрӑмӑр, унтан тухсан крем-сода ӗҫрӗмӗр.

Ун пек чух вӑхӑт иртни сисӗнмест вӗт: каҫ пулма та пуҫларӗ.

— Ну, вӑхӑта лайӑх ирттернӗшӗн тавтапуҫ сире, манӑн каяс пулать,—терӗ Вера, аллинчи сехечӗ ҫине пӑхса илсе.—Сывпулӑр...

— Чимӗр-ха, мӗншӗн пит час?

— Ултӑ сехетре пирӗн колхоз машини каять. Юлсан—ҫуран утмалла пулать...

— Ан васкӑр ӗнтӗ!—Хам сисмесӗрех, ҫакна ик аллинчен те ярса тытрӑм.—Ҫӳрер кӑштах!

— Ҫук, ҫук... Ан та ӳкӗтлӗр... — ман ҫине ҫав тери ӑшшӑн пӑхса, пуҫне пӑркаласа илчӗ хӗр.

— Эппин, хӑҫан курӑп-ха эп сире?—чӗрем сикме тытӑннине туйса ыйтрӑм эпӗ.—Ҫитес вырсарникун Мамӑш пуххине пымастӑр-и?

— Пӗлместӗп... Тен, пыратӑп та-и...

— Эппин, тӗл пулатпӑр? Тупатӑп эп сана!

— Халӑх нумай пулать те унта, ӑҫтан шыраса тупӑн?

— Эс карусель патне пыр!

— Каруселӗ пулмасан?

— Епле пулмасть? Пулать!

— Ну, сывпулӑр...—Вӑл мана юлашки хут куҫӗ-

семпе çунтарса илчĕ те, татах сехечĕ çине пăхса илсе, халăх хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ.

— Тарчĕ пулать?—кулса илчĕ Тоньăна хулĕнчен тытса тăракан Христофор.—Эх, эсĕ те çав... кавалер! Хам пулсан—ниепле те вĕçертессĕм çук...

— Ничево, — терĕм эпĕ, — тен, вĕçернеймĕ-ха!

Сисетĕр пуль ĕнтĕ, çак хура хĕр ман чĕрене хытах хускатрĕ. Киле таврăннă чух та куç умĕнчех тăчĕ вăл, çĕрле тĕлĕкре те курăнчĕ, ир тăрсан та тӳрех ăна аса илтĕм. Хам унăн ятне кăна пĕлетĕп те-ха ĕнтĕ... Паллах, пожарник пирки юри каларĕ вăл. Хĕрсен йăли çавăн пек вĕт—хăйсем çинчен ытла тăруках каласа памаççĕ... Анчах, тепĕр тесен, вăл ăçта тата кам пулса ĕçлени пурпĕр мар-и? Çынни лайăх пултăр! Ытти—тарам.

Эрнипех шухăшласа пурăнтăм çак Вера çинчен. Хăçан çитĕ-ши ку вырсарникун! Тӳсме çук курас килет вĕт... Христофора кун çинчен тĕп-тĕрĕссипех, ним пытармасăрах каласа патăм. Анчах вăл кулчĕ çеç:

— Швартовать туса* лартрĕ эппин сан чĕрӳне! Полундра**, старшина!..

— Ан кул, санăн хăвăн та ĕçсем çавăн пекрех-ха,—терĕм ăна хирĕç.—Çак эрне хушшинче Ишлее мĕншĕн виçĕ хут кайса килнине лайăх чухлатпăр!

— Аппа патне кайрăм...—каллех кулчĕ вăл.

— Асту, аппу патне пулмасăр!

Вырсарникун ирех тухса кайрăмăр Мамăша. Эпир çитнĕ чух ярмăркка тин çеç пухăнма пуçланăччĕ-ха. Тӳрех карусель патне пырса тăтăмăр. Никамах та çук.

---

* Моряксен чĕлхипе — кăкарса лартрĕ, тени пулать.

** Сыхлан!

— Улталанă сана хура куç,—йĕкĕлтесе илчĕ Христофор.

— Пулма пултараймасть!—тетĕп.

— Пултарать çав; пĕлетĕн-и, вырăссен çавăн пек такмак пур: не влюбляйся в черный глаз, черный глаз—обманчив...

Чăнах, мана хама та Вера улталанă пек туйăнма пуçларĕ. Вуник сехет иртрĕ, пĕрре... Темиçе хут та çаврăнса пытăмăр карусель патне—ман хура куç пурĕпĕр курăнмарĕ. Çиллĕм те килме пуçларĕ: мĕнле тивĕçпе кун пек турĕ вăл? Мана, гварди старшинине, хăйĕнпе çав тери ырă кăмăлпа калаçнă çынна...

Çӳресен-çӳресен, Христофорпа иксĕмĕр малтан тĕллеттернĕ вырăна тата тепĕр хут пытăмăр та, карусель тавра тăракан çамрăксем хушшинче эпĕ сасартăк Вера майлăрах хĕре асăрхарăм: çавăн пекех çаврака питлĕ, хуп-хура куçлă... Анчах ку... чăвашла мар, вырăсла тумланнăччĕ. Чечеклĕ крепдешин платьепе, çӳçĕсене ĕнсе таран кастарнă та кăтралатнă, аллинче пĕчĕкçеç ридикюль... Шăтарас пек пăхатăп. Вăл-ши, вăл марши? Хĕр те ман çине темиçе хутчен пăхса кула-кула илчĕ. Қулли Верăннах! Вера ку! Ак сана... пожарник!

Вара çынсене сиркелесех ун патне пырса тăтăм та хăюллăнах алла патăм:

— Ырă кун пултăр!

Ман хыççăн Христофор та çитсе тăрса сывлăх сунчĕ ăна.

— Тупрăмăр хайхи таркăна! Ăçта çухалса пурăнтăр паян?—терĕ вăл ман хĕре.

— Нимĕнле таркăн та мар,—кулса илчĕ Вера,—çухалса та çӳремен. Сире эпĕ паçăрах куртăм... Хăвăр палламастăр та, эп айăплă-им уншăн?

— Артистка пулмалла эсир, мĕн тери улшăнма пултаратăр!

— Урăх тум тăхăнни—улшăнни пулать-и?

Христофор, мана шелленĕ пек, ассăн сывласа ячĕ:

— Эх, Ваня, Ваня! Хăвна ху разведчик тетĕн, анчах пĕрре курнă хĕре паллаймастăн!..

Унтан вăл нумай та тăмарĕ, таçта пăрăнса çухалчĕ. Пире кансĕрлес мар, терĕ пулмалла ĕнтĕ. Паллах, тĕрĕс турĕ, ун пек чух—виççĕмĕш ытлашши, теççĕ...

Каçченех çӳрерĕмĕр вара Верăпа. Питĕ уçăмлă хĕр пек туйăнчĕ вăл мана. Эп ун çинчен ытларах та ытларах ыйтса пĕлме тăрăшрăм, хам пирки те чылай каласа патăм. Пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашас пулатьçке! Анчах хăй çинчен вăл ытлашши нимех те каламарĕ çав. Хĕрсем вĕсем именекен халăх...

Хальхинче эпĕ ăна машинăпа ямарăм, хăйсен ялне çитиех хам ăсатрăм. Ешĕл вăрман витĕр тухрăмăр эпир, чечеклĕ улăхсем тăрăх, тинĕс пек хумханакан хирсем урлă утрăмăр... Ман чĕрем тулнăçемĕн тулса пычĕ. Юратса пăрахрăм эпĕ ку хĕре, фронтра пĕрре Сахвине ятлă тутар хĕрне юратнă пекех хĕрӳллĕн юратрăм...

Ял хыçне çитсен, вăл чарăнса тăчĕ:

— Урăх ан пыр... аван мар...

Вăл ман алла тытса чăмăртарĕ. Ку вара мана кăварпа тĕртнĕ пекех пулчĕ.

— Вера!..

— Мĕн?—куçран çав тери йăвашшăн пăхрĕ хĕр.

— Эпĕ... Эпĕ ыранах сирĕн пата пыратăп!

— Мĕн тума?

— Аçу-аннӳпе каласма! Ăнлан эс мана...

— Çук, Ваня, ун пек пулма пултараймасть.

— Мĕншĕн? Неушлĕ эс мана ним чухлĕ те килĕштерместĕн?

— Ыран ирех эпĕ Шупашкара тухса каятăп...

— Мĕн тума?

— Эп Шупашкарта ĕçлетĕп вĕт. Отпуск пĕтрĕ манăн.

— Ăçта ĕçлетĕн?—тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.

— Ун çинчен сана пĕлмех те кирлĕ мар.

— Мĕншĕн апла?

— Ахалех.

Пĕр хушă эпĕ ним калайми пулса тăтăм. Чĕре пăчăртанса илчĕ: эппин, ку хĕр ман валли мар, хулара унăн урăххи те пулма пултарать!

— Анчах сана Шупашкара пырса курма пулать-и?—ыйтрăм чылайран тин.

— Ма юрамасть пуль? Ӳркенмесен—пыр: Белинского, 22. Яланах хавас пулăп сана кĕтсе илме...

— Çак кунсенчех пыратăп! Мĕншĕн тесен малашне эпĕ сансăр... пултараймастăп!..

— Юрĕ, пыр... Анчах халь кай. Çынсем курсан—аван мар. Сывпул!

Вăл ман алла икĕ аллипех тытса чăмăртарĕ те, пахчаналла вăшт кăна кĕрсе кайрĕ. Эп чылайччен такам тухатнă пек пулса тăтăм...

— Белинского, 22, 22...—пăшăлтатса илтĕм те унтан хамăр ял еннелле тӳрĕрен тӳрĕ утрăм. Хамăн çав тери юрлас килчĕ...

* *
*

Хăвăрах чухлама тивĕç, халь ĕнтĕ эпĕ кунĕн-çĕрĕн Вера çинчен кăна шухăшласа, ăна хам майлă çавăрса çитерес ĕмĕтпе çеç пурăнтăм. Тепĕр шăматкун, выр-

сарние хирӗç, каç пуласпа, Шупашкара персе те çитрӗм. Ыран — канмалли кун, калаçмалăх вăхăт пулать...

Автобус çинчен ансанах, Хӗрлӗ площадь варринче пострa тăракан яштака милиционер патне пытăм та Белинский урамне мӗнле тупмалли çинчен ыйтрăм.

Вăл мана честь парсах ăнлантарчӗ:

— Çапла хăпармалла та çавăнталла пăрăнмалла...

— Тавтапуç!—тесе, хам та честь патăм.

Анчах эпӗ темиçе утăм тусан, вăл мана каялла чӗнсе илчӗ:

— Хăш çурт кирлӗ сире?

— 22.

— Пӗлетӗп вăл çурта. Кама курасшăн унта эсир?

— Хамăр ялсене,—терӗм те уттара патăм. Анчах хам ăшăмра: «Верăна паллакансккер мар-ши ку? Каччи аптрамасть так-тă...» тесе шухăшларăм. Анчах кӗвӗçес-тăвас кăмăл пулмарӗ.

Çитрӗм çитес çӗре. Крыльца çине хăпарса шаккарăм. Мана хирӗç шапшур çӳçлӗ, питӗ кăмăллă карчăк тухса тăчӗ.

— Вера Петрова сирӗн патăрта пурăнать-и, асанне?

— Пирӗн патра та-ха, çук-ха вăл, ывăлăм. Вуниккӗччен дежурствăра пулать.

— Дежурствăран тӳрех киле килет-и?

— Ăçта кайтăр ӗнтӗ тата?

Анмарӗ ман ӗç. Ну, юрӗ эппин, текелесе, крыльца çинчен хуллен кăна каялла антăм.

— Ыран ирпе килӗр эппин!—терӗ карчăк.

— Тавтапуç.

— Кам килчӗ тесе калас Верăна?

— Хăвăр ялсем, те...

Кац пулса килме пуçларĕ. Темĕн пысăкăш хĕрлĕ çатма пек хĕвел йăлăмри вăрман хыçнелле анать. Заводсен трубисенчен тухакан тĕтĕм те ун çутинче çутă-кĕрен тĕслĕн курăнать. Унта-кунта электричество хунарĕсем çутăлчĕç...

Эпĕ Хĕрлĕ площаде анса Атăл хĕрринелле утрăм. Тротуарсем çинче лăк тулли халăх—ĕç хыççăн уçăлма тухнă ĕнтĕ. Çамрăк мăшăрсем питĕ нумай, ман пек салтак пулнисем те хĕрсене çавăтнă, шăкăл-шăкăл калаçса пыраççĕ. Эп кăна пĕччен...

Атăл çине тухрăм—унта та халăх тем чухлех, анчах эп паллана пĕр çын та çук. Кичем пулма пуçларĕ мана. Аптранă енне, кино кĕрсе курас терĕм. Унтан пĕр вунă сехет тĕлĕнче тухрăм та сада кайса лартăм—музыка итлес кăмăл пулчĕ. Анчах хамăн шухăш Вера çинчех.

— Вуниккĕ тĕлне вĕсен крыльци çине кайса ларатăп... Мĕнле тĕл пулăпăр-ши, мĕн калĕ вăл мана?..

Чĕре хытăран хытă тапать хамăн...

Вунпĕр сехет иртсен, садра халăх сахалланчĕ. Унта-кунта, йывăç тĕмисем айĕнчи саксем çинче, кăмăллăн пăшăлтатакан мăшăрсем çеç юлчĕç.

— Каяс ĕнтĕ,—терĕм те тăрса утрăм...

Кукăр аллея мана чечексем патне илсе тухрĕ. Пысăк, илемлĕ клумба. Электричество çутинче хĕрлĕ, кăвак, сенкер чечексем тĕлĕрсе лараççĕ. Таçтан шухăш пырса кĕчĕ мана:

— Вера валли лайăх кăна букет туса каяс! Ана чечек çыххипе кĕтсе илес... Питĕ лайăх пулать вĕт!..

Пĕлетĕп-ха ĕнтĕ кун пек çĕрте чечексем татма юра-

маннине, анчах... мĕн тăвас тетĕн? Юрату вĕт! Çав шар кăтартать çынна час-часах!

Унталла-кунталла пăхса илтĕм те, хӳтĕрех вырăна кукленсе ларса, çăтăр-çатăр, çăтăр-çатăр татма тытăнтăм... Сылтăм алăпа тататăп, сулахай алла пухатăп... Хитре букет пулать! Анчах....

— Мĕн тăватăр эсир, гражданин?—терĕ хыçалта хулăн сасă.

Эп вăшт кăна сиксе тăтăм та букета çурăм хыçне тытрăм. Ман умра милиционер тăра парать.

— Мĕн тăватăр, тетĕп!

— Нимĕн те тумастăп-çке... — тетĕп.

— Çурăм хыçне мĕн пытартăр?

— Нимĕн те мар...

— Чечек татрăр эсир! Тӳлĕр 15 тенкĕ штраф!

— Мĕншĕн?—тĕлĕннĕ пек пултăм эпĕ.—Çак курăкшăн 15 тенкĕ-и? Чипер калаçăр...

— А эсир чипер хăтланăр!—сассине хытарчĕ милиционер.—Тӳлеместĕр? Апла пулсан, атьăр отделенине.

— Тӳлеместĕп те, отделенине те пымастăп,—татса хутăм эпĕ. Манăн, айванăн, укçа кăлармалла та тыттармалла пулнă, ĕçĕ те пĕтетчĕ, анчах... характер вĕт! Салтак-çке, гвардеец! Ҫайран ӳкĕнтĕм те çав...

Милиционер пĕррех шăхăртрĕ.

— Ҫайрăмăр! Утăр малтан! Чечекĕсене пăрахса хăварма ан шутлăр тата! — асăрхаттарчĕ вăл мана.

Мĕн тăвас тетĕн? Власть представительне хирĕç каятăн-им? Утрăмăр. Эп—малта, ман алăра чечек çыххи, вăл—ман хыçран. Ҫаялла çаврăнса пăхма та хушмасть, чăн-чăн преступнике илсе пынă пекех илсе пырать...



Çитрĕмĕр отделенине. Кĕрсенех, алăк патĕнче, çамрăк кăна кĕçĕн лейтенант темскер вуласа ларать. Мана илсе килекенни ун умне тăчĕ те хăвăрт кăна рапортларĕ:

— Паллă мар гражданин общество йĕркине пăсрĕ... Садра чечексем татрĕ!

— Докуменчĕсем пур-и?

— Тĕрĕслемен. Вăл штраф тӳлесшĕн пулмарĕ.

— Гражданин, паспорт кăтартăр!—терĕ дежурнăй.

Эп маларах, çутă çĕререх тухрăм та, ман чĕлхе çăвар маччи çумнех çыпăçса ларчĕ... Дежурнăй кĕçĕн лейтенант—манăн савнă Вера иккен! Вера! Çĕр çăттăр! Пулать вĕт тĕнчере...

Паспорта кăларса тыттартăм. Хамăн пĕтĕм питкуç вутпах çунать, хăлхасем те пĕçерсе кайрĕç. Паллать те акă, мĕн тери намăс пулать мана!..

— Паспорчĕ тĕрĕсех,—терĕ те Вера, ман çине куçхаршисем айĕн пăхса чутах кулса яратчĕ, темле тытăнса тăчĕ кăна.—Анчах штрафне тӳлеттерес пулать.

Мана илсе килекенни хăйĕн сумкинче квитанци кĕнекине шырама пĕшкĕнчĕ, çав вăхăтра эпĕ, пĕр-ик утăм малалла ярса пусса:

— Вера, эп сан валли вĕт...—терĕм шăппăн.

Вăл мана пӳрнипе юнаса илчĕ:

— Вуниккĕччен кĕт!

Урăх нимĕн те каламарĕ. Ну, паллах ĕнтĕ, штрафне тӳлерĕм эпĕ, квитанци пачĕç мана...

— Кайма пултаратăр,—терĕ хама илсе килекенни. Эп алăк патне çитсен:—Букетне илсе кайăр, 15 тенкĕ тăрать вĕт, пăрахма шел,—тесе кулса илчĕ.

Эп урама тухрăм. Хам йĕп-йĕпе тарланă иккен... Çӳрерĕм вара вуниккĕччен калле-малле, алăри чечек-

сен ырă шăршипе киленсе. Унтан Вера та тухрĕ. Питĕ шутсăр хытă кулчĕ манран...

Майĕпе Атăл хĕррине тухрăмăр, кăвак çутă киличченех шăкăл-шăкăл калаçса çӳрерĕмĕр. Юлашкинчен сăмах пине çитрĕ пулмалла, сак çине лартăмăр та, пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕмĕр...

Эп ăна пĕрремĕш хут питçăмартинчен чуптуса илтĕм.

— Каллех штраф тăвасран хăрамастăн-и?—хуллен ыйтрĕ вăл, пуçне ман кăкăр çине хурса.

— Çук, хăрамастăп, хуть те вунă квитанци çыр, çирĕм, вăтăрăшне çыр,—терĕм те эпĕ, тутинченех чуптурăм.

...Çав ирхине вара пирĕн чĕресем ĕмĕрлĕхех пĕрлешрĕç.

**1945—1954.**



## ТУПМАЛЛИ

Солнышкин . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Пăшăл-пăшăл . . . . . . . . . . . . . . . 45
Самосвал . . . . . . . . . . . . . . . . 56
Сăвăс . . . . . . . . . . . . . . . . . 72
Сахар мучи, чемпион . . . . . . . . . . . 124

**Çăпала Иванĕ каласа панисем:**

Сахвинепе „Мессершмитт“ . . . . . . 137
„Тигр чĕлхи“ . . . . . . . . . . . 153
Мыскараллă кун . . . . . . . . . . 168
Мунча . . . . . . . . . . . . . . 180
Чечек çыххи . . . . . . . . . . . . 191

***Хисеплӗ вулакансем!***

*Çак кӗнекене вуласа тухнӑ хыççӑн вӑл сире кӑмӑла кайни е кайманни çинчен, малашне сирӗн мӗнле кӗнекесем ытларах вулас килни çинчен çырса пӗлтерме ыйтатпӑр.*

*Пирӗн адрес: г.* ***Чебоксары, Дом печати, Чувашгиз, сектор художественной литературы.***

АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ

„СМЕЯТЬСЯ ХОЧЕТСЯ“

Рассказы и фельетоны

Редактор *И. Вашки.* Худож. ред. *М. Ильин.*
Тех. ред. *Т. Андреев.* Корректор *В. Бурнаевский.*

Сдано в набор 16.XI-1954 г. Подписано к печати 8.I-1955 г. Объем 8,9 п. л., учетно-издательских листов 7,63. Бумага $70 \times 108^1/_{32}$.
Тираж 5000 экз. НТ 00805. Заказ 3146. Цена 3 р. 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 3 р. 30 коп.

ЛЕОНИД АГАКОВ

СМЕЯТЬСЯ ХОЧЕТСЯ
Рассказы и фельетоны

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1955